К 81
Ч-1г
Ч-36560

# ЧӐВАШ ЧӖЛХЕ ПӖЛӖВӖ



Национальная библиотека ЧР
4-036560

**ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ**

**обозначенного здесь срока**

М т. 3 50 1990 г.т. 5000

ЧĂВАШ ПАТШАЛĂХ ГУМАНИТАРИ
ĂСЛĂЛĂХĔСЕН ИНСТИТУЧĔ
ЧУВАШСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ИНСТИТУТ
ГУМАНИТАРНЫХ НАУК

# ЧĂВАШ ЧĔЛХЕ ПĔЛĔВĔ

Статьясен пуххи

# ВОПРОСЫ ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКОЗНАНИЯ

Сборник статей

Шупашкар – Чебоксары
1999

*Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн Ăслăх Канашĕ йышăннипе пичетленет*

*Печатается по постановлению Ученого Совета Чувашского государственного института гуманитарных наук*

Пичете хатĕрлекенĕ Редактор-составитель *Г.А.Дегтярев*

ПРОВЕРЕНО 20 16 МАР 201

УДК 809.434.4
ББК 81.2.Чув
Ч 12

**Вопросы чувашского языкознания:** Сборник статей (на чуваш. яз.). – Чебоксары: Чуваш. гос. ин-т гуманит. наук, 1999. – 196 с.

В сборнике публикуются статьи ученых Чувашского государственного института гуманитарных наук и Чувашского государственного университета им. И.Н.Ульянова, посвященные проблемам грамматики, лексикологии, лексикографии и истории чувашского языка. Издание включает в себя также очерки жизни и деятельности лингвистов: Н.Поппе, А.И.Иванова, Ю.Ф.Ефимова, И.А.Андреева, И.П.Павлова, А.П.Хузангая.

Для чувашеведов и всех интересующихся проблемами языка.

Ч-36560
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ISBN 5-87677-041-8

© Чувашский государственный институт гуманитарных наук, 1999 г.

# УМ СĂМАХ

Тăван чĕлхе пирки чăвашла çырманшăн пире вулакансем тĕрĕсех ӳпкелеççĕ. Институтăн чĕлхе пĕлĕвĕн пайĕ 1991 çул хыççăн – Чĕлхе саккунне пурнăçа кĕртме пикенсе хутшăнмалла чухне – чăвашла пĕр кĕнеке те кăларайманнине нимĕнле сăлтавпа та тӳрре кăларма çук пулĕ. Чăваш чĕлхине, паллах, вырăсла та тишкермелле, ун çинчен ют чĕлхесемпе – акăлчанла, нимĕçле, турккăлла – çырни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Чĕлхемĕрĕн çивĕч те кăткăс ыйтăвĕсене тăван сăмахпа – уçăмлă та кăсăклă, анчах ăслăлăх картинчен тухмасăр – ăнлантарма пултарни тата пахарах. Эпир ку тĕлĕшрен пуянах марри çак кĕнекене "ăсталанă" чухне те палăрчĕ... Ăна институт директорĕн, ӳнер пĕлĕвĕсен докторĕн А.А.Трофимовăн пуçарăвĕпе хатĕрленĕ. Кĕнекене чĕлхепе çыхăннă тĕрлĕ пулăма тишкерекен статьясем кĕчĕç. Авторĕсен йышĕнче Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ĕçтешĕсемсĕр пуçне Чăваш патшалăх университечĕн вĕрентекенĕсем те пур: Н.П.Петров, О.Р.Студенцов, П.Я.Яковлев. Статьясене пичете хатĕрленĕ чухне, тĕпрен илсен, стилĕ е тытăмĕ тĕлĕшĕнчен кăна тӳрлетӳсем кĕртнĕ, тĕпчевçĕ шухăшĕсене – редактор вĕсемпе пачах килĕшмен чухне те – упраса хăварма тăрăшнă. Çак кĕнекен малашĕ пуласса, "Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕ" (е урăхларах) ятпа çĕнĕ кăларăмсем тухса пырасса шанатпăр. Вĕсене вара вулакансен йышне чăннипех интереслĕ статьясем ытларах кĕртме тăрăшăпăр.

Сăмах май каласан, чăвашла тĕпчевсем ĕлĕкрех чĕлхе тата литературăпа фольклор пайĕсем кăна хатĕрлетчĕç. Юлашки вăхăтра лару-тăру улшăнчĕ: 1996 çулта ӳнер пĕлĕвĕсен пайĕ "Халăх эткерĕ: упраса аталантарас ыйтусем" кĕнеке калăпласа кăларчĕ, халĕ историксем те тăван халăхпа пĕр чĕлхе тупасшăн – тĕпчевсен чăвашла пуххине йĕркелеме пуçларĕç. Кун пек кĕнекесем чăваш чĕлхин ăслăлăх стильне аталанма пулăшаççĕ.

Нумаях пулмасть икĕ паллă датăна – Н.Н.Поппе тата А.И.Иванов чĕлхеçĕсем çуралнăранпа çĕр çул çитнине – асăрхамасăрах хăварчĕç. Вĕсен умĕнчи хамăр парăма туйса, çак кĕнекене ятарласа хатĕрленĕ библиографи очеркĕсем кĕртетпĕр. И.Н.Юркин пек тĕпчевçĕсен кăткăс та хăйне евĕрлĕ

пултарулăхне, чылай çул иртсен те, тивĕçлипе хаклайманха. Унăн биографĕн – Юрий Яковлев литература пĕлӳçин – пысăках мар ĕçĕпе паллашни хальхи вулакана усăллă пулассăн туйăнать. Çавăнпа Иван Юркинăн алçыру халлĕн упраннă "Ют чĕлхесенче çӳрекен чăваш сăмахĕсем" статйине те пичетлес терĕмĕр. Ăна вăл иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче çырнă пулнă. Статьяна Чĕмпĕр облаçĕн архивĕнче (269 ф., 1 оп., 14 упр. ед.) Ю.В.Яковлев тупнă. Ку ĕçе пăхса тухса хакланăшăн тата асăрхаттарусем çырса панăшăн эпир филологи ăслăлăхĕсен докторне Н.И.Егоров профессора тав тăватпăр. Рецензире вăл çакна палăртнă: "И.Н.Юркин хăй вăхăтĕнче каласа хăварнă шухăшсен пафосĕ – нумай фактсем кивелнĕ е йăнăш пулсан та – паян та актуаллă". Иван Юркинăн асăннă статйине пĕр улăштармасăр тенĕ пекех пичетлетпĕр. Вăл, пирĕн шутпа, иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнчи чăваш çырулăх чĕлхишĕн, ăслăлăх стилĕн пуçламăш тапхăрĕшĕн курăмлă, самана докуменчĕ.

Хисеплĕ вĕрентекенĕмĕрсем тата ĕçтешĕмĕрсем Иван Андреевич Андреев, Иван Павлович Павлов çитмĕле çитрĕç, Атнер Петрович Хусанкай алă çул тултарать. Çавна май кĕнекере вĕсен пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе, ăслăлăхри ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан ятарлă очерксем вырăн тупрĕç. Юрий Филиппович Ефимов çинчен вара хурлăхлă сăлтавпа çырма тивет: çулталăк пуçламăшĕнче хаклă юлташăмăр яланлăхах уйрăлса кайрĕ. Пирĕн тивĕç – вăл хăварнă тĕпчевсене кун çути пама пулăшасси, вулакан патне çитересси. Юлашки çулсенче Юрий Филиппович чăваш чĕлхин ăнлантару словарьне хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлерĕ, унпа çыхăннă ыйтусене тишкерсе темиçе статья ăсталарĕ. Вĕсенчен иккĕшне çак кĕнеке валли суйласа илтĕмĕр. Ăнлантару словарьне хатĕрлессипе çыхăннă виççĕмĕш статьян авторĕ – Алевтина Долгова. Çак кĕнекери тепĕр ĕçĕнче вара вăл чăваш чĕлхин ыйтăва палăртакан татăкĕсене туллин тишкернĕ.

Иван Павлович Павловăн ăслăлăх этючĕ халиччен асăрхасах кайман пулăмпа – сăмахсен хăйне евĕрлĕ çыхăнăвĕпе – паллаштарать. Чăваш фонетикине чылайранпа ăнăçлă тĕпчекен Петр Яковлевич Яковлев ку хутĕнче шут хисепĕсен тулли формин несĕлне тата ăна ку таранччен мĕнле ăнлантарнине тишкернĕ. Патшалăх идеологийĕ тата обществăри пулăмсем чĕлхен лексика-семантика тытăмĕнче

мĕнле паларнине Геннадий Дегтярев уйрăм тĕслĕхсемпе сăнласа панă. Чăваш чĕлхинчи кăмпа ячĕсен йышне халиччен тĕпчеменпе пĕрехчĕ. Юдит Дмитриева вĕсене пĕрле пухса пулăвĕпе тытăмĕ енчен тишкернĕ. (Шел, авторĕ чăвашла сырма вĕренсе ситеймерĕ-ха.)

Поэтика ономастики – илемлĕ литература хайлавĕсенчи пайăр ятсене (поэтонимсене) тĕпчесси – пирĕн чĕлхе ăслăлăхĕшĕн çĕнĕлĕх тесен те йăнăш пулмĕ. Елизавета Федоровна Васильевăпа Алина Аркадьевна Сосаева кун йышши ыйтусене хускатни савăнтарать. Эпир вĕсенчен тата тарăнрах тĕпчевсем кĕтетпĕр.

Астăватăр ĕнтĕ: ку çулталăк – Иван Яковлевич Яковлев çулĕ. Çĕнĕ çырулăх никĕслевçине халалласа филологи ăслăлăхĕсен докторĕн Николай Петрович Петровăн статйине пичетлетпĕр. Ăсчахăмăр пултарулăхне вăл чĕлхеçĕ куçĕпе пăхса пахалать. Революциччен тĕн литературине куçарни те çырулăх чĕлхине аталанма чылай пулăшнă. Çавăн чухне çуралнă çĕнĕ сăмахсен шăпипе Олег Студенцовăн тĕпчевĕнче паллашма пулать.

Ум сăмаха вĕçленĕ май, халăх каларăшне кăна аса илтермелли юлать: çитменнине çитерĕр, ытлашшине каçарăр.

*Г.А.Дегтярев.*

1998 ç., çу уйăхĕ.

# ГРАММАТИКА ЫЙТĂВĔСЕМ

*И.П.Павлов*

## ЧĂВАШ ЧĔЛХИНЧИ ПĔР ТУРТĂМ ПИРКИ

Илемлĕ сăмахлăхра ытарлă пĕлтерĕшлĕ сăмах майлашăвĕсенчен пулнă хăйне майлă "паллă ячĕсем" вăй илнине асăрхама пулать. Ăна аяларах илсе кăтартнă тĕслĕхсемпе çирĕплетме май пур:

*вăл ашак хăлхаллă, хурчка сăмсаллă пулнă* (А.Алка);

*шăши хăлхаллă сурăх* (В.Игнатьев);

*кăйкăр çунатлă космонавт* (А.Лукин);

*шăпчăк ыйхăллăскерсем* (А.Медведев);

*çирĕп чун хаваллă вăл* (Г.Луч);

*тăрна мăйлă кăкшăм* (М.Ухсай).

Кун пек определенисем хăш-пĕр çыравçăшăн уйрăмах курăмлă. Сăмахран, П.Хусанкай пултарулăхĕн хăйне евĕрлĕхĕ:

*сунарçă куçлă хуралçă, сунарçă куçлă чĕр чун;*

*пĕлĕт сăнарлă куç;*

*çын ăслах вара çак анчăк;*

*сăвăç ĕмĕтлĕ пек пулнă.*

Хăш-пĕр "паллă ячĕ" уйрăм çыравçăн çеç мар, темиçе авторăн тĕл пулать е тата халăхра та анлă сарăлнă:

*поэт чунлă çын* (И.Григорьев, А.Артемьев);

*качака сухаллă чăваш* (Юхма М., А.Талвир, Трубина М.);

*çын йĕркеллĕ калаç* (А.Талвир, А.Алка);

*халăх шутлă мар вĕт* (Л.Агаков), *халăх шутлă пурăн* (П.Хусанкай);

*этем ĕретлĕ пул* (Хв.Уяр), *этем ретлĕ сан çӳресчĕ* (Г.Ефимов).

Илнĕ тĕслĕхсенчи "паллă ячĕсем" изафет сăмах майлашăвĕсене аса илтереççĕ. Вĕсене танлаштарса пăхсан, мĕн куратпăр-ха?

Изафет икĕ япала ятĕнчен пулать. Вĕсем пĕр-пĕринпе ытларах 3-мĕш сăпат аффиксĕпе çыхăнаççĕ, *-и* (*-ĕ*) аффикс иккĕмĕш (*тĕп*) компонент çумне хушăнать:

*Кĕнеке хуппи татăлнă.*

*Шкул ачисем кино курчĕç.*

Сăмах тĕпĕпе сăпат аффиксĕн хушшинче улшăнусем пулаççĕ. Изафет сăмах майлашăвĕн тĕп сăмахĕ уçă сасăпа пĕтнĕ чухне çав уçă сасса кăлараççĕ те сăпат аффиксĕн *-и* вариантне хушаççĕ: *ача – ачи, алă – алли.* Сăмах тĕпĕ хупă сасăпа пĕтет пулсан, нимĕнле сасса та кăлармаççĕ, тӳрех 3-мĕш сăпат аффиксĕн *-ĕ* вариантне хушаççĕ: *юлташ – юлташĕ, шкул – шкулĕ.*

*-лă* (*-лĕ*) аффикс хушса "паллă ячĕ" тунă чух сăмах майлашăвĕн тĕп компоненчĕ çумне тӳрех – 3-мĕш сăпат паллине хушмасăрах – сăмах тăвакан аффикса пĕрлештереççĕ. Ку улшăну 3-мĕш сăпат аффиксĕн пĕлтерĕшĕ çеç мар, сăнсăпачĕ (форми) те çухалнине кăтартать: *машина сассиллĕ çĕнĕ пурнăç* вырăнне *машина саслă çĕнĕ пурнăç, сунарçă чунĕллĕ çын* вырăнне *сунарçă чунлă çын, пĕлĕт сăнарĕллĕ куç* вырăнне *пĕлĕт сăнарлă куç* тенине танлаштарса пăхăр.

Çакна асăрхаттарни кирлĕ: ытарлă пĕлтерĕшлисен хӳттипе метафора пĕлтерĕшĕсĕр сăмах майлашăвĕсем те *-лă* (*-лĕ*) аффикса йышăнма пултараççĕ. Вĕсене те предложенин пĕр членĕ пек пăхма тивет:

*хурчка чĕреллĕ çын* (К.Турхан), танл.: *кайăк чĕреллĕ* (Ашм., VI, 15);

*пĕркĕт куçлă пиччем пур* (П.Хусанкай), танл.: *симĕс кушак куçлă старик* (юмах);

*сунарçă чунлă çын* (Ухсай Я.), *вăрман чунлă çын* (А.Артемьев);

*ытла та этем чунлăччĕ* (В.Игнатьев), танл.: *арçын чунлă* (Ашм., I, 308);

*салтак тумлă хĕрарăм* (А.Алка);

*кил шухăшлă ача* (А.Артемьев), *пурнăç шухăшлă хĕр* (А.Артемьев);

*пиччĕш сăнлă мар* (В.Игнатьев), *ача сăн-питлĕ йĕкĕтсем* (А.Воробьев);

*майра патша пуçлă манит* (А.Талвир);

*пĕчĕк ача кĕлеткеллĕ хĕр* (Юхма М.), танл.: *качака кĕлеткеллĕ, çĕлен хӳреллĕ чĕр чун* (выр.-чăв. сл.).

Кун пек конструкцисем малашне татах аталанма пултараççĕ. Вĕсем произведени чĕлхине чĕрĕлĕх, хăйне майлă илем кĕртеççĕ.

## ШУТ ХИСЕПĔСЕН ТУЛЛИ ФОРМИ ÇИНЧЕН

**1§. Хальхи чăваш чĕлхинчи шут хисепĕсем.** Морфологире хальхи чăваш чĕлхинчи шут хисепĕсене икĕ ушкăна уйăрса тишкересси йăлана кĕнĕ: а) кĕске форма; ă) тулли форма. И.П.Павлов кĕске формăллисене конкретлă шута кăтартаканнисем тесе, тулли формăллисене абстрактлă шута кăтартаканнисем тесе ăнлантарать[1]. Пуплеври функцине кура вĕсене тепĕр майлă ăнлантарулăх (атрибутив) тата ятлăх (субстантив) формисем тени те тĕл пулать[2]. Шут хисеп ячĕсен çак икĕ форми малтанхи теçеткере çеç, пĕрререн пуçласа вунна çитиччен, пулнине тĕпчевçĕсем тахçанах асăрханă:

| *ăнлантарулăх (кĕске) форма* | *ятлăх (тулли) форма* |
|---|---|
| пĕр | пĕрре |
| ик, икĕ | иккĕ |
| виç, виçĕ | виççĕ |
| тăват, тăвată | тăваттă |
| пилĕк | пиллĕк |
| улт, ултă | ултă |
| çич, çичĕ | çиччĕ |
| сакăр | саккăр |
| тăхăр | тăххăр |
| вун, вунă | вуннă |

Хальхи морфологире шут хисепĕсене виçĕ ушкăна уйăрма сĕнни те пур: а) кĕске форма (*пĕр, ик, виç...*); ă) çурма кĕске форма (*икĕ, виçĕ, тăвата...*); б) тулли форма (*пĕрре, иккĕ, виççĕ...*)[3]. Хисеп ячĕсен тулашне кура – сăмах вĕçĕнче вăйсăр усă сасă пуррипе çуккине кура – çапла ушкăнлама пулать те-и тен, анчах та пуплеври функцине кура малтанхи икĕ ушкăнĕ пĕр-пĕринчен нимĕнпе те уйрăлса тăмаççĕ, иккĕшĕнпе те ăнлантарулăха палăртнă чухне пĕрешкелех усă кураççĕ. Пĕрешкелех тенĕрен, пирĕн шутпа, *икĕ–ик, виçĕ–виç* йышши хисеп ячĕсене ытти пуплев пайĕсенчи фонетика пулăмĕнчен уйăрмалла мар пулас. Тĕслĕхрен, паллă ячĕсем: *сарă–сар, шурă–шур*; ылмашсем: *эпĕ–эп, эсĕ–эс*; япала ячĕсем: *алă–ал, мулкачă–мулкач* т.ыт.те.

Сăмах вĕçĕнчи [ъ, ь] сасăсем диахронире этимологи сăлтавĕсенчен килсен те, килмесен те пултараççĕ[4]. Хальхи чăваш литература чĕлхинчи тата вырăнти калаçусенчи вăйсăр уçă сасăсем тухса ӳкес пулăма фонетика вариантлăхĕ тесе хаклани тĕрĕсрех, мĕншĕн тесен вĕсем ытларах пуплев юхăмĕнчи сандхипе çыхăннă. Тĕслĕхрен: *Эпир ик ĕнепе виçĕ сурăх усратпăр. Сар ачапа сарă хĕр.* Пĕлтерĕшĕпе функцийĕ тĕлĕшĕнчен фонетика варианчĕсене ушкăнлама май килмест. Çавăнпа та ку ĕçре ăнлантарулăх функциллĕ шут хисепĕсене *кĕске формăсем*, ятлăх функциллисене *тулли формăсем* тенипе çырлахнă.

**2 §. Шут хисепĕсен этимологийĕ пирки**. Тĕллевĕмĕре кура ку ĕçре эпир чăваш чĕлхинчи хисеп ячĕсен этимологине тĕпчес ыйтуран пăрăнатпăр. Чăваш тата тĕрĕк чĕлхисенчи хисеп ячĕсен этимологийĕ пирки тĕпчевçĕсем кăсăк шухăшсем нумай каланă, çав шухăшсене пĕтĕмлетсе тишкернĕ литература та çителĕклех[5]. Çавăнпа та чăваш чĕлхинчи шут хисепĕсен тулли форми епле пулса кайни çак ĕçре тĕп вырăн йышăнать.

**3 §. Тулли хисепсен пулăвне синтаксис функцийĕпе, ритмикăпа тата эмфазăпа ăнлантарни.** Чăваш чĕлхинчи шут хисепĕсем кĕске тата тулли формăра тăма пултарни тĕпчевçĕсене тахçантанпах кăсăклантарнă. Курăнать ĕнтĕ, хисеп ячĕсен тулли форми кĕске формăран йĕкĕр (вăрăм, вăйлă) хупă сасăллă пулнипе уйрăлса тăрать. Ытти хурăнташ чĕлхесенче кунашкал пулăм çукпа пĕрех. Тĕрĕсрех каласан, йĕкĕр хупă сасăллă шут хисепĕсем тĕрĕк чĕлхисемпе вырăнти калаçăвĕсенче тĕллĕн-тĕллĕн, системăсăр тĕл пулкалаççĕ. Тĕслĕхрен: уйг. *ikki*, хорезм. *ikkə* ‘иккĕ’; уйг. *jätta*, узб., кум. *jetti*, хорезм. *jeddə*, азерб. *jeddi*, шор. *četti*, як. *sätta* ‘çиччĕ’; уйг., узб., азерб. *säkkiz*, хорезм. *sekkəs* ‘саккăр’; уйг. *tokkuz*, узб. *tökkiz*, хорезм. *dokkis*, азерб. *dokguz* ‘тăххăр’; уйг. *ottuz*, узб. *öttiz* ‘вăтăр’; хорезм. *ällə*, азерб. *älli* ‘аллă’. Çакăн евĕрлĕ шут хисеп ячĕсем ытти хăш-пĕр тĕрĕк чĕлхисенче те сиксе тухкалаççĕ. Л.С.Левитская шухăшĕпе, юнашар икĕ пĕр пек хупă сасăллă тĕслĕхсене экспрессилĕхпе е юнашар тăракан тĕрлĕ хупă сасăсен пĕрпекленĕвĕпе ăнлантарма пулать: *oltuz > ottuz; jetdi > jetti*[6].

Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕнче те шут хисепĕсен тулли торминчи йĕкĕр (вăрăм, вăйлă) хупă сасăсем абстрактлă

шутлавра хисепсене пусарах, экспрессипе каланӑ пирки пулса кайнӑ текен шухӑш ҫирӗпленнӗ. Чи малтанах ку шухӑша Н.И.Ашмарин каланӑ пулас[7]. Т.М.Матвеев чӑваш чӗлхинчи хисеп ячӗсене ятарласа тӗпченӗ статйинче те йӗкӗр (вӑрӑм, вӑйлӑ) хупӑ сасӑллӑ тулли формӑсем эмфаза мелӗпе пулнӑ тесе шухӑшлать[8]. Эмфазӑна хупӑ сасӑсен вӑрӑмлӑхӗпе палӑртма май пуррине автор паллӑ ячӗсенче те тӗл пулакан тӗслӗхсемпе ҫирӗплетет: *Пысӑк ҫын килчӗ*, анчах та: *Ку ҫын пысӑккӑ*; *ҫук ҫын*, анчах та: *Кунта ҫын ҫуккӑ*. Т.М.Матвеев чӑваш чӗлхи пусарах каланине палӑртма сӑмах вӗҫне уҫӑ сасӑсем хушнине те кӑтартса хӑварать: *Кӑна вӑл турӗ*, анчах та: *Апла, тӑвӗ вӑлӑ*! Ҫапла майпа, тулли хисеп ячӗсенчи юлашки вӑйсӑр уҫӑ сасӑсем те [ъ, ь] эмфазӑна палӑртас меле пурнӑҫлаҫҫӗ пулас.

В.Г.Егоров та тулли хисепсем синтаксис ыйтӑвӗсене тивӗҫтерес тӗллевпе пулса кайнине палӑртать. Калаканӗн тӗп шухӑшӗ япали ҫинче пулсан, чӑваш чӗлхи шут хисепӗсен кӗске формипе усӑ курать, тӗслӗхрен: *пӗр тенкӗ*, *икӗ тенкӗ*, *виҫӗ тенкӗ*; *пӗр кил*, *виҫӗ кил*. Калаканӗн тӗп шухӑшӗ хисепӗ ҫинче пулсан, тулли формӑсемпе усӑ курать, тӗслӗхрен: *пӗрре*, *иккӗ*, *виҫҫӗ* т. ыт. те[9].

Н.А.Андреев тӗпчевҫӗ те чӑваш чӗлхинчи хисеп ячӗсене ятарласа тишкернӗ. Автор шухӑшӗпе, хисеп ячӗсен тулли формисем чӑваш чӗлхинче ятсене абстракцилесе палӑртас ("отвлечение имен") туртӑмпа ҫыхӑннӑ. Т.М.Матвеев евӗрлӗрех, вӑл та хисеп ячӗсенчи пулӑма паллӑ ячӗсенчи пулӑмпа танлаштарать, тӗслӗхрен: *ватӑ – ват ҫын*, *ҫӗнӗ – ҫӗн ҫын*, *кивӗ – кив япала* т.ыт.те.

Автор малалла чӑваш чӗлхинче ятсене уйӑрарах калама ятарлӑ *-и* (*-ӗ*) аффикслӑ мел те пуррине палӑртать, *-и* аффикс хушӑнсан хупӑ сасӑсем вӑрӑмланнине те асӑрхаттарса хӑварать, тӗслӗхрен: *симӗс–симӗсси*, *ырӑ–ырри*, *ылтӑн–ылтӑнни*. Хисеп ячӗсем те ҫак палӑрту аффиксне йышӑнса япаласем пекех палӑртуллӑ пулма пултарнине тӗпчевҫӗ ҫак тӗслӗхпе ҫирӗплетет: *Виҫҫине хитре ҫыртӑм*.

Ҫав хушӑрах Н.А.Андреев хӑйӗн шухӑшлавӗнчи хирӗҫӳлӗхе те кӑтартса хӑварать: чӑваш чӗлхинчи ятсем *-ӗ* аффикс йышӑннӑ чухне вӗсенчи хупӑ сасӑ нихӑҫан та вӑрӑмланмасть. Сӑмах кунта *ылтӑнӗ*, *пуканӗ* йышши формӑсем пирки пырать пулмалла, авторӗ хӑй тӗслӗхсем илсе паман.

Анчах та ҫак асăрхаттару питĕ кăсăк: шут хисепĕсем шăпах [и] сасăпа мар, [ь] сасăпа вĕҫленеҫҫĕ. Ҫапла вара, сăмах вĕҫĕнчи [ъ, ь] сасă тахҫан палăрту пĕлтерĕшлĕ пулнă тесе шутлани сăмах варринчи хупă сасă вăрăмланнинче уҫса параймасть.

Н.А.Андреев вĕрентӳ ĕҫĕнче шут хисепĕсен тулли формине тĕп форма тесси йăлана кĕнине хирĕҫлет, тĕп форма вырăнне кĕскине йышăнма сĕнет[10]. Ку сĕнӳпе, паллах, килĕшмелле.

Пĕтĕмлетсе каласан, ҫӳлерех илсе кăтартнă тĕпчевҫĕсен шухăшĕсене хисеплемелле, анчах та хисеп ячĕсен пулăвне эмфазăпа, палăрту мелĕсемпе ҫеҫ ăнлантарма тăрăшни иккĕлентерӳллĕ. Чăваш чĕлхи эмфазăна палăртма, тĕпрен илсен, хупă сасăсене вăрăмлатнипе мар, уҫă сасăсене тăсарах калас мелпе усă курать, тĕслĕхрен: *пы-ысăк, ла-айăх* т.ыт.те[11].

**4 §. Шут хисепĕсен тулли форми пулса кайнине ют чĕлхе витĕмĕпе ăнлантарни.** Чăваш чĕлхинчи хисеп ячĕсен пулăвне Б.А.Серебренников мари чĕлхи витĕмĕпе ăнлантарать. Чăнах та мари чĕлхинче те шут хисепĕсен кĕске тата тулли формисем пур, тулли форма кăтарту (дейксис) аффиксĕ хушăннипе йĕркеленсе пырать: *кок* ‘икĕ’ – *коктык* ‘иккĕ’, *кум* ‘виҫĕ’ – *кумыт* ‘виҫҫĕ’ т.ыт.те. Автор шухăшĕпе, чăваш чĕлхинче малтанах *виҫ, вун* йышши шут хисепĕсем 3-мĕш сăпат аффиксне (*-ĕ*) йышăннă. Анчах та сĕм авалтанах [ъ, ь] сасăсемпе вĕҫленекен, камăнлăха палăртман хисеп ячĕсем пулнă пирки (*ултă, икĕ*) ку мел хисеп ячĕсен кĕске тата тулли формисене уҫăмлăн уйăрма май паман. Ҫавăнпа та, тет Б.А.Серебренников, вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса илме хушма мел кирлĕ пулнă, ур. к. камăнлăх категорийĕн 3-мĕш сăпат аффиксĕ тата тепĕр хут хушăннă. Ҫапла вара, хисеп ячĕсенчи вăрăм хупă сасă малтанхи нейтрализациленнĕ [ь] сассăн юлашкине (рефлексне) упраса хăварнă: *вун + ă + ă > вуннă*. Автор шухăшĕпе, *пиллĕк, саккăр, тăххăр* сăмахсенчи вăрăм хупă сасă аналогипе пулса кайнă[12].

Л.С.Левитская чăваш чĕлхинчи хисеп ячĕсен кĕске тата тулли формисем мари чĕлхин витĕмĕпе пулса кайнине халлĕхе ҫирĕплетсе калама иртерех-ха тесе асăрхаттарать, хăйĕн иккĕленĕвне самаях витĕмлĕ аргументсемпе ҫирĕплетет[13]. Калас пулать, чăваш чĕлхе пĕлĕвĕнче Б.А.Серебренников шухăшĕ паянхи кунччене упранса пырать-ха[14].

**5 §. Хисеп ячĕсен тулли форми кăк тĕрĕк тапхăрĕнченех килни пирки.** М.Р.Федотов хисеп ячĕсен геминатăллă формисене тĕпченĕ ĕçсене питĕ тĕплĕн тишкерсе тухнă. Автор хăй П.М.Мелиоранский, А.Н.Самойлович, А.М.Щербак хисеп ячĕсене икĕ хупă сасăпа каласси кăк тĕрĕк тапхăрĕнченех килекен пулăм тесе хакланине килĕштеререх парать[15].

Хальхи тĕрĕк чĕлхисенче сайра-пĕр сиксе тухакан икĕ хупă сасăллă хисеп ячĕсене чăваш чĕлхинчи шут хисепĕсен тулли тата кĕске формисемпе пĕр картра пăхни тата геминацие кăк тĕрĕк тапхăрĕнченех килекен пулăм тесе хаклани иккĕлентерет. Пирĕн шутпа, кун пирки Л.С.Левитская питĕ тĕрĕс асăрхаттарнă: "Чувашские формы с долгими согласными могут и не отражать соответствующие тюркские формы, так как противопоставление: сильный (долгий) – слабый (краткий) согласный, довольно распространенное в чувашских именах, могло быть морфологизовано в чувашских числительных. Его функциональной нагрузкой является различение атрибутивной и субстантивной форм числительных: *ik̬ə* – *ikkə*"[16].

Чăваш чĕлхинчи шут хисеп ячĕсен тулли тата кĕске формисене ытти тĕрĕк чĕлхисенче тата вырăнти калаçăвĕсенче сайра-пĕр тĕл пулакан икĕ хупă сасăллă хисеп ячĕсемпе пăтраштарма юраманнине ытти тĕпчевçĕсем те кăтартса хăвараççĕ[17].

**6 §. Чăваш чĕлхинче геминатăсем пулса кайнин сăлтавĕсем.** Л.С.Левитская щухăшне малалла аталантарса çапла калама пулать: тулли хисеп ячĕсенчи йĕкĕр хупă сасă пулăвне пĕтĕмĕшле чăваш консонантизмĕнчи йĕкĕр фонемăсен пулăвĕнчен, функцийĕнчен уйăрса тишкерме çук. Енчен те чăваш чĕлхин фонологийĕнче *ахаль фонема – йĕкĕр фонема* текен хирĕçтăру пур пулсан, çав хирĕçтăру чĕлхере хăçан тата мĕнле пулса кайнине, геминатăсен фонема тытăмĕнчи статусне тĕрĕс çырса кăтартни кирлĕ. Унсăрăн, пирĕн шутпа, пĕр-пĕр пуплев пайĕнчи геминатăсене пайăррăн ăнлантарса пама май килмест. Чăваш фонологийĕнче гемината ыйтăвĕ самаях кăткăс пулнине кура ун пирки ку статьяра сăмах хускатмăпăр[18].

Хăй вăхăтĕнче В.И.Котлеевпа И.Т.Сергеев, фонетикăри çĕнĕ теорисем çине таянса, чăваш чĕлхинчи геминатăсене

каласаканăн асĕнчи сăмахсен психофизиологиллĕ ритм ӳкерчĕкĕпе, пусăм вырăнĕ улшăннипе ăнлантарса пама тăрăшнă, ур. к. геминатăсен пулăвне синхронирех çырса кăтартас çулпа кайнă. Авторсем çапларах татăклă пĕтĕмлетӳ тăваççĕ: "Таким образом, геминацию интервокальных согласных чувашского языка при именном словоизменении можно объяснить на основе закономерностей самого чувашского языка, и здесь нет необходимости в сравнительно-исторических изысканиях"[19]. Çак статьяна пахалăхне чакармасăр, унăн чăваш фонетикинчи вырăнне пĕчĕклетмесĕр хаклас килет, çапах та ку ĕçре чăваш чĕлхинчи геминатăсем пулса кайнине епле çутатнипе килĕшме çук. Сăлтавĕсем иккĕ:

1) авалхи чăваш чĕлхинче икĕ уçă сасă хушшинче янăравсăр е янăравлă хупă фонемăсем пулнă? Ку статья авторĕсен тĕпри ыйтăвĕ. Фонологи принципĕсене тытса пырсан, кунашкал ыйту лартма юрамасть, мĕншĕн тесен *янăравлăх/янăравсăрлăх* уйăру паллийĕ пулман чухне вĕсен (шавлă хупă сасăсен) ку позицири "янăравлăхĕ" релевантлă пулман. Тепĕр майлă каласан, вĕсем янăравлă та, янăравсăр та пулма пултарайман, каласакансем вĕсен "янăравлăхне" туйман;

2) чăваш чĕлхинчи геминатăллă нумай-нумай сăмах тĕпчевçĕсем сĕнекен "сăмахăн ритм ӳкерчĕкĕ" текен теори тулашĕнче юлать, ур. к. кунта универсаллăх принципĕ çук.

Кирек епле пулсассăн та, ку статьяна ырăпа кăна асăнмалла, мĕншĕн тесен чăваш чĕлхинче геминатăсем пулса кайнине тĕпчесе çырнă урăх пĕр ĕç те çук. Шел пулин те, каярахри фонологи ĕçĕсенче чăваш чĕлхин сасă тытăмĕнчи йĕкĕр фонемăсене (геминатăсене) тĕпчевçĕсем пăрахăçланă тесен те йăнăш пулмасть[20].

Хальхи чăваш чĕлхин хупă фонема тытăмне геминаци пулăмне шута илмесĕр çутатса пама тăрăшни историллĕ фонетикăпа диахрониллĕ фонологишĕн пысăк чăрмавсем кăларса тăратни пирки эпир асăрхаттарса хăварнăччĕ, çавăнпа ку ыйту патне таврăнмăпăр[21]. Анчах та çакна каласа хăварасах пулать: фонетикăпа фонологире тĕрлĕ шухăшсем пуçпулса тăнă вăхăтсенче те И.П.Павлов, геминатăсен чăваш чĕлхинчи вырăнне туйса, питĕ паха ĕçсем çырнă, анчах геминатăсен пулăвне автор ятарласа тĕпчемен[22].

Шухăшăмăр уçăмлăрах пултăр тесен, геминаци ыйтăвĕн никĕсри хăш-пĕр ăнлавĕсем пирки асăнмасăр иртме çук. Чăваш чĕлхинчи йĕкĕр фонемăсене (сăмах тĕпĕнче те, морфема чиккинче те) тишкерни пире çапла пĕтĕмлетӳсем тума май парать:

1. *Ахаль фонема – йĕкĕр фонема* хирĕçтăру хальхи чăваш консонантизмĕн тĕп палăрăмĕсенчен пĕри пулса тăрать.

2. Çак хирĕçтăру хурăнташ чĕлхесенче те, вырăс чĕлхинче те çук, çавăнпа ку ыйтăва чăваш фонетикинче çителĕксĕр çутатнă.

3. Чăваш чĕлхинчи геминатăсем сасăсен пĕрпекленĕвне (ассимиляцие) пула çуралнă.

4. Сасăсен пĕрпекленĕвне икĕ тапхăра уйăрса тишкермелле: а) чĕрĕ пĕрпекленӳ; ă) истори пĕрпекленĕвĕ. Истори пĕрпекленĕвĕсене хăйсене икĕ ушкăна уйăрмалла: уçăмлă тытăмлисем тата сĕм авалах пулса кайнă, хальхи чĕлхере уçăмсăрланнă пĕрпекленӳсем.

**Чĕрĕ пĕрпекленӳ**

Чăваш фонетикинче кун йышши пĕрпекленĕве иртнĕ ĕмĕртенпех тĕплĕн çырса кăтартаççĕ. Чĕрĕ фонетика процесĕ пулнă пирки ку пулăм мĕнле майпа пулнине ăнлантарма кирлех те мар:

каятпăр - [каја́п:ър];
чĕкеçсем - [чьг’эç:эм’];
ишсе - [иш’:э];
вулатчĕ - [вула́ч:ь]

**Истори пĕрпекленĕвĕ**

а) уçăмлă тытăмлисем:
тĕттĕм [т’ьт’:ьм’] < *тĕп-тĕм* (паллă ячĕн вăйлă степенĕ, танл. сап-сарă);
куллен [кул’:эн’] < *кун + лен*,
вылля [выл’:а́] < *вăй + ла*;
куллян [кул’:а́н] < *куй + лан* т.ыт.те.

Çак ушкăнах çыхăнчăк сăмахсене те кĕртмелле:
çăраççи [çъраç:и́] < *çăра уççи*,
улмуççи [улмуç:и́] < *улма йывăççи*,
çарран [çар:а́н] < *çара уран* т.ыт.те;

ă) уçăмсăр тытăмлисем:
тӳмме [т’үм’:э] < *тууума*;
тăрри [тър:и́ᵘ] < *турүај*,

вулла [вул:á] < *оүла*;

уллах [ул:áх] < *оүлаү* т.ыт.те.

Кĕскен каласан, чăваш чĕлхинчи геминатăллă сăмахсемпе сăмах формисем тахçан пĕрпекленсе тухса ўкнĕ пĕр-пĕр сасса палăртаççĕ. Çав сасă, пахалăхне çухатса, хисепне упраса хăварнă. Пĕтĕмĕшле чĕлхе пĕлĕвĕ кунашкал пулăма тĕнчери нумай-нумай чĕлхесенче тупса палăртнă. Эпир сăнанă тăрăх, уçăмсăр пĕрпекленў ушкăнне кĕрекен геминатăсенче ытларах чухне хыçчĕлхепе каланнă темĕнле хупă сассăн йĕрĕ, юлашки (реликт) упранса юлнă[23]. Пăтрашăну ан пултăр тесе эпир ăна ку ĕçре [ү] паллăпа çырса кăтартатпăр.

Чĕлхеçĕсене халичченех тĕлĕнтерекен ыйту вăл – чăваш чĕлхинчи морфема чиккинчи геминаци. Пирĕн шутпа, ү-рефлекс шăпах морфема чиккинче упранса юлса морфологиленнĕ. Ку сий ытларах хальхи чăваш чĕлхинче [ъ, ь] сасăпа пĕтекен ятсенчен тăрать. Анчах та [ъ, ь] сасăпа вĕçленекен сăмахсенчен чылайăшĕ авалрах [ү] сасăпа вĕçленни паллă ĕнтĕ.

Çапла вара, халиччен ăнлантарса парайман морфема чиккинчи геминацире пысăк вăрттăнлăхах çук иккен.

Тĕслĕхрен:

тăршшĕ < [търъхш'ь < търъүъж'ь];

пулă – пулли < [пулһ'й < пулъү'й];

пулла /пару п./ < [пулүá < пулъүá];

пуллăн /кам. п./ < [пу́лүън< пу́лъүън][24];

сарă – сарри < [сарү'и < саръү'й] т.ыт.те.

Тен, сăмах вĕçĕнчи [ү] сасă тухса ўкесси хăй те çак процеспа çыхăннă: пурăна-киле, падеж форми витĕмĕпе, сăмах тĕпĕ *пулъү* мар: *пул[ъ]* пек туйăна пуçланă (переразложение основ).

Чылай чухне морфема чиккинчи геминаци сăмах вĕçĕнчи сасă рефлексĕ мар, аффикс пуçламăшĕнчи ү-рефлекс тесе шутлама май пур:

çыраканни < [çыраган + ү'й);

кăвакки < [къвак + һ'й].

Паллах, уçăмсăр тытăмлă пĕрпекленўллĕ сăмахсенчи е морфема чиккинчи геминаци пирки ятарлă тĕпчев ĕçĕ туса ирттермелле, геминатăллă кашни сăмахăн, морфемăн этимологине пăхса тухмалла. Пирĕн шутпа, *ү>h>0* (нуль,

хисепĕ упранать) процесс чăваш чĕлхинче морфологиленсен, *ахаль фонема – йĕкĕр фонема* релевантлă пулса тăрсан, [ъ, ь] сасăпа вĕçленекен мĕн пур сăмах парадигмисем пĕрешкелленнĕ, ур.к. γ-рефлекс хăш-пĕр чухне пулмасан та пултарать. Кирек епле пулсан та, чăваш чĕлхинчи геминатăсен никĕсĕнче истори пĕрпекленĕвĕ çеç палăрать тесе калама пирĕн самаях çирĕп сăлтавсем пур.

**7 §. Шут хисепĕсен тулли форминчи геминаци.** Геминаци пулăмĕпе пулăвне маларах каланă пек хакласан, пирĕн шутпа, хисеп ячĕсен тулли формин пулăвĕ те уçăмланать.

Хăш-пĕр тĕрĕк чĕлхисенче тата вырăнти калаçăвĕсенче абстрактлă шутлавра ятлăх функцине шут хисепĕсем мар, пĕтĕмлетÿ хисепĕсем пурнăçлаççĕ[25].

Авалхи тĕрĕк чĕлхин малтанхи тапхăрĕнче пĕтĕмлетÿ хисепĕсем икĕ тĕрлĕ аффикспа йĕркеленнĕ: 1) **-aγu/-ăγÿ*; 2) *-n (-a:n/-ă:n).* Ку аффикссен хальхи тĕрĕк чĕлхисенчи йĕрне тĕпчевçĕсем тишкернĕ[26], çавăнпа та ку ыйту патне таврăнмăпăр. Хальхи чăваш чĕлхинче пĕтĕмлетÿ хисепĕсем *-ăн/-ĕн* аффикспа пулаççĕ: *иккĕн, виççĕн, тăваттăн...* (*-ăн/-ĕн < *-н).* Малтанхи аффиксĕ *-aγu/-ăγÿ* вара, пирĕн шутпа, шăпах хисеп ячĕсен тулли форминче упранса юлнă.

Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕнче чи малтан çак аффиксăн рефлексне Т.М.Матвеев *пĕрре* шут хисепĕнче тупса палăртнă: *пĕрре < пĕр - е - γÿ < пĕр - еγÿ.* Автор шухăшланă тăрăх, каярахпа *γÿ* сыпăк тухса ÿкнĕ[27]. Ытти хисеп ячĕсене тĕпчевçĕ урăхла ăнлантарнă. М.Р.Федотов ку шухăша çак аргументпа хирĕçлет: *-aγu/-ăγÿ* аффиксăн *-av/-ev* рефлексĕпе кыпчак чĕлхисенче тăтăш усă кураççĕ, унăн йĕрĕ чăваш чĕлхинче те палăрать: *Пĕрев пурне те çиме юрать тесе шанать, тепĕрев пахча çимĕçĕ çиет* (Ашм., X, 229).

Ку аффикс ача-пăча чĕлхинче те, шăпа янă чух, тĕл пулать: *пĕрре-пĕрев, иккĕ-икев, виççĕ-виçев, тăваттă-тăваткал, пиллĕк-пилеш, улттă-улма, çиччĕ-çилме, саккăр-салма* т.ыт.те[28].

Пирĕн шухăшăмăрпа, авалхи тĕрĕк чĕлхинчи **-aγu/-ăγÿ* аффиксăн аталанăвĕ урăхларах пулнă:

↗ чăв. *-ăγă/-ĕγ'ĕ → -γă/-γ'ĕ
ав. тĕрĕк *-aγu/-ăγÿ
↘ кыпч. -ав/-ев → чăв. -ев

Çапла вара, хальхи чăваш чĕлхинчи шут хисеп ячĕсенче **-аүи/-ăү'ӣ* аффиксăн рефлексĕ палăрать тесе çирĕплетме хăюлăх çитеретпĕр. Пирĕн шутпа, чăваш чĕлхинчи хисеп ячĕсен тулли формисем çак йĕркепе пулса пынă:

пĕрре < *[п'ър'ү'ь < п'ьр'ьү'ь < п'ър' + ьү'ь];
иккĕ < *[и́к'h'ь < и́ӗьүь́ < ик' + ьү'ь];
виççĕ < *[в'и́çh'ь < в'и̌зьүь < в'uç + ьү'ь];
тăваттă < *[тъва́тhъ < тъва́ртhъ < тъварт + ъүъ],

кунта [р] сасă тухса ӳкмелли услови пур;

пиллĕк < *[п'и́л'ьү' < п'uл' + ьү'ь],

пĕтĕмлетӳ аффиксĕ çак хисеп ятĕнче çеç туллин упранса юлма пултарнă.

ултă < *[у́лтhъ < у́лдъүъ < улт + ъүъ];
çиччĕ < *[çи́чh'ь < çи́čьү'ь < çич + ьү'ь];
вуннă < *[вунүъ < ву́нъүъ < вун + ъүъ].

Аналогие пула тата геминатăсем морфологиленнине кура *саккăр*, *тăххăр* хисеп ячĕсем те кĕске тата тулли формăсенче çӳреме пуçланă.

Пирĕн шутпа, *пĕрре* хисеп ячĕ каярахпа, тăтăшах ытти пуплев пайĕсем пек çӳренĕрен пулса кайнă, ур. к. юлашки вăйсăр уçă сасă вăйланнă. Танлаштарăр: *Пĕрре эпĕ вăрмана кайрăм* (наречи). *Пĕрре пĕлĕт çине, тепре çĕр çине пăхса илет* (союз) т.ыт.те.

Сăмах май каласан, *пĕрре* формăпа пĕрлех Н.И.Ашмарин словарĕнче *пĕрĕ, пĕррĕ* формăсем те тĕл пулаççĕ: *Кон пик сайра хутра пĕррĕ çиç килсе тохать. Кăна пит усал арăм лекрĕ, тет. Ачасене пĕррĕ те кураймасть, тет* (Ашм., X, 235).

Тата çакна асăрхаттармалла: семантикине кура *пĕр* хисеп ячĕ *-аүи/-ăүӣ* пĕтĕмлетӳ аффиксне йышăнса каясшăнах пулман тесен те йăнăш пулмĕ, мĕншĕн тесен *пĕр* хисепе пĕтĕмлетме йывăр. Хальхи чăваш литература чĕлхинче шăпах *пĕр* хисепĕн çак хăйне евĕрлĕхне пула кăсăк пулăмсем çирĕпленсе юлнă:

1) *пĕрре* сăмахра пусăм вырăнĕ *пĕррĕ* чухнехиллех упранса юлнă;

2) *вун пĕрре* '11' вырăнне *вун пĕр* çирĕпленнĕ.

Унтан та ытларах, чĕрĕ калаçура, эпир сăнанă тăрăх, йĕрке хисепĕсем тулли формăран пулнине пăхмасăрах тăтăшах *пĕрмĕш/пĕрĕмĕш/пĕррĕмĕш* формăсем тĕл пулаççĕ.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
Ч-36560

Тĕслĕхрен: *Пĕррĕмĕш классем киле кайрĕç те ĕнтĕ* (*пĕрремĕш* выранне).

Çак фактсем авалрах абстрактлă шутлавра *пĕрре* выранне *пĕрĕ/пĕррĕ* формăсемпе те усă курнă теме май параççĕ.

Пысăках мар тĕпчевĕмĕре пĕтĕмлетсе çапла калама пулать: *чăваш чĕлхинчи шут хисепĕсен тулли форми, ятлăх функцине пурнăçлаканни, пĕтĕмлетӳ хисепĕсенчен пулса кайнă.* Ытти шухăшсене статьяра пăхса тухнă.

Хальхи чăваш чĕлхинчи пĕтĕмлетӳ хисепĕсем авалхи тĕрĕк тапхăрĕнченех килекен пĕтĕмлетӳ аффиксĕн тепĕр формипе йĕркеленеççĕ: ав. тĕр. **-n* < чăв. *-ăн/-ĕн.*

**Асăрхаттарусемпе литература**


[1] *Павлов И.П.* Хальхи чăваш литература чĕлхи /Морфологи. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1965. 174 с.

[2] *Левитская Л.С.* Историческая морфология чувашского языка. М.: Наука, 1976. С. 45.

[3] *Сергеев В.И.* Именные части речи: Учебное пособие. Чебоксары: Чуваш. ун-т, 1994. С. 124–125.

[4] *Матвеев Т.М* Некоторые особенности чувашских числительных //Вопросы чувашского языка, литературы и искусства. Чебоксары, 1960. С. 6–9; *Левитская Л.С.* О чувашских именных основах с конечными ă, ĕ //Учен. зап. /НИИ при Сов. Мин. ЧАССР. Вып. 28. Чебоксары, 1965. С. 32–38; *Яковлев П.Я.* Чăваш фонетики: Вĕренӳ кĕнеки /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1995. 68–70 с.

[5] Тĕслĕхрен: *Серебренников Б.А., Гаджиева Н.З.* Сравнительно-историческая грамматика тюркских языков. Изд. 2-е. М.: Наука, 1986. С. 124–132; Сравнительно-историческая грамматика тюркских языков /Морфология. М.: Наука, 1988. С. 162–201; *Федотов М.Р.* Чувашский язык: Истоки. Отношение к алтайским и финно-угорским языкам. Историческая грамматика. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1996. С. 241–278.

[6] *Левитская Л.С.* Историческая морфология... С. 45.

[7] *Ашмарин Н.И.* Заметки по грамматике чувашского языка //Чувашский язык /Труды ЧНИИ. Вып. 66. Чебоксары, 1976. С. 43. Ку ĕçе архивран илсе пичетленĕ.

[8] *Матвеев Т.М.* Асăннă ĕç. 10 с.

[9] *Егоров В.Г.* Современный чувашский литературный язык в сравнительно-историческом освещении. Ч. I. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1954. С. 212.

[10] *Андреев Н.А.* Имя числительное //Материалы по грамматике современного чувашского языка. Чебоксары, 1957. С. 107–123.

[11] *Сергеев В.И.* Интонация как способ выражения грамматических значений в чувашском языке //Чувашский язык, литература и фольклор. Сб. статей ЧНИИ. Чебоксары, 1974. Вып. 4. С. 96–108; *Яковлев П.Я.* Асăннă ĕç, 1995. 103–105 с.

[12] *Serebrennikov B.A.* Über tschuwaschische Themen //Acta Orientalia Academiae scientiarum Hungaricae, fasc. 2. Budapest, 1964. S. 135—138; *Серебренников Б.А., Гаджиева Н.З.* Асăннă ĕç. 125 с.

[13] *Левитская Л.С.* Асăннă ĕç. 1976. 47 с.

[14] Тĕслĕхрен: *Сергеев В.И.* Асăннă ĕç. 125 с.

[15] *Федотов М.Р.* Асăннă ĕç, 1996. 263–264 с.

[16] *Левитская Л.С.* Асăннă ĕç. 46 с.

[17] *Серебренников Б.А., Гаджиева Н.З.* Асăннă ĕç. 125 с.

[18] Йĕкĕр фонема теорийĕ пирки çак кĕнекере вуласа пĕлме пулать: *Яковлев П.Я.*, 1995. С. 24–68.

[19] *Котлеев В.И., Сергеев И.Т.* Новые экспериментальные данные к истории интервокальных геминированных согласных в чувашском языке //Вопросы чувашской фонетики и лексикологии /Сб. статей. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1976. С. 49.

[20] Тĕслĕхрен: *В.И.Котлеев.* Чăваш чĕлхин сасă тытăмĕ: Фонологи очеркĕ. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1981. 71–83 с.

[21] *Яковлев П.Я.* К вопросу о геминированных согласных в чувашском языке //Чтения по вопросам этимологии и ономастики, посвященные 60-летию со дня рождения академика Г.Е.Корнилова: Тезисы докладов. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1996. С. 25–27.

[22] *Павлов И.П.* Краткий очерк морфонологии современного чувашского языка //Чувашский язык, литература и фольклор /Сб. статей ЧНИИ. Чебоксары, 1974. Вып. 4. С. 3–44; малалли: Чувашский язык и литература /Труды ЧНИИ при Сов. Мин. ЧАССР. Вып. 58. Чебоксары, 1975. С. 3–18; *Павлов И.П.* Удлинение согласных как морфонологическое явление в чувашском языке //Актуальные вопросы чувашского языкознания: Тезисы докладов и сообщений на научной сессии, посвященной 100-летию со дня рождения В.Г.Егорова (12–13 февраля 1980 г.). Чебоксары, 1980. С. 25–26.

[23] Вĕçленӳри геминацире халĕ çухалнă гутторалла хупă сасă юлашки палăрнине чи малтанах В.Грĕнбек асăрханă пулмалла: *allən < aləq-ən. Grønbech V.* Forstudier til tyrkisk lydhistorie, Selbstanzeige //Keleti Szemle. Budapest, 1903. T. 4. S. 114–125; 229–240. Шел пулин те, ку тĕпчеве тупма май килмерĕ, çавăнпа та В.Грĕнбек тавçăрăвне çак ĕçрен илнĕ: *Левитская Л.С.* Историческая фонетика чувашского языка. Рук., 1966 (архив ЧГИГН, отд. IV, ед. хр. 343. С.10). Каярахпа Г.И.Рамстедт та [ъ, ь] сасăпа вĕçленекен сăмахсен камăнлăх падеж формине çавнашкалах ăнлантарнă: *пуллăн < balık + ın.* Пăхăр: *Рамстедт Г.И.* Введение в алтайское языкознание. М., 1957. С. 34.

[24] Чăваш чĕлхинчи [ъ, ь] сасăпа вĕçленекен сăмахсен камăнлăх тата пару падежĕсен пулăвне Л.С.Левитская кăшт урăхларах курать. *Алă* йышши сăмахсем уçă сасăпа вĕçленеççĕ, çавăнпа камăнлăх падежĕн *-jən/-nən* аффиксĕпе пару падежĕн *-ja/-na* аффиксĕсем хушăнма пултарнă. Çапла вара, Л.С.Левитская шухăшĕпе, *alə + ˆnən > alənən̂ˆ > alnən̂ > allən̂.* Геминатăллă формăсене автор пĕрпекленӳ результачĕ тесе хаклать. Каярахпа ку процесс *йытă* йышши сăмахсем çине те куçнă (*Левитская Л.С.*, 1976. Асăннă ĕç. 17–18 с.).

Ку шухăш та пирĕн гипотезăна хирĕçлемест, геминатăсем пĕрпекленӳрен пулса кайнă тенине çирĕплетет çеç.

[25] *Левитская Л.С.*, 1976. Асăннă ĕç. 46 с.

[26] Сравнительно-историческая грамматика тюркских языков. Морфология, 1988. Асăннă ĕç. 188–192 с.

[27] *Матвеев Т.М.*, 1960. Асăннă ĕç. 10 с.

[28] *Сергеев В.И.*, 1994. Асăннă ĕç. 140 с.

**Кĕскетӳсем**

ав. тĕр. – авалхи тĕрĕкле

уйг. – уйгурла

хорезм. – узбек чĕлхин Хорезм калаçăвĕ

узб. – узбекла

кум. – кумыкла

кыпч. – кыпчакла

шор. – шорла

як. – якутла

Ашм. – *Ашмарин Н.И.* Словарь чувашского языка. I–XVII. Казань; Чебоксары. 1928–1950.

## ЫЙТУ ТАТӐКӖСЕМПЕ УСӐ КУРАССИН УЙРӐМЛӐХӖСЕМ

1.0. Таса (урӑх пӗлтерӗш хушӑнман) ыйтӑва чӑваш чӗлхинче икӗ майпа палӑртма пулать: 1) ыйту ылмашӗпе (ылмашлӑ ыйту предложенийӗсем), 2) ыйту ылмашӗсӗр (ылмашсӑр ыйту предложенийӗсем).

Ылмашлӑ ыйту предложенийӗпе пӗр-пӗр конкретлӑ информаци (япала, ун палли, ӗç мӗнле пулни, ун вӑхӑчӗпе вырӑнӗ тата ытти çинчен) пӗлес тесе усӑ кураççӗ. Ыйтакан хӑй **мӗн** пӗлменнине палӑртма предложение ыйту ылмашӗ лартать, çапла майпа ыйту **мӗн çинчение** кӑтартать: ***Кам патне кӗрсе курӑпӑр?*** (М.Ухсай); ***Мӗнле инкек çинчен калаçатӑн эсӗ?*** (Н.Мранькка); ***Хӑвӑр пирӗн пата хӑçан пыратӑр?*** (И.Юркин); ***Ку чӳрече мӗншӗн уçӑ?*** (Ф.Павлов). Çак предложенисене пайӑр ыйтуллисем те теççӗ (вырӑсла – “частновопросительные”).

Ылмашсӑр ыйту предложенийӗпе калакан пӗр-пӗр информаци тӗрӗс е тӗрӗс мар пулнине пӗлес тесе усӑ курать. Кун пек предложенисене пӗтӗмӗшле ыйту предложенийӗсем (вырӑсла – “общевопросительные”) теççӗ. Вӗсем асӑннӑ шухӑш тӗрӗс пулнине çирӗплетсе пама е тӗрӗс маррине кӑтартса хирӗçлеме хистеççӗ; хуравӗ икӗ тӗрлӗ пулма пултарать: е çирӗплетни, е хирӗçлени.

1.1. Ыйтӑва палӑртма усӑ куракан мелсен шутне тӗпчевçӗсем интонацие, ятарлӑ ыйту морфемисене, предложенири сӑмахсен йӗркине, сӑмахсен сасӑ тытӑмӗнчи улшӑнӑвне т. ыт. те кӗртеççӗ. Ку е вӑл чӗлхере çак мелсенчен пӗри çеç те, темиçе мелӗ те палӑрма пултарать. Акӑ, тӗслӗхрен, вырӑс чӗлхи интонацие шанарах парать, ятарлӑ морфемӑсемпе те усӑ курать, нимӗç чӗлхи вара ыйтӑва ылмашсемпе, сӑмахсен вырӑнӗ-йӗркипе палӑртать.

Пӗр-пӗринчен сӑмахсен вырӑнӗпе кӑна уйрӑлса тӑракан ыйтуллӑ тата ыйтусӑр предложенисем тӗл пулмаççӗ чӑваш пуплевӗнче. Предложени ыйтуллӑ е ыйтусӑр пулнине интонаципе çеç палӑртсах каймастпӑр. Пӗр тытӑмлӑ предложенисемех ун пек те, кун пек те пулма, вӗсене интонаци кӑна уйӑрма пултарни паллӑ-ха; тӗслӗхрен,

модальлĕх сĕмĕ хушăннă предложенисенче: *Тен, вĕсем ыран килеççĕ. Тен, вĕсем ыран килеççĕ?* Вĕсене ятарласа тĕпчемелле, çавăнпа ку ыйту çинче хальлĕхе чарăнса тăрас теместпĕр.

А.П.Пешковский пĕр-пĕр пĕлтерĕше грамматика хатĕрĕсемпе палăртнă чухне интонацин пĕлтерĕше палăртас функцийĕ хавшани çинчен каланă*. Çакна вăл "ылмашу принципĕ" тенĕ. Чăваш чĕлхи вара синтаксис пĕлтерĕшне палăртма ялан тенĕ пекех грамматика мелне суйласа илет. "Чăваш чĕлхинче ыйтуллă предложени ыйтусăррисенчен интонаципе мар, чи малтан ыйту сăмахĕсемпе ыйтуллă татăксем пуррипе (урăхла каласан, лексикăпа грамматика тĕлĕшĕпе) уйрăлса тăрать" [8:155]. Чăн та, ырăсла интонаципе палăртса калакан ыйту предложенине эпир чăвашла ыйту татăкĕ лартса йĕркелетпĕр. Апла пулсан, чăваш чĕлхинчи ылмашсăр таса ыйту предложенийĕ ятарлă татăксем пулăшнипе йĕркеленет.

2.0. Чăваш чĕлхинчи ыйту татăкĕсен шутне халиччен **-и, -ши, -им, -шим, неушлĕ (ниушлĕ)** тата хистев сĕмĕ пур а татăксене кĕртнĕ [16:31–32; 8:151–153]. Чĕлхеçĕсем пурте тенĕ пекех **-им, -ши, -шим** татăксен пĕлтерĕшĕнче ыйтупа пĕрле тĕрлĕрен хушма сĕмсем пуррине палăртаççĕ. "Ыйтăва палăртма пулăшакан татăксенчен -и татăк кăна таса ыйтăва кăтартать" [8:151]. Ыйтăва палăртма хутшăнакан ытти татăксен пĕлтерĕшĕнче тата модальлĕх сĕмĕ пур: иккĕленни, "пулма пултарать" е "çапла-ши, çапла мар-ши" тени, тĕлĕнни, тарăхни т.ыт.те.

3.0. **-и** татăк темиçе пĕлтерĕшлĕ единица. Вăл тепĕр чух ыйту пĕлтерĕшне пĕтĕмпех çухатса модальлĕхе палăртма пултарать [28:72–75; 7:23–24]. И.П.Павлов ку татăкăн иккĕмĕшле пĕлтерĕшĕсене чылай тупса палăртнă: вăл "предложенири шухăша тепĕр майлă (хирĕçле) ăнланма кирлине", "ĕçе тума ирĕк панине", иккĕленӳ е вăйлату пĕлтерĕшĕсене палăртма, пăхăнуллă хутлă предложенисен пайĕсене çыхăнтарма пултарни çинчен каланă [27:3–5; 28:71–78]. Пире вара **-и** татăкăн тĕп функцийĕ – таса ыйтăва палăртасси кăсăк-

* "Чем яснее выражено какое-либо синтаксическое значение чисто грамматическими средствами, тем слабее может быть его интонационное выражение вплоть до полного исчезновения, и, наоборот, чем сильнее интонационное выражение, тем слабее может быть грамматическое" [30:98].

лантарать. Унăн иккĕмĕшле пĕлтерĕшĕсем пирки тĕплĕн каласа тăмăпăр.

3.1. Чăваш чĕлхинчи **-и** ыйту татăкĕ тĕрĕк чĕлхисенчи **-мы/-ме** (тутар), **-мы/-ме/-мо/-мө** (пушк.), **-мы/-ми** (карач.-балк., туркм.), **-ми** (узб., азерб.), **-мы/-ми/-му/-мү** (чагат., кумык.), **mı/mi/mu/mü** (турккă), -бе (тува), **-ба/-бо/-па/-по** (алт.), **-ба/-бе/-па/-пе/-ма/-ме** (каз., каракалп., хак., нух.), **-бы/-би/-бу/-бү/-пы/-пи/-пу/-пү** (кăрк.) татăксемпе тӳр килет. Тĕрĕк чĕлхисенчи предложенире ку ыйту татăкĕ тĕрлĕ вырăнта тăма пултарать: хăш-пĕр чĕлхесенче – сăпатпа хисеп аффиксĕсем хыççăн, теприсенче – сăмах тĕпĕпе сăпат аффиксĕ хушшинче е сказуемăй пулакан глаголăн наклоненине кура – сăпатпа хисеп аффиксĕсен умĕнче е хыçĕнче. Çакна шута илсе-тĕр ĕнтĕ А.М.Щербак ыйтăва палăртакан морфемăна аффикс-татăк тесе хаклать те глагол улшăнăвĕн системине кĕртет [35:41].

Чăваш чĕлхинчи **-и** ыйту морфемине пĕр иккĕленмесĕрех татăксен шутне кĕртеççĕ. Нормăланă литература чĕлхинче те, пур диалектпа вырăнти калаçура та вăл (сăмах хăш пуплев пайне кĕнине тиркемесĕр) сăмаха улăштаракан аффикссен хыçне тăрать.

3.2. Ыйту хăш сăмаха тивнине пăхмасăрах ялан сказуемăй çумне тăма тăрăшнине -и татăкăн хăйне евĕрлĕхĕ теме пулать (калăпăр, вырăс чĕлхинчи “ли” татăкпа танлаштарсан). Ыйту ӳкекен сăмаха вара сказуемăй умне юнашар лартма тăрăшатпăр.

Н.К.Дмитриев профессор тĕрĕк чĕлхисенчи ыйту татăкне (вăл ăна “ыйту аффиксĕ” тет) предложенири ыйту ӳкекен член çумне лартаççĕ, çав член ытларах чухне сказуемăй пулать тет. Ун шучĕпе, ыйту татăкĕ сказуемăй çумĕнче пулсан – предложени интонацийĕ ахаль чухнехи пекех, татăка урăх сăмах хыçне лартсан – интонацие улăштарса калама тивет*. Çак шухăшсене çирĕплетме Н.К.Дмитриев казах, тутар, пушкăрт чĕлхисен тĕслĕхĕсене илсе кăтартать. Анчах та казах чĕлхеçисем **-ма/-ме/-па/-пе/-ба/-бе** татăк – ыйту хăш сăмах патне пулнине пăхмасăрах – сказуемăй çумне çеç тăма пултарать теççĕ [2:67]. Р.М.Балтаева

* “Сказуемое вопросительного предложения как бы притягивает к себе аффикс вопроса, и только в случае сильного логического ударения на подлежащем аффикс вопроса ставится при нем” [20:21].

тĕпченĕ тăрăх, тутар чĕлхинче те çаплах*. Диалектологсем вырăнти калаçусенче ку татăк ыйту ўкекен сăмах çумĕнче тăма пултарнине те палăртаççĕ [32:42], Р.М.Балтаева çакă вырăс чĕлхин витĕмĕпе пулнă тесе шутлать [13:15].

Чылай тĕрĕк чĕлхинче ыйту татăкĕ сказуемăй пулакан сăмах çумĕнче тăрать, тĕсл.: ойрот, якут, узбек чĕлхисенче [21:300–301; 29:60; 24:2]. Азербайджан чĕлхеçисем вара **-мы/-ми/-му/-мү** татăка глагол çумĕнчисен шутне кĕртеççĕ [1:23–25] (А.М.Щербак каланипе танл. [35:41]). Çапах та уйрăм тĕрĕк чĕлхисенче ыйту татăкĕн вырăнĕ ирĕклĕ – вăл кирек хăш член çумне те тăма пултарать, тĕслĕхрен: карачай-балкар** тата туркă [14:28; 25:500] чĕлхисенче.

3.3. Икĕ составлă тулли предложенире **-и** ыйту татăкĕ яланах сказуемăй пулакан сăмах хыççăн тăрать терĕмĕр: *Аçу çар çынни пулнă-и санăн?* (Ю.Силэм); *Салампи! Эсĕ-и ку?* (А.Артемьев); *Çаратни-и вăл ултă ăсан тытни?* (М.Кипек). Сăпатсăр тата паллă мар сăпатлă предложенисенче те çавах: *Сана вĕри чей ярса парас мар-и?* (Н.Петровская); *Кусене пĕрне те выставкăна тăратман-и?* (А.Емельянов); *Эмел парса ячĕç-и?* (Ю.Скворцов).

Икĕ составлă тулли мар тата ят предложенисене пĕр-пĕринчен уйăрасси хальхи чĕлхе пĕлĕвĕнче тавлашуллă ыйту [10:54; 11:33–34, 62–71; 14:114; 18:96; 23:187–201; 30:335; 34:241]. Эпир "пĕр-пĕр предложенире подлежащи составне кĕмен кĕçĕн член пулсан вăл ят предложени пулмасть" [11:70] текен шухăша тĕпе хурса, сказуемăйсăр предложенисен хăш-пĕр уйрăмлăхĕсем çинче чарăнса тăрас тетпĕр.

Сказуемăя сиктерсе хăварнă тулли мар предложенисене темиçе ушкăна пайлама пулать:

1) пĕрисенче подлежащи тытăмне кĕмен кĕçĕн член пур, вĕсенче ыйту татăкĕ çав кĕçĕн член çумĕнче тăрать:

---

* "В современном татарском частица **-мы/-ме** присоединяется к сказуемому вопросительного предложения, независимо от того, на какое слово падает логическое ударение. Вопросительное значение сосредотачивается, как правило, на слове, на которое падает логическое ударение" [13:15].

** "В отличие от некоторых тюркских языков, в которых частица **-мы/-ми** присоединяется к сказуемому, в современном карачаево-балкарском языке она часто употребляется в составе любого члена предложения" [17:341].

*Çтаппан пичче, килте-и эс?* (Н.Мранькка); *Эсир пирĕн районта нумайранпа-и?* (А.Артемьев);

2) тепĕр чухне сказуемăя умĕнхи предложенире асăнаççĕ, кун пек ыйту предложенийĕнче, сказуемăй составĕнчи кĕçĕн член çук пулсан, -**и** татăк кирек хăш сăмах хыççăн та тăма пултарать: *Ытти çĕрте те никамран юлмасть Коля. Коля çеç-и вара?* (Н.Мранькка). Икĕ тĕп члена каламасăр хăварни те тĕл пулать:

– *Çапăçатпăр!*

– *Иваç, кайран та-и?* (Е.Лисина);

***Кирук.*** *(...) Çакăн пек икĕ пӳлĕмлĕ хваттер илес пулсан, икĕ пин çурă çеç кирлĕ, малтанлăха.*

***Натали.*** *Çеç-и?* (Н.Терентьев);

3) хушма ыйту е хирĕç ыйту предложенийĕсен хушшинче те тулли маррисем пур. Хушма ыйтăва тĕп ыйту хыççăн лартса пулма пултаракан хурава пĕлтереççĕ: *Пурте шанатчĕç мана... Кам ĕнтĕ халь эпĕ? Ăмăрт кайăк-и?* (А.Артемьев). *Вĕренмен çын халь мĕн тума пĕлет? Тырă вырма-и? Суха тума-и? Каскалама-и?* (Ю.Скворцов). Хирĕç ыйтăва вара тĕп ыйту адресачĕ парать:

– *Эсĕ кам пулатăн?*

– *Эпĕ-и? Хваттер хуçи* (В.Енĕш);

– *Саланов та кайрĕ-и? – ыйтрĕ Салампи.*

– *Саланов-и? Кайман* (А.Артемьев).

Пĕр составлă ят предложенисен тĕп членĕ подлежащи тенипе пуртех килĕшмеççĕ. Тĕслĕхрен, Е.М.Галкина-Федорук, В.В.Бабайцева, П.А.Лекант вырăс чĕлхеçисен шучĕпе, ят предложенин тĕп членĕ контекста кура хăш-пĕр чухне подлежащи, тепрехинче сказуемăй пулать [12:118; 15:40–50; 26:105–106]. Тĕрĕк чĕлхеçисен хушшинче "çак члена подлежащи те, сказуемăй та теме çук" шухăшлисем те пур [2:83; 19:437; 25:512]. А.Н.Баскаков ят предложенин тĕп членĕ сказуемăй пулать, подлежащийĕ контекстран е пуплев ситуацийĕнчен паллă тет [14:104]. Çак шухăша тĕпе хурсан, *Чим! Алăк сасси мар-и?* (Ю.Скворцов); *Алло! Михаил Васильевич-и?* (Н.Петровская) йышши тĕслĕхсенче те -**и** татăк подлежащи çумĕнче мар, сказуемăй çумĕнче тăрать теме пулать.

3.4. Чăваш синтаксисне чылайранпа тĕпчекен И.А.Андреев ыйту татăкĕпе предложенире сказуемăй çумĕнче мар, урăх член хыççăн усă курнине йăнăш [8:151–152], "шухăш

тĕшшине палăртакан татăксемпе ыйту татăкĕсен чĕлхери функцийĕ пĕр пек мар. Малтанхисем калакан шухăшра чи кирлине палăртаççĕ пулсан, иккĕмĕшĕсем каланин тĕллевне палăртма пулăшаççĕ" тет [6:76]. Çыравçăсем вара çине тăрсах **-и** татăкпа шухăш тĕшшине палăртма тăрăшаççĕ: *Çĕн кун пек çĕнĕрен-и çуралас?* (Н.Исмуков); *Сахал-и ялта суя сăмах сарăлать?* (В.Петров); *Чăрсăра-и сăмахпа итлеттеретĕн?* (Г.Орлов). Çак предложенисене чăваш чĕлхин уйрăмлăхĕсене шута илсе йĕркелеме, хăш сăмаха ыйту тивнине тивĕçлĕ мелпе кăтартма пулать. Кун пек мелсен шутне ыйту ўкекен сăмаха сказуемăй умне юнашар лартнине, ятарлă татăксемпе усă курнине кĕртмелле.

*Эсĕ т/р ăна нумайранпа юрататăн-и вара?* (А.Емельянов). *Кукаçей, ку т/р сирĕн кучченеç-и?* (Е.Лисина). Ку предложенисенче сказуемăй умĕнхи сăмах хурав кĕтет. Анчах шухăш тĕшши сказуемăй пулсан та предложенири сăмахсем çак йĕркепех вырнаçаççĕ. Ыйту хăш сăмахĕ патне пулнине палăртасси кун пек чухне интонацирен килет. Шухăш тĕшши сказуемăй çине ўкнине кăтартма ăна предложени умнерех те куçараççĕ [8:75]. Ыйту предложенийĕсем те çак йĕркенех пăхăнаççĕ: *Илтнĕ-и эс р/т пĕр халап?* (А.Емельянов); *Ярать-и вăл сана р/т Шупашкара?* (Е.Лисина); *Эс паллатăн-и, Абрам Федорович, р/т ку çынна?* (В.Енĕш).

Ылмашсăр ыйтуллă предложенисенчи шухăш тĕшшине ятарлă татăксемпе те палăртма пулать [3:11–14; 4:31–43; 5:57–61; 8:35–44]. **-и** татăк вĕсен умĕн те, хыççăн та тăма пултарать. Сказуемăйпа **-и** татăк хушшине çак татăксем вырнаçаççĕ:

1) **мар** хирĕçлев татăкĕ: *Чим-ха, чарăнчĕ мар-и вăл?* (В.Алентей); *Сана пурпĕрех мар-и?* (Г.Ефимов);

2) **-ах/-ех, та/те** вăйлату татăкĕсем: *Тĕрĕсех-и ку?* (Ю.Скворцов); *Степан Иванович, ĕçе пăрахрăр та-и?* (Н.Мранькка);

3) уйăру пĕлтерĕшлĕ **анчах, кăна, çеç, çех** татăксем: *Апла килте Анукпа ывăл çеç-и?* (Н.Мранькка); *Пушмак кирлĕ. Хĕрĕх пĕрмĕшсем сирĕн çаксем анчах-и?* (В.Енĕш). Вĕсем предложенин пĕтĕмĕшле пĕлтерĕшне витĕм кўмеççĕ, хăйсен умĕнхи сăмахпа çыхăнаççĕ.

**-и** татăк хыççăн çак татăксем вырăн тупаççĕ:

1) *“пулма пултарать”* текен пĕлтерĕшлĕ **ара, вара, ĕнтĕ** татăксем: *Эсĕ повестка илмен-и вара?* (З.Нестерова); *Художник-и ĕнтĕ вăл?* (В.Игнатьев);

2) модальлĕхĕн тĕрлĕ сĕмĕсене вăйлатакан **çав, çак** татăксем: *Пирĕн Маруç кунта-и çав?* (А.Артемьев); *Татук аппа, черете çухатман-и çак эсĕ?* (И.Тукташ);

3) **-ха** татăк: *Аçу-аннў пур-и-ха?* (А.Артемьев); *Çавапа тухма иртерех мар-и-ха?* (Илпек М.).

Вĕсем, предложени пĕлтерĕшне пĕтĕмĕшле иккĕленў сĕмĕ кĕртсе, хурав пама хистенине йăвашлатма пулăшаççĕ. Хăш-пĕр чухне формипе ыйтуллă предложение экспрессиллĕ çирĕплетў (е хирĕçлев) пĕлтерĕшлĕ тăваççĕ.

**-и** хыççăн тăракан **ара, вара, ĕнтĕ, -ха** татăксем ытларах ыйту сказуемăй патне мар, ун умĕнхи сăмах патне пулнине кăтартаççĕ. Çав сăмах çумĕнче ăна шухăш тĕшши пек уйăракан татăксем пулма пултараççĕ: *Апл$^{ш.\,т.}$ах усалланса кайнă-и-ха $^{р}/_{т}$ эсĕ, Пинерпи?* (П.Осипов); *Вĕренме пăр$^{ш.\,т.}$ахсах килнĕ-и вара $^{р}/_{т}$ вăл?* (А.Артемьев).

3.5. **-и** татăкпа йĕркеленĕ ыйтуллă предложенисенче, ыйтусăррисемпе танлаштарсан, хирĕçлев формиллĕ е хирĕçлев пĕлтерĕшлĕ сказуемăй пурри предложени пĕлтерĕшĕ те хирĕçлевлĕ пулнине кăтартмасть. Пурлă е çуклă формăна суйласа илни стилистика мелĕ кăна теме те пулать [26:193—194; 31:42]. Сказуемăй çуклă формăра пулсан ыйту предложенийĕ йăвашрах, евĕклĕрех тухать тата “çапла пулма пултарать” тенине, иккĕленнине, сĕннине, канаш панине, ирĕк ыйтнине, экспрессиллĕ çирĕплетĕве пĕлтерет: *Ваттисенчен юлнă йăла кăна мар-и вăл?* (А.Емельянов); *Вăрманта пирĕн пĕр-ик лав вутă пурччĕ. Çавна илсе килме лашуна памăн-и?* (А.Артемьев); *Клавдия Михайловна, юмах ярса памăр-и?* (Н.Мранькка); *Тата, тепĕр тесен, манăн хамăн пуç çук-и?* (А.Емельянов) – урăхла каласан: *“Тата, тепĕр тесен, манăн хамăн пуç пур”*; *Эпĕ ырă сунмарăм-и ăна?* (Н.Мранькка) – урăхла каласан: *“Эпĕ ырă сунтăм ăна”*.

Хирĕçлеве тата ыйтăва палăртакан морфемăсемпе предложенире пĕр принциппах усă кураççĕ: шухăш тĕшши хăш сăмах пулнине пăхмасăрах сказуемăй çумне (сказуемăй пулмасан – ун составĕнчи сăмах çумне) лартаççĕ [9:16].

4.0. **-ши** татăкпа та пĕтĕмĕшле ыйту предложенийĕ йĕркелеме пулать. Анчах вăл ялан тенĕ пекех ыйтупа пĕрле

тата “пулма пултарать” тенине, иккĕленнине, тĕлĕннине т.ыт.те палăртать. Чăн та, çакăн йышши предложениех хăйĕнче каланă информацие çирĕплетме е хирĕçлеме хистени те тĕл пулать. **-и** татăклă ыйтупа танлаштарсан, вăл йăвашрах, евĕклĕрех сĕмлĕ. **-ши** татăкпа ытларах монологра (тĕслĕхрен, мĕн çинчен те пулин шухăшланине кăтартакан пуплевре) усă кураççĕ: *Çакă-ши вăл, юрату тени? Çак мăнкăмăллă хĕр пулчĕ-ши вăл, савни тени?* (А.Артемьев).

Предложенири вырăнĕпе функцийĕ **-ши** татăкăн, пĕтĕмĕшле илсен, **-и** татăкăнни пекех:

1) сказуемăй хыççăн тăрать, вăл çук пулсан — ун составне кĕрекен сăмах çумĕнче: *Кĕрхи çулçăсем-ши кусем?* (Е.Лисина); *Юратнă-ши эсĕ ăна?* (А.Артемьев); *Иçмасса, тĕлĕк мĕне пĕлтерессине уçса парасчĕ. Ырлăха-ши, хурлăха-ши?* (Н.Мранькка);

2) шухăш тĕшшине палăртмасан та пултарать: *Чăнах та манчĕ-ши вăл р/т мана?* (Н.Айзман).

Уйрăмлăхĕ те пур: **-ши** татăкпа ылмашлă ыйту предложенийĕнче те усă куратпăр, **-и** татăк вара ыйту ылмашĕпе пĕр предложенире тепĕр хут ыйтнă (“переспрос”) чухне çеç пулма пултарать: *Тимĕр пăта та вута чăтмасть те, мĕн чăттăр? Мĕн чăттăр-и? Шерккей чăтать* (Илпек М.);

– *Мĕн кирлĕ сана?*

– *Мана мĕн кирлĕ-и?* (Н.Мранькка).

**-ши** татăкпа тата ыйту ылмашĕпе йĕркеленĕ предложени пĕлтерĕшĕнче çакă палăрать:

1) ыйтупа пĕрле шухăша путни: *Ăçта курнă-ши эп ăна?* (Н.Петровская); *Калаçасса та вĕсем миçе хут тĕл пулса калаçнă-ши?* (А.Артемьев);

2) экспрессиллĕ çирĕплетӳ: *Кам кăна çук-ши кунта?* (Н.Мранькка) – урăхла каласан: *“Такам та пур кунта”*;

3) хирĕçлев: *Мĕн пур-ши çын пурнăçĕнчен хакли çут тĕнчере?* (Н.Петровская) – урăхла каласан: *“Çын пурнăçĕнчен хакли çут тĕнчере нимĕн те çук”.*

Ылмашлă ахаль ыйтусемпе танлаштарсан, вĕсем евĕклĕрех, кăмăллăрах пулаççĕ. **-ши** татăк кун йышши предложенисенче те сказуемăй хыçне тăрать, сказуемăй çук пулсан – ыйту ылмашĕ çумне: *Ăçта-ши вăл халĕ, ăçта-ши пĕрле вĕреннĕ ачасем?* (Н.Мранькка). Сказуемăй пур чухнех **-ши** татăка ыйту ылмашĕ хыççăн лартнине И.А.Андреев тĕрĕс

мар пулать тенӗ [6:79–80; 8:151–152]. Апла пулин те, ҫакӑн пек тӗслӗхсем паян кунччен те тӗл пулаҫҫӗ-ха: *Анчах мӗнлеши манмалла сана?..* (Р.Сарпи); *Кун пирки мӗншӗн-ши ашшӗ нихҫан та асӑнмасть?* (В.Петров); *Хӑҫан-ши чарӑнӑн?* (Г.Орлов).

5.0. Ыйтӑва палӑртма пулӑшаканнисен шутӗнче **-им** (вырӑнти калаҫусенче **-ам/-ем** вариант тӗл пулать) тата **-шим** татӑксем те пур. Ҫак татӑксем *-и + мӗн, -ши + мӗн* майлашусем кӗскелнипе пулнӑ тесе ӑнлантараҫҫӗ чӗлхеҫӗсем. *Мӗн* компонент пӗрисен шучӗпе ыйту татӑкӗ пулать [33:69], теприсен шучӗпе — ыйту ылмашӗ [22:135]. Анчах та ыйту пӗлтерӗшлӗ икӗ компонент пӗрлешӗвӗ хурав пама хистенине вӑйлатма мар, пачах та хирӗҫле — йӑвашлатма пултараятьши вара? Тен, *мӗн* единица кунта ҫирӗплетӳ сӗмне кӳрекен модальлӗх татӑкӗ пулать, ҫавӑнпа ыйту хавшакрах тухать? Танл.: *Вӑл киле кайнӑ-мӗн. – Вӑл киле кайнӑ-и-мӗн? – Вӑл киле кайнӑ-им?* Пирӗн шутпа **-и, -ши, -им, -шим** татӑксемпе мӗнле лару-тӑрура усӑ курнине танлаштарни те ҫак шухӑшах ҫирӗплетет [33:69]. Пушкӑрт чӗлхинче те *-мы/-ме ни, -мо/-мө ни* ыйту татӑкӗсем кӑна мар, *-мы/-ми икән, -мо/-мө икән, -мы/-ми икән ни, -мо/-ме икән ни* пӗрлешӳсем те пур [19:328–329]. *-мы/-ми/-мо/-мө* чӑваш чӗлхинчи **-и** татӑкпа тӳр килет, *ни*~чӑв. *мӗн, икән*~чӑв. *иккен* (*иккен* татӑк – пӗр-пӗр факт чӑннипех пулнине ҫирӗплетме пулӑшакан *мӗн* татӑкӑн синонимӗ [33:21, 41]).

6.0. Чӑваш пуплевӗнче вырӑс чӗлхинчен йышӑннӑ **нивушлӗ (ниушлӗ, невушлӗ, неушлӗ), раҫ (ӑраҫ), штоль** татӑксемпе те усӑ кураҫҫӗ: *Нивушлӗ манӑн савӑнӑҫ ҫынсене те курӑнать?* (А.Емельянов); *Неушлӗ вӗсен вӗренмесӗр тӑрса юлас килет?* (Л.Агаков); *Сергее кӑна юрать штоль?* (В.Синичкин); *Ман пата кайсан раҫ?* (А.Емельянов); *Ӑраҫ ҫапла пӑрахса хӑварма юрать?* (Н.Мранькка).

**Нивушлӗ** татӑк пирӗн чӗлхен сӑмах йышне кӗрсе вырнаҫнӑ, сасӑ тӗлӗшӗнчен пӗтӗмпех чӑвашланнӑ. Унпа калаҫу чӗлхинче те, ҫырулла пуплевре те анлӑ усӑ кураҫҫӗ, ӑна словарьсене те кӗртнӗ. Ҫапах та **нивушлӗ** татӑкӑн пӗлтерӗшне чӑваш чӗлхин ятарлӑ хатӗрӗсемпе те чиперех палӑртма май пур: *Нивушлӗ ҫав вӑхӑт ҫитрӗ?* (Н.Мранькка) – *Ҫав вӑхӑт ҫитрӗ-ши вара?* Ку татӑк пуплевре тӑтӑш тӗл пулать. Вӑл предложени пуҫламӑшӗнче тӑрса предложени

ыйтуллӑ пулассине тӳрех кӑтартать, ыйту адресачӗн тимлӗхне хӑпартать, хурав пама хатӗрленме хистет.

7.0. Асӑннӑ татӑксемсӗр пуҫне ыйтӑва палӑртаканнисен шутне **а, ӑ, е, ӗ, э** тата **мӗн, мӗнле, епле** татӑксене те кӗртмелле. Ыйту предложенийӗн пӗлтерӗшӗнче яланах хистев пур – хуравлама хистени. Ҫак хистеве вӑйлатма пулӑшакан ятарлӑ татӑксене ыйту-хистев татӑкӗсем теме пулать.

**А, ӑ, е, ӗ, э** татӑксем ыйту ылмашӗпе е татӑкӗпе йӗркеленӗ ыйту предложенийӗсен вӗҫӗнче е вӗсен хыҫҫӑн тӑраҫҫӗ: *Мӗн ку сан урунти, э?* (Ю.Скворцов); *Кӑмӑлу хуҫӑлчӗ-и тата? А?* (Л.Таллеров); *Ҫӑмӑлтан ҫӑмӑл шырамастӑн-и эсӗ?.. Э?..* (Г.Ефимов); *Нивушлӗ пирӗн ӗмӗр те вӑрҫӑсӑр иртмӗ, а?* (Х.Агивер). Ытларах ку татӑксемпе *тен, пулӗ, иккен, вӗт* йышши татӑксемлӗ предложенисен хыҫне лартса “ҫапла-и? ҫапла мар-и?”, “тӗрӗс-и?” пӗлтерӗшсене палӑртаҫҫӗ: *Италири хӗрарӑм ячӗ пек илтӗнет вӗт? Э?* (Г.Ефимов); *Лайӑх чупаҫҫӗ вӗт, э?* (Л.Агаков); *Тен, ачасене парсан лайӑхрах пулӗ, э?* (Н.Петровская); *Ольга, Хӗветли!.. Пирӗнех ҫӗнтерчӗҫ-ҫке, э?* (Ю.Скворцов). Тепӗр чух вӗсемпе ыйту та, иккӗленӳ те ҫук предложенисем хыҫҫӑн та усӑ кураҫҫӗ: *Хӑмӑт тӑхӑнса лав туртиччен тиха та ҫил касса ҫӳрет... Э?* (Г.Ефимов); *Каймасан та пултарӑттӑм, эппин, пӗрех хут... Кайсан та темех ҫухатмӑттӑмӑр. А, Люба?* (В.Сатай). Пӗр-пӗр ӗҫе тума ирӗк ыйтакан предложенисем хыҫҫӑн тӑрса “юрать-и?”, “юрӗ-и?” пӗлтерӗшсене палӑртаҫҫӗ: *Христина-Хреҫҫи, атя тата тепӗртак утса ҫӳрер, э?..* (Х.Агивер); *Ҫав Иванпа пӗрлешме пулӑш-ха, э?* (Н.Айзман); *Яр ывӑлна пахча хураллама. Манпа пӗрле колхоз пахчине хураллатӑр. Ӑ?* (Л.Таллеров). Адресат ыйтӑва хирӗҫ ыйту пама та (тӗслӗхрен, ыйтӑва илтсе юлайман пулсан) ҫак татӑксенчен пӗринпе усӑ курма пултарать: *Хупланчӗ хӑлхам, чиркӳ чанӗ айне кӗрсе ларсан та уҫӑлас ҫук ӗнтӗ... Э-э? Мӗн терӗн?* (А.Артемьев); – *Э?* – *ун еннелле пӑхса илчӗ Шерккей.* – *Тем каласшӑнччӗ тата?* (Илпек М.);

– *Хӑвӑр ыйтӑр манран.*

– *А?* (В.Сатай).

**Мӗн, мӗнле, епле** татӑксем вара **-и, -им, пулӗ** татӑксемпе йӗркеленӗ ыйту предложенийӗсен пуҫламӑшӗнче, сайра-хутра иккӗмӗш вырӑнта тӗл пулаҫҫӗ: *Мӗн, пахча курман-и эс?* (А.Емельянов); *Эпӗ, мӗн, унран катӑк-им?* (В.Енӗш); *Эс, мӗн, ҫӗр каҫмаллах килмен пуль те кунта?*

(Х.Агивер); *Мĕнле, кăмăла каять-и Корнилов?* (В.Игнатьев). Çакăн пек тĕслĕхсем вĕсенчи **мĕн, мĕнле** сăмахсем ылмаш пĕлтерĕшне çухатнине, предложенири функцине улăштарнине кăтартаççĕ. Ку единицăсене эпир иккĕленмесĕрех татăксем теме пултаратпăр. Вĕсемпе экспрессиллĕ хирĕçлеве е тĕлĕннине, тарăхнине, хăранине т.ыт.те палăртакан риторика предложенийĕсен умĕнче те усă кураççĕ: *Мĕн, пурнăç-и ĕнтĕ ку?* (В.Игнатьев). Хăш-пĕр чухне **мĕн** татăк хăй тĕллĕнех çакнашкал пĕлтерĕшсене палăртма пултарать:

*Марине аптăраса ўкрĕ, калас текен сăмахĕ пыра тăрăнчĕ.*

*– Мĕ-ĕ-ĕн? – терĕ вăл кăштахран. – Мĕнле çапла калама хăятăн эс?* (Е.Лисина).

Диалогсенче ку сăмахпа илтсе юлман е ăнланса илеймен ыйтăва хирĕç ыйту лартма е хăйне чĕннине, каланине ăнланнине кăтартма усă кураççĕ:

*– Эп сан пата çыру çырас пулсан – ответлетĕн-ши? – тесе ыйтрĕ шофер.*

*– Мĕн, çыру? – ăнлансах çитеймен пек пулчĕ хĕр ача* (В.Синичкин).

8.0. Чăваш чĕлхинчи ыйту татăкĕсен шутне таса ыйтăва палăртма пултаракан **-и** татăка, ыйтăва модальлĕх пĕлтерĕшĕсемпе пĕрле палăртакан **-им, -ши, -шим, нивушлĕ** татăксене, хуравлама хистекен **а, ă, е, ĕ, э, мĕн, мĕнле, епле** татăксене кĕртмелле. **А, ă, е, ĕ, э** татăксем предложени вĕçĕнче тăраççĕ; **мĕн, мĕнле, епле** татăксем – ытларах предложени пуçламăшĕнче. **-и, -им, -ши, -шим** татăксем сказуемăй хыççăн тăма тăрăшаççĕ, вĕсем предложени тĕллевне палăртаççĕ, ыйту хăш сăмах патне пулнине кăтартмаççĕ, предложенири шухăш тĕшши пулакан сăмаха уйăрмаççĕ.

### Усă курнă литература

1. *Алекперова Ф.Д.* Семантика и функции частиц современного азербайджанского языка. Автореф. дисс... канд. филол. наук. Баку, 1989.

2. *Амиров Р.* Особенности синтаксиса казахской разговорной речи. Алма-Ата, 1972.

3. *Андреев И.А.* Порядок слов в чувашском языке //Уч. зап. ЧНИИ /Филология. Вып. 49. Чебоксары, 1970. С. 3–27.

4. *Андреев И.А.* Способы актуализации высказывания в чувашских диалектах //Материалы по чувашской диалектологии. Вып. III. Чебоксары, 1969. С. 25–43.

5. *Андреев И.А.* Структура простого предложения современного чувашского языка. Автореф. дисс... докт. филол. наук. М., 1970.

6. *Андреев И.А.* Татӑксен предложенири вырӑнӗ //Чӗлхе культурин ыйтӑвӗсем. II пай. Шупашкар, 1972. С. 73–83.

7. *Андреев И.А.* Чӑваш пунктуацийӗ: иртни, хальхи, пуласси. Шупашкар, 1990.

8. *Андреев И.А.* Чӑваш синтаксисӗн ыйтӑвӗсем. I пай. Шупашкар, 1973.

9. *Андреев И.А.* Чӑваш синтаксисӗн ыйтӑвӗсем. II пай. Шупашкар, 1975.

10. *Андреев И.А., Митта З.П.* Синтаксиса ҫӗнӗ программӑпа вӗрентесси. Шупашкар, 1981.

11. *Андреев И.А., Сергеев Л.П.* Чӑваш чӗлхи /Синтаксис. VIII–IX классем валли. 6-мӗш кӑларӑм. Шупашкар, 1993.

12. *Бабайцева В.В.* Односоставные предложения в современном русском языке. М., 1968.

13. *Балтаева Р.М.* Интонационная структура общего вопроса в современном татарском языке. Дисс... канд. филол. наук. Казань, 1973.

14. *Баскаков А.Н.* Предложение в современном турецком языке. М., 1984.

15. *Галкина-Федорук Е.М.* Суждение и предложение. М., 1976.

16. *Горский С.П.* Хальхи чӑваш литература чӗлхин синтаксисӗ. Шупашкар, 1970.

17. Грамматика карачаево-балкарского языка. Нальчик, 1976.

18. Грамматика русского языка. Т. 2. Ч. 2. М., 1960.

19. Грамматика современного башкирского литературного языка. М., 1981.

20. *Дмитриев Н.К.* Детали простого предложения //Исследования по сравнительной грамматике тюркских языков. Ч. 3. Синтаксис. М., 1961.

21. *Дыренкова Н.П.* Грамматика ойротского языка. Л., 1940.

22. *Егоров С.П.* Семантическая классификация частиц в чувашском языке //Вопросы фонетики, грамматики и фразеологии чувашского языка. Чебоксары, 1983. С. 128–153.

23. *Золотова Г.А.* Коммуникативные аспекты русского синтаксиса. М., 1982.

24. *Исматуллаев Х.* Виды предложений по цели высказывания в современном узбекском языке. Автореф. дисс... канд. филол. наук. Ташкент, 1965.

25. *Кононов А.Н.* Грамматика современного турецкого литературного языка. М.–Л., 1956.

26. *Лекант П.А.* Синтаксис простого предложения в современном русском языке. М., 1986.

27. *Павлов И.П.* Пӑхӑнуллӑ предложенисен пӗр тӗсӗ ҫинчен (-и, -ши татӑксемпе ҫыхӑнакан пӑхӑнуллӑ предложенисем) //Тезисы докладов, обсуждаемых на заседании секции языка /Научная сессия, посвященная

итогам исследовательских работ ЧНИИ ЯЛИЭ за 1961 г. Чебоксары, 1961. С. 3–5.

28. *Павлов И.П.* Чăваш чĕлхинчи -и, -ши татăксемпе çыхăнса пулнă пăхăнуллă хутлă предложенисем //Вопросы чувашского языка и литературы /Уч. зап. Кировского пед. института. Вып. 26. Чебоксары, 1965. С. 71–94.

29. *Петров Н.Е.* Частицы в якутском языке. Якутск, 1977.

30. *Пешковский А.М.* Интонация и грамматика. М., 1930.

31. *Распопов И.П.* Грамматические категории и специфические признаки предложения как коммуникативной единицы языка //*Распопов И.П.* Очерки по теории синтаксиса. Воронеж, 1973. С. 30–51.

32. *Сафиуллина Ф.С.* Синтаксис татарской разговорной речи. Казань, 1978.

33. *Федотов М.Р.* Средства выражения модальности в чувашском языке. Чебоксары, 1963.

34. *Шахматов А.А.* Синтаксис русского языка. Л., 1941.

35. *Щербак А.М.* Очерки по сравнительной морфологии тюркских языков (Глагол). Л., 1981.

# СĂМАХ КУН-ÇУЛНЕ ТĔПЧЕНИ

*Г.А.Дегтярев*

## СĂМАХСЕН ШĂПИ: ÇĔНЕТӲ, ХĂВĂРТЛАТУ, УÇÇĂНЛĂХ...
**(“Чĕлхе тата идеологи” ярăмран)**

Чăвашла хаçат-журнал, радиопа телевидени “перестройка” ăнлава тĕрлĕрен каласа пăхрĕç: *çĕнетӳ*, *çĕнетӳ-улшăну*, *çĕнйĕркелӳ*, *перестройка*. Пĕр кăларăмрах вăл та, ку та тĕл пулатчĕ. Сăмахран, “Тăван Атăл” журналăн 1988 çулхи 6-мĕш номерĕнчен илнĕ тĕслĕхсем: “революциллĕ çĕнйĕркелӳ” (5 стр.), “революцилле çĕнетӳ” (6 стр.), “Çĕнетӳ малтанхи тапхăрĕ нумая тăсăлчĕ” (5 стр.), “Çĕнйĕркелӳ хăйĕн иккĕмĕш тапхăрне кĕчĕ” (65 стр.)... Çапах та, “çĕнйĕркелӳ” тени чăваш çыравçисем кăмăллакан професси сăмахĕ пек кăна палăрса юлчĕ ун чухне, “çĕнетӳ” ятпа тупăшма хевте çитерейменрĕ.

*Çĕнетӳ* сăмах пирĕн чĕлхере “Горбачев саманичченех” пулнă. В.Г.Егоровăн “Чăвашла-вырăсла словарьне” (1954, 183 с.) вăл “улучшение”, “удобрение” пĕлтерĕшсемпе кĕрсе юлнă. 1961 çулхи сăмах пуххинче ун валли темшĕн вырăн тупăнман. 1982 çулта тухнă “Чăвашла-вырăсла словарьте” ăна “обновление, модернизация”, “нововведение, новшество, новинка” тата “реставрация” тесе куçарнă. *Çĕнетӳçĕ* тени вара ун чухнех “реформатор”, “преобразователь” ăнлавсене палăртнă (ЧВС, 1982, 411 с.). Çавăнпа *çĕнетӳ* сăмах сакăрвуннăмĕш çулсен варринче çăмăллăнах “перестройка” пĕлтерĕш илсе халиччен пулман сĕм туянчĕ: “Çĕнетӳ вăхăтлăх кампани мар, яланлăха çул хывнă революцилле юхăм” (И.Лисаев; У. в., 40 с.), “Сехетсене çĕнетӳ вăхăчĕпе тĕрĕслер” (Д.Гордеев; У. в., 41 с.), “Паян хăюлăх та кирлĕ – çĕнетӳ самани хăй ыйтать!” (КЯ: 1989.11.15). Общество аталанăвне тĕрлĕ тапхăрсене пайлама хăнăхнă пирки тӳрех *çĕнетӳ тапхăрĕ* сăмах çаврăнăшĕ йăлана кĕчĕ:

“Паян вара апла юрамасть – çĕнетӳ тапхăрĕ пуçланчĕ” [К: 1987, 14 №, 7 с.];

“Çĕнетӳ тапхăрĕнче пурин те... йăрă та çаврăнăçуллă пулмалла” [К: 1987, 11 №, 4 с.];

“Ку чăн пулнă юмаха халĕ, çĕнетӳ тапхăрĕнче... ĕненес килмĕ” [У. в., 140 с.];

“Эпир халĕ пысăк улшăнусем вăхăтĕнче пурăнатпăр – çĕнетӳ тапхăрĕ” [ПС: 1989.06.27];

“Юлашки вăхăтра çĕнетӳ тапхăрĕ вăй илсе пырать” [ÇЯ: 1990.01.20].

Çĕнетĕвĕн тĕп лозунгне – çĕнĕлле шухăшлава кăтартакан “гласность” сăмаха – ют çĕршыв хаçачĕсем куçармасăрах çыратчĕç. Чăвашла та “гласнăç”, “гласнăç вăхăчĕ” текелесе пăхрĕç (сăмахран: В.Шемекеев. Тунсăхласа, юратса. 1991, 86–87 с.). Ку ăнлава ят пама пултаракан сăмах хамăрăн чĕлхере те пурччĕ ĕнтĕ – *кĕретлĕх*. 1982 çулхи сăмах пуххинче ăна чи малтан “открытость”, “гласность” тесе палăртнă (ЧВС, 171 с.). Хаçат-журналта кĕретлĕхпе “открытость” пĕлтерĕшпе усă курма пуçларĕç, политика лозунгĕ шайне çĕкленнĕ “гласность” ăнлава вăл шалашĕпе те, тулашĕпе те тивĕçтереймерĕ курăнать. *Кĕретлĕх* ят *кĕретĕн* наречипе хурăнташлă, ăна вара ытларах килпетсĕр пĕлтерĕшпе (вырăсла “нагло”, “бессовестно”, “беззастенчиво”, “беспардонно”, “нахально” тесе куçарма пулать) усă кураççĕ. Акă, сăмахран, “Капкăн” журналран илнĕ тĕслĕхсем:

> “кĕретĕнех мăшкăлланине кура” (1981, 13 №, 3 с.), “хăйсен киревсĕр ĕçне кĕретĕнех тăвaççĕ” (1967, 3 №, 4 с.), “куç кĕретĕнех хăйсен килĕсене сĕтĕреççĕ” (1966, 3 №, 3 с.), “кĕретĕнех тĕн сĕрĕмĕ сараççĕ” (1965, 21 №, 5 с.), “ял çамрăкĕсене куç кĕретĕнех пăсать” (1966, 23 №, 10 с.) т.ыт.те.

1986 çулхи “Вырăсла-чăвашла общество-политика словарĕнче” М.И.Скворцов “гласность” ăнлава чăвашла *паллăлăх* е *пĕлтерӳлĕх (пурте пĕлсе тăмалла туни)* тесе куçарма сĕннĕ (33 с.). Анчах “паллăлăх” сăмах пирĕн чĕлхере урăх пĕлтерĕшпе çирĕпленнĕ: “Либераллă килĕшӳлĕхпе либераллă иллюзисене татăклăн питлесе хирĕçлени унăн [критикăн] хăйне уйрăм паллăлăх пулса тăрать” [Я.: 1946, 1 №, 29 с.]. Сумлă сăмах пуххисенче ăна вырăсла “отличие” [ЧВС, 1961, 254 с.] е “отличие, различие” [ЧВС, 1982, 268 с.] тесе куçарнă. *Пĕлтерӳлĕх* те “гласность” ăнлава ят параймарĕ, мĕншĕн тесен вăл “информативность” тенипе тӳр килет – урăхла каласан, “информацилĕхе” палăртать.

Ҫӗнетӳ пуҫламӑшӗнчи кӑмӑл-туйӑм – "ҫӗнетӳ, ҫӗкленӳ, тасалу тапхӑрӗ" [К.: 1987, 13 №, 8 с.], "ҫӗнетӳ чун-чӗрене тасатать" (У.в., 233 с.) – *уҫҫӑн* сӑмахӑн пӗлтерӗшӗсемпе (ЧВС, 519 с.) пӗр кӗвӗллӗ пулчӗ: "открыто, откровенно", "определенно", "ясно, четко", "свободно", "свежо". Политика лексиконне те *уҫҫӑн* тахҫанах кӗме ӗлкӗрнӗччӗ. Леш "пӑнтӑх тапхӑрӗнчех" КПСС Тӗп Комитечӗн генеральнӑй секретарӗсем *уҫҫӑн калаҫма* йыхӑрнӑ иккен: "Атьӑр-ха уҫҫӑн калаҫар, – терӗ Л.И.Брежнев, – ку вӑл пилӗкҫуллӑх плана ӑнӑҫлӑ тултарма кирлӗ услови пулса тӑрать" [Я.: 1972, 6 №, 3 с.]. Ҫынсем те хӑйсен шухӑшне ун чухнех *уҫҫӑн* каланӑ: "Пӗтӗм халӑх ҫӗнӗ Конституци проектне сӳтсе явать, хӑй мӗн шутлани пирки кашниех уҫҫӑн пӗлтерет" [К.: 1977, 18 №, 8 с.]. Пичетре вара революцичченхи пурнӑҫа, капитализм обществине *уҫҫӑн питлеме* тата социализм саманине, совет ҫӗршывне *уҫҫӑн мухтама* ирӗк пулнӑ:

1. "Хресченсем... тертленни патшапа улпутсен хыснишӗн, вӗсен тупӑшӗшӗн кӑна пулни уҫҫӑн курӑнать" [Кузнецов, 1962, 94 с.];

"Социаллӑ танмарлӑх кӗвви ку юрӑра уҫҫӑнах янӑрать" [ЧК, 1964, 144 с.];

"Капитализм обществи ҫӗрсе, пӑнтӑхса, арканса пынине уҫҫӑн кӑтартакан япаласем" [К.: 1982, 11 №, 11 с.].

2. "Ҫак цифрӑсем пирӗн Совет ҫӗршывӗ хӑватлӑн ҫӗкленсе пынине яр-уҫҫӑн кӑтартса параҫҫӗ" [Кузнецов, 1963, 71 с.];

"Мӗн тери пысӑк ӗҫ туни яр уҫҫӑн курӑнать" [ЧК, 1970, 12 с.];

"Уҫҫӑн янраса ҫеҫ тӑрӗ канлӗ пурнӑҫ юрри" [К.: 1982, 17 №, 6 с.].

*Уҫҫӑн* наречирен хӑнӑхнӑ калӑппа (танл.: вӑрттӑн – вӑрттӑнлӑх, пӗччен – пӗчченлӗх, ҫӑткӑн – ҫӑткӑнлӑх, чухӑн – чухӑнлӑх т.ыт.те) ҫӗнӗ сӑмах ҫуралчӗ – *уҫҫӑнлӑх*. Ҫавна май хӑнӑхнӑ сӑмах майлашӑвӗсемех – *уҫҫӑн кала(ҫ), уҫҫӑн ҫыр* – ҫӗнӗлле илтӗнме пуҫларӗҫ, халиччен пулман сӗм туянчӗҫ. Сӑнарлӑха кӑмӑллакан илемлӗ публицистикӑра "уҫҫӑнлӑх" валли метафора та тупӑнчӗ – *уҫӑ варкӑш*. 1988 ҫул пуҫламӑшӗнче пичетленсе тухнӑ очерксемпе публицистикӑлла статьясен пуххине те "Уҫӑ варкӑш" ят пачӗҫ. *Уҫӑ варкӑш* витӗмӗпе вара *уҫҫӑнлӑх варкӑшӗ* тухрӗ, унтан вара ҫӗнетӳ те "варкӑшма" пуҫларӗ:

"*Çĕнетӳ çилĕ* варкăшать" [К.: 1987, 20 №, 5 с.];

"1985 çулхи апрельти *вăркăш çил* çĕршыва илсе çитернĕ çĕнетӳ" [КЯ: 1990.05.18];

"*варкăш çил* илсе килнĕ демократи" [Х.: 1991.09.17];

"Çĕнетӳ сывлăшĕ кăна пире çĕнĕлле шухăшлама хистерĕ, пирĕн пата çак *уçă варкăш* кăшт каярах килсе çитрĕ" [ТА: 1991, 10 №, 68 с.];

"*Çĕнетӳ варкăшĕ* халĕ çĕршыв çийĕн анлă сарăлчĕ" [ÇЯ: 1991.07.13].

Хаçат-журналти *çĕнетӳ варкăшĕ*, вăйланса пырса, кăра çил таранах çĕкленме пултарчĕ:

"Çилĕ – çĕнетӳ çилĕ – чăн та, кассăн-кассăн вĕрет халĕ" [К.: 1987, 18 №, 6 с.];

"Шел, çĕнетӳ хумĕ çак тарана çитсе те килсе çапман ăна" [К.: 1988, 2 №, 3 с.];

"Çĕнетĕвĕн çавра çилĕ пирĕн район çийĕн те палăрмаллах алхасма пуçларĕ" [ÇЯ: 1990.12.4].

1985–1987 çулсенче *çĕнетӳ* сăмаха час-часах *хăвăртлату* тенипе юнашар лартатчĕç:

"Çĕнетӳ-улшăну, хăвăртлату юхăмĕ" [У.в., 14 с.];

"Çĕнетӳ", "хăвăртлату" сăмахсемпе нумай перкелешекенсем хушшинче кивĕлле ĕçлекенсем те йышлă" [К.: 1987, 10 №, 11 с.];

"Хăвăртлату, çĕнетӳ тапхăрĕ çынсен ăшчиккине хускатни сисĕнет" [К.: 1987, 14 №, 5 с.];

"Çĕнетӳ, хăвăртлату тетпĕр пулсан..." [К.: 1987, 20 №, 5 с.].

"Çĕнетӳпе" кӳршĕллĕ пуличчен *хăвăртлату* сăмаха пичетре тĕл пулмарăм эпĕ. Пысăк калăпăшлă сăмах пуххисене те кĕреймен вăл. Н.П.Петров 1971 çулта кăларнă "Техника терминĕсен вырăсла-чăвашла словарĕнче" (159 с.) кун çути курнă-ха ку термин, анчах та ун тулашне тухайман пулмалла. 1985 çулта вăл çĕнĕ пурнăç пуçларĕ – общество-политика терминĕ пулса тăчĕ. Ун чухне патшалăха ертсе пыракансемпе «çулăмлă сăмах» ăстисем хăвăртлатăва çĕнетĕвĕн шăнăрĕ пек, унăн уйрăлми пайĕ пек кăтартатчĕç. Çавăнпа ик-виçĕ çул хаçат-журналтан *хăвăртлату* татăлма пĕлмерĕ. Акă, тĕслĕхрен, "Капкăн" журналăн тӳпи:

"Паянхи хăвăртлату стратегийĕ" [1986, 15 №, 8 с.];

“Хăвăртлату тапхăрĕнче шăпах çавăн пек работниксем кирлĕ” [1987, 6 №, 7 с.];

“Хăвăртлату тапхăрĕнчи чумансем” [1987, 15 №, 5 с.];

“Халĕ эпир хăвăртлату тапхăрĕнче пурăнатпăр” [1987, 20 №, 5 с.].

1985–1987 çулсенче, тапхăр ятне кура, *хăвăртлатупа* хурăнташлă тата унпа синонимлă сăмахсен хастарлăхĕ питĕ пысăкчĕ:

1. “Коммунизм ялавĕ” хаçатăн 1986 çулхи пуш уйăхĕнчи пуçелĕкĕсем: “*Хăвăртлăх* ӳсрĕ”, “Тĕп çулйĕр – *хăвăртлату*, пахалăх”, “Чи кирли – *хăвăртлăх*, пахалăх”, “*Хăвăртлăх* çулĕпе”.

2. “*Интенсивлă* технологипе” (пуçелĕк, КЯ: 1987.09.1);

“Çĕрĕçĕнче *интенсивлă* технологипе усă курни...” (У.в., 256 с.);

“выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе *интенсификацилесси*” [КЯ: 1987.09.22];

“Тĕп çул-йĕрĕ те паллă: производствăна *интенсификацилемелле*” (У.в., 248 с.).

Анчах та “хăвăртлатупа” “интенсификаци” политика лексиконĕнчен, публицистика чĕлхинчен питĕ хăвăрт тухса ӳкрĕç. *Çĕнетĕвĕн* хăйĕн те пĕлтерĕшĕ часах урăхланчĕ, 1991 çулччен вăл ырă сĕмĕпе палăрса тăратчĕ:

“Çĕнетӳ чун-чĕрене тасатать, пурнăçа çутăрах, ăшăрах тăвать” (У.в., 233 с.);

“Çĕнĕ хум, çĕнĕ варкăш, çĕнĕ сывлăш. Акă мĕн илсе килчĕ çак хаклă сăмах пирĕн пурнăçа [ТА: 1988, 6 №, 5 с.];

“Çĕнетӳ общество пурнăçне чĕрĕлĕх илсе килчĕ” [КЯ: 1990.09.9].

1991 çулхи пулăмсем “çĕнетӳ” ятлă ăнлава пĕтĕмпех сĕвĕртсе ячĕç, çулталăк вĕçĕнче вăл истори палли çеç пулса юлчĕ. *Çĕнетӳпе* хавхаланма сăлтавĕ те, майĕ те пĕтсен, ку ăнлава хаçат-журналта урăхла палăртма пуçларĕç (малтан чăвашла кăнттамрах туйăннă ятсем халĕ шăпах вырăнлă пулчĕç курăнать):

Хв.Уяр: “*Горбачев самани* пуçланиччен...” (Х.: 1993.09.10);

Н.Исмуков: “*Перестройка, перестройка* теттĕмĕр:

темле шанчăкпа пĕр пĕлтерĕшлĕ кураттăмăр ăна... *Çĕнетӳ* (тен, *çĕтĕлӳ*?) самани..." [Я.: 1992, 2 №, 24 с.];

А.Емельянов: "Малтанах *перестройка* текен *çĕнĕлĕхе* вăя шеллемесĕр хутшăнтăм..." [Х.: 1992.06.30];

"*Перестройка* текен *пакăлтату* тапхăрĕнче..." [К.: 1992, 6 №, 2 с.];

"*Çĕнйĕркелӳ, çĕнйĕркелӳ* терĕмĕр..." [Ç.: 1992, 11–12 №, 50 с.];

"*Перестройка* вăхăтĕнчен пуçласах..." [Х.: 1996.04.2].

Чăн та, хутра-ситре *çĕнетĕве* те аса илкелерĕç: пĕрисем тĕлсĕр-йĕрсĕр, хăйне май ăнланса [Х.: 1993.01.5; 1994.06.24], теприсем йĕкĕлтевлĕн тиркешсе, кавычкăна илсе [Х.: 1992.12.24]. "Çĕнетӳ тапхăрĕнчен" *сĕмленӳ тапхăрĕ* çуралчĕ:

"Сĕмленӳ тапхăрĕ нумайăшĕн ăс-тăнне мар, çăварне çеç уçрĕ пулмалла" [ХШ: 1992, 2 №, 23 с.];

"Халĕ вĕт сĕмленӳ тапхăрĕ, политика ĕçĕ тавра такам та çапкаланса çӳрет" [Х.: 1993.02.5].

"Çĕршывра Ельцин режимĕ пуç пулса тăнă" вăхăтăн [ЧÇ: 1998, 14 №, 12 с.] ячĕ йышлă. Ытларах, çапах та, *рынок тапхăрĕ* (*рынок самани*) теççĕ. "Приватизацирен" *прихватизаци тапхăрĕ* тухса кайрĕ, капкăнçăсем "либерализацирен" *лĕпĕрлизаци тапхăрĕ* турĕç [К.: 1992, 6 №, 2 с.]. "Çамрăксен хаçачĕ" евитленĕ тăрăх, "пысăк трибунăсем çинченех *деградаци тапхăрĕ* пырать тенине илтме пулать паян" [ÇХ: 1997.02.8]. Хаçат редакторĕ хăй *çĕнетӳ тапхăрĕнчех*: "Тав Турра, çĕнетӳн (?) вуннăмĕш–вун иккĕмĕш çулĕсенче тинех йăл илме, умри тĕтрелĕхе сирме тытăнтăмăр" [ÇХ: 1997.03.1]. "Хыпарта" вара "перестройкăн" вĕçĕ пирки çеç мар, пуçламăшĕ пирки те урăх шутлă: "Çĕнетӳ пуçланнăранпа 14 (!) çул хушшинче мăйракаллă шултра выльăх йышĕ 103,0 пин пуç... сахалланнă" [Х.: 1994.06.24].

"Уççăнлăх" термин та публицистика чĕлхинчен пуçĕпех çухалмарĕ. Пĕрисем *уççăнлăх тĕкĕрне* тав туса аса илеççĕ [Х.: 1992.02. 28], теприсем "çĕршывра уççăнлăх сарăлсах пырать" тесе ĕнентереççĕ [ЛÇ: 1993.09.16].

Çĕнетӳ, хăвăртлату, уççăнлăх... Кун пек сăмахсене тĕрлĕрен хаклама пулать: *лозунг сăмахсем, метеор сăмахсем, палăк сăмахсем*. Сăмахăн шăпи унăн пĕлтерĕшĕнчен çеç мар, саманаран та, халăхран та, уйрăм çынсенчен те килет.

## К ĕ с к е т ӳ с е м

К. – "Капкăн" журнал.

Кузнецов, 1962 – *Кузнецов И.Д.* Чăваш халăх историйĕ çинчен. Ш., 1962.

Кузнецов, 1963 – *Кузнецов И.Д.* Партин виçĕ тапхăрти виçĕ програми. Ш., 1963.

КЯ – "Коммунизм ялавĕ" хаçат (халĕ "Хыпар").

ЛÇ – "Ленин çулĕпе" (халĕ "Пурнăç çулĕпе"), Элĕк район хаçачĕ.

ПС – "Пионер сасси" хаçат (халĕ "Тантăш").

Ç. – "Çилçунат" журнал.

ÇХ – "Çамрăксен хаçачĕ".

ÇЯ – "Çĕнтерӳ ялавĕ", Муркаш район хаçачĕ.

ТА – "Тăван Атăл" журнал.

У.в. – "Уçă варкăш" (очерксемпе публицистикăлла статьясен пуххи). Ш., 1987.

Х. – "Хыпар" хаçат.

ХШ – "Халăх шкулĕ" журнал.

ЧВС – Чăвашла-вырăсла словарь.

ЧК – "Чăваш календарĕ".

ЧÇ – "Чăваш çĕршывĕ", "Республика" хаçатăн хушма кăларăмĕ.

Я. – "Ялав" журнал.

*Юдит Дмитриева*

# НАЗВАНИЯ ГРИБОВ В ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ

Исследователи высказывают мнение, что в традиционную пищу чувашей, тем более низовых чувашей степной зоны, грибы не входили, что чуваши питались в основном продуктами скотоводства и более позднего земледелия [Иванов, с. 38]. Однако жители северной части Чувашии в определенной мере все же переняли у местного финно-угорского и русского населения собирательство, приготовление и заготовку грибов впрок. Об этом свидетельствуют ныне существующие и зафиксированные в Словаре Н.И.Ашмарина многочисленные чувашские названия грибов – миконимы. В данной статье мы попытались составить их список и рассмотреть в системе – проанализировать с точки зрения структуры, семантики, признаков номинации, а также происхождения.

Как известно, грибы относятся к низшим растениям, в свою очередь само семейство грибов делится на высшие и низшие грибы. К высшим относятся шляпочные грибы, к низшим – все остальные. В нашей статье речь пойдет о шляпочных грибах.

Специфика миконимов в определенной мере обусловлена спецификой вегетации грибов. В связи с этим нелишне заметить, что “по способу питания грибы можно разделить на три основные группы: сапротрофы, симбионты и паразиты. Грибы-сапротрофы питаются за счет разложения отмерших растительных остатков (опавших листьев, хвои, веток древесины и т.п.). Грибы-симбионты получают питательные вещества не только из лесной подстилки, но и из корней древесных пород. Они вступают с деревьями в своеобразную форму сожительства (симбиоз)... Грибы-симбионты сожительствуют с определенными породами деревьев... Однако многие микоризные грибы могут жить не с одной, а со многими древесными породами. Например... белый гриб сожительствует почти с пятьюдесятью видами деревьев. Грибы-паразиты (например, опенок осенний и опенок зимний. – *Ю.Д.*) поражают живые ткани растительных и животных организмов... Большинство съедобных грибов относятся к сапротрофам и симбионтам” [Федоров, с. 3].

Эти особенности вегетации грибов, в частности симбиоз, отражаются как в чувашских, так и в русских миконимах, ср. *ăвăс кăрăç* "подосиновик", *хурăн ай* "подберезовик", *шĕшкĕ кăмпи* "подорешник", на что подробнее укажем ниже.

Далее для наглядности приведем чувашские миконимы в алфавитном порядке (по их первому компоненту) с указанием источников и значения составляющих частей.

*Ăвă кăмпи* "трутник, трутовик (гриб, из которого делают трут)" (ЧРсл.); < *ăвă* "трут" + *кăмпи* "гриб его" ~ *ăвăлăх кăмпа* "гриб, из которого делают трут" (Ашм., IV, 35) < *ăвăлăх* "то, из чего можно приготовить трут" + *кăмпа* "гриб". Слово *ăвăлăх* производно от *ăвă* "трут". Аффикс *-лăх* в данном случае образует имя с семантикой назначения и функции [см.: Левитская, с. 127].

*Ăвăс кăмпи* "подосиновик" (Ашм., IV, 36) < *ăвăс* "осина" + *кăмпи* "гриб ее" ~ *вус кӳпчеми* – назв. желтого гриба, *вус кăмпи* "подосиновик" (Ашм., V, 274).

*Йӳç кăмпа* – назв. гриба (Ашм., VII, 14) < *йӳç* "горький" + *кăмпа* "гриб". Возможно, *йӳç кăмпа* есть *горькушка* или *груздь горький*.

*Карта кăмпи* "опенок" (Ашм., VII, 143) < *карта* "изгородь; загон; круг" + *кăмпи* "гриб его". Мы считаем, что *карта кăмпи* это – растущие кольцами или рядами луговые опята.

*Каска кăмпи* "ивишень" (Ашм., VI, 133) < *каска* "колода, чурбан, кряж" + *кăмпи* "гриб его".

*Кăрăç* "груздь", *кăрăç кăмпи* "груздь" (Ашм., VII, 178) < *кăрăç* "груздь" + *кăмпи* "гриб его". *Кăрăç* ← рус. *груздь* [Егор ЭСЧЯ, с. 100]. В разных томах Словаря Н.И.Ашмарина обнаруживаются чувашские названия разновидностей груздя: *ăвăс кăрăç* – назв. гриба: 1. подгруздок, 2. подосиновик (Ашм., IV, 36), букв. "осиновый груздь"; *çăка кăрăç* – назв. гриба (Ашм., XIII, 9), букв. "липовый груздь"; *тип кăрăç* "подгруздок" (Ашм., VII, 178), букв. "сухой груздь"; *хорăн кăрăç, хурăн кăрăçи* – назв. гриба (Ашм., XVI, 222), букв. "березовый груздь"; *хура кăрăç* "чернуха, дуняшка" (Ашм., XVI, 202), букв. "черный груздь"; *хытă кăрăç* "подгруздок" (Ашм., VII, 178), букв. "твердый груздь"; *чăн кăрăç* "груздь" (Ашм., VII, 178), букв. "настоящий груздь"; *шурă кăрăç* "груздь" (Ашм., VII,

178), букв. “белый груздь”; *юман кăрăҫĕ* “скрипица” (Ашм., VII, 178), букв. “дубовый груздь”.

*Кăтра кăмпа* “сморчок” (Ашм., VII, 143) < *кăтра* “кудрявый, курчавый” + *кăмпа* “гриб”.

*Кӳпчеме /кăмпа/* “масленик”, *шур кӳпчеме* “белый гриб” (Ашм., VII, 80) < диал. *кӳпчеме* “толстый” < *кӳпчем* “пухлый” < *кӳпче* “разбухать, толстеть” (Ашм., VII, 80) + *кăмпа* “гриб”.

*Лаша кăмпи* – назв. гриба (Ашм., VII, 143) < *лаша* “конь, лошадь” + *кăмпи* “гриб его”, ср.: рус. диал. *конский гриб* “поганка серая, Agaricus cinereus” [Меркулова, с. 195].

*Майра кăмпи* “масленок” < *майра* “русская женщина” + *кăмпи* “гриб ее”. В письменных источниках данное название не зафиксировано, так обозначают масленок жители Аликовского р-на.

*Масла* “масляник” (Ашм., VIII, 205], *масла кăмпа* “масленок” (ЧРсл.) < *масла* (← рус. *масло*) + *кăмпа* “гриб”.

*Маслонккă* – назв. гриба (Ашм., VIII, 206) ← рус. *масленок*.

*Мăнтăр кăмпа* “масляник (гриб)” (Ашм., VII, 143; VIII, 315) < *мăнтăр* “толстый, тучный” + *кăмпа* “гриб”.

*Навус кăмпи* – названия каких-то грибов, растущих на навозе (Ашм., VII, 143), *навос кăмпи* “шампиньоны” (Ашм., IX, 5), *навус кăмпи* “поганка” (ЧРсл.) < *навус, навос* (← рус. навоз) + *кăмпи* “гриб его”. Ср.: рус диал. *навозник* Agaricus campestris, *навозный гриб* “несъедобный гриб” (Меркулова, с. 197).

*Нĕртĕкке* “гриб” (с. Калмантай Саратовской обл.).

*Сад кăмпи* – одно из названий (наряду с *ҫĕр мăкăрăлса тухаканни* и *тополь кăмпи*) трюфеля в деревнях Видесюч и Азамат Аликовского р-на, букв. “садовый гриб” (устное сообщение А.А.Сосаевой).

*Сала кăмпи* – назв. гриба (Ашм., XI, 25) < *сала* “село, сельский” (← рус. *село*) + *кăмпи* “гриб его”. *Сала кăмпи* зафиксировано только в данном источнике.

*Сар кăмпа* “лисичка” (ЧРсл.) < *сар* “желтый” + *кăмпа* “гриб”.

*Сăвăр кăмпи* “гриб-дождевик” (ЧРсл.), *сăвăр кăмпи* – название особого рода гриба (Ашм., XI, 240) < *сăвăр* “сурок, сурковый” + *кăмпи* “гриб его”.

*Сӗлӗ кӑмпи* – назв. гриба, “булавница” (Ашм., VII, 143), *сӗлӗ кӑмпи* “рогатик (гриб)” (ЧРсл.) < *сӗлӗ* “овес, овсяный” + *кӑмпи* “гриб его”.

*Симӗс кӑмпа* – назв. гриба (съедобный, последний осенний гриб) (Ашм., XI, 147) < *симӗс* “зеленый” + *кӑмпа* “гриб”. Ср. русские названия гриба Tricholoma flavovirens – *зеленушка, зеленка.*

*Суккӑрлатакан кӑмпа* “дождевик” (в говоре деревень Видесюч и Азамат Аликовского р-на), букв. “ослепляющий гриб”.

*Ҫӑка кӑмпи* – название гриба с синим кругом (кольцом) на шляпе (Ашм., VII, 143; XIII, 9) < *ҫӑка* “липа, липовый” + *кӑмпи* “гриб ее”.

*Ҫерем кӑмпи* 1. шампиньон, 2. опенок луговой (ЧРсл.), (Ашм., VII, 143) < *ҫерем* “луговина; дерн; выгон” + *кӑмпи* “гриб его”.

*Ҫерӗк оппонки* – назв. гриба (Ашм., XII, 87) < диал. *ҫерӗк* – лит. *ҫирӗк* “ольха, ольховый” + *оппонки* “опенок его” (← рус. *опенок*). Ср.: рус. диал. *ольховики, ольхушка* [Меркулова, с. 198].

*Ҫӗр кӑмпи* “шампиньон”, “дождевик” (Ашм., VII, 143; XIII, 93). Вероятно, в этот же ряд названий входит и зафиксированный Н.И.Ашмариным (XIII, 38) фонетический вариант *ҫӑр кӑмпи. Ҫӗр кӑмпи* < *ҫӗр* “земля, земляной” + *кӑмпи* “гриб ее”. Ср.: рус. диал. *землянушка*, мн. *землянушки* Agaricus foetens [Меркулова, с. 195].

*Ҫӗр мӑкӑрӑлса тухаканни* – по словам А.А.Сосаевой, так называют трюфель в д. Видесюч и д. Азамат Аликовского р-на, букв. “[гриб], появляющийся, приподнимая землю”. Такое название, по-видимому, связано с тем, что трюфель растет под землей, на глубине 8–10 см, и о его местонахождении можно лишь догадываться по едва заметным бугоркам.

*Ҫӗр ҫу, ҫӗр ҫӑвӗ* – назв. гриба, “земляное масло”. “Вид особого гриба, в корне которого бывает жидкость (масло), которою мажут поранения” (Ашм., XIII, 96); *ҫӗр ҫӑвӗ* “гриб-дождевик” (ЧРсл.) < *ҫӗр* “земля, земляной” + *ҫу, ҫӑвӗ* “масло ее”.

*Ҫӗр хуранӗ* – назв. гриба (Ашм., XIII, 99) < *ҫӗр* “земля, земляной” + *хуранӗ* “котел ее”. По описанию Н.И.Ашмарина, *ҫӗр хуранӗ* растет на ржаном поле, мягкий, подобно белому грибу, похож на котел.

*Çлен кăмпи* – назв. гриба (Ашм., XIII, 117) < диал. *çлен* ~ лит. *çĕлен* "змея, змеиный" + *кăмпи* "гриб ее".

*Çулă кăмпа* "масленик", иначе *кӳпчеме* (Ашм., VII, 143) < *çулă* "масленый" (< çу "масло") + *кăмпа* "гриб".

*Çумăр кăмпи* "опенок" (Ашм., XII, 237) < *çумăр* "дождь, дождевой" + *кăмпи* "гриб его".

*Çыр кăмпи* – назв. гриба (Ашм., XII, 110). По-видимому, сюда же относится и *сыр кăмпи* "дождевик" (Ашм., XI, 115; VII, 143) < *çыр* — диал. *сыр* 1. обрыв; 2. овраг + *кăмпи* "гриб его".

*Така кăмпи* "гриб-баран" (ЧРсл.), род больших съедобных грибов (Ашм., VII, 143; XIII, 153) < *така* "баран" + *кăмпи* "гриб его".

*Тăрня кăмпи* – назв. гриба "со съедобным стволом" (Ашм., VII, 143) < *тăрня (тăрна)* "журавль, журавлиный" + *кăмпи* "гриб его". Данный миконим зафиксирован только в Словаре Н.И.Ашмарина.

*Тислĕк кăмпи* 1. шампиньон; 2. поганка, гриб-навозник (ЧРсл.), *тислĕк кăмпи* "поганка" (Ашм., VII, 143; XVI, 76) < *тислĕк* "навоз, навозный" + *кăмпи* "гриб его". Ср. сходные модели в разных языках: чув. *навус кăмпи* (Ашм., VII, 143), рус. диал. *навозник, навозный гриб* [Меркулова, с. 197], мар. Г. *намызвонгы* "навозный гриб, шампиньон" [Саваткова, с. 99].

*Тирĕс кăмпи* – назв. гриба (Ашм., XIV, 67) < диал. *тирĕс* (лит. тислĕк) + *кăмпи*.

*Тополь кăмпи* "трюфель" (устное сообщение А.А.Сосаевой) в говорах деревень Видесюч и Азамат Аликовского р-на, букв. "тополиный гриб".

*Тунката кăмпи* "опенок" (Ашм., VII, 143; XIV, 134), его фонетическим вариантом является *тумката кăмпи* "опенок" (Ашм., XIV, 129), ср. еще *тунката опленки* – назв. гриба (Ашм., XIV, 134). *Тунката кăмпи* < *тунката* "пень, колода" + *кăмпи* "гриб его".

Диал. *уплюнкка* "опенок" (ЧРсл.). Множество фонетических вариантов этого слова зафиксировано в Словаре Н.И.Ашмарина, ср. *оппонка*, *оппонька*, *оппонкка*, *оплінкка*, *оплонккă*, *уплюнкка* (Ашм., III, 256). Все они являются заимствованиями русского "опенок".

*Усал кӑмпа* “поганка, мухоморник” (Ашм., III, 298; VII, 143) < *усал* “вредный, злой” + *кӑмпа* “гриб”.

*Ут тути* “свинушка” (ЧРсл.), *ут тоти* – назв. гриба, “масленок” (Ашм., III, 320) < *ут* “лошадь, конь” + *тути* “губа его”.

*Хӑлха кӑмпи* “дождевик черноватый” (Ашм., VII, 143), *холхана питӗрекен кӑмпо* “дождевик”, *хулхана хуплакан кӑмпа* “дождевик” (Ашм., XVI, 154) < *хӑлха* ~ диал. *холха*, *хулха* “ухо” + *питӗрекен*, *хуплакан* “закладывающий, оглушающий” + *кӑмпа* “гриб”; букв. “оглушающий или закладывающий уши гриб”.

*Хӗрлӗ кӑмпа* “рыжик” (ЧРсл.) < *хӗрлӗ* “красный, рыжий” + *кӑмпа* “гриб”.

*Хӗрлӗ питлӗ нӗртӗкке* “подосиновик” (с. Калмантай Саратовской обл.) букв. “краснощекий гриб”.

*Хӗрхи кӑмпи* – назв. гриба, *хирхи кӑмпа* “пестрец (гриб)” (Ашм., XVI, 133; XVII, 62) < *хӗрхи*~ диал. *хирхи* – назв. птицы: 1. кобчик, небольшой сокол; 2. сыч, сова + *кӑмпа* “гриб”.

*Хор кайӑк кӑмпи* – назв. гриба (“растут кругом”) (Ашм., VII, 143) < *хор кайӑк* “гусь-птица (дикий гусь)” + *кӑмпи* “гриб его”.

*Хорӑн кӧпчеми* – назв. гриба (твердый, белый) (Ашм., XVI, 222) < диал. *хорӑн* “береза, березовый” + *кӧпчеми* “толстый гриб ее” (см. *кӳпчеме*).

*Хура кӑмпа* “чернуха” (Ашм., XVI, 202), *хура кӑмпа* “чернушка” (ЧРсл.) < *хура* “черный” + *кӑмпа* “гриб”.

*Хурама кӑмпи* “ивишень” (ЧРсл.); “вишенки” (Ашм., VII, 143), “ивишень”, *хорама кӑмпи* “вязовые грибы, заячье ушко, пестрец” (Ашм., XVI, 215) < *хурама* ~ диал. *хорама* “вяз, вязовый” + *кӑмпи* “гриб его”.

*Хурӑн ай* “подберезник, подберезовик, волнушка, волнуха” (Ашм., XVI, 222) < *хурӑн* “береза, березовый” + *ай* “низ, подножие”.

*Хурӑн кӑмпи* “подберезовик, березовик; волжанка” (Ашм., VII, 143; XVI, 223), *хорӑн кӑмпи* “белянка” (Ашм., XVI, 223) < *хурӑн (хорӑн)* “береза, березовый” + *кӑмпи* “гриб ее”.

*Хыр ай* – назв. гриба “ложанка, волжанка?” (Ашм., XVI, 94) < *хыр* “сосна, сосновый” + *ай* “низ, подножие”.

*Хыр кăмпи* “волнушка” (ЧРсл.), “рыжик, волжанка” (Ашм., VII, 143; XVI, 95) < *хыр* “сосна, сосновый” + *кăмпи* “гриб ее”. *Хыр кăмпи* скорее всего означает рыжик, а не волнушку, потому что рыжик сосновый (Lacfarius deliciosus) “встречается большей частью в молодых насаждениях сосны и лиственницы, а также в изреженных сосновых борах” [см.: Федоров, с. 11].

*Хырă нĕртĕкки* “боровик” (с. Калмантай Саратовской обл.), букв. “сосновый гриб”.

*Шăна кăмпи* “мухомор” (Ашм., VII, 144; XVII, 305) < *шăна* “муха, мушиный” + *кăмпи* “гриб ее”.

*Шăршлă кăмпа* – назв. гриба, “который употребляется для окуривания /тĕтĕрни/ во время шатра /оспы/, *шăрăшлă кăмпа* (Ашм., VII, 144; XVII, 345) < *шăр(ă)шлă* “пахучий” + *кăмпа* “гриб”.

*Шăтăклă кăмпа* “трутник, гриб-трутовик” (ЧРсл.), *шăтăклă кăмпа* “пористый гриб, им окуривали” (Ашм., XVII, 354) < *шăтăклă* “пористый, дырчатый” + *кăмпа* “гриб”.

*Шеле кăмпи* – назв. гриба, “бывает на пне дуба, полукруглый, твердый гриб” (Ашм., XVII, 157) < *шеле* (неизвестное слово) + *кăмпи* “гриб”.

*Шĕшкĕ кăмпи* “подорешник”, ср. еще *шăшкă кăмпи, шăшкĕ кăмпи* – назв. гриба (Ашм., VII, 144; XVII, 366, 381) < *шĕшкĕ* “орешник, лещина”, “орешниковый” + *кăмпи* “гриб его”.

*Шлап кăмпи* – назв. съедобного гриба (Ашм., VII, 144) < *шлап* “шляпа, шляпочный” + *кăмпи* “гриб ее”.

*Шор нĕртĕкке* “белый гриб” (с. Калмантай Саратовской обл.), букв. “белый гриб”.

*Шуйттан кăмпи* – назв. гриба (Ашм., XVII, 213) < *шуйттан* “дьявол, сатана, черт” + *кăмпи* “гриб его”. Наверняка, гриб с таким названием является ядовитым. Ср. рус.: *чертов гриб, сатанинский гриб.*

*Шурă кăмпа* “белый гриб” (ЧРсл.), *шур(ă) кăмпа* “боровик, белый гриб, белянка”, *шор айлă кăмпа* “белые грибы” (Ашм., VII, 144; XVII, 234, 236) < *шурă* “белый” + *айлă* “с низом” + *кăмпа* “гриб”.

*Ыраш кăмпи* – назв. гриба (Ашм., VII, 143) < *ыраш* “рожь, ржаной” + *кăмпи* “гриб ее”.

*Юман ай* 1. груздь дубовый; 2. поддубовик, поддубень (ЧРсл.) < *юман* "дуб, дубовый" + *ай* "низ, подножие".

*Юман кăмпи* то же, что *юман ай* (ЧРсл.), *юман кăмпи* – назв. гриба с длинной ножкой (Ашм., IV, 323; VII, 143). По данным Н.И.Ашмарина, чуваши данный гриб использовали для окуривания. *Юман кăмпи* < *юман* "дуб, дубовый" + *кăмпи* "гриб его".

*Юман оплонкки* – назв. гриба (Ашм., IV, 323) < *юман* "дуб, дубовый" + *оплонкки* "опенок его".

*Яка кăмпа* "сыроежка" (Ашм., VII, 143; ЧРсл.) < *яка* "гладкий" + *кăмпа* "гриб".

Как видим, чувашские миконимы отличаются большим разнообразием. В большинстве своем они по происхождению представляют собой не первичные, а очень прозрачные двусоставные названия. На этом фоне выделяются миконимы, включающие в свой состав обозначение общей реалии *кăмпа* "гриб" и слова *кăрăç*, *кўпчеме*, *оппонка*, выступающие как бы в роли родового понятия или же общего элемента /гриб/.

При этимологическом анализе слова *кăмпа* "гриб; головня; гриб на дереве; гуньба (налет во рту у детей); нарост (шишка) на голове человека" М.Р.Федотов приводит два взгляда. Соответственно первому (гипотеза В.Г.Егорова), слово *кăмпа* заимствовано было в древности из восточнославянского языка. Однако В.И.Лыткин утверждает, что соответствующие слова пермских языков (*гоб*, *губи*) ни в коем случае нельзя считать русскими заимствованиями [Федотов, ЭСЧЯ I, с. 253]. Мы со своей стороны придерживаемся точки зрения В.Г.Егорова и считаем, что чув. *кăмпа* восходит к той же праформе, что и венг. *gomba* "гриб", рус. *губа* "трутовик" и рус. *губка*. Составители ИЭСВЯ к венг. *gomba* приводят следующие соответствия: церковнославян. *gǫba* "губка", болг. *гъба* "гриб; губка", серб.-хорв. *gùba* "лепра; лишай, трутовик", словен. *gǫba* "гриб; губка; трутовик", словацк. *huba* "гриб; губка", рус. *губа* "трутовик", *губка* и т.п. [ИЭСВЯ I, с. 1072].

В отношении происхождения славянского слова *гриб* единое этимологическое решение пока еще не найдено. В.А.Меркулова в своей замечательной работе "Очерки по русской народной номенклатуре растений" (М., 1967) одну главу посвятила названиям грибов (с. 149–203). Здесь она, проанализировав все существующие взгляды на этимологию

данного слова в славянских языках, приходит к следующему выводу: “Реконструируемая праславянская форма *грибъ имела значение, содержащее в себе представление о чем-то возвышающемся, выступающем. Этимологически она может восходить к **greib-*, производному от и.-е. **ger-* “гнуть, изгибаться”. Думается, все эти аргументы заставляют склониться к этимологии, выдвинутой Петерссоном, и признать ближайшей родственной формой слова **грибъ* слав. **гърбъ...*” [Меркулова, с. 166].

Имеет широкое общенародное хождение миконим *кăрăç* (или *кăрăç кăмпи*) “груздь”. Довольно значителен процент двусоставных наименований разновидностей груздя со вторым компонентом *кăрăç* (*ăвăс к.*, *çăка к.*, *тип к.*, *хорăн к.*, *хура к.*, *хытă к.*, *чăн к.*, *шурă к.*, *юман кăрăçĕ*). Это свидетельствует и о том, что грузди всегда были в большом изобилии в окружающих чувашей местностях и население хорошо знакомо с разными его видами. Как было указано выше, *кăрăç* – не исконно чувашское слово, а заимствование из русского *груздь*.

Диал. *кӳпчеме* или *кӳпчеме кăмпа* означает “масленок” и, по всей вероятности, восходит к слову *кӳпчеме* “толстый” через *кӳпчем* “пухлый” и, в конечном итоге, к глаголу *кӳпче-* “разбухать, толстеть”. *Кӳпчеме (кăмпа)*, таким образом, может означать “толстяк, пухляк” или “толстый, пухлый гриб”, т.е. “масленок”. Но слово *кӳпчеме* выступает и в качестве второго, родового компонента составного названия, ср. *шур кӳпчеме* “белый гриб” (букв. “белый толстый гриб”) и *хорăн кӧпчеми* назв. гриба (букв. “березовый толстый гриб”), возможно, “подберезовик”.

Диал. *уплюнкка* “опенок” и его фонетические варианты /см. выше/ употребляются и как однословное название, а также в качестве второго компонента двусоставного образования, ср. *çерĕк оппонки* – назв. гриба (букв. “ольховый опенок”), *тунката опленки* – назв. гриба (букв. “пеньковый опенок”), *юман оплонкки* – назв. гриба (букв. “дубовый опенок”). Как уже указывалось, все они являются заимствованиями русского миконима “опенок”.

По мнению Л.П.Сергеева, чувашские диалекты свидетельствуют, что для наименования гриба в языке было и слово собственного происхождения – *нĕртĕкке* “гриб”,

зафиксированное в одном из островных говоров (в с. Калмантай Саратовской обл.): *нĕртĕкке* "гриб", *шор нĕртĕкке* "белый гриб", *хĕрлĕ питлĕ нĕртĕкке* "подосиновик", *хырă нĕртĕкки* "боровик" [Сергеев, с. 7]. Мы считаем это слово очень интересной находкой, т.к. оно, по нашим сведениям, ни в одном из словарей чувашского языка не зафиксировано. Мы склонны его связать с чувашским диалектным словом *нĕркки* (Байдеряково) – "полный, тучный" и *нĕртте* (Тюрлема) "то же, что *нĕркки*" [Сергеев ДСЧЯ, с. 44], ср.: *нĕркки* "так называют неповоротливого и с другими отрицательными качествами человека" и *нĕртте* "неповоротливый, толстый, неуклюжий, увалень" (Ашм., IX, 60). Если это предположение правильно, то не исключено, что чув. диал. *нĕртĕкке* является производным от слова *нĕркки* и означает "полный, тучный гриб". В этом случае *нĕртĕкке* имеет сходную семантику со словом *кӳпчеме*, ср.: *шур кӳпчеме* "белый гриб" (букв. "белый толстый гриб") и *шор нĕртĕкке* "белый гриб" (букв. "белый тучный гриб"), *хорăн кӧпчеми* — назв. гриба (букв. "березовый толстый гриб") и *хырă нĕртĕкки* "боровик" (букв. "сосновый тучный гриб").

По своему составу чувашские названия грибов делятся на однословные и двусоставные образования. Группа односоставных образований очень немногочисленна и своим происхождением, кроме *кӳпчеме* и *нĕртĕкке*, обязана русскому языку (*кăрăç, масла, маслонккă, уплюнкка*). К некоторым из них в качестве уточнения может присоединиться обозначение общеродового понятия *кăмпа*. Двусоставных названий грибов большинство, их число превышает 60. Эти именные определительные сочетания по типу связи между компонентами представляют собой либо 1-й тип изафета (*йӳç кăмпа, тип кăрăç, тачка кăмпа, хурăн ай, хыр ай, юман ай, яка кăмпа*), либо 2-й тип (*çерем кăмпи, çерĕк оппонки, така кăмпи, шуйттан кăмпи*). К двусоставным относятся и миконимы метафорического характера: *çĕр хуранĕ* букв. "земляной котел", *çĕр çу, çĕр çăвĕ* букв. "земляное масло", *ут тути* букв. "лошадиная губа".

При наименовании грибов хорошо вырисовываются определенные семантические модели:

1. Модель "цвет" $\xrightarrow[x]{}$ "гриб": *сар кăмпа* "лисичка" (букв. "желтый гриб"); *хура кăрăç* "черный груздь"; *шурă кăрăç*

"белый груздь"; *симĕс кăмпа* – назв. гриба (букв. "зеленый гриб"); *хĕрлĕ кăмпа* "рыжик", *хура кăмпа* "чернушка", *шурă кăмпа* "белый гриб", *шур кўпчеме* "тж", *шор нĕртĕкке* "тж".

2. Модель "свойство, воспринимаемое на вкус или осязание" → "гриб": *йўç кăмпа* – назв. гриба (букв. "горький гриб"); *çулă кăмпа* "масленок", *хăлха (питĕрекен, хуплакан) кăмпа* "дождевик" (букв. "закладывающий или оглушающий ухо гриб"), *шăршлă кăмпа* – назв. гриба (букв. "пахучий гриб").

3. Модель "дерево" → "гриб". К этой семантической модели относятся т.н. грибы-симбионты, сожительствующие с определенными породами деревьев. Ср. *ăвăс кăмпи* "подосиновик", *ăвăс кăрăç* 1. подгруздок; 2. подосиновик (букв. "осиновый гриб", "осиновый груздь"); *çăка кăрăç* – назв. гриба (букв. "липовый груздь"); *юман кăрăçĕ* "скрипица" (букв. "дубовый груздь"); *хурăн кăрăçи* – назв. гриба (букв. "березовый груздь"); *çăка кăмпи* – назв. гриба (букв. "липовый гриб"); *çерĕк оппонки* – назв. гриба (букв. "ольховый опенок"); *хурама кăмпи* "ивишень" (букв. "вязовый гриб"); *хурăн кăмпи* "подберезовик", *хорăн кӧпчеми* – назв. гриба (букв. "березовый гриб"); *хыр кăмпи* "рыжик" (букв. "сосновый гриб"); *шĕшкĕ кăмпи* "подорешник", *юман кăмпи* "поддубовик". Разновидностью этой модели является "место произрастания под определенным деревом" → "гриб": *хурăн ай* "подберезовик" (букв. "подножие березы"), *хыр ай* "рыжик" (букв. "подножие сосны"), *юман ай* "поддубовик" (букв. "подножие дуба").

4. Модель "животное" → "гриб". Она может выражать отношение сходства по любому признаку: *лаша кăмпи* – назв. гриба (букв. "конский гриб"), *сăвăр кăмпи* "гриб-дождевик" (букв. "сурковый гриб"), *така кăмпи* "гриб-баран", *тăрна кăмпи* – назв. гриба (букв. "журавлиный гриб"), *хĕрхи кăмпи* "пестрец" (букв. "кобчиков гриб").

Эта же модель применяется в том случае, когда обозначается малоупотребительность или несъедобность гриба для человека: *çĕлен кăмпи* – назв. гриба (букв. "змеиный гриб"), *шăна кăмпи* "мухомор".

5. Модель "растение" → "гриб": *сĕлĕ кăмпи* "булавница" (букв. "овсяный гриб"), *ыраш кăмпи* – назв. гриба (букв. "ржаной гриб").

6. Модель “характерное свойство или характерное морфологическое строение” → “гриб”: *кăтра кăмпа* “сморчок” (букв. “кудрявый гриб”), *мăнтăр кăмпа, тачка кăмпа* “масленок” (букв. “тучный гриб”), *шăтăклă кăмпа* “гриб-трутовик” (букв. “пористый гриб”), *яка кăмпа* “сыроежка” (букв. “гладкий гриб”).

7. Модель “место произрастания” → “гриб”: *карта кăмпи* “опенок” (букв. “растущий в круге, образующий круги гриб”), *каска кăмпи* “ивишень” (букв. “растущий на кряже гриб”), *навус кăмпи* “шампиньон” (букв. “навозный, растущий на навозе гриб”), *çерем кăмпи* 1. шампиньон; 2. опенок луговой (букв. “дерновой, растущий на дерне, на выгоне гриб”), *çĕр кăмпи* “шампиньон”, “дождевик” (букв. “земляной, растущий на земле гриб”), *çыр кăмпи* – назв. гриба (букв. “овражный гриб”), *тислĕк кăмпи* 1. шампиньон; 2. поганка, гриб-навозник (букв. “навозный гриб”, “растущий на навозе гриб”), *тирĕс кăмпи* – назв. гриба (букв. “навозный гриб”, “растущий на навозе гриб”).

Несъедобность грибов в чувашском языке кроме модели “животное” → “гриб”, выражается и с помощью отрицательной семантики определительного компонента, ср.: *усал кăмпа* “поганка, мухоморник” (букв. “дрянной, негодный, плохой гриб”), *шуйттан кăмпи* – назв. гриба (букв. “сатанинский гриб”), *навус кăмпи* “поганка” (букв. “навозный гриб”).

Обращает на себя внимание лексическая дублетность миконимов – один и тот же гриб имеет по нескольку параллельных названий, ср. к примеру, масленок: *кӳпчеме (к.), масла (к.), мăнтăр кăмпа, çулă кăмпа, тачка кăмпа, маслонккă*; или белый гриб: *шур(ă) (айлă) кăмпа, шур кӳпчеме, шор нĕртĕкки.* Эти названия параллельно существуют в основном на уровне диалектного языка, т.е. один и тот же гриб в разных местах обозначают по-разному. Но так как названия обычно даются по самому характерному признаку растений, они часто бывают синонимичными. Ср. названия маслят: они либо обозначают “толстый, тучный гриб”, либо “масляный, маслянистый”. Понятие “белый гриб” тоже передается синонимичными *шур кӳпчеме – шор нĕртĕкке* “белый пухлый гриб”.

Некоторые грибы названы не по одному, а по нескольким характерным признакам. К примеру, одно из

названий гриба-дождевика связано с местом его произрастания (*çĕр кăмпи, çыр кăмпи*), другое, возможно, с его характерным цветом (*сăвăр кăмпи*), третье – со звуком, издаваемым им при некоторых обстоятельствах *[хăлха питĕрекен (хуплакан) кăмпа]*.

Бывают случаи, когда одно и то же название обозначает два разных гриба, ср. *навус кăмпи*, а также *тислĕк (тирĕс) кăмпи* означают и шампиньон и поганку. С одной стороны, шампиньоны предпочитают унавоженную почву, поэтому в их чувашском названии присутствует компонент "навозный", с другой – в чувашском названии поганки налицо отрицательный оттенок "навозный". Название *çерем кăмпи* тоже может означать и "шампиньон" и "опенок луговой". Общим для обоих грибов признаком является место их произрастания. И шампиньоны и луговые опята селятся вблизи жилья, на лугах, выгонах, богатых перегноем. Отсюда и общий определительный компонент *çерем* "дерновый, луговой".

Словообразовательные типы миконимов в русском и чувашском языках различаются. Главное различие в том, что большинство русских миконимов однословные, а в чувашском преобладают двусоставные названия. Ср. русские словообразовательные типы: *моховик, боровик, осинник, березник, подберезовик, подореховик, жиловатик, короватик, желтик, рыжик; солонуха, маслуха, ситуха; белянка, серянка, дуплянка; синяк, коровяк, масляк* [Меркулова, с. 151–156]. В этих языках совпадает всего один словообразовательный тип: сочетание прилагательного с существительным: *белый гриб – шурă кăмпа, черный груздь – хура кăрăç*.

Среди чувашских миконимов в небольшом количестве встречаются полу- и полные кальки из русского языка: *навус кăмпи – навозный гриб, тислĕк кăмпи*. Семантические модели при назывании одного и того же гриба не соприкасаются, ср. рус. *лисичка* – чув. *сар кăмпа*; рус. *гриб-дождевик* – чув. *çĕр кăмпи, çыр кăмпи, хăлха (питĕрекен, хуплакан) кăмпа*. Чув. *çумăр кăмпи* означает не "дождевик", несмотря на его буквальную семантику, а "опенок". *Çумăр* в нем указывает на то, что данный гриб вырастает сразу после дождя.

## Литература


Ашм., I–XVII — *Ашмарин Н.И.* Словарь чувашского языка: В 17 т. Казань; Чебоксары, 1928–1950.

ЕгорЭСЧЯ — *Егоров В.Г.* Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары, 1964.

Иванов — *Иванов В.П.* Пища как источник изучения этногенетических и культурных связей чувашей //Этническая культура чувашей. Чебоксары, 1990. С. 27–50.

ИЭСВЯ I–III — Историко-этимологический словарь венгерского языка (A magyar nyelv történeti-etimológiai szótára. I–III. Budapest, 1967–1976).

Левитская — *Левитская Л.С.* Историческая морфология чувашского языка. М., 1976.

Меркулова — *Меркулова В.А.* Очерки по русской народной номенклатуре растений. М., 1967.

Саваткова — *Саваткова А.А.* Словарь горного наречия марийского языка. Йошкар-Ола, 1981.

Сергеев — *Сергеев Л.П.* Заметки по чувашской исторической диалектологии //Материалы по чувашской диалектологии. Вып. V. Чебоксары, 1997. С. 3–9.

СергеевДСЧЯ — *Сергеев Л.П.* Диалектологический словарь чувашского языка. Чебоксары, 1968.

Федоров — *Федоров Ф.В.* Грибы. Чебоксары, 1988.

ФедотовЭСЧЯ I–II — *Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка: В 2 т. Чебоксары, 1996.

ЧРсл. — Чувашско-русский словарь. М., 1982.

# ПОЭТИКА ОНОМАСТИКИ

*Е.Ф.Васильева, А.А.Сосаева*

## П.П.ХУСАНКАЙ ПОЭЗИЙĔНЧИ ПАЙĂР ЯТСЕМ

П.П.Хусанкай – чăвашсен чаплă, уйрăмах паллă поэчĕсенчен пĕри. Тăван сăмахлăха юратакан çын çак кăмăллă та ырă ята мĕн ачаран чĕрере усрать. Литература вучахĕнче çанă тавăрсах ĕçленĕ çулăм чĕреллĕ сăвăçă, Тăван çĕр-шывăмăрта пурăнакан халăхсен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ, йăли-йĕрки, шухăшĕ-кăмăлĕ, культури çинчен кашни халăха хисеплесе, сума суса ĕмĕр асра юлакан произведенисем хайланă. Унăн сăвви-юррипе поэмисенче Çĕр чăмăрĕ çинчи тĕрлĕ халăх çынни тĕл пулать. **Чăваш** ("Эп – чăваш. Анчах писмерĕ никамран та ман чĕре"), **тутар** ("Çав-çавах манмарăн ху камне... тутар, эс ямарăн халăхун ятне"), **пушкăрт** ("Пушкăртсем – пире тăван"), **казах** ("Ĕлĕк хир тăрăх ялан куçакан казах çынни"), **пăлхар-балкар** ("Балкарсем те ху пекех"), **якут** ("Хĕвелтухăç еннелле кайнăçем... якут"), **хакас** ("Кайнăçемĕн малалла – хакас"), **туркмен** ("Мăн калпаклă туркменсем"), **узбек** ("Шурă тĕрĕллĕ хура тӳпеттейлĕ узбексем"), **кăркăс** ("Пур тăван йăх евĕрлех кăркăссем – пире тăван"), **азербайджан** ("Чаплăлан, Азербайджан! Сан йышу – пире тăван"), **калмăк** ("Калмăк савнă çеçен хир..."), **бурят** ("...бурят... Мĕнле халăх çук, ача"), **мари** ("Ватă Атăл леш енче – уçăрах ĕшнесенче – мари халăх пурăнать"), **финн** ("Финн чĕлхи çапла çемçе-тĕр"), **удмурт** ("Удмуртсен пăшалĕ те... чапа тухнăччĕ вара"), **мăкшă** ("Калла тапать хăш-пĕр мăкши"), **ирçе** ("Анчах лере хăш-пĕр ирçе кĕрет чĕрре, шав хирĕçет"), **коми** ("Малалла – çурçĕрелле... комисем"), **пермяк** ("Хĕвелтухăç еннелле... пермяк"), **эстон** ("Юрлама юратакан эстонсем"), **ненец**, **эвенк**, **манси**, **хант**, **коряк**, **ойрот**, **эскимос**, **чукча** ("Ненецсем те эвенксем, манси, хант..., коряк, ойротпа... пермяк, эскимос..., чукча... Пурте пирĕншĕн – тăван"), **карел** ("Карелсем те ĕнтĕ халь тухрĕç паллă халăха"), **нанай** ("Наная ăçтан манан? Нанайсем – пире тăван"), **славян** ("Дунай славянĕпе пăлхарăн..."), **вырăс** ("Мĕн çук вырăс çĕрĕнче?"), **таджик** ("Таджиксем – пире тăван"),

**украин** ("Украин туссем пире – тăван халăх ĕмĕре"), **молдаван** ("Хăй манерлĕ ташă та тапранать молдавансен"), **белорус** ("Халь, пур халăхпа пĕрле, белорус та хăй килне тирпейлерĕ ĕçпеле"), **латыш** ("Латышсем... – вашаватлă этемсем"), **литвин** ("Ĕмĕт çитрĕ литвинсен"), **грузин** ("Грузинсен юррипелен кăшт лăпланнă йывăр кун"), **кабардин** ("Кабардин çынни... "), **авар** ("Бурячĕ, тейĕпĕр, аварĕ..."), **ингуш** ("Сăнарăм... ингушсене"), **чечен** ("Чеченсем те тăванах..."), **эрмен** ("Ăсталаннă тĕрлĕрен чăкăтсем тума эрмен"), **черкес** ("...хăть черкес... кашни халăх ырлăх кĕтет"), **осетин** ("Ăмăрт чунлă осетин"), **хрансус – француз** ("Француз килнĕ – француза Мускав пулнă серепе"), **нимĕç, швед, акăлчан** ("Ют патшалăх хуçисем нимĕç, швед е акăлчан"), **румын** ("Пĕр румын ал пачĕ"), **негр** ("Ак негр чăматан йăтса кĕрет"), **индей** ("Резерваци тĕрлĕ хурлăх кăтартан индейсене кăшкăратăп"), **чех** ("Çул майăн чехсен çĕрĕнче хăнара пулмалла") тата ытти халăхсемпе паллаштаракан сăвăсене юратса вулатпăр. Кирек кам та, чăваш чĕлхине пĕлмесен те, П.Хусанкайăн сăвă йĕркисем шыв юххи пек илемлĕ те çепĕç янăранине туйса илет. Петр Петрович чăваш сăввин сассине Европа культурине çити çĕклет. Унăн сăввисем тĕнче пек аслă. Поэт Чăваш çĕрĕпе çырлахмасть, ăна пĕтĕм тĕнче кирлĕ. Çĕре яхăн чĕлхепе çырнă сăвăсене чăвашла куçарса, П.Хусанкай тĕнче пурнăçĕн уттипе тан пырать, тĕнче савăнăçĕпе савăнать, тĕнче хуйхипе хуйхăрать. Хăйĕн хайлавĕсем те чăвашла е вырăсла кăна мар, тĕнчери аллă ытла чĕлхепе сумлăн янăраççĕ.

Хусанкай сăввисемпе поэмисем чĕлхеçĕсене те тыткăнлаççĕ. Чĕлхе пĕлĕвĕн мĕн чухлĕ материалĕ, мĕнле-мĕнле тема ушкăнĕ сăнланман-ши вĕсенче! Мĕн чухлĕ пайăр ят тата! Акă 1948–1956 çулсенче çырнă 1484 йĕркеллĕ "Тăван çĕр-шыв" поэмăрах 230 пайăр ят. Вĕсен шутĕнче:

- халăх ячĕсем (этнонимсем) – 49,
- çын ячĕсем (антропонимсем) – 45,
- юмах-халапри персонажсен ячĕсем (мифонимсем) – 3,
- планета ячĕсем (астронимсем) – 3,
- утрав ячĕсем (инсулонимсем) – 4,
- çĕр-шыв ячĕсем (хоронимсем) – 23,
- хула ячĕсем (астионимсем) – 36,
- ялти урам ячĕсем (годонимсем) – 3,

– çурт-йĕр ячĕсем (ойкодомонимсем) – 5,
– шыв ячĕсем (гидронимсем) – 25,
– тинĕс ячĕсем (пелагонимсем) – 6,
– кӳлĕ ячĕсем (лимнонимсем) – 4,
– океан ячĕсем (океанонимсем) – 2,
– сăрт-ту ячĕсем (оронимсем) – 10,
– уй-хир ячĕсем (агроонимсем) – 3,
– кĕскетсе тунă ятсем (акронимсем) – 5,
– вăрман ячĕсем (дримонимсем) – 2,
– чул ячĕсем (хрематонимсем) – 2.

Пайăр ятсемпе тĕпленĕрех паллашас шутпа эпир П.П.Хусанкайăн "Аптраман тавраш" (Шупашкар, 1957), "Савни" (Шупашкар, 1963), "Хушка хумсем" (Шупашкар, 1967), "Суйласа илнисем" (I т., Шупашкар, 1968; II т., Шупашкар, 1970), "Эпир пулнă, пур, пулатпăр" (Шупашкар, 1982) кĕнекисене пăхса тухрăмăр. Хусанкай произведенийĕсенчи пайăр ятсен кашни ушкăнĕпе ятарлă ĕç çырма пулать. Халлĕхе пирĕн тĕп тĕллев – пайăр ятсене пĕтĕмĕшле тупса палăртасси, вĕсен тытăмĕпе пулăвне сăнасси, поэзири пĕлтерĕшне тĕпчесе чĕлхери вырăнне кăтартасси.

Маларах эпир Хусанкайăн пĕр поэминче тĕл пулакан пайăр ятсен ушкăнĕсене асăнса хăварнăччĕ. Вĕсенчен чи пуянни – çын ячĕсем. Ку ушкăнра чăваш ячĕсем çеç мар (Атнер, Аптраман, Сетнер, Илтимĕр, Кĕçтук, Верук, Павăл, Энтри, Элкер, Шупуççынни...), тĕнчен тĕрлĕ кĕтесĕнче усă куракан ятсем (Гомер, Омар, Байрон, Мурат-бей, Гагарин, Руставели, Фидель, Колумб, Рафаэль, Хетагуров, Тычина, Джамбул...) сăнланнă.

Хусанкай произведенийĕсенчи ятсем урлă вулакан чăвашсен паллă çыннисемпе (К.Иванов, Шелепи, Шупуççынни, И.Я.Яковлев, Н.И.Ашмарин, Иван Мучи, М.Кипек, Ивник, Тăхти, Çеçпĕл, Элкер...), историре палăрнă ятсемпе (Маркс, Энгельс, Ленин, Бичурин, Минин, Пожарский, Панфилов, Сусанин, Фидель...), писательсемпе (Чернышевский, Белинский, Гайдар, Толстой, Горький, Баурджан Мамыш-Ули, Радищев...), поэтсемпе (Маяковский, Есенин, Купала, Сулейман Стальский...), художниксемпе (Левитан, Шишкин, Айвазовский, Соколов...), композиторсемпе (Моцарт, Сальери, Бах, Шопен...), артистсемпе (Б.Алексеев, О.И.Ырзем...) паллашать. Çакăн евĕр ятсем пире Хусанкай тĕнчине аванрах пĕлме, тем анлăш

тавракурӑмне тарӑнрах ӑнланса илме пулӑшаççӗ, тӗрлӗ халӑх хушшинчи çыхӑнӑвӗсене туйса илме май параççӗ, поэтпа пӗрле çул çӳреве кӑлараççӗ. Сӑвӑçӑ Çӗпӗрте, Вӑтам Азире, Кавказра, Европӑри тата океан леш енчи чылай çӗр-шывсенче çӳренӗ. Вӑл аякри çӗрсенче мӗн курни-илтни, ӑшне хывни, кӑмӑлне мӗн хумхантарни антропонимсенче кӑна мар, топонимсемпе гидронимсенче те палӑрать.

П.Хусанкая **Çӗпӗрти** вӗçӗмсӗр вӑрмансем, эреш çӳçеллӗ шӑлаварлӑ çӗн **Испанин** таса çӗр-шывӗ, таçти шӑрӑх **Африка**, **Кавказӑн** ӑслӑ ӗçки-çики, **Грузин** хитре пахчисем, **Крым** хӗвелӗпе ту çилӗ, тем сарлакӑш **Казахстан**, сарлака **Россия – Русь**, тем анлӑш **Каракум** пуш хирӗ, **Карелири** "Калевала" çемми, **Британи** инженерӗсем, сӑртлӑ-туллӑ **Таджикистан**, манӑçми **Осети**, сӑрт ватакан та чул чутлакан ӗçпе пиçӗхнӗ **Эрмени**, пархатарлӑ **Кӑркӑсстан**, чечеклӗ **Узбекистан**, мазут уçлакан, сӗм вӑрман пек хуп-хура вышкӑллӑ **Азербайджан**, **Балканӑн** ту чакӑлӗсем, чи малтан **Русь** патшалӑхӗ чӑмӑртаннӑ ватӑ Киев, сиплӗ сӗтлӗ **Эстони**, çырла çимӗçлӗ **Молдави**, кавирсем эрешлекен **Туркменистан**, вырӑн-вырӑн лачакаллӑ **Белоруссии**, ярӑнса ӳсекен йӑмраллӑ **Чӑваш ен** тата ытти çӗр-шывсем те тыткӑнлаççӗ, вулакансене пырса курма илӗртеççӗ.

"Ман Российӑм, Украинӑм,
Манӑн Грузи, Казахстан...
Манӑн Польша, ман Волгари,
Манӑн Венгри мар-и-ха...", –

тесе шухӑшлакан поэта "тӗрлӗ юнлӑ тӗрлӗ халӑх" хӑйӗн тӑван кӗтесне пырса курма чун-чӗререн чӗнсе ал панӑ.

Хусанкайӑн тӑван ялӗ – Сиктӗрме. Поэт шухӑшӗпе, Сиктӗрме "сӑпка силлемелли хатӗре пӗлтерет". Сиктӗрме ялӗ (халӗ вырӑсла – Хузангаево) Тутар Республикине кӗрет. Вӑл Ӗнчӗ шывӗ хӗрринчи (вырӑсла – Инча) Çинçе вӑрман çумӗнче вырнаçнӑ. Ку ял Атӑлпа Камӑран тата чукун çултан 60 çухрӑмра ларать, çурçӗр-хӗвел тухӑçнелле 50 çухрӑмра Атӑлçи Пӑлхарти паллӑ Пӳлер (вырӑсла – Биляр), хӗвел анӑçнелле 20 çухрӑмра тепӗр хула – Сӑвар (вырӑсла – Сувар), хӗвел анӑçнелле 90 километртра вара – Атӑл çывӑхӗнче – "Пӑлхарсен аслӑ хули" чаплӑ Пӑлхар (вырӑсла – Булгар) пулнӑ. Хӑйӗн тӑрӑхне поэт çапла сӑнлать:

“Сиктĕрме! Савса сиктертĕн...
Ешĕл симĕс сăпкунта.
Малтанхи хавасăм, тертĕм,
Хура-шурăм – йăлт кунта”.

Йĕри-тавралăха ӳкерчĕклеме сăвăçă халăх хушшинче анлă сарăлнă, ламран лама куçса пынă халаппа усă курать:

“Канмашкăн ларнă Улăп асатте,
Çăпатине силленĕ те кануçăн
Ик мăн тĕме туса хăварнă, тет.
Çав ик тĕме хушши шăп пилĕк çухрăм,
Унта вырнаçнă пирĕн Кивĕ Ял.
Ял пуçĕ пулнă Питтăпай”.

Питтăпайĕ вара Çĕрпӳ патĕнчен куçса пынă пулать. Сиктĕрме ялĕ Питтăпай йăхĕнчен тымарланнă имĕш. Пурăна киле Кивĕ Ялтан хальхи Сиктĕрме, Шапка, Хулату, Хăрата, Пăрнай, Питтăпаль ялĕсем пулса кайнă. Вĕсем пĕр-пĕринчен инçе мар лараççĕ. Пирĕн шутпа, Сиктĕрме комоним Сиктĕрме гидронимран пулса кайнă. Сиктĕрме шывĕ – Ĕнчĕ юппи. Ĕнчĕ – пĕчĕк çеç шыв. Ял халăхĕ сĕм авалтан çакăнтан шыв ăсса пурăннă. Шывĕ таса та тăрă, хĕвел çинче вăл ĕнчĕ евĕр сарă курăнать. Ĕнчĕ сăмах чĕлхемĕрте “жемчуг, жемчужина; перламутр; бисер” пĕлтерĕшсемпе çӳрет. Ку сăмах авалхи тĕрĕк чĕлхинчех пулнă: йэнчӳ (< кит.) “жемчуг”, тутар чĕлхинче вăл энҗе “жемчуг”.

Поэт Сиктĕрме таврашĕнчи ял ячĕсен пулăвне халăх ăнланăвне тĕпе хурса уçса парать: **Шапка** ял ятне вырăсла “шапку потерял”, **Хăрата** – “лаша хăраса ĕрĕхнĕ тĕл”, **Хулату** – “авал хула пулнă вырăн”, **Пăрнай** – “вăрманалла пăрăнни”, **Сиктĕрме** – “сиктермелĕх çĕмĕртсем” тенисемпе çыхăнтарать. Чылай чухне халăх этимологийĕ наука шайне лараймасть. Кунта Хулату “авал хула пулнă вырăн” тенипе килĕшмелле. Чăваш чĕлхинче глагол формипе пулнă топонимсем çук. Шапка, Хăрата, Сиктĕрме комонимсем çав ятлă гидронимсенчен, Парнай тĕне кĕмен чăваш ячĕн тымарĕ çумне *-ай/-ей* чĕнӳ аффиксĕ хушăннипе пулнă теме май пур.

Петĕр Хусанкай тус-тантăшĕсем пурăнакан тата хăй çитсе курнă чылай ял-хула ячĕсене те асра тытать. Ял-хула хăй евĕрлĕхĕсемпе паллаштарса, вулакансен тавра курăмне ӳстерет, вĕсене хăйĕнпе пĕрле савăнма, ыттисене хисеплеме вĕрентет: “Тĕнчипе янрать халь Шуршăл – эс

[Андриян Николаев] çуралнӑ лӑпкӑ ял”, “Лапсар Пики, Кармал Чӗкеçӗ тӗшмӗшленмеççӗ ялсенче”, “Бургас, Муркаш, Янтра та Варна кӗрет-çке юррӑн хӑлхана”, “Çирӗклӗ Шӑхаль. Кӗçӗн Елчӗк таврашӗ”, “Тури Вылла эп пырса куртӑм, аван пурнатӑр пурнӑçа”, “Якку ывӑлӗ Йӑван, вӑл çуралнӑ Кушкӑра”, “Атӑлпала киле пыруçӑн миçе иртмен-ши Писнерен? Вӑл халь – Антоновка”, “Выласене вӑратса, Янкураса янратса, Асамата астарса, Хирлепсене хиртерсе, Пинерсене пӗлтерсе, Шӗнтрешсене шӗвӗртсе, Йӑлкӑшсене йӑпатса, Хутарсене хускатса Тури Вылта туй сикет”, “Ятне те тупаççӗ-çке, мур! – Улатӑр е Чӗмпӗр...”, “Иртрӗн Сӗнтӗрвӑрринчен, Куславкка патне çитен; Малалла шусан-шусан, курӑнса каять Хусан”, “Чӗмпӗрти çирӗм пиллӗкри гени Иванюк Ваçинккин Кӗçтенттинӗ хӑрать”, “Чура хӑй ял тӑвать те – Чурачӑк ят парать, тет, Аксарин тӑвать Аксар... Яман тунӑ... ларакан Яманкаса”, “Канаш мар пулсан ытах, Шупашкар та çав çулпах”, “Сакӑр ӗмӗр çӗр çинче пурӑнать Мускав хули”, “Кӗрлет Çӗмӗрле яр çурса тӗттӗме”, “Куçран çухалчӗ Чулхула”, “Вӑрнартан сиксе лар та тӑван ял енне...”.

Çӳлерех асӑннӑ комонимсемпе астионимсем паянхи куншӑн пӗр-пӗр вырӑна палӑртакан сӑмахсем çеç шутланаççӗ. Вӗсем аваллӑхпа çыхӑннӑ пирки тӑван чӗлхемӗр аталанӑвӗн çулне-йӗрне, халӑхӑмӑрӑн историне тӗпчесе пӗлме чылай пулӑшма пултараççӗ. Анчах та вӗсен пулӑвӗпе тытӑмне пӗлме, пӗлтерӗш вӑрттӑнлӑхӗсене шыраса тупма çӑмӑлах мар. Акӑ **Шуршӑл** *шурӑ* “белый” тата *çӑл* “родник, источник” гидроформант хушӑннипе, **Лапсар** < *лап* “низина” + *-сар* (нумайлӑха палӑртакан аффикс, танл.: Юмансар/Юманлӑх, Çӑкасар/Çӑкалӑх), **Муркаш** çав ятлӑ гидронимран: сӑмах тымарӗ çумне финн-угр чӗлхисенчи *вож* “устье реки” < чӑв. *-вӑш*, *-ш* гидроформант хушӑннипе, **Шӑхаль** < *Шигали* тӗр.-тут. антропонимран, **Елчӗк** < *ел/ял* “деревня” пӗлтерӗшлӗ апеллятив çумне *-чӗк* (пӗчӗклетӳ аффиксӗ) хушӑннипе, **Тури Вылла** < *тури* “верхний” квалитатив тата *Вылла* гидроним хушӑннипе, **Кушка**/Кӑнна Кушки (И.Я.Яковлев çуралнӑ ял) < *Кӑнна* гидроним + **Кушка**, **Писнер** < сӑмах тымарӗ çумне *-нер* финн-угр чӗлхисенчи *энер/энгер* “овраг, река” гидроформант хушӑннипе, **Антоновка** < выр. *Антон* → выр. *Антонов* + выр. *-ка* аффикс, **Янкурас** < çав ятлӑ антропонимран: тут. *яна* “новый” + *ураз/ораз* “счастье” (умлӑ-

хыçлă темиçе хĕр çуралнă хыççăн арçын ача çуралсан тĕрĕксем "Çĕнĕ Телей" ят панă), **Асамат** араб-перс чĕлхинчи "величие, великолепие" пĕлтерĕшлĕ антропонимран, **Хирлеп** трансонимизаци витĕмĕпе *Хирлеп* шыв ячĕ *Хирлеп* ял ятне куçнипе, **Пинер** сăмах тымарĕ çумне финн-угр чĕлхисенчи *-нер* гидроформант хушăннипе, **Шĕнтреш** сăмах тымарĕ çумне *-вĕш, -ш* гидроформант хушăннипе, **Йăлкăш** *-кăш* формантлă антропонимран, **Хутар** < çав ятлă антропонимран, **Улатăр** çав ятлă гидронимран, **Сĕнтĕрвăрри** < *Сĕнтĕр* гидроним + *вăрри* "устье"-"город, находящийся в устье реки Сундырь", **Куславкка** < *Козлов* антропоним + *-ка* аффикс, **Хусан** < *Хосан* антропонимран (тата икĕ тĕрлĕ ăнлантарни те пур: *Казан* < *тут. казан* "хуран" шыв ячĕпе çыхăнтарса; *каз* тĕрĕк этнонимĕнчен), **Турачăк** < *Чура* тĕне кĕмен арçын ячĕ çумне *-чăк* пĕчĕклетӳ аффиксĕ хушăннипе, **Аксарин** çав ятлă антропонимран, **Яманкас** < *Яман* тĕне кĕмен арçын ячĕ тата *кас/касси* "околодок" географи терминĕ хушăннипе, **Канаш** *канаш* "совет" апеллятивран, **Шупашкар** < *Шупаш* тымар çумне (унăн пулăвне тĕпчевçĕсем тĕрлĕрен ăнлантараççĕ) *-кар* (финн-угр чĕлхисенче "город, гнездо" пĕлтерĕшлĕ) сăмах хушăннипе, **Мускав** < балт.-славян чĕлхисенче *моск* "болото, жидкость, влага, сырость" апеллятив çумне *-ва* элемент хушăннипе, **Çĕмĕрле** сăмах тĕпĕ çумне ирçе чĕлхинчи *ляй* "вода" пĕлтерĕшлĕ гидроформант хушăннипе, **Чулхула** *чул* "камень" апеллятив тата *хула* "город" географи терминĕ хушăннипе, **Вăрнар** сăмах тĕпĕ çумне çармăс чĕлхинчи *нар* "река" пĕлтерĕшлĕ сăмах хушăннипе пулнă.

Хусанкай произведенийĕсенчи ял-хула ячĕсенчен чылайăшĕ çав ятлă шыв ячĕсенченех е тĕрлĕ чĕлхесенчи гидроформантсемпе географи терминĕсем хушăннипе, хăшĕ-пĕрисем çын ячĕсенчен е хăй пĕлтерĕшлĕ апеллятивсенчен пулнăскерсем.

Тĕнчипе паллă поэтăмăр сăвви-юррисенче пĕтĕм халăх пĕлекен хула ячĕсем те йышлă: Мускав, Ленинград/Питĕрпурк/Питĕр, Остер, Минск, Ташкент, Якутск, Курск, Рим, София/Софи, Лондон, Берлин, Калуга, Нальчик, Орджоникидзе, Варшава, Ереван, Куйбышев/Самар, Ясная Поляна, Баку, Тбилиси, Сухум, Арзамас, Париж, Нью-Йорк, Копенгаген, Брюссель, Бухарест, Милан, Прага, Вена, Каир, Одесса, Воронеж, Днепропетровск, Кузнецк, Мытищи...

П.Хусанкай произведенийӗсенче шыв-шур ячӗсем те пайтах. Гидронимсем – сӗм авалхи сӑмахсем. Вӗсем ҫав ятлӑ ял-хула ячӗсенчен самаях аслӑ. Поэтӑн юратнӑ юхан шывӗ – **Атӑл**. Атӑл – чӑваш "халӑхӗн тымарӗ", унӑн "пархатарӗ", "ӑраскалӗ те, хурлӑхӗ те". Атӑл – тӗнче пекех ватӑ. Вӑл тем те курнӑ, илтнӗ: "Атӑл тӑрӑх вылянӑ мул, вӗренӗ юн...", мӑнаҫлӑн ярӑннӑ пин-пин пӑрахут, чӳхеннӗ "пулӑҫ киммисем", каҫсенче янранӑ тӗрлӗ ырӑ юрӑ. Атӑл "ӗмӗрех пуҫтах", "пӑтравлӑ", "чӑнкӑ хумлӑ", "кӑпӑклӑ" пулсан та, "ӗмӗр кӑмӑллӑ". Хум хыҫҫӑн хум пӑрахса "кӑтралана пуҫланӑ Атӑл" поэта вӑй-хал парать, шухӑша ярать. Сӑвӑҫӑн "вӗҫет шухӑш Атӑл урлӑ", "Атӑл тӑрӑх, Сӑр тӑрӑх, Ҫавалпа Пӑла" ҫине. Хумсем ҫинче "аташса" ҫӳрекен Атӑл ҫилӗ поэтӑн "кӑмӑлне кӗрсе" ӑна "пӗр ӳкӗтлет, пӗр лӑскать". П.Хусанкай та "хӑш чух Атӑл пек", "Атӑл куҫӗ" пек хумханать. Ун "ытахальтен чул пуҫтарса", вӗсене "суйласа", Атӑлтан парӑс евӗр карӑнса тухакан ҫур уйӑхпа киленсе "ҫумма хушайӑттӑм ҫунат" тесе ӗмӗтленекен пуҫне "мӑн Атӑл хӗрринчи юманлӑх" хӳтӗлет. Поэтшӑн "чӑнкӑ сӑртлӑ Атӑл", "тӑрӑ Атӑл", "аслӑ Атӑл", "илемлӗ Атӑл", "ырӑ Атӑл", "ӗмӗрлӗх мӑн Атӑл", "ытарайми шыв-шур", "Атӑл-атте" (вырӑссем ӑна "Волга-матушка" теҫҫӗ), "пӑрланнӑ Атӑл", "Атӑлӑмҫӑм, Атӑл", "хӑй ҫыранне вырнаҫнӑ Атӑл", "хум-шавлӑ Атӑл", "тертлӗ Атӑл" — тыткӑна илен илем, чӑваш шӑпи. Унра ҫӗр-шыв сӗткенӗ, чӑваш ҫӗрӗн сиплӗхӗ "тапса тӑрать". "Ем-ешӗл Атӑл", чӑваш халӑхӗ, унӑн "ытарайми паха чӗвӗл-чӗвӗл чӗлхи", "шап-шур сухаллӑ ватӑ Шупашкар" яланах поэтӑн асӗнче, вӗсем "чӗрӗ, сывӑ". Кирек ӑҫта пулсан та, кирек хӑҫан та вӑл вӗсемпе пӗрле, унӑн вӗсенчен писме хал ҫук. Сӑвӑҫӑ хӑй те халӑхӑн асӗнче ӗмӗрлӗх юласса, хӑй тунӑ ӗҫӗ те вилмессе шанать ("Тен, манӑн сӑмах та мана чӗррӗн усрӗ", "Асаттесен юрри манра ҫӗнелӗ, манне ҫӗнетӗ, тен, хастар мӑнук"). Пурнӑҫ – пурнӑҫах ӗнтӗ, "ниҫта та ним те ҫук яланлӑх" ("Нимӗн те ӗмӗрлӗх мар – ҫуралчӗ, ӳсрӗ, ватӑлчӗ те вилчӗ"). "Этем ҫуралать пурӑнма, супсан, йӳтесен тин вилме", анчах кашни ҫыннӑн шӑпи, элчелӗ расна. Юлашки ҫулсенче Хусанкая кашни сӑвви "юлашки пекех" туйӑнать ("Ӑрӑмҫӑсем ӑрӑм тунипелен вӑрӑмлатаймӗҫ ман ӗмӗрӗме"). Шӑпа хӑйне "Атӑл хумӗ пек" силленӗ пулсан та ("Куҫа хупса аса илсессӗн, – мана мӗн чухлӗ тӳпкемен! "Аванччӗ пӗрех хут вилсессӗн!" – тени те пулнӑ пулӗ, тен"),

поэт “Атӑл хӗрринчех вилесшӗн”. Сӑвӑҫ вилӗм ҫине ҫапла пӑхать: “ҫын ҫӑлтӑрпа ҫуралать, ун куҫӗ хупӑнсан – пӗр ҫӑлтӑр сӳнетех”, “чун вырӑнне татах чун хушӑнать” (“Йӑлт пушатсах каймастпӑр тӗнчене”).

П.П.Хусанкай сӑввисемпе поэмисенче **Чулман Атӑл** (“Атӑлпа кайсан-кайсан, Атӑла хутшӑнакан Чулман Атӑл теекен юхӑм шыв курса иртен, Кама теҫҫӗ вырӑсла, юлчӗ сулахаялла”), **Нухрат Атӑл** (“Ӳркенмесӗр тӑвалла хӑпарсан ҫав шывпала, Нухрат Атӑл теекен Вятка – шыв тӗлне ҫитсен, удмуртсен ҫӗрне анан”), **Шур Атӑл** (вырӑсла – река Белая, приток Камы: “Шурӑ Атӑл лекиччен малалла ишсен-ишсен, пушкӑртсен ҫӗрне кӗрен”) юхан шывсемпе те паллаштарать.

**Атӑла** вырӑссем *Волга*, тутарсемпе пушкӑртсем *Итиль*, *Ителъ*, марисем *Юл* тесе калаҫҫӗ. Тӗпчевҫӗсем *Атӑл* сӑмахра “юхан шыв, шыв” пӗлтерӗшлӗ *-тӑл* гидроформант пуррине палӑртаҫҫӗ. Асӑннӑ элемент чӑваш чӗлхинче хӑй халлӗн ҫӳремест, ытти тӗрӗк тата монгол чӗлхисенче “юхан шыв”, “тинӗс”, “шыв ейӳ кайни”, “шыв илни” пӗлтерӗшсемпе халӗ те уйрӑм ҫӳрет.

П.Хусанкая Сӑр (Сура), Ҫавал (Цивиль), Пӑла (Була), Ҫарӑмсан (Черемшан), Кӑнна, Хасан, Писне (Бездна), Неман, Нева, Буг, Дон, Дунай, Днепр, Днестр, Терек, Кура, Аракс, Висла, Прут, Тибр, Тунджа, Ока, Нарва, Двина, Даугава юхан шывсем; Хура, Шурӑ, Азов, Балти, Каспи тинӗсӗсем; Атланти(ка), Лӑпкӑ океансем; Балхаш, Илмен, Сиваш, Женев(а) кӳллисем; Ропотама, Учук ҫырмисем; Кантӑр варӗ, Тамина шыв сикки тыткӑнланӑ. **Неман** (Литвара — Нямунас) < лит. *nemunas* “река”, **Нева** < фин. *Nevajoki* “болотистая река”, **Дон**, **Дунай**, **Днепр**, **Днестр** < скиф.-сармат. *дан/дон* “река” (тӑватӑ ячӗ те пӗр тымартан пулнӑ). **Терек** < балк. *черек* “бурная река” (кунта *т/ч* ылмашу пулнӑ). **Кура** < Кавказ ч. *кур* “вода, водохранилище”. **Висла** <ав. слав. *висла* “река”, “ручей”, “болото”, “весенние разливы”. **Прут** <ав. инд. *prthus* “брод”. **Ока** <фин. *joki* “река”, лит. *ака* “источник”, слав. *око* “глаз (открытое водное пространство)”. **Нарва** < фин. *Nevajoki* “болотистая река”. **Двина** < выр. *двина* “много”, “большое количество чего-нибудь”. **Даугава** < лат. *dauga* “много” + *-ava* шыв ячӗсем тӑвакан аффикс (латышсем Двина шывне Даугава теҫҫӗ). **Хура тинӗс** тӗрлӗ ятсемпе паллӑ: иран. *Ахшаена* “темное” < ав. грек. *Понтос Мелос* “черное

море" е *Аксейнос* "негостеприимное", грек. *Эвксейнос* (Понт Эвксинский) "гостеприимное море". Тухăçра хура тĕс çурçĕре пĕлтернĕ: Черное море "северное море". XV–XVI ĕмĕрсенче вăл Русское море ятпа çӳренĕ. **Каспи** < *каспи* этнонимран пулнă, çак ят Авалхи Грециренех паллă, Раççее I Петĕр патша вăхăтĕнче кĕнĕ, унччен *Хвалынское/Хвалисское* (паллă мар этнонимран пулнă) ятпа çӳренĕ. Тĕрлĕ тапхăрти расна халăх çак тинĕсе хăйне май ят панă, çавна пула 150 вариант пулса кайнă. **Атланти(ка)** < ав. грек. *Атлант/Атлас* мифонимран "титан, державший на своих плечах небесный свод". **Лăпкă океан** – Фернандо Магеллан 1520 çулта "Тихий океан" тесе ят панă, франци географĕ Ж.Н.Бюаш океансенчен чи пысăккине шута илсе "Великий океан" тенĕ, вырăссем 1917 çулччен "Восточный океан" тесе каланă. **Шурă тинĕс** < ав. вырăс. "белое", шурă тĕспе çыхăннă. **Азов** < тĕрĕк. *азак* "низкий" (Донăн анат юхăмĕнче вырнаçнăшăн), антика тапхăрĕнче Азов тинĕсне *Меотида* < грек. "озеро меотов" (çав тăрăхри меот халăх ячĕпе). **Балти** тинĕсĕ < лит. *baltas* е лат. *balts* "белый", çыранĕ шурă хăйăрлă пулнине кура; Раççейре ăна *Варяг тинĕсĕ* (варягсенчен) е Свейск/Свебск/Севвск тинĕсĕ (*свей* тесе шведсене каланипе) тенĕ. **Балхаш** кӳлли < каз. *балкаш/балхаш* "кочковатое болотистое место, топь". **Илмен** кӳлли < фин. *ilm* "воздух, погода" + *-ерь ~ järv, jervi* "озеро" = "озеро, делающее погоду", ав. фин. *илм* "дух погоды".

П.П.Хусанкай поэзийĕнче сăрт-ту ячĕсем те (оронимсем) тивĕçлĕ вырăн йышăннă. Поэтăн куçĕ умне чăнкă, çӳллĕ Казбек, юр тӳпеллĕ Альп тăвĕ, тĕлĕрекен Кара-Даг (ăна вăл *Хура ту* та тет), "икĕ паттăр тан тăрса ик курка çĕкленĕ евĕр" йĕкĕр Эльбрус, Балканăн чи çӳллĕ тӳпи Мусала, юрлă Рила сăрчĕ, Çурçĕр Осетири тăвăр хушăк Алагир, Атăл хĕрринчи Шупашкар сăрчĕ тухса тăраççĕ. Вĕсене курсан, вĕсен сывлăшĕпе сывласан "шухăш канмасть", "ĕмĕт сенкер", "ĕçĕм ту пек" тесе хавхаланать поэт. **Казбек** – груз. *Мкинварцвери* < *мкинвари* "ледник" + *цвери* "гора" = "ледниковая гора", осет. *Урсхох* < "белая гора", выр. *Казбек* < *Казбеги* (ял) < антропоним Казбек. **Альп** < кельт. *Альп* "гора, скала, возвышенность". **Эльбрус** < араб. *Албуруз* "выступ", "выступающий"; иран. *Альборс/Айтибарес* "высокая гора"; тĕрĕк. *Ялбуз* "ледяная грива", инд.-европ. *alb* "гора". Эльбрусăн вырăсла ячĕ *Шат-гора* < тĕрĕк. *чат/шат* "гора,

выступ горы, скала". **Балкан** < тур. *balkan* "высокие горы". **Кара-Даг** < тĕрĕк. *кара* "черный" + *даг* "гора". **Магнитту** вырăсла *гора Магнитная* ("из-за наличия магнитного железняка"). **Урал-ту**: 1) Уралтау <тĕрĕк. *арал* "остров" + *тау* "гора" = "островная гора"; 2) < манс. *ур* "гора", эвенк. *урэ* "гора" (*-л* – эвенк чĕлхинчи нумайлă хисеп аффиксĕ). Урал-ту тӳпесемпе пуян: Ежовка, Узянка, Атач, Ай-Дарла. Урал – ту çеç мар, Урал – вăл çырма та; васкавлă, хастар, кукăр-макăр çырма. Вăл "пушкăрт лаши пек", тĕпсĕр авăр. Урал – шыв та, Урал – çĕр-шыв та пур.

Памир, Алтай, Арарат, Давид-ту, Копет-Даг, Тянь-Шань тăвĕсем; Кунаси, Сахалин, Франц-Иосиф утравĕсем; Балкан, Апшерон çур утравĕсем; Фергана каналĕ; Каракум пуш хирĕ; Ропотама, Учук çырмисем те Хусанкая хăйсем патне чĕнеççĕ. **Памир**: 1) < иран. *Па-и-Михр* "подножие Митры" (*Митра* – авалхи ирансен хĕвел турри); 2) < *Памир* пайăр ятран. **Алтай** <тĕрĕк. *ал* "высокий" + *тай* "гора, хребет" = "высокие горы". Халĕ *алатау* сăмахран пулнă тени те пур: ала "пестрый" + тау "гора" = "пестрые горы". **Тянь-Шань** < кит. *Тенгритаг*: *тенгри* "небо" + *таг* "гора" = "небесные горы". **Арарат** – авалхи Урарту патшалăхĕпе унăн халăхĕнчен; халĕ эрменсем Арарата *Масис* "великая гора", турккăсем *Агрыдаг*: *агры* "кривой" + *даг* "гора" = "кривая гора" теççĕ. **Копет-Даг** < тĕрĕк. *коп* "много" + *даг* "гора" = "многогорье". **Сахалин** – Франци миссионерĕсем Амурăн анат юхăмне *Saghallen anga hata* тесе ят панă < маньчж. "течение горной реки". Пурăна киле виçĕ сăмахран пĕрремĕш сăмахĕ кăна çирĕпленсе юлнă. Вырăнти халăх *Крапто/Крафто*, Амур нивхĕсем *Тромиф*, вырăссем *Большой* тенĕ. **Апшерон** – хăй вăхăтĕнче çурутравра пурăннă афшар халăх ятĕнчен. **Фергана** <памир. *паргана* "межгорная равнинная котловина", литература форми – *фергана*. **Каракум** < тĕрĕк. *каракум* "неподвижный, закрепленный растительностью песок; земляной песок". **Учук** < *уй* "поле" + *чӳк* "моление" (тĕне кĕмен чăвашсен чӳк тунă вырăн ячĕпе).

Ятсем, ятсем... пĕр вĕçĕм ят, мĕн тери пуянлăх! Мĕн-мĕн ӳкерĕнмен-ши вĕсенче! Акă, турă ячĕсенче (теонимсенче) пур ырă-усал та сăнланнă: **Христос** – халăха çăлакан, çынсен çылăхне каçарттарассишĕн хăйĕн пурнăçне-юнне шеллемен ырă турă (Аслă Турă ывăлĕ); **Пихампар** – чĕрĕ чунсене

сыхлакан ырӑ турӑ “ангел-хранитель” (“Чӗр йытта ҫӗре чиксе турӗҫ чыс Пихампара”); **Пӳлӗх**, **Пӳлӗхҫӗ** – пурне те пӗлсе-курса тӑракан, ҫынсене телейлӗ е телейсӗр шӑпа валеҫсе паракан турӑ (“Киремет те хӳтлеймест, Пӳлӗхҫӗ те пӳлеймест”, “Пӳлӗх туррӑн пахчинче...”); **Вут Ама** (“Хӗрхенӳсӗр пулчӗ тимлӗ Вут Ама”) – вутӑ амӑшӗ “мать огня”; **Хӗртсурт** – кил-ҫурта сыхлакан ырӑ турӑ (“Хӑтлӑха упран Хӗртсурт”); **Киремет** – усал сывлӑш (“Хӑватлӑ-ҫке Киремет! Ӑшӗ-чикки хура юн. Пур хаярӗ-мурӗ ун Тарҫитӗрҫинче ҫӳрет”, “Урӑм-сурӑм Киремет”, “Ӗмӗтсӗр Киремет”, “Хӑватлӑ-ҫке Киремет”); **Вупӑр** – усал сывлӑш (“Уйӑх – Вупӑрӑн чури”); **Вутӑш** – “водяной”, “русалка” (“Шывра – Вутӑш хӗрӗсем”); **Ийе** – усал сывлӑш (“Йӗкӗлти кил Ийисем”); **Йӗрӗх** – “идол, истукан как символ злого духа” (“Уртӑш йывӑҫ ункипе ҫакрӗҫ Йӗрӗх пӗрнине”); **Кӑчӑрма** – “бука, пугало” (“Тӗп сакай Кӑчӑрмисем”); **Хӑямат** – “бес, леший” (“Хӑямат пек усал”); **Арҫури** (“Ҫула тухӑн – виртлесе аташтарӗ Арҫури”); **Хӑрпан** – чӑваш халӑхӗн турри (“Ни Киремет, ни Пӳлӗх, ни Хӑрпан мана хӑтараймарӗҫ ватлӑхран”); **Пирӗшти** – таса ырӑ сывлӑш (“Эй, аманнӑ Пирӗшти мӑнтарӑн”).

Чӑваш юмах-халап каласа юптарма ӑста пулнӑ. Юмахсенче “Хӗвелӗ те утса ҫӳрет ҫын пек”, “ураллӑ вӑл”, уйӑх тулать шуралса. Чӑваш тавракурӑмлӑхӗ юмах-халапсенчи сӑнарсен ячӗсенче (мифонимсенче) питӗ аван палӑрать. **Улӑп** – юмахри паттӑр, вӑл поэта хӑйӗн пек “ҫарпуҫ чӗри” пулма хистет (“Улӑп – паттӑр”, “Улӑп – асатте”, “йӑваш Улӑп вӑйӗ”, “Тин тухнӑ уйӑх тӳпере – касса пӑрахнӑ Улӑп чӗрни пек”). **Сарри-паттӑр** поэта “пуш пӗлӗт айӗпе малтисемпе пӗр тан утма” хистет (“Сарри паттӑр йӗнерленӗ лӑс ҫилхеллӗ урхамах”). **Хӗвелпи/Хӗвел хӗрӗ** “пиншер чӑваш Анюкӗн” сӑн-сӑпатӗнче (“Урӑм-сурӑм Киремет... Вӑрласа Хӗвел хӗрне Ҫак ҫӗре вӑл килнӗ, тет”). Мифонимсен паттӑрлӑхӗ ҫинчен калакан пысӑк пахалӑхлӑ, илемлӗ те ӑслӑ тупмалли юмахсемпе шӳтсене, ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшӗсене, юмах-халапсене пулас поэт шерпет пек сиплӗ шывлӑ Сиктӗрмере “автансем виҫҫӗмӗш хут авӑтичченнех” антӑхса итленӗ. Лашасем ҫинчен пыракан сӑмах-юмах вара уншӑн чӑн-чӑн уяв пулнӑ. Вӑл “парка хӳреллӗ”, “чӑнк хӑлхаллӑ”, “ҫӑмӑл ураллӑ”, “куҫӗ вут пек” шухӑ утсене мӗн виличченех асра тытнӑ.

“Кашни халăхăн юмахĕ
Чаплă хăй тĕррипеле.
Пур ун хăйĕн урхамахĕ,
Ĕмĕт учĕ, темелле...
Грузинсен çав ут – Мерани,
Казахсен çав ут – Тулпар...
Халăхне кура ун ячĕ...
Поэзире лаша – Пегас...
Ача-пăчан вăл – “Пукане”, –

тет те П.Хусанкай, чăвашла **Урхамах** (“Илле пичче Урхамаха... раснах авантарах пăхать”), **Çилçунат** (“Пирĕн халăх утлантарчĕ Çилçунат çине мана”) тата **Отелло** (“Кам калас мана çав ăйăр ма Отелло тенине?”) гиппонимсемпе паллаштарать.

Петр Петрович поэзийĕнче “лапсăркка хўреллĕ сарă йытă” **Кампур**, куçран пăхакан “чĕлхесĕр янавар” **Сарпай** кинонимсем те тĕл пулаççĕ.

“Мĕнле илемлĕ кашни утăм,
Мĕнле чун туйнă тĕнчене –
Йăлтах эп ўкересшĕн пултăм
Чĕрĕлекен чĕлхем çине”

тенине поэт питĕ çирĕп тытса пырать. Вăл Канаш – Шупашкар çулне; хăйне уйрăмах çывăх Вăта кас, Анат кас, Тури кас, Чечен кас, Хыçалти урам годонимсене; Румыни анисене, Вена ращисене; Çимĕк, Ниме, Сурхури, Рамазан, Çăварни, Уяв (Сиктĕрме таврашĕнчи) геортонимсене; КИМ, ТЭС, ГЭС, РКИ, ТАСС, ГАЗ... акронимсене; Мосстрой, Чăвгиз йышши аббревиатура-ятсене; “Боинг” самолет ятне; “Хосе Марти”, Гандер аэропортсене; “Апрелĕн çирĕммĕшĕ” ресторан ятне; “Амбасадор” (румынла), “Посол” (вырăсла), “Элчĕ” (чăвашла) хăна кил ячĕсене; “Ылтăн хăйăр” пляж ятне; “Кремль” пирус ятне; “Мокко” кофе ятне; Пантеон некронима; “Кĕнеке палати”, “Çыравçăсен çурчĕ”, “Советсен çурчĕ”, Кремль тата Андрей залĕ, Пелĕш (король çурчĕ), Пелешор (Пĕчĕк Пелĕш) кермен, Рейхстаг ойкодомонимсене хăйĕн сăвви-юррисене кĕртсе хăварать.

“Янравлă ятсене тавпа йăтса”, П.П.Хусанкай тĕрлĕ çĕр-шывсенчи произведенисен, хаçат-журналсен ячĕсемпе вулакансене кăсăклантарать: “Ленин субботникра” артионим; “Манифест” документоним; “Чĕнтĕрлĕ кĕпер”, “Оровело”,

“Асран кайми аки-сухи”, “Ман Кабарда”, “Тăри” (румынла “Чокарлиа”) юрă ячĕсем; “Чан” (“Колокол”), “Крокодил”, “Руде право”, “Дейли уоркер”, “Авангард”... гемеронимсем; “Нарспи”, “Кушар”, “Айтар”, “Пехил”, “Самана”, “Тигр тирлĕ паттăр ар”, “Сербиянка”, “Кубăпа Кубань”... библионимсем (Хусанкайăн 2 томлă “Суйласа илнисем” сăвă-юрăсемпе поэмăсен пуххинче кăна 285 библионим).

Хăйĕн библионимĕсене поэт “Ирхи”, “Кăнтăр кĕввисем”, “Хамăр ялсем”, “Тилли юррисем”, “Çулсем-йĕрсем”, “Савни”... ярăмсене вырнаçтарать. Поэтăн чылай юррисăввисенче – юрату: “Ĕнтĕ вăй-халăма, кăмăлăма юрра хурса пиллĕп халăха”, “Паян тата манăн сана, чăтăм халăх: “Ыйху тутлă пултăр”, – теес-ши вара?”, “Юрпа эрешленсе лараççĕ илемлĕ чăрăш лăссисем”, “Çулăм кăвак куçлă” савнă хĕрне поэт çĕр çинчи “чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеçпе”, “кăвик кăвакарчăнпа”, “ем-ешĕл курăкпа”, “сар чечекпе”, “тӳпери çут çăлтăрпа” танлаштарать. Çӳл тӳпери çут çăлтăрсем сăвăçа поэзи ытамне “куçа шартса” чĕнеççĕ: **Алтăр çăлтăр** (“Алтăр çăлтăр, каласамччĕ, мĕнле пулĕ ман шăпа?”, “Ак Алтăр çăлтăр та çавăрăнать, Атăлалла тăсать хăй аврине”, “Унпала [А.Николаев космонавтпа] пĕрле эп тытрăм Алтăр çăлтăр авринчен”), **Çич çăлтăр** (“Пӳртçи тĕлнех ак хыпрĕ Çич çăлтăр – ĕçсе ӳпĕнтерейнĕ алтăр пек”), **Хур кайăк Çулĕ** (“Ан тив, çаплах кун-çул та çутăлтăр, Хур кайăк Çулĕ пек ялтратăр тек”, “Сив çăлтăрсем çине пăхать вăл халĕ, Хур кайăк Çулĕ сассăр йыхăрать”). Астронимсенчен чи хакли – аслă Çĕр, Çĕр сăнĕ, ытарайми çут тĕнче: “Çурта витсеччĕ пĕлĕтпе, Хĕвел – аттеччĕ, Çĕр – анне”. Поэтшăн “пĕтĕм Çĕр – пĕр пылак хăпарту”. Вăл: “Çĕр чăмăрĕн пулĕ пĕр чун, пĕр чĕре”, “Пурăнасчĕ – Çĕр çинчен çăлтăрпа калаçиччен” тесе ĕмĕтленет. Çĕрпе “çăлтăр çутнă уяр тӳпе” хушшинче кĕпер хывăннишĕн хĕпĕртет (“Спутник Çĕр тавра... çăлтăр çулĕ уçса пачĕ çĕр те сакăр минутра. Хăтăлчех этем иккен йывăр Çĕр тытăмĕнчен”).

Чăваш çĕрне, тăван халăха ӳпкелеме сăлтав çук Хусанкайăн. Йĕри-таврари, тӳпери япаласемпе пулăмсене чăваш никама та пăхăнмасăр ят пама пултарнишĕн поэт çав тери савăнать, эпир те унпа пĕрле мăнаçланатпăр. Пайăр ятсене хăйĕн хайлавĕсенче сăнласа халăха килентернишĕн чăваш Улăпне пĕтĕм чун-чĕререн тав тăватпăр. Хусанкайăн

çак пархатарлă ĕçне килес чăваш поэчĕсем малалла тата ăнăçлăрах тăсасса шанса тăратпăр.

## Литература


1. *Андреев И.А.* Çын ячĕсем. Шупашкар, 1983. – 62 с.

2. *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки. Хусан – Шупашкар, I–XVII, 1928–1950.

3. Канăçсăр ман сассăм – самана сассиччĕ... (Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай 90 çул тултарнă май) /“Хыпар” кĕнеки, 21 №. Шупашкар, 1997. – 16 с.

4. *Магницкий В.К.* Чувашские языческие имена. Казань, 1905. – 101 с.

5. Манăçми Хусанкай: Асаилӳсем. Шупашкар, 1987. – 306 с.

6. *Мурзаев Э.М.* Словарь народных географических терминов. М., 1984. – 654 с.

7. *Никонов В.А.* Краткий топонимический словарь. М., 1966. – 510 с.

8. *Подольская Н.В.* Словарь русской ономастической терминологии. М., 1988. – 190 с.

9. Русская ономастика и ономастика России. Словарь. М., 1994. – 288 с.

10. *Саттаров Г.Ф.* Словарь татарских личных имен (на татарском языке). Казань, 1981. – 256 с.

11. Теория и методика ономастических исследований. М., 1986. – 256 с.

12. *Хусанкай П.П.* Аптраман тавраш. Шупашкар, 1957. – 312 с.

13. *Хусанкай П.П.* Савни. Шупашкар, 1963. – 280 с.

14. *Хусанкай П.П.* Хушка хумсем. Шупашкар, 1967. – 336 с.

15. *Хусанкай П.П.* Суйласа илнисем. I т. Шупашкар, 1968.– 606 с.

16. *Хусанкай П.П.* Суйласа илнисем. II т. Шупашкар, 1970.– 408 с.

17. *Хусанкай П.П.* Тăван çĕршыв. Шупашкар, 1972. – 64 с.

18. *Хусанкай П.П.* Эпир пулнă, пур, пулатпăр! Шупашкар, 1982. – 400 с.

19. *Хусанкай П.П.* Мехел. Шупашкар, 1987. – 384 с.

20. *Юрьев М.И., Романова З.В.* Писатели советской Чувашии. Биобиблиографический справочник. Чебоксары, 1988. – 349–353 с.

21. *Юрьев М.И.* Чăваш писателĕсем. Биобиблиографи справочникĕ. Шупашкар, 1968. – 321–326 с.

# ЛЕКСИКОГРАФИ ЫЙТӐВӖСЕМ

*Ю.Ф.Ефимов*

## ӐНЛАНТАРУ СЛОВАРӖНЧИ ТЕРМИНСЕМ

Кашни наци чӗлхин терминологийӗ хӑй йышне обществӑн социаллӑ пурнӑҫӗпе, кулленхи ӗҫӗ-хӗлӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑракан ятарлӑ ӑнлавсен ячӗсене пӗрлештерсе тӑрать. Чӑваш терминологине илес пулсан, кунта тӳрех ҫакӑн пек уйрӑмлӑхсене асӑрхама пулать. Чи малтанах хӑш-пӗр отрасльсен терминологийӗ (сӑмахран, микроэлектроника, информатика, кибернетика, фармакологи т.ыт.те) пирӗн чӗлхере япӑх аталаннине палӑртмалла. Ҫав вӑхӑтрах ял хуҫалӑхӗпе, ал ӑсталӑхӗпе ҫыхӑннӑ терминсен йышӗ самаях пысӑк. Паллӑ ӗнтӗ, кирек хӑш наци терминологийӗ те, тӗпрен илсен, икӗ майпа аталанса пырать: пӗрремӗшӗ – тӑван чӗлхе никӗсӗ ҫинче кулленхи хутшӑнура кирлӗ ҫӗнӗ терминсем пулса пынипе, иккӗмӗшӗ – ытти чӗлхесенчен сӑмахсем йышӑннипе. Хӑш-пӗр тӗпчевҫӗсем ҫирӗплетнӗ тӑрӑх, халӗ уйрӑм чӗлхене кӗрекен ҫӗнӗ сӑмахсен йышӗнче терминсем пуринчен ытла. Ку пирӗн чӗлхешӗн те ҫаплах. Ҫыннӑн професси ӗҫӗ-хӗлӗпе ҫыхӑннӑ лексика хатӗрӗсем ятарлӑ лексика шутне кӗреҫҫӗ. Унӑн йышӗ ахаль сӑмахсенчен темиҫе хут нумайрах. Юлашки ҫулсенче мӗнле-мӗнле кӑна ҫӗнӗ термина хаҫат-журнал страницисенче, радиопа телевидени передачисенче асӑрхамарӑмӑр пулӗ. Вӗсенчен чылайӑшӗ (бизнес, бартер, ваучер, плюрализм, приватизаци, популист т.ыт.те) кулленхи хутшӑнура тӑтӑшах усӑ куракан сӑмахсем пулса тӑчӗҫ. Апла пулсан, вӗсем литература чӗлхин составне кӗрсе вырнаҫма тивӗҫ?! Анчах ыйтӑва ҫапла ҫӑмӑллӑнах татса пама май килмест.

Юлашки ҫулсенче терминологи проблемисемпе ҫыхӑннӑ паллӑ ӗҫсем пичетленсе тухрӗҫ. Кунта чи малтан А.В.Суперанская, Н.В.Подольская, Н.В.Васильева ҫырса хатӗрленӗ “Общая терминология. Вопросы теории” монографие палӑртмалла. Ҫак авторсем “термин” тата “терминологи” сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене ансӑрлатса, пӗр пӗлтерӗшпе ҫеҫ пӑхма сӗнеҫҫӗ. Вӗсен шучӗпе, термин вӑл – пӗр-пӗр профессипе ҫыхӑннӑ пӗлӳ системинчи уйрӑм ӑнлава палӑртакан ятарлӑ сӑмах е

сӑмах майлашӑвӗ [1, 14]. Терминологи чӗлхери мӗнпур терминсен пуххи тата ӑна тӗпчекен пӗлӳлӗх отраслӗ пулнине палӑртса, асӑннӑ тӗпчевҫӗсем терминологи литература чӗлхи составӗн пӗр пайӗ текен концепцие хирӗҫлеҫҫӗ, терминологи лексикӑн хӑйне уйрӑм облаҫӗ пулнине ҫирӗплетеҫҫӗ [1, 17–18]. Ку шухӑш пирӗн чӗлхеҫӗсемшӗн, тӳрех калас пулать, ҫӗнӗ мар. Н.П.Петров профессор хӑйӗн пӗр ӗҫӗнче "терминологи хӑйне уйрӑм область, вӑл уйрӑм автономи правипе усӑ курать" тесе ҫырать. Ҫавӑнтах вӑл тата ҫак шухӑша уҫӑмлӑн палӑртать: "Пӗтӗмӗшле терминологи функцийӗ литература чӗлхи лексикин функцийӗпе танлашаймасть. Пӗрремӗшӗпе специалистсен ансӑр ушкӑнӗ кӑна усӑ курать пулсан, иккӗмӗшӗпе пӗтӗм халӑх, е наци, усӑ курать. Терминологи тата пӗтӗмӗшле литература чӗлхин лексики пӗр-пӗрне витӗм кӳрсе, пӗр-пӗрин чиккинчен каҫса, пӗр-пӗрне пуянлатса аталанаҫҫӗ, анчах хӑйсем хушшинчи тӗп уйрӑмлӑха ҫухатмаҫҫӗ. Терминологи, наука стилӗн хатӗрӗ пулса, ахаль лексикӑран стиль сӗмӗпе те уйрӑлса тӑрать" [2, 35–36].

Наука чӗлхи, "шухӑшлавпа пӗлӳ тата профессиллӗ хутшӑну хатӗрӗ пулнӑ май", хӑйӗн функцийӗпе, элеменчӗсен йышӗпе литература чӗлхин чиккинчен тухса тӑрать [3, 10]. Терминсен ытларах пайне специалистсем йышпа ятарласа йӗркелесе аталантараҫҫӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех чӗлхере хӑй тӗллӗн ҫуралнӑ терминсем те тӗл пулаҫҫӗ, чылай чухне вӗсене наука терминӗсен системине кӗртме юрать. Чӑваш чӗлхинче ку енӗпе ботаника, зоологи, анатоми терминологийӗсем палӑрса тӑраҫҫӗ. Ӳсентӑрансен, чӗрчунсен ячӗсем ытларахӑшӗ наука терминӗсем те, пӗтӗм халӑх чӗлхин яланхи элеменчӗсем те пулса тӑраҫҫӗ. Ҫакӑн сӑлтавӗ пуриншӗн те паллӑ: ҫут тӗнчене килнӗ халӑх ӳсентӑрансене, чӗрчунсене, ӳт-пӳ пайӗсене т.ыт.те ят памасӑр хӑварайма пултарайман. (Кунта эпир терминсене номенклатура единицисенчен уйӑрмастпӑр. – *Ю.Е.*).

Хальхи вӑхӑтра, пирӗн чӗлхе патшалӑх чӗлхи пулса тӑнӑ тапхӑрта, мӗнле-мӗнле отрасль терминологине чӑвашла йӗркелеме тӑрӑшмалла-ха? Пирӗн шутпа, кунта М.И.Скворцов профессор шухӑшӗпе килӗшмелле, вӑл пурӗ ултӑ ушкӑн палӑртать: 1) обществăпа политика терминологийӗ; 2) пӗтӗмӗшле техника терминологийӗ; 3) ялхуҫалӑх термино-логийӗ; 4) вӗренӳ ӗҫӗпе ҫыхӑннӑ терминологи; 5) физкульту-рӑпа спорт, культура терминологийӗсем; 6) медицинӑпа санитари

терминологийĕ [4, 16–20]. Асăннă сферăсенчи терминсене кирлĕ пек йĕркелени тăван чĕлхе аталанăвĕшĕн усăллă пулĕччĕ. Çак ĕçе вăраха ямасăр пурнăçласа пырасси – квалификациллĕ специалистсемпе словарь ĕçне лайăх пĕлекен чĕлхеçĕсен тивĕçĕ.

Ял хуçалăх институтĕнче ĕçлекен Н.Г.Игнатьев доцентпа паллă чĕлхеçĕ И.П.Павлов, пĕрле ĕçлесе, нумаях пулмасть "Чĕрчун ячĕсен чăваш-вырăс-латин словарьне" пичетлесе кăларчĕç. Словарь авторĕсем халиччен тухнă чăваш-вырăс, вырăс-чăваш словарĕсене, термин тата диалектологи словарĕсене, çутçанталăк çинчен çырнă кĕнекесемпе учебниксене пăхса тухса, чĕрчун ячĕсене пĕр çĕре пухнă, йĕркене кĕртнĕ. Тăван чĕлхере çук ятсене авторсем май килнĕ таран хăйсемех тунă [5, 3]. Çак паха опыта ытти терминологи словарĕсене хатĕрлеме тытăнакансен малашне шута илмелле.

Пĕтĕм чĕлхе словарĕпе терминологи словарĕсем хатĕрлеме тытăннă май лексикографсем умне чылай йывăр проблемăсем тухса тăраççĕ. Чи ответлисенчен пĕри вăл – словаре кĕртмелли сăмахсен йышне, урăхла каласан, унăн словникне палăртасси. Терминологи словарĕсене конкретлă отрасльсемпе çыхăннă пур термина та кĕртме тăрăшаççĕ, пĕтĕм чĕлхе словарĕсенче ку йĕрке урăхла. Словника хăш-хăш сăмаха суйласа илесси словаре кама валли тата мĕнле тĕллевпе хатĕрленинчен чылай килет [6, 36]. Паллă ĕнтĕ, сăмах йышне кура словарьсем тулли, вăтам е кĕске пулма пултараççĕ. Тулли словарьсемпе ытларах тĕпчевçĕсем, вĕрентӳ ĕçĕпе çыхăннă специалистсем, журналистсем т.ыт.те усă кураççĕ. Вăтам тата кĕске словарьсен тĕллевĕ вара – вулакана кулленхи пурнăçра тĕл пулакан сăмахсен пĕлтерĕшне тата ытти енĕсене уçса парасси. С.И.Ожегов хатĕрленĕ "Вырăс чĕлхи словарĕ" [7] шăпах çавăн йышши словарьсен шутне кĕрет. Халлĕхе чăваш чĕлхин кун пек пĕр чĕлхеллĕ ăнлантару словарĕ çук-ха. Çак словаре хатĕрлеме тытăннă май ун валли терминсем суйласа илесси кăткăс та ответлă ĕç пулса тăрать.

Словарь калăпăшĕ пысăк мар, унта хăш-хăш сăмаха реестра кĕртесси тĕрлĕ факторсемпе çыхăннă. Терминсене филологи словарĕсене кĕртнĕ чухне çак критерисене шута илме тăрăшаççĕ: 1) терминăн общество пурнăçĕнчи вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ; 2) терминпа илемлĕ текстсенче тата хаçат-журнал

чĕлхинче мĕн тери усă курни; 3) термин семантика тата сăмах пулăвĕ тĕлĕшĕнчен пурте усă куракан сăмахсемпе çывăх пулни.

Словарь словникне хатĕрленĕ чухне, паллах, ытти критерисене те шута илме тивет. Терминăн чăваш чĕлхинчи актуалăхне, кирлĕлĕхне тĕпе хуни вырăнлă. Наукăпа техника, профессипе производство сферисемпе çыхăннă терминсен йышĕ çав тери пысăк. Сăмахран, акă, хими терминологийĕнче темиçе миллион лексика единици пуррине палăртаççĕ. Хими элеменчĕсен периодика системинче кăна çĕр ытла ят. Вĕсене пурне те словаре кĕртни кирлĕ те мар, мĕншĕн тесен вĕсенчен нумайăшĕ халăх хушшинче çӳремен ятарлă терминсем, вĕсем уйрăм специалистсене çеç паллă. Кулленхи пурнăçра, вăтам шкул учебникĕсемпе пособийĕсенче, популярлă наука литературинче, пичетре анлă тĕл пулакан хими элеменчĕсен ячĕсем вара ăнлантару словарĕнче пулмалла. Епле-ха *ылтăн*, *кĕмĕл*, *пăхăр*, *тимĕр*, *натри*, *кали*, *хром*, *титан* т.ыт. ятсене словника кĕртмесĕр хăварăн? 1982 çулта тухнă "Чăвашла-вырăсла словарьте" вĕсенчен хăшне-пĕрне куçарнипе пĕрлех кĕскен ăнлантарса та панă: *натри* (çемçе шурă металл), *титан* (шурă хытă çăмăл металл), *хром* (ялтăркка хытă металл) т.ыт.те.

Ăнлантару словарĕн калăпăшне кура унăн словникне литература чĕлхине кĕрсе вырнаçнă, пурте анлă усă куракан терминсем кĕме тивĕç. Халлĕхе хăш-хăш термина словника кĕртесси пирки словарь тăвакансем хушшинче пĕршухăшлăх çук-ха. Ку таранччен пичетленсе тухнă икĕ чĕлхе тата терминологи словарĕсенче терминсене суйласа илес тĕлĕшпе пĕр пĕтĕм система çукки куçкĕрет палăрать. Малтанах çирĕплетнĕ словниксемсĕр ĕçлесе, чĕлхеçĕ-лексикографсем "пĕр-пĕр термина кĕртес е кĕртес мар ыйтăва хăйсем пĕлнĕ пек татса параççĕ, кунта вара кашнин пĕлӳлĕхĕ, чухлавĕ, туртăмĕ малти вырăна тухса тăрать" [8, 141]. Чи лайăх инструкцире те сăмахсене суйласа илессин пур ыйтăвĕсене татса пама май килмест. Терминологи лексики, сăмах йышĕн пĕр вĕçĕм улшăнса тăракан пайĕ пулнă май, кĕске вăхăтрах çĕнĕрен çĕнĕ лексика единицисемпе пуянланса пырать. Ку е вăл термина словаре кĕртесси, каларăмăр ĕнтĕ, унăн кулленхи хутшăнури вырăнĕпе тата пĕлтерĕшĕпе çыхăннă. Тата çакна палăртса хăвармалла, терминăн тĕп функцийĕ – ятпалана, пулăма ят парасси, çавăнпа та терминсен йышĕнче ятпала ячĕсем пуринчен ытла.

Питех те ответлă тепĕр ĕç вăл – терминсене словарьте ăнлантарса парасси. Ку таранччен пичетленсе тухнă словарьсенче те ятарлă лексика единицисене май килнĕ таран ăнлантарса пама тăрăшни сисĕнет. Уйрăмах ку енĕпе Н.И.Ашмарин словарьне палăртмалла. Çак словарĕн кашни томĕнчех ăнлантару элеменчĕсем йышлă. Сăмахран, акă, *сăмсалăх* лексемăна илер. Унăн пĕлтерĕшне автор çак тĕслĕхсемпе уçса парать: *Сăмсалăх тесе йĕвенĕн сăмса çинчен пусса тăракан чĕнне калаççĕ. Сăмсалăх – сĕтĕрекен, чарăнман лашасене чармалли сăмса çинчен çыхнă кантра* [Ашм., XI, 255–256]. Каярахпа çак туртăм икĕ чĕлхе словарĕсенче анлă çул тупать. Тĕслĕхшĕн Мускавра 1951 çулта тухнă вырăсла-чăвашла словарьтен хăш-пĕр статьясене илсе кăтартар:

ГОБОЙ *муз.* гобой (вĕрсе каламалли музыка инструменчĕ);

ГОРЧИЧНИК *мед.* горчичник (горчица чустине сĕрсе тунă эмеллемелли пластырь);

ГОТОВАЛЬНЯ *тех.* готовальня (техника ĕçĕнче чертежсем тума кирлĕ, пĕр футляра пухса пĕрлештернĕ хатĕрсем).

Икĕ чĕлхеллĕ словарьсенче ăнлантару элеменчĕсемпе усă курни сăмах кĕнекисен пахалăхне самаях ӳстерет. Ку енĕпе 1982 çулта тухнă "Чăвашла-вырăсла словарь" уйрăмах палăрса тăрать. Вăл вырăс чĕлхинчен тата ун урлă йышăннă терминсен чылай пысăк пайне чăвашла ăнлантарса панă. Тĕслĕхрен:

БАЗИС базис (обществăри надстройкăн никĕсĕ пулса тăракан производство хутшăнăвĕсем);

БАЛАНС *бухг.*, *эк.* баланс (тупăшпа тăкак шайлашăвĕ);

БАЛЛАСТ **1.** балласт (карап е аэростат çине тытăнкăшăн хуракан груз); **2.** *ж.-д.* балласт (шпалсем айне саракан хăйăр е чул);

БАНДАЖ **1.** *мед.* бандаж (сурана хускатасран сыхлакан çыхă); **2.** *тех.* бандаж (машина пайĕсем çийĕнесрен тăхăнтаракан шина) т.ыт.те.

Словарьти сăмах пĕлтерĕшне уçса пани çинчен калаçнă е çырнă чух ытларах "определени", "дефиници" терминсемпе усă кураççĕ. Наука литературинче ку терминсене синонимсем теме пăхаççĕ. Дефиници вăл – пĕр-пĕр ăнлавăн кĕске определенийĕ [9, 158]. Определени вара дефиницирен анлăрах, вăл–

ăнлавăн содержанине уçса пани, урăхла каласан, ăнлав палăртакан япаласемпе пулăмсен пĕлтерĕшлĕ паллисене кăтартни. Дефиницци пĕр ушкăна кĕрекен япаласене пĕр-пĕринчен уйăрса илме пулăшакан паллăсене çеç шута илет. Ăнлантару словарĕнче термин пулакан сăмаха ахаль вулакана (специалиста мар. – *Ю.Е.*) ăнлантарса памалла, çавăнпа та кунта пĕр дефиницци кăна çителĕксĕр, унсăр пуçне япалан ытти паллăрах енĕсене (хуçалăхри вырăнĕ, пахалăхĕ, хăш сферăра усă курни т.ыт.те) кăтартса пани кирлĕ.

Сăмахрах, АММИАК термина "азотпа водород пĕрлешĕвĕ" тесе çеç дефиницци пани çителĕксĕр, вăл хаяр шăршăллă тĕссĕр газ пулнине тата унпа ăçта-ăçта усă курнине кăтартса пама юрать. ПĂЛАН сăмаха чĕрчунсен ячĕсен словарĕнче "йĕкĕр чĕрнеллĕ, мăйракаллă, кавлекен чĕрчун" тесе ăнлантарнă. Пирĕн шутпа, пăлан мăйракин паллă енне кăтартмаллах: шăпах "туратлă мăйракаллă" пулнипе вăл ытти йĕкĕр чĕрнеллĕ, кавлекен выльăхсенчен уйрăлса тăрать. Дефиницци словарь определенийĕн пайĕ, унăн никĕсĕ пулса тăрать, çавăнпа пĕрлех терминологи лексикин ăнлантарăвĕнче ялан тенĕ пекех япали хăй кăтартса паракан хушма информаци кирлĕ.

Термин пĕлтерĕшне уçса панă чух çав сăмахпа палăртакан ăнлавăн чи кирлĕ паллисене кĕскен те уçăмлăн кăтартса памалла. Наукăпа техника терминĕсен дефиницине йĕркеленĕ чухне И.Н.Волкова тĕпчевçĕ хăйĕн "Стандартизация научно-технической терминологии" ĕçĕнче çак требованисене шута илме сĕнет:

1) дефиницци хăй ăнлантаракан ăнлавпа адекватлă, килĕшӳллĕ пулни;

2) дефиницире ăнлав хăйевĕрлĕхне уçса пама кирлĕ сведенисемпе çырлахни;

3) çав сведенисем ăнлава уçса пама çителĕклĕ пулни;

4) дефиницци хирĕçӳллĕ пулмалла мар, логика хирĕçӳлĕхĕ шухăша пăсма пултарать;

5) дефиницире пĕрремĕш ăнлав иккĕмĕшне, иккĕмĕшĕ пĕрремĕшне ăнлантарни пулмалла мар;

6) дефиницци чĕлхе нормисемпе килĕшсе тăни;

7) дефиницци кĕске те уçăмлă, ăнланма меллĕ пулни;

8) дефиницци – позитивлă определени пама май пур çĕрте – негативлă формăра пулманни т.ыт.те [10, 41–45].

Ҫак требованисене шута илни термина килӗшӳллӗ ӑнлантарса пама май парать. Ҫапах та определени (дефиници) пахалӑхӗ чи малтан хальхи наука пӗлӗвӗн шайӗпе килӗшсе тӑнинче тата халӑха ӑнланмалла пулнинче. Наука отрасльне кура дефиницисем тӗрлӗрен пулаҫҫӗ. Акӑ, **шыв** сӑмаха химиксем пӗр тӗрлӗ ("водородпа кислород пӗрлешӗвӗ"), физиксем тепӗр тӗрлӗ ("ноль градусра шӑнса ларакан, ҫӗр градусра вӗреме кӗрекен шӗвек") определени параҫҫӗ. Ӑнлантару словарӗнче вара шывӑн тӗс пахалӑхне кӑтартса пама тивет: ШЫВ 1. Водородпа кислород пӗрлешӗвӗпе пулнӑ витӗр курӑнакан тӗссӗр шӗвек. БАССЕЙН сӑмах пирки те ҫавнах каламалла. Халлӗхе ку терминӑн виҫӗ пӗлтерӗш: 1. Шыв тытма тунӑ вырӑн; 2. *геогр.* юханшывӑн мӗнпур юххисем таврашӗнчи ҫӗр лаптӑкӗ; 3. *геол.* ҫӗр айӗнчи пуянлӑхсем выртакан вырӑн. Термин та, ахаль сӑмах пекех, нумай пӗлтерӗшлӗ пулма пултарать. Пӗр пӗлтерӗшлӗ термина та темиҫе определени пама май пур, вӗсенчен хӑшне суйласа илесси вара словарь тӗллевӗпе ҫыхӑннӑ.

Пуриншӗн те паллӑ ансат ӑнлава уҫса пама тӗплӗ определени йӗркелени кирлех мар. Ку енӗпе 1982 ҫулта тухнӑ чӑвашла-вырӑсла словаре палӑртмалла, унта урӑх чӗлхерен кӗнӗ терминсене скобкӑра кӗскен те уҫӑмлӑн ӑнлантарса панӑ. Акӑ, ҫав словарьтен илнӗ хӑш-пӗр тӗслӗх:

БИБЛИОГРАФИ библиография (пӗр-пӗр ыйтупа ҫырнӑ кӗнекесен списокӗ)...

БИОЛОГИ биология (чӗрӗ ҫутҫанталӑка тӗпчесе вӗренекен наука)...

БРИЛЛИАНТ бриллиант (якатса илемлетнӗ алмаз)...

Терминологи словарӗсенче лексикографсем терминсене ытларах наука определенийӗ параҫҫӗ, ӑнлантару словарӗнче ку йӗрке урӑхларах: унта тӗплӗ те анлӑ ӑнлантару кирлех мар, ятарлӑ сӑмахсене пурте ӑнланакан сӑмахсемпе ылмаштарма тӑрӑшмалла, май килсен хушма информаци те пама юрать. Тӗслӗхрен, акӑ, С.И.Ожегов словарӗнче **шельф** термина ҫапла определени панӑ: *Океанӑн ҫыран ҫывӑхӗнчи ӑшӑх зони* (тарӑнӑшӗпе 200 метра ҫити). Пӗрре пӑхсан, ку определени ҫителӗклӗ пек, ҫапах та ӑнлавӑн паллӑрах енӗсене кӑтартманни, вулакансен асӗнче вӑл мӗн енӗпе тытӑнса юлма пултарнине шута илменни курӑнать. Асра юлакан определени ҫапларах пулмалла: ШЕЛЬФ. Тинӗссемпе океансен тип ҫӗр

çывăхĕнчи ăшăх зони; ку зонăра çĕр айĕнчи усăллă япаласене кăлараççĕ, ытларах нефтьпе газ.

Определенисем мĕн тери анлă пулассине палăртнă чухне тĕрлĕ факторсене шута илме тивет. Тĕслĕхрен, çĕнĕ терминсене, обществăпа политика, философи, истори темисемпе çыхăннă сăмахсене тĕплĕ ăнлантарса пани кирлĕ, мĕншĕн тесен вулакан пур чухне те пурнăç улшăнăвĕсене пĕр тикĕс сăнаса пымасть, чылай пулăма словарьсемпе справочниксем тăрăх ăнланма тăрăшать. Юлашки ик-виçĕ çул хушшинче **губернатор** сăмах хаçат-журнал чĕлхинче, радиопа телевидени передачисенче тăтăшах тĕл пулма пуçларĕ. Ăна ăнлантарнă чухне паянхи условисене шута илмелле. Губернатор – "патша Раççейĕнче – кĕпĕрне пуçлăхĕ; халĕ хăш-пĕр çĕршывсенче – штат, область пуçлăхĕ" тени çителĕксĕр [11, 36], паянхи лару-тăрăва шута илсе, "хальхи Раççейре край, область пуçлăхĕ" тенине хушмалла.

Дефиници формулировки чылай чухне фраза шайĕпе йĕркеленет. Тĕслĕхрен, обществăпа политика сăмахĕсен словарĕнченех [11, 41] пĕр-ик статья илсе тишкерер:

ДИАЛЕКТИКА диалектика (çутçанталăкпа обществăри куçăмпа аталанăвăн пĕтĕмĕшле законĕсем çинчен калакан вĕрентӳ);

ДИКТАТОР диктатор (влаçа вăйпа пусахласа тытса тăракан çын);

ДИКТАТУРА диктатура (вăй çинче тытăнса тăракан нимпе пӳлмен власть).

Илнĕ тĕслĕхсенче скобкăра панă определенисене предложени шайĕпе пăхмаççĕ, вĕсем – сăмах пĕлтерĕшне çирĕплетекен фразăсем (сăмах майлашăвĕн уйрăм тĕсĕсем). Час-часах определени составĕнче глаголăн сăпатлă форми те пулма пултарать, уншăн вăл предикативлă единицăсен шутне кĕмест, номинативлисен йышĕнчех юлать, мĕншĕн тесен глагол форми кунта предикацие палăртмасть (урăхла каласан, вăл вăхăт пĕлтерĕшĕсĕр).

Тĕпчевçĕсен пысăк ушкăнĕ терминсем пĕр сăмахран та, сăмах майлашăвĕнчен те йĕркеленме пултарнине çирĕплетет [12, 9]. Ăнлава тĕрĕс палăртма чылай чухне икĕ е ытларах сăмахран тăракан термин тума тивет. Вĕсене (хутлă терминсене), паллах, словника кĕртме çук, халăх хушшинче анлă çӳреккеннисене вара пысăкрах ушкăна (йăха т.ыт.те) ят

паракан сăмах статйине кĕртме юрать. Çакăнтах хутлă терминăн пĕлтерĕшне уçса памалла, тĕслĕхсемпе çирĕплетмелле. **Уçă сасă, хупă сасă** терминсене “сасă” сăмахăн статйине кĕртме пулать, тĕсл.: САСĂ. Сывлăш е ытти япаласем чĕтренсе куçнипе пулакан, хăлхана илтĕнекен пулăм. **Уçă сасă** – шавсăр, сывлăш çулне пуплев органĕсем чăрмав кӳмесĕр пулакан сасă... **Хупă сасă**. Шав хутшăннипе, сывлăш çулне пуплев органĕсем чăрмав кӳнипе пулакан сасă...

Терминра ытлашши пĕр сăмах та пулмалла мар, кĕске термина асра тытма та, унпа калаçу тата çыру чĕлхинче усă курма та çăмăл. Пирĕн чĕлхешĕн ют, ăнланма йывăр, вăрăм терминсем пуплеве çӳпĕлесси патне илсе пыраççĕ. Терминсем тăвасси хăй тĕллĕн пулса пымалли ĕç мар, ăна пĕр вĕçĕм тĕрĕслесе, йĕркелесе тăмалла...

Халăх хушшинче анлă сарăлнă терминсен пĕлтерĕшĕсене ăнлантарса пама, пĕр шутласан, йывăрах мар пек туйăнать. Анчах ку ултавлă туйăм. Хамăр шухăша çирĕплетес тĕллевпе хăш-пĕр чĕрчун тата ӳсентăран ячĕсене еплерех определени пама май пуррине пăхса тухăпăр. Этем кашни чĕрчун, ӳсентăран çине хăй куçĕпе пăхать, вĕсен паха енĕсемпе сиенлĕхĕсене тупса палăртать. Уншăн чĕрчунсем икĕ пысăк ушкăна пайланаççĕ: килте усраканнисем тата ирĕкре пурăнаканнисем. Ӳсентăрансене те вăл икке пайлать: культурăллисем тата ирĕклĕн ӳсеканнисем, çумкурăксем. Биологи науки ӳсентăрансемпе чĕрчунсен кун пек ушкăнĕсем пуррине палăртмасть, уншăн çак ушкăнсем пачах ют. Ăнлантару словарĕн статйине йĕркеленĕ чух биологи сведенийĕсене те, пурнăç практикин кăтартăвĕсене те шута илме тивет пулĕ. Тĕсл.:

СУРĂХ. Çăмĕпе тирĕшĕн тата какайĕшĕн килте усракан, йĕкĕр чĕрнеллĕ, сĕтпе ӳстерекен, кавлекен чĕрчун.

ХУРХУХ. Кăткăс чечеклисен йышне кĕрекен, çӳллĕ, чикекен çумкурăк.

Çак сăмахсен определенийĕсем тӳрех виçĕ енлĕх палăртаççĕ: пĕрре – ку сăмахсем халăх усă куракан лексика системине кĕреççĕ, тепре – биологи наукин терминĕсем шутланаççĕ, çав вăхăтрах агрономипе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç терминологийĕн йышĕнче пулаççĕ. Тата пĕр-ик тĕслĕх илсе пăхар: ВĂКĂР. Хăвăл майракаллисен йышне кĕрекен, йĕкĕр чĕрнеллĕ, сĕтпе ӳстерекенсен йăхĕнчи майракаллă

шултра килти выльăх. ШАШКĂ. Сăсарсен йăхне кĕрекен, хăмăр йăлтăркка паха тирлĕ тискер чĕрчун. ШУРУТ. Пучахлисен йышне кĕрекен нумай çул ÿсекен курăк.

Ăнлантару словарĕн калăпăшĕ пысăках маррине шута илсе, определенисене кĕскерех йĕркелеме те май пур.

С.И.Ожегов хатĕрленĕ "Вырăс чĕлхи словарĕнче" чылай сăмаха определени панă чух йыш (семейство), ушкăн (отряд), ячĕсене асăнманни курăнать. Тĕслĕхрен: КУНИЦА. Небольшой хищный зверек с ценным светло-коричневым пушистым мехом, а также мех его. КЛЮКВА. Стелющееся болотное растение с красными кислыми ягодами, а также ягоды его. Çапах та çак принципа автор вĕçне çитиех тытса пырайман. Акă еплерех "ăмăрткайăк" определенийĕ: ОРЕЛ 1. Хищная сильная птица из семейства ястребиных, с изогнутым клювом, живущая в гористых или степных местностях.

Определени тытăмне **ушкăн, йыш, йăх** ячĕсене кĕртни вĕсене хăйсене те кирлĕ çĕрте ăнлантарса памаллине пĕлтерет, мĕншĕн тесен определенире словарьте çук сăмахсем пулмалла мар. Çитменнине вулакана, сăмахран, сăсар йышшисен ушкăнне **ăтăр, кăш, пурăш, пăсара** тата ыт. кĕнине пĕлме интереслĕ.

Асăннă ушкăнсенчи сăмахсене пурте усă куракан лексикăран уйăрса пăхма май та çук, вĕсен ăнлантарăвĕнче биологи уйрăмлăхĕсене палăртасси мар, ытларах кулленхи пурнăçра хире-хирĕçле ушкăнсене пайлани (килти чĕрчунсем – тискер чĕрчунсем, усăллă ÿсентăрансем – çумкурăксем т.ыт.те), пĕр-пĕр вырăнта пурăнни (çитĕнни) мала тухса тăрать. Тĕслĕхрен: БЕГЕМОТ. Африкăн тăварлă мар юханшывĕсемпе кÿллисем çывăхĕнчи вăрмансенче пурăнакан, хулăн тирлĕ, йĕкĕр чĕрнеллĕ çав тери мăнă чĕрчун. УТМĂЛТУРАТ. Кăткăс чечеклисен йышне кĕрекен тĕксĕм кăвак çеçкеллĕ уй чечекĕ.

Темиçе классификаци палли çинче никĕсленĕ определени чĕрчун тата ÿсентăран ячĕсене çывхартуллă характеристика çеç парать, тĕрĕссипе ăна определени мар, мĕн çинчен те пулин çырса пани (описани) темелле. Картотека тĕслĕхĕсем çакна пурнăçлама май килнĕ таран пулăшса пыраççĕ. Акă, тĕслĕхрен, **сăнчас** лексемăна илер (тем пирки-çке сăмаха 1982 çулта тухнă чăвашла-вырăсла словарь реестрне те кĕртмен). Институт картотекинче пухăннă тĕслĕхсемпе

паллашсан, çак кайăк ячĕн пĕлтерĕшне тавçарма пулать: *Ушкăн сăнчас, йывăç хуппи хушшине пытаннă хурт-кăпшанка шыраса, чăрăш вулли тăрăх çӳлтен аялалла, аялтан çӳлелле татти-сыпписĕр чупса кĕшĕлтетет* (М.Кипек); *Вăрăм сăмсаллă вăл* (сăнчас. – *Ю.Е.*), *йăпăр-йăпăр, йăпăр-йăпăр чупать* (Хв. Уяр); *Пилешпе юнашар ӳсекен акаци тĕмĕ çинче сăнчас кайăк, вăраххăн пийĕклетсе, хурлăхлă сасă парать* (С.Элкер). Кунта тĕслĕхсем тата илме пулатчĕ, пуррисем те çак кайăкăн чи паллăрах енĕсене уçса параççĕ: вăл йывăç вулли тăрăх йăпăр-йăпăр чупать иккен, хурт-кăпшанкă шырать, пийĕк-пийĕк сасă кăларать т.ыт.те. Словарь хатĕрлекен çак паллăсене шута илсе тата ытти справочниксемпе, пособисемпе усă курса ку лексемăна, сăмахран, çапла ăнлантарнă пулĕччĕ: САНЧАС. Йывăç вулли тăрăх (хурт-кăпшанкă шыраса) хăвăрт куçса çӳрекен çерçи пысăкăш тĕксĕм хăмăр кайăк.

Кашни тематика ушкăнĕнчи сăмахсен ăнлантарăвĕ хăйне евĕрлĕ. Маларах асăннăччĕ ĕнтĕ, икĕ чĕлхе (чăвашла-вырăсла, вырăсла-чăвашла) словарĕсенче 20 яхăн хими элеменчĕн ячĕсем тĕл пулаççĕ. Ăнлантару словарĕнче те вĕсенчен чылайăшĕ хăйне валли вырăн тупать. Кулленхи хутшăнура тăтăш тĕл пулаканнисен пĕлтерĕшне уçса панă чухне чи малтан вĕсем металл е газ пулнине ăнланса илмелле. Мĕншĕн тесен газ ятне палăртакан сăмахсем (кислород, азот, хлор т.ыт.те) ытларах пĕр пĕлтерĕшлĕ, металл ячĕсем хушшинче вара пĕр пĕлтерĕшлисем те (алюмини, тăхлан, ртуть т.ыт.те), нумай пĕлтерĕшлисем те (тимĕр, ылтăн, кĕмĕл, пăхăр т.ыт.те) пур. Ăнлантару формулировкисем пĕр евĕрлĕ пулмалла. Вĕсенче çак паллăсене кăтартса пани кирлĕ: çемçе е хытă (металл пирки), йывăрăшĕ, тĕсĕ, ăшă яни (теплопроводность), хăй витĕр электричество яни, туптанни (металл пирки). Çавăнпа пĕрлех ăçта усă курнине, епле майпа пулнине кăтартни вырăнлă. Асăннă паллăсем пурте дефиницире пулмалла тесшĕн мар эпир, вĕсенчен чи актуаллăраххисем çеç ăнлантару составне кĕме тивĕçлĕ. Тĕслĕхрен: АЛЮМИНИ. Çемçе, çăмăл, туптанакан, кĕмĕл шурă тĕслĕ металл; хăй витĕр ăшă тата электричество лайăх ярать. РТУТЬ. Кĕмĕл шурă тĕслĕ йывăр, шĕвек металл. Газсене çапларах определени памалла: КИСЛОРОД. Сывлăш составне кĕрекен тĕссĕр, шăршăсăр газ; вăл сывлама тата çунăва (горение) йĕркелеме кирлĕ. АЗОТ. Тĕссĕр те

шăршăсăр газ, сывлама е çунма пулăшмасть; ÿсентăрансене апатлантарма усăллă.

Нумай пĕлтерĕшлĕ сăмахăн ытти пĕлтерĕшĕсем пĕрремĕшĕ çинче йĕркеленсе аталанаççĕ, вĕсем термин пахалăхĕсене çухатаççĕ. **Ылтăн, кĕмĕл, пăхăр** сăмахсен иккĕмĕш пĕлтерĕшĕ – "çав металран тунă издели (япала)". Çакна картотекăри иллюстраци тĕслĕхĕсем те лайăх çирĕплетеççĕ: *Хусанта унта ылтăн пуçтаракансем нумай, шăл тухтăрĕсем патша пуçлă ылтăн укçана юратсах илеççĕ* (П.Осипов); *Пирĕн çамрăк ĕмĕр иртсе пырать – ылтăн-кĕмĕл парса чарас çук* (Юрăран); *Ванюк кăвак шăлавар кĕсйинчен кĕмĕлпе пăхăр кăларса сĕтел çине хучĕ те аллинчи картне хăвăрт-хăвăрт арпаштарчĕ* (Илпек М.); *Хирĕçмен, авалхи укçана Иккĕмĕш Микула патша чухнехи пăхăрпа улăштарнă* (П.Осипов) т.ыт.те.

Пĕр ушкăна кĕрекен терминсене (сăмахран, метала палăртман сăмахсене) пĕр типлă, пĕр модельпе ăнлантарса пама тăрăшмалла, çав вăхăтрах сăмах пĕлтерĕшĕ вырăнне япалине хăйне çырса кăтартни пулмалла мар. Терминсен ăнлантарăвĕнче энциклопедилĕх енне ытлашши сулăнни словарь статйин калăпăшне ÿстерет кăна. Паллă ёнтĕ, энциклопедире чăнлăхри япаласене, пулăмсене туллин, пур енлĕн çырса пама тимлеççĕ, ăнлантару словарĕшĕн сăмах пĕлтерĕшĕ малти вырăнта. Тĕслĕхрен, "космонавт" сăмахăн энциклопедири тата ăнлантару словарĕнчи статйисене илсе пăхар: КОСМОНАВТ (астронавт) – человек, испытывающий и эксплуатирующий космическую технику в космическом полете. Подготовка космонавтов в СССР началась в 1960, в США в 1959. Первый космонавт – Ю.А.Гагарин (1961), первый космонавт, вступивший на Луну, – Н.Армстронг (1969) [Сов. энцикл. словарь. 2-е изд. 1982. С. 636]. КОСМОНАВТ. Тот, кто совершает полеты в космическое пространство [Малый толков. словарь русского языка. М., 1990. С. 215].

Ку тĕслĕхсенче пĕр професси ятне тĕрлĕ енчен ăнлантарнă. Уйрăм профессие палăртакан терминсене определени панă чух *йăх (несĕл)* тата *тĕс (вид)* паллисемпе анлăн усă курни вырăнлă. Йăх (несĕл) паллине кунта *рабочи*, *работник*, *ăста*, *специалист*, *çын* сăмахсем палăртаççĕ. Тĕс (вид) палли ĕç уйрăмлăхне, ĕç предметне, ĕç хатĕрне тата ыттине кăтартать. Производство сферинче ĕçлекенсен професси ятне

ăнлантарма “рабочи” сăмахпа усă курни вырăнлă. Тĕсл.: АППАРАТЧИК. 1. Пĕр е темиçе аппарата сăнаса тăракан рабочи; ШЛИФОВАЛЬЩИК. Шлифовка (якатса тикĕслени) тăвакан рабочи. Ял хуçалăхĕнче, производство сферипе çыхăнман вырăнсенче ĕçлекенсен ячĕсене определени панă чух “работник” сăмахпа усă курма пулать, тĕсл.: ПЕЧАТНИК. Полиграфи промышленноçĕн, пичет ĕçĕн работникĕ; КОНДУКТОР. Транспортра пассажирсене пăхакан работник т.ыт.те. “Ăста” сăмахпа вак производство сферинче ĕçлекенсене определени панă чухне усă курма меллĕ: КĂМАКАÇĂ. Кăмака хуракан тата юсакан ăста; ПИЧКЕÇĔ. Катка-пичке ăсти т.ыт.те. Наукăпа техникăра ĕçлекенсен професси ячĕсене определени панă чух “специалист” сăмахпа ытларах усă курмалла, тĕсл.: ФОЛЬКЛОРИСТ. Фольклор пухса тĕпчекен специалист; БЕТОНЩИК. Бетон ĕçĕпе çыхăннă рабочи, специалист. Маларах асăннă сăмахсене несĕл палли вырăнне усă курма май килмесен, “çын” сăмахпа е ĕçе палăртакан сăмахăн хальхи причасти формипе усă курма юрать, тĕсл.: БУКИНИСТ. Кивĕ кĕнекесемпе сутă тăвакан çын; БРАКОВЩИК. Продукци пахалăхне тĕрĕслекен т.ыт.те. Пĕр тема ушкăнне кĕрекен терминсене пĕр типлă определени пани ăнлантару словарĕн пахалăхне самаях ÿстерет. Кунта словарь хатĕрлекенсем пĕр шухăшлă пулмалла. Акă мĕн çырать çакăн пирки А.П.Евгеньева тĕпчевçĕ: “Мы разрабатываем однотипные определения не только для слов, обозначающих растения, животных, птиц и рыб и т.д., но также и для слов, обозначающих приборы, механизмы, предметы, посуду, одежду, обувь, мебель и т.п. Целый ряд тематических групп получит однотипные определения. Это чрезвычайно облегчает восприятие материала и помогает тому, кто обращается к словарю” [13, 20].

Ăнлантару словарĕнче терминсене лексикографи характеристики пама кĕскетнĕ асăрхаттарусем е отрасль паллисем чылай пулăшаççĕ. Вĕсем словарьпе усă куракана тимлĕхне, шухăшне кирлĕ еннелле сулăнтараççĕ, термин ăнлантарăвне, дефиницине тĕрĕсрех тăваççĕ. Терминологи словарĕсенче отрасль паллисем çукпа пĕрех, вĕсем ятарлă словарьте кирлех те мар. Ăнлантару словарĕнче çак паллăсен информаци парас пахалăхне тивĕçлипех хаклама тивет. Енчен те дефиницире термин хăш отрасль сăмахĕ

пулнине кăтартнă пулсан, асăрхаттару палли ытлашши, ăна определени умне лартма кирлĕ мар. Тĕслĕхрен: ХЛОР. Хими элеменчĕ, техникăра тата санитарире усă куракан пăчăх газ. ВИРУС. Микробсенчен те пĕчĕкрех. чирлеттерекен чĕрчунсем т.ыт.те. Сăмах хăш сфера, хăш отрасль терминĕ пулнине кăтартакан паллăсем (анат., биол., бот., геол., лингв., физ., хим. т.ыт.те) ку е вăл лексика единици чăн-чăнах термин пулнине çирĕплетеççĕ. Сăмах темиçе отрасль терминĕ пек çӳрет пулсан, ăна “ятар.” (ятарлă термин) тесе палăртмалла.

Ăнлантару словарьне хатĕрлес ĕç пуçламăш тапхăрта кăна-ха. Чĕлхеçĕсемшĕн кунта татса паман ыйту сахал мар, çапах та ку таранччен пухăннă опыт çак ĕçре пулăшу парасса шанма пулать. Пичетленсе тухнă икĕ чĕлхе тата терминологи словарĕсенче ăнлантару элеменчĕсем, кирлĕ шайри дефиницисем пайтах. Вĕсемпе май кирлĕ таран усă курмаллах. Юлашки çулсенче тухнă терминологи словарĕсен пахалăхне ытлашши тиркеме çук.

Йышăннă терминсен семантикине уçăмлăрах кăтартса пама, определенисĕр пуçне, иллюстраци тĕслĕхĕсем пулăшмалла. Анчах та картотекăра хăш-пĕр терминсемпе тĕслĕхсем пулмасан та пултараççĕ. Кун пек чух лексикографăн тĕрлĕ пособисемпе, справочниксемпе, вĕренӳ кĕнекисемпе ĕçлеме тивет. Шкул программине тата паянхи çыннăн культура шайне шута илсен, ăнлантару словарĕнче, сăмахран, литературоведени лексикин çак единицисем пулмаллах: автобиографи, анекдот, баллада, водевиль, гимн, дифирамб, драма, идилли, интермеди, комеди, лирика, мадригал, мелодрама, мемуар, миф, новелла, ода, очерк, памфлет, пароди, пасквиль, пастораль, повесть, поэма, роман, романс, сага, сатира, скетч, сонет, сценари, трагеди, трагикомеди, утопи, фарс, фельетон, хроника, экспромт, элеги, эпиграмма, эпитафи, эпос, юмореска. Çак терминсем валли иллюстраци тĕслĕхĕсене картотекăсăр пуçне вăтам тата аслă шкул учебникĕсемпе хрестоматийĕсенче, ытти кĕнекесенче шырамалла. Çирĕпленнĕ терминологи майлашăвĕсем те ятарлă лексика единицисен пĕлтерĕшне уçăмлатма пулăшаççĕ.

Ăнлантару словарĕнче терминсем тĕлĕшпе пĕр пĕтĕм система йĕркелеме тăрăшмалла. Словарь пахалăхĕ – сăмахсем мĕн тери йышлă пулнинче çеç мар, вĕсен пĕлтерĕшне кирлĕ шайра уçса панинче те. Çакна шута илсе

ĕçлесен тин ку чухнехи лексикографи требованийĕсене тивĕçтерекен словарь хатĕрлесе кăларма май пулĕ.

## Литература

1. *Суперанская А.В., Подольская Н.В., Васильева Н.В.* Общая терминология: Вопросы теории. М., 1989. С. 14–18.

2. *Петров Н.П.* Терминологин литература чĕлхин системинчи вырăнĕпе аталанăвĕ //Чăваш терминологийĕн ыйтăвĕсем /ЧНТИ тĕпчев ĕçĕсем. 88 кăларăм. Шупашкар, 1979, 35–36 с.

3. *Даниленко В.П.* Русская терминология: Опыт лингвистического описания. М., 1977. С. 10.

4. *Скворцов М.И.* Чăваш чĕлхин пурнăçри вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ тата терминологи ĕçĕн задачисем //Чăваш терминологийĕн ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1979. 16–20 с.

5. *Игнатьев Н.Г., Павлов И.П.* Чĕрчун ячĕсен чăваш-вырăс-латин словарĕ. Шупашкар, 1993. 3 с.

6. *Филин Ф.П.* Заметки по лексикологии и лексикографии //Лексикографический сборник. Вып. I. М., 1957. С. 36.

7. *Ожегов С.И.* Словарь русского языка /Под редакцией Н.Ю.Шведовой. 22-е изд. М., 1990.

8. *Скворцов М.И., Лазова М.В.* Икĕ чĕлхеллĕ словарьсенче терминсен пĕлтерĕшне ăнлантармалли мелсем //Чăваш терминологийĕн ыйтăвĕсем. Шупашкар, 1979. 141 с.

9. Словарь иностранных слов. 12-е изд. М., 1985. С. 158.

10. *Волкова И.Н.* Стандартизация научно-технической терминологии. М., 1984. С. 41–45.

11. *Скворцов М.И.* Русско-чувашский общественно-политический словарь. Изд. 2-е, переработанное, дополненное. Чебоксары, 1986.

12. *Бархударов С.Г.* О значении и задачах научных исследований в области терминологии //Лингвистические проблемы научно-технической терминологии. М., 1970. С. 9.

13. *Евгеньева А.П.* Определения в толковых словарях //Проблема толкования слов в филологических словарях. Рига, 1963. С. 20.

*Ю.Ф.Ефимов*

# ĂНЛАНТАРУ СЛОВАРĔНЧИ ПУЛĂШУ СĂМАХĔСЕМ

Кирек епле чĕлхере те пулăшу пĕлтерĕшлĕ сăмахсем, хăй пĕлтерĕшлисемпе танлаштарсан, йышлах мар, анчах вĕсемпе чĕрĕ пуплевре, тĕрлĕ текстсенче усă курассин тăтăшлăхĕ пысăк, вĕсем çине-çинех тĕл пулаççĕ. Тĕпчевçĕсем чăваш чĕлхинче çакăн пек пулăшу пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем пуррине палăртаççĕ: хыççăмах, союз, татăк. Вĕсем те хисепĕ тĕлĕшĕнчен пĕр пек мар: пĕрисем йышлăрах, теприсем сахалрах.

Пулăшу сăмахĕсен тĕп грамматика палли вăл – хăйне уйрăм предложени членĕ пулма пултарайманни. Вĕсем патне нимĕнле ыйту та лартма çук. Шăпах çав енĕпе вĕсем хăй пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсенчен уйрăлса тăраççĕ. Чылай пулăшу сăмахĕ хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсенчен пулса кайнине шута илсен, çак шанчăклă критери чи кирли пулса тăрать. Паллах, тĕп критерисĕр пуçне кашни пулăшу пуплев пайĕн хăйне тивĕçлĕ хаклав виçисем пур. Пулăшу сăмахĕсем, лексика тата синтаксис единицисене çыхăнтарса, тĕрлĕ пĕлтерĕш уйрăмлăхĕсене палăртма пулăшаççĕ.

Тытăмне кура пулăшу сăмахĕсене чи малтан икĕ пысăк ушкăна уйăрма пулать: пĕрремĕшлисем тата иккĕмĕшлисем (вĕсен йышĕ пирĕн чĕлхере сахал). Иккĕмĕшлисем икĕ е ытларах элементран йĕркеленнĕ, пĕрремĕшлисем тытăмĕпе ансат. Вĕсенчен хăшĕсене ку е вăл словаре вырнаçтарасси паянхи лексикографишĕн çивĕч, татса паман ыйту. Ку таранччен çутă кун курнă словарьсенче те вăл енĕпе пĕрпеклĕх çукки палăрать. Акă, сăмахран, 1961 çулта тухнă "Чăвашла-вырăсла словарьте" **ма** сăмахăн словарь статйинче "ма" татăк пулнине те, "ма тесессĕн (тесен)" союз йĕркеленине те асăнман. 1982 çулта тухнă словарьте çак кăлтăка юсанă. Кун йышши тĕслĕхсем татах илсе кăтартма пулать. Ĕçĕ кунта çитменлĕхсене шыранинче мар, пĕр типлă пулăшу сăмахĕсен ушкăнĕсене палăртса, хăшĕсене реестра кĕртмеллине, хăшĕсене пĕрремĕшле сăмах статйинче пăхмаллине кăтартса памалла. Халлĕхе ку ыйтăва пур енчен те татса панă теме

çук-ха. Чăваш чĕлхинче пулăшу сăмахĕсен пуплеври вырăнĕ пирки çырнă ĕçсем те сахал [1, 35–38; 2, 1964].

Пулăшу сăмахĕсен ушкăнĕсене, Ж.Гузеев çирĕплетнĕ тăрăх, тĕрĕк чĕлхисенче тупса палăртнă, япăх мар çырса кăтартнă [3, 91]. Çав вăхăтрах тĕпчевçĕ чылай тĕрĕк чĕлхинче уйрăмах хыççăмахсен хушăмлă семантикине кирлĕ таран тишкерсе палăртманнине асăнать [3, 106]. Чăваш чĕлхинче те хыççăмах ыйтăвне тĕплĕн çутатса парайман-ха [4, 152; 5, 353–357].

Уйрăм лексика единици пулакан пулăшу сăмахĕсене пурне те тенĕ пекех куçару, ăнлантару словарĕсен словникĕсене кĕртеççĕ пулсан, иккĕмĕшлисене вара пур чухне те уйрăм словарь статйи йĕркелесе ăнлантарса памаççĕ. 1982 çулта тухнă “Чăвашла-вырăсла словарьте” иккĕмĕшле пулăшу сăмахĕсем хăйсене уйрăм вырăн тупайман, май килнĕ таран вĕсене тĕп (пуçламăш) лексика единицин словарь статйинче кăтартса панă: **мĕншĕн** (*мĕншĕн тесен*), **ма** (*ма тесессĕн*), **эхер** (*эхер те мехер*) т.ыт.те. Иккĕмĕшле пулăшу сăмахĕсем чĕлхере йышлах маррине асăннăччĕ ĕнтĕ.

Ăнлантару словарĕн словникĕнче пулмалли çара грамматика пĕлтерĕшлĕ пулăшу сăмахĕсен ушкăнĕсене (хыççăмах, союз, татăк) тишкерсе тухар-ха.

ХЫÇÇĂМАХ. Тĕрлĕ ят сăмахсем е ят сăмахсемпе глагол формисем хушшинчи тĕрлĕрен пĕлтерĕшлĕ синтаксис çыхăнăвĕсене (вырăн, вăхăт, сăлтав, танлаштару, виçе т.ыт.те) тăвакан пулăшу сăмахĕсене хыççăмахсем теме пулать [3, 103]. Хыççăмахсем, падеж аффиксĕсене çывăх тăнă пирки, ытларах япала ячĕсемпе местоименисене ытти хăй пĕлтерĕшлĕ сăмахсемпе çыхăнтарма пулăшаççĕ: *хула тăрăх çӳре*, *мана валли туян*, *сан пирки калаç*, *вăрман витĕр тух* т.ыт.те. Вĕсем яланах хăйпе çыхăнакан тулли пĕлтерĕшлĕ сăмах хыçĕнче тăраççĕ.

Хыççăмахсем уйрăм лексика единицисене çеç мар, хутлă предложенин пăхăнуллă пайне тĕп пайĕпе çыхăнтарма пулăшаççĕ: *Пăрушĕ çинĕ чух ĕни пăр та çулать* (Ват. сăм.). *Сывлăмлă йĕтĕн чечекĕ çине хĕвел çути ӳкнĕ пекех, Муза куçĕсем илемлĕн йăлкăшма пуçларĕç* (А.Арт.). *Пӳрт ишĕлсе аннă хыççăн вĕсем çын патĕнче хĕл каçрĕç* (А.Ĕçхĕл). *Йытă, хуçи хăйне пĕрле чĕнменнине пула, пĕчĕк пăлтăр алăкĕ патĕнчех тăрса юлчĕ* (Илпек М.).

Тата çакна палăртмалла, хыççăмахсем яланах хăйпе çыхăнакан сăмахăн пĕр-пĕр падеж форми хыççăн тăраççĕ [6, 318]. Ку енĕпе вĕсене виçĕ пысăк ушкăна уйăрма май пур: 1) тĕп падеж форми хыççăн тăракан хыççăмахсем (**валли, витĕр, евĕр, каçа, каçипе, май, пек, пирки, çинчен, тавра, таран, тăрăх, тери, урлă, хута, яхăн**); 2) пару падеж форми хыççăн тăракан хыççăмахсем (**кура, пула, çити (çитиччен), хирĕç**); 3) туху падеж форми хыççăн тăракан хыççăмахсем (**пуçне, пуçласа, вара, урăх**). Ăнлантару словарĕнче ку е вăл хыççăмах хăш падеж форми хыççăн тăнине палăртни нимех те памасть, тĕпре унта вăл мĕнле пĕлтерĕшлĕ синтаксис çыхăнăвĕ йĕркелени пулмалла. Хыççăмахсем çакăн пек паллăрах пĕлтерĕшлĕ синтаксис çыхăнăвĕсем тăваççĕ:

1) вырăн çыхăнăвне кăтартаканнисем: **витĕр, май, çити (çитиччен), тавра, тăрăх, урлă, хирĕç**. Тĕсл.: *Çĕмĕрт çеçки çурăлать, Вăрман витĕр курăнать* (Юрăран). *Ялĕ тавра емешĕл вăрман* (Хв. Уяр). *Иван Мускавран пуçласа Берлина çити çапăçнă* (А.Арт.). *Ялти хĕсĕк пурнăç чăваш çыннине те, кутамкка çактарса, аслă Раççей тăрăх кăларса янă* (В.Ахун);

2) вăхăт çыхăнăвне палăртаканнисем: **вара, валли, каçа, хирĕç, хута**. Тĕсл.: *Иртнĕ çулла канмалли куна хирĕç эпĕ Атăл леш енне пулла кайса килме шутларăм* (В.Сатай). *Ир валли туса пĕтересех пулать ку ĕçе* (В.Алент). *Çĕр хута ăçта тухса каятăн тата? Атте çу каçах чирлесе выртрĕ;*

3) виçе çыхăнăвне кăтартаканнисем: **таран, тери, çити, яхăн**. Тĕсл.: *Акă эпир... чĕркуççи таран çĕкленнĕ кĕрхи тырă пуссине тухрăмăр* (Г.Ефимов). *Хуçалăх гектартан вăтăр центнера яхăн кĕрхи тулă пуçтарса илнĕ;*

4) пирке çыхăнăвне палăртаканнисем: **кура, пирки, пула**. Тĕсл.: *Пупсем пиркиех çав инкеке куратпăр* (И.Мучи). *Гриша тимленине кура Йăван ывăлĕсене чăнахах та вĕрентме тăрăшать* (С.Элкер). *Çумăра пула ниепле те хулана çитеймерĕмĕр;*

5) шухăш е калаçу объекчĕн çыхăнăвне кăтартаканнисем: **пирки, çинчен, тăрăх**. Тĕсл.: *Леонтий Кирилч пирки уйрăм калаçса пăхас пулать* (А.Арт.). *Колхоз председателĕ чи малтан хуçалăх ĕçĕсем çинчен каласа кăтартрĕ* (В.Алент.). *Тĕп доклад тăрăх тухса калаçакансем чылай пулчĕç;*

6) танлаштару çыхăнăвне кăтартаканнисем: **пек, евĕр**. Тĕсл.: *Мамăк пек çăмăл юр пĕрчисем ÿкеççĕ* (Ан.Ем.). *Тинĕс варринче, тăлăх пăнчă евĕр, пĕр-пĕччен карап шăвать* (Ст.Апаш);

7) мел çыхăнăвне палăртаканнисем: **тăрăх, урлă**. Тĕсл.: *Ку вăхăтра вĕсем Гришăпа çыру тăрăх çыхăнса тăраççĕ* (С.Элкер). *Пĕрле фронтра пулнă юлташна эсĕ Мускавра пурăнакан пичче урлă тупма пултаратăн.*

Кунта эпир хыççăмахсен паллăрах пĕлтерĕшĕсене çеç асăнса тухрăмăр. Хăш-пĕр хыççăмахсем (тĕслĕхрен: **валли, пирки, тăрăх, хирĕç, урлă**) темиçе пĕлтерĕшлĕ пулнине асăрхама пулать [7, 296–314]. Ăнлантару словарĕн статйине çырса хатĕрленĕ чухне, паллах, çак уйрăмлăхсене шута илмелле. Тĕслĕх вырăнне кунта *тăрăх* хыççăмах статйине илсе кăтартар.

**ТĂРĂХ** II *хыççăмах.* **1.** Пĕр-пĕр çул-йĕр пĕлтерĕшне палăртма пулăшать. *Хăй [хуçа] вара хăçан та пулин суха касси тăрăх утса куринччĕ хуть* (Илпек М.). *Шывĕ колонкăран резина кĕпçе тăрăх каткасене юхать* (П.Ем.). **2.** Талккăш пĕлтерĕшне палăртма май парать. *Юлташĕсем тĕнче тăрăх саланчĕç* (А.Арт.). *Пĕр кĕтмен çĕртен ял тăрăх ырă мар сас-хура сарăлчĕ* ("Капкăн"). **3.** Вăхăт пĕлтерĕшне палăртма пулăшать. *Кун пек чух кун тăрăх ĕçлесен аванрах* (В.Пет.). *Хĕвел курăнман кунсенче кăнтăрла çитессипе каç пулассине хырăм выçнă тăрăх тĕшмĕртнĕ* (И.Мучи). **4.** Валеçӳ пĕлтерĕшне йĕркелеме пулăшать. *Колхозра халь ĕç кунĕ тăрăх тыр-пулне йĕркеллĕ валеçни-мĕнĕ çук* (В.Алент.). *Ĕçлекенсене кун тăрăх тӳлесен, нумаях тавар тăваймăн* (П.Ос.). **5.** Мĕн те пулин тĕпе хурса килĕшӳ тунине палăртать. *Капла, халал тăрăх, кашниех хăйĕн тӳпине илейрет-çке* (В.Пет.). *Хут тăрăх хакласçĕ тухтăр пултарулăхĕпе ĕçне* (Ю.Силэм). **6.** Мел çыхăнăвне кăтартма пулăшать. *Сасă тăрăх хăш кайăк хăшĕнпе тупăшнине чухлама пулать* (Д.Горд.). *Тавçăруллă хĕр-сержант Алексее вĕсен полкĕн почта номерĕ тăрăх шыраса тупнă* (В.Сатай). **7.** Хыпар-хăнар камран тухнине систерме пулăшать. *Çынсем каланă тăрăх, çав сăрт хĕрринче пĕр тĕмĕ пур* (Фольк.). *Кӳршĕ-аршă систернĕ тăрăх, çак критикăлла заметкăра асăннă çынсем кăткă пекех ĕçчен пулнă иккен* ("Капкăн"). **8.** Пурнăçра мĕн те пулин çирĕпленсе çитнине астутарма пулăшать. *Йĕрке тăрăх, вĕрентсе кăларнă хуçалăхра сахалтан та виçĕ çул ĕçлемелле вĕт-ха* ("Капкăн"). *"Йăла тăрăх, автана ялти чи ватă пуçлаканччĕ", – аса илтерчĕ пĕри* (В.Ухли). **9.** Кампа е мĕнпе пĕр евĕрлĕ пулнине палăртать. *Ашшĕ тăрăх ывăлĕсем* (Ват. сăм.).

Хыҫсӑмах улшӑнман пуплев пайӗ шутланать пулин те, хӑш-пӗр чухне падеж, палӑрту, вӑйлату аффиксӗсене йышӑнма пултарать. Кун пек чух словарь хатӗрлекен пуҫламӑш (малтанхи) формӑна ҫеҫ реестра кӗртме тивӗҫ. Яланах ҫак йӗркене тытса пыманни пирки В.И.Сергеев тӗпчевҫӗ тӗрӗсех ӳпкелешет: "Словарьсенче темӗншӗн ТАРАНЧЧЕН кӳлепене хӑйне уйрӑммӑн словарь статйи туса кӗртеҫҫӗ, пирӗн шутпа, **таранччен** сӑмахри **-ччен** сӑмах тӑвакан аффикс мар, вӑл **таран** хыҫсӑмахӑн тӑсӑмлӑх кӳлепи кӑна пулать, ҫавна май ӑна реестра кӗртме кирлӗ мар" [4, 156]. Кунта **ҫитиччен** форма пирки те ҫавнах каламалла.

Хыҫсӑмахсен йышӗ майӗпен ӳсесси тулли пӗлтерӗшлӗ сӑмах пӗр-пӗр формӑра ҫирӗпленсе, хытса ларса, пулӑшу пӗлтерӗшне йышӑннипе пулса пырать [6, 320].

Ытти тӗрӗк чӗлхисенчи пекех чӑваш чӗлхинче талккӑша кӑтартакан ят сӑмахсен пару, вырӑн, туху падеж формисем тулли пӗлтерӗшлӗ лексика единицисем хыҫҫӑн тӑнӑ чух синтаксис ҫыхӑнӑвне йӗркелеме пулӑшаҫҫӗ. Вӗсене тюркологире *пулӑшу ячӗсем* теме йышӑннӑ [7, 317–322; 8, 328; 9, 189; 10, 116]. Ҫак сӑмахсем (**ай, аяк, ӑш, варӑ, ен, кут, пат, пуҫ, ҫи, ҫум, ҫывӑх, тавраш, тӑрӑ, тӗл, ум, хушӑ, хыҫ, хӗр, тӑршшӗ, тул**) семантика тӗлӗшӗнчен те, форма енчен те япала ячӗсенчен уйрӑлса кайман, словарьте вӗсене ытти япала ячӗсем пекех пӑхмалла.

СОЮЗ. Сӑмахсене, сӑмах майлашӑвӗсене е предложенисене пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтаракан пулӑшу сӑмахне *союз* теҫҫӗ [11, 78]. Союзсем синтаксис единицисене – предложени членӗсене е хутлӑ предложенин пайӗсене – пӗр-пӗринпе ҫыхӑнтараҫҫӗ. Лексика пӗлтерӗшӗ ҫуккине пула союзсем (вӗсен грамматика пӗлтерӗшӗ кӑна) хӑйсем тӗллӗн ҫӳремеҫҫӗ, предложени членӗ пулмаҫҫӗ.

Ку таранччен пичетленсе тухнӑ грамматика учебникӗсенче функцине кура союзсене икӗ пысӑк ушкӑна уйӑрнӑ: сыпӑнуллӑ союзсем тата пӑхӑнуллӑ союзсем. Асӑннӑ ушкӑнсенчи союзсем пӗр-пӗринчен еплерех уйрӑлса тӑнине И.П.Павлов тӗпчевҫӗ ҫапла палӑртать: "Сыпӑнуллӑ союзсем предложенири пӗр йышши единицӑсене ҫыхӑнтараҫҫӗ, пӑхӑнуллӑ союзсем пӗр йышши мар единицӑсем хушшинчи ҫыхӑнӑва кӑтартаҫҫӗ. Ку тӗлӗшрен союзсем хыҫсӑмахсем евӗрлӗрех. Анчах союзсене хыҫсӑмахсемпе танлаштарсан,

çакӑн пек уйрӑмлӑх пуррине куратпӑр: хыççӑмахсем пӗр-пӗр уйрӑм формӑри сӑмахсене е предложенисене çеç ыттисемпе çыхӑнтараççӗ пулсан, союзсем предложени единицисене çыхӑнтарнӑ чухне вӗсен формисене пӑхмаççӗ" [6, 326].

Тытӑмӗ тӗлӗшӗнчен союзсене вӗренӳ пособийӗсен авторӗсем хутсӑррисем (**тата, анчах, çапах, эхер, хӑть**), хутлисем (**мӗншӗн тесен, пулсан та, эхер те мехер**), икӗ хут калаканнисем (**пӗр-пӗр, ни-ни**), мӑшӑрлисем (**пӗрре-тепре**) çине пайлаççӗ [5, 357; 6, 326]. Эпир маларах пулӑшу сӑмахӗсенче пӗрремӗшлисемпе иккӗмӗшлисене палӑртнӑччӗ. Пӗрремӗшле союзсем (вӗсенчен чылайӑшӗ хутсӑр) ӑнлантару словарӗнче уйрӑм словарь статйи йӗркелеççӗ пулсан, ыттисем вара (хутлисем, икӗ хут калаканнисем, мӑшӑрлисем) хӑйсене уйрӑм словарь единицисем пулаймаççӗ. Çакна вырӑс чӗлхи тӗпчевçисем те хӑйсен ӗçӗсенче çирӗплетеççӗ [12, 83–89]. В.И.Сергеев профессор союзсем пирки сӑмах хускатнӑ май асӑрхаттарса çапла çырать: "Морфологире **эхер те мехер, мӗншӗн тесен, ма тесен, пулсан та, пулин те** йышши сӑмах çаврӑнӑшӗсене пӗр сӑмах тесе пӑхма май çук. Çавӑнпа пӗрлех чӑваш чӗлхин морфологийӗнче **тесе, тесен** деепричастисене союз, татӑк тата хыççӑмах тени иккӗленӳллӗ" [4, 159].

Ӑнлантару словарӗнче союз хӑш-хӑш синтаксис единицисене çыхӑнтарнине, пӗлтерӗшне уçӑмлӑн палӑртмалла. Уйрӑм конструкцире çеç союз хӑйӗн семантикине палӑртать.

ТАТӐК. Сӑмаха е пӗтӗм предложение тӗрлӗ пӗлтерӗш сӗмӗ паракан улшӑнман пулӑшу сӑмахӗсене *татӑксем* теме йышӑннӑ. Татӑксем ытти пулӑшу сӑмахӗсем (хыççӑмахсем, союзсем) пек синтаксис çыхӑнӑвне палӑртма пултараймаççӗ, çапах та çак пуплев пайӗсене нимӗнле ыйтура тӑманни, предложени членӗ пулманни пӗрлештерсе тӑрать.

Татӑксене функцине кура ытларах чухне виçӗ ушкӑна пайлаççӗ: 1) пуплеве çӗнӗ пӗлтерӗш, эмоципе экспресси, модальлӗх сӗмӗсем кӳрекен татӑксем: **-та/-те, -тӑр/-тӗр, çеç, иккен, ара, -çке, -и, -мӗн, -ха** т.ыт.те; 2) сӑмах формине тӑвакан татӑксем: **ан, мар, çук, чи, чӑн**; 3) сӑмах тӑвакан татӑксем: **та-/те-, ни-, кирек** т.ыт.те. Чӑваш чӗлхинче татӑксен йышне тӗпӗ-йӗрӗпе тупса палӑртман-ха. Тепӗр чухне вӗсен йышне модальлӗх сӑмахӗсене [13, 129], наречисене кӗртсе яраççӗ.

Пире кунта пĕрремĕш ушкăнри татăксем интересленterме тивĕç, мĕншĕн тесен вĕсем пуплеве, пуплев сыпăкне çĕнĕ пĕлтерĕш сĕмĕ хушаççĕ е модальлĕхе, эмоципе экспрессие палăртаççĕ. Çĕнĕ пĕлтерĕш сĕмĕ тăвакан татăксен йышне уйăру татăкĕсем (**çеç**, **анчах**, **кăна**, **хуть**), кăтарту татăкĕсем (**авă, акă, вăн, веç, вăт**), тĕрĕслетӳ татăкĕсем (**шăп, лăп, -пĕр**) кĕреççĕ. Модальлĕхе кăтартакан татăксене çакăн пек пĕчĕкрех ушкăнсене пайлаççĕ: хирĕçлев татăкĕсем (**ан, мар, çук**), ыйту татăкĕсем (**-и, -ши, -а/-е, нивушлĕ**), иккĕленӳ татăкĕсем (**-тăр/-тĕр, тен, путех, та, те**), çирĕплетӳ татăкĕсем (**ия, -иç, иккен, -мĕн, ара**). Эмоципе экспресси татăкĕсем хушшинче вăйлату (**та/те, чи, чăн**) тата çемçетӳ (**-ха, -çке**) татăкĕсене палăртаççĕ. Çитменнине тата кашни татăк темиçе пĕлтерĕшлĕ пулма пултарать. Акă, сăмахран, **-и** татăках, ыйту пĕлтерĕшĕсĕр пуçне, тĕрлĕ контекстра шухăша хирĕçле ăнланма кирлине, пĕр ăнлава тепринпе танлаштарнине, ĕçе тума ирĕк панине, иккĕленĕве палăртма пултарать. Çакна шута илсе эпир ăнлантару словарĕнче татăксене çапларах определенисем пама сĕнесшĕн:

1. Çывăх пĕлтерĕшлĕ сăмах пулăшнипе ăнлантарни (çеç–кăна, анчах; пек–евĕр т.ыт.те).

2. Икĕ пайран йĕркеленнĕ ăнлантару: пĕрремĕш пайĕнче конкретлă сĕме (тĕлĕннине, кӳреннине, тарăхнине, килĕшнине, килĕшменнине, танлаштарнине, хирĕçленине, шаннине, шанманнине, йĕрĕннине т.ыт.те) палăртакан сăмах, иккĕмĕш пайĕнче вара *палăртать*, *кăтартса парать*, *вăйлатать*, *çирĕплетет* йышши пĕтĕмĕшле сăмахсем пулма пултараççĕ. Тĕсл.: **ÇЕÇ**. Уйăру пĕлтерĕшне палăртакан татăк. *Сирĕн чĕлхесене йытта çеç татса памалла* (Н.Тер.). *Анчах ку шăплăх самантлăха çеç пычĕ* (А.Арт.).

3. Ку е вăл татăкăн хăйне уйрăм семантикине уçса паракан ăнлантару. Тĕсл.: **-тăр/-тĕр** татăк. Иккĕленĕве, мĕн те пулин шанчăклах маррине систерет. *Петĕр пек тарăхни, ун пек хурлăх кураканни урăх никам та пулман-тăр* (В.Кр.-Асли). *Кунта çынсем мар, тискер кайăксем пурăннă-тăр?* (Г.Еф.).

Чăваш лексикинче пĕр вăхăтрах тулли пĕлтерĕшлĕ тата пулăшу пĕлтерĕшлĕ пуплев пайĕсем пулакан сăмахсем пур. Вĕсен шутне чи малтан **анчах, вара, тата** омоним сăмахсене кĕртмелле. Вĕсене словарьсенче тĕрлĕрен вырнаçтарни

палăрать. Акă, тĕслĕхрен, **тата** сăмах наречи те, татăк та, союз та пулнине чăвашла-вырăсла словарьте тĕрĕсех, кашни пуплев пайне уйрăм словарь статйине уйăрса çырса панă. Анчах омоним пулакан сăмахсенчен пĕрремĕш вырăна тулли пĕлтерĕшлине лартмалла, унтан – татăк пулакан омоним (ытларах чухне союз татăкран пулнине асра тытса), виççĕмĕш вырăнта – союз (ЧВС: **тата** I союз; **тата** II татăк; **тата** III наречи). Çав вăхăтрах **анчах**, **вара** сăмахсене уйăрса, омонимсем шайĕпе пăхман. Пĕр типлă сăмахсене словарьте ăрасна пăхни пулмалла мар.

Юлашкинчен вариантлă пулăшу сăмахĕсем пирки. Лексикографи практикинче вĕсене икĕ майлă ăнлантарса пани тĕл пулать: 1) вариантсене пĕр словарь статйине вырнаçтарса ăнлантарни; 2) алфавит йĕркипе кашни варианта хăй вырăнне лартса тĕп сăмах патне отсылка пани. Тĕсл.:

**ав** II татăк. *Авă* сăмаха пăхăр.

**авă (ав)** татăк. 1. Мĕн те пулсан кăшт аякра пулнине кăтартать. *Авă сăрт тӳпинче вут çунать.* 2. Мĕнĕн те пулин виçине, степенне палăртма пулăшать. *Авă мĕн чухлĕ кĕнеке!*

**Çити (çитиччен), таран (таранччен)** хыççăмахсене те çак йĕркепе ăнлантарса пама юрать. Тĕрĕссипе аффикслă вариантсем словарь единицисем пулаймаççĕ.

Пулăшу сăмахĕ хăш пуплев пайĕ пулнине тӳрех, реестрти сăмах хыççăн, е определени конструкцийĕнче палăртмалла.

## Литература


1. *Андреев И.А.* Чăваш синтаксисĕн ыйтăвĕсем. I пайĕ. Шупашкар, 1973. 35–38 с.

2. *Андреев Н.А.* Чăваш чĕлхин стилистики. II пайĕ. Морфологи. Шупашкар, 1964.

3. *Гузеев Ж.М.* Семантическая разработка слова в толковых словарях тюркских языков. Нальчик, 1985.

4. *Сергеев В.И.* Хальхи чăваш чĕлхи. Морфологи: Вĕренӳ кĕнеки. Шупашкар, 1992.

5. *Сергеев Л.П.*, *Котлеев В.И.* Чăваш чĕлхи. Шупашкар, 1993.

6. *Павлов И.П.* Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар, 1965.

7. *Павлов И.П.* Послелоги и служебные имена //Материалы по грамматике современного чувашского языка. Ч. I. Морфология. Чебоксары, 1957.

8. *Кононов А.Н.* Грамматика современного турецкого литературного языка. М.; Л., 1956.

9. *Коклянова А.А.* Послелоги и служебные имена в узбекском языке //Труды Института языкознания. Т. III. М., 1954.

10. *Левитская Л.С.* Историческая морфология чувашского языка. М., 1976.

11. *Майтинская К.Е.* Служебные слова в финно-угорских языках. М., 1982.

12. *Рогожникова Р.П.* Структурные типы служебных слов (предлоги, союзы) в толковых словарях русского языка //Современная русская лексикография. Л., 1975.

13. *Егоров С.П.* Семантическая классификация частиц в чувашском языке //Вопросы фонетики, грамматики и фразеологии чувашского языка. Чебоксары: ЧНИИ ЯЛИЭ, 1983.

14. *Щур М.Г.* Частицы в толковых словарях русского языка //Словарные категории. М., 1988. С. 83-87.

*А.П.Долгова*

## ÇЫННА ПАЛĂРТАКАН ЯПАЛА ЯЧĔСЕНЕ СЛОВАРЬТЕ ĂНЛАНТАРАССИ

1.0.0. Словарьте сăмаха ăнлантарасси унăн пĕлтерĕшне (нумай пĕлтерĕшлĕ пулсан – пĕлтерĕшĕсене) тепĕр сăмах е сăмах майлашăвĕ урлă уçса парасси е, урăхла каласан, сăмах определенине (е дефиницине) йĕркелесси çеç мар. Ăнлантару (вырăсла *толкование*) шутне сăмахăн фонетика сăн-сăпатне, грамматикăпа стиль уйрăмлăхĕсене тата унпа пуплевре мĕнле усă курмаллине кăтартасси те кĕрет[1].

Чăваш чĕлхин ăнлантару словарьне тăвассинче чи йывăрри, пирĕн шутпа, – сăмахăн пĕлтерĕшĕсене, пĕлтерĕш сĕмĕсене палăртасси тата вĕсене определени парасси. Ăнлантару словарĕн ытти тĕллевĕсене ик чĕлхеллĕ словарьсем те, ятарлă словарьсем те пурнăçлаççĕ. Çитменнине тата чăваш чĕлхе наукин грамматика, стилистика, диалектологи, фразеологи т.ыт. пайĕсем, семасиологипе танлаштарсан, вăйлăрах аталаннă. Çак сăлтавсене пула ку статьяра эпир суйласа илнĕ ушкăнти сăмахсен грамматика тата стиль уйрăмлăхĕсене мар, ытларах семантикине пăхса тухас терĕмĕр.

1.1.0. Лексикографи практикинче чĕлхене тĕпчесе çырса кăтартмалли ятарлă хатĕрсен пуххи – хăйне евĕр чĕлхе (метаязык) – йĕркеленнĕ. Çав хатĕрсен шутне грамматика е стиль уйрăмлăхĕсене палăртмалли формулировкăсем, йышăннă паллăсем, кĕскетӳсем кĕреççĕ. Унтах – сăмахăн пĕлтерĕшне определени пама ятарласа пухнă тата системăланă сăмахсем, сăмах майлашăвĕсем.

Пĕр грамматика категорине е пĕр тема ушкăнне кĕрекен сăмахсен ăнлантарăвĕсене пĕр йышши формулировкăсемпе йĕркелени словарьсен лайăх енĕ шутланать[2]. Паллах, ку принциппа ("пĕр евĕр определенисен принципĕпе") ăнлантару словарьне тăвас ĕçре усă курас тесен теори тĕпчевĕсем тата çав тĕпчевсем çинче никĕсленнĕ практика канашĕсем, сĕнӳсем пулмалла.

Словаре алфавит мелĕпе йĕркеленĕрен пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен çывăх сăмахсене пĕр-пĕринпе танлаштарса ĕçлеме майсем сахал. Анчах кун пек сăмахсен çыхăнăвĕсене палăртни пĕр евĕр ăнлантарусем йĕркелеме, определение

çителĕклĕ тума (тулли мар ăнлантарусенчен сыхланма) пулăшать, ытлашши вак-тĕвекрен (энциклопеди словарĕшĕн çеç выранлă самантсене кĕртсе ярасран) хăтарать, хăш-пĕр сăмахсемпе лексикăланнă çаврăмсене шута илме тата пĕлтерĕшсене, пĕлтерĕш сĕмĕсене тĕрĕс уйăрса палăртма меллĕ условисем туса парать[3].

Уйрăм лексемăна семантика тĕлĕшĕнчен çывăх сăмахсемпе пĕр ушкăнра пăхни çавăн пекех синонимсене, антонимсене уйăрма (чылай глагола, паллă ятне тата хăш-пĕр япала ятне ăнлантарнă чухне вĕсемпе усă курма тивет), сăмахăн пĕлтерĕшĕсен йĕркине курма май парать.

Лексемăн пĕр-пĕр пĕлтерĕшĕ (семеми) хăй те уйрăм пайсенчен йĕркеленет. Вырăс чĕлхеçисем вĕсене *компонент*, *элемент*, *признак*, *сема* теççĕ, чăвашла *паллă* е *палăрăм* теме пулать. Семемăн классификацилекен (сăмахсене классем çине пайлакан е, урăхла каласан, пĕр-пĕр класа пĕрлештерекен) тата дифференцилекен (тепĕр семемăран уйăракан) семăсем пулаççĕ. Дифференци семи калăпăшĕпе пĕчĕкрех класшăн (ушкăншăн) пĕрлештерекен паллă пулма пултарать[4]. Тĕслĕхрен:

*чĕрĕ чун* → этем → *çын* → *специалист* → **картограф**;

*чĕрĕ чун* → этем → *çын* ↗ *тăван* → ***пĕр*** **тăван** ↓ ↘ *хĕрарăм* → **йăмăк**.

Çак çыхăнусене палăртни чылай чухне сăмахсен определенийĕсене тĕрĕсрех тума май парать.

2.0.0. Пуплевре çын çинчен сăмах пырать пулсан, ăна тĕрлĕ мелпе палăртма пулать: япала ячĕпе, местоименипе, паллă ячĕпе тата глаголăн причасти формипе (япала ячĕн функцийĕнче усă курса), сăмах майлашăвĕпе. Статьяра вара ытларах япала ячĕсем пирки сăмах пырĕ.

Çын пĕлтерĕшлĕ сăмахсем çинчен çырнă ĕçсем вырăс лингвистикинче чылай. Ку сăмахсене пĕтĕмĕшле А.А.Уфимцева, А.С.Белоусова пăхса тухнă, классификациленĕ[5]. Т.П.Ломтев, А.М.Кузнецов, А.И.Моисеев – тăванлăх терминĕсене[6], А.И.Моисеев, Л.А.Шкатова – ĕç тăвакана палăртакан сăмахсене[7] тишкернĕ. Ку тĕпчевсем хушшинче семантика теорийĕн ыйтăвĕсене хускатнисем те, словарь тăвас ĕçри проблемăсем пирки çырнисем те пур.

2.1.0. Чăваш чĕлхи – сăмах пулăвĕнче перекетлекен чĕлхе. Пĕр-пĕр çĕнĕ ăнлава ят парас вырăнне ытларах чухне ăна ăнлантарса палăртма тăрăшать (анализ мелĕпе). Çакна пула, вырăс лексикипе танлаштарсан, чăваш чĕлхинче çынна пĕлтерекен сăмахсем сахалтарах. Н.И.Золотницкий, Л.П.Сергеев, Н.И.Егоров тăванлăх терминĕсене лексиколог, диалектолог, этимолог куçĕпе пăхса тĕпчениие[8], Н.П.Петров ĕç тăвакан çынна палăртакан сăмахсене грамматика тата семантика тĕлĕшĕнчен хакланине асăнса хăвармалла[9]. Юлашки вăхăтра ку темăпа В.И.Сергеев та ĕçленĕ. Хăйĕн пĕр ĕçĕнче вăл çынна пĕлтерекен сăмахсене пĕлтерĕшĕсен улшăну туртăмне кура, тепринче – пĕтĕмĕшле семантика теорине тĕпе хурса ушкăнланă[10]. Чăваш лексикин семантика классификацине пĕтĕмĕшле йĕркелесси – питĕ пысăк та кăткăс проблема. Хамăр ĕçре эпир ку проблемăн пĕр пайне – лексикографишĕн кирлĕрех ыйтусене хускатасшăн.

2.2.0. Чăваш чĕлхинче *кам?* ыйтăва тивĕçтерекен сăмахсен ушкăнĕнче чи анлă пĕлтерĕшлисен шутне *çын, этем* лексемăсем кĕреççĕ.

2.2.1. *Çын* тата *этем* сăмахсене час-часах синоним теме пăхаççĕ. Вĕсен пĕлтерĕшĕсенчи тата усă курассинчи хăшпĕр уйрăмлăхсене И.П.Павлов кăтартса панă: *этем* – "... чĕр чун тĕнчинчен шухăшлама, пуплеме пултарнипе уйрăлса тăракан тĕсне кăтартать"; *çын* сăмахăн тĕп пĕлтерĕшĕ – "обществăн (халăхăн) представительне палăртать", "çын вăл этемех, анчах мал туртăмлăхĕпе, хăйĕн аталанăвĕпе, чунĕ-кăмăлĕпе çын этемрен çӳлерех тăрать", "этем çын пултăр тесен, кăмăл-туйăм пахалăхне вăйлатмалла", *çын* сăмахпа анлăрах усă кураççĕ-мĕн, çакна кура ун пĕлтерĕшĕсем те аталанарах панă[11].

2.2.2. *Этем* – шухăшлама, пуплеме пултаракан чĕрĕ чун çеç мар, унăн тĕп палăрăмĕсен шутĕнчех – хăйĕн пурнăçне, тыткаларăшне ăс-тăнпа, ăнланса тĕрĕслесе тăни (*сознательный контроль*). Çакна тĕслĕхсем те çирĕплетеççĕ: *этем ретне кĕр, этем ретлĕ усра (пурăн, ĕçле, калаç,...), этем ятне (чысне) варала (çухат, çĕртсе çӳре,...), этем ретĕнчен (йĕркинчен) тух* т.ыт.те. Çак тĕслĕхсене çывăх *çын вырăнне хур (хисепле)* çаврăмра вара çынран хăйĕнчен çеç килекен условисем, пахалăхсем мар, йĕри-тавралисем мĕнле (хăйсемпе тан е аяларах тесе) йышăнни тĕп вырăнта.

*Этем шутне кĕр – çын шутне кĕр, этем картне кĕр, лар – çын шутне кĕр, лар, этем картĕнчен тух, вĕçерĕн – çын картĕнчен тух, вĕçерĕн...* Ку çаврăмсем те çак шухăшах çирĕплетеççĕ: *этем шутне (картне) кĕр* тесен сăмах çын харпăр хăйне йĕркелесси пирки, *çын шутне (картне) кĕр* тесен обществăри ытти çынсем хăйсемпе тана хурса йышăнасси çинчен пырать.

2.2.3. *Этем* тата *çын* сăмахсен тĕп пĕлтерĕшĕн пĕр палăрăмне çеç пăхса тухрăмăр. Пĕтĕмĕшле илсен вара, пирĕн шутпа, *этем* сăмахăн пĕлтерĕшĕсенче çак паллăсем пур теме пулать:

1) чĕрĕ чунсен аталанăвĕн чи çӳллĕ шайĕнче пулни;

2) калаçма, пуплеме пултарни;

3) шухăшлав пултарулăхĕ, интеллект пурри;

4) обществăра йышăннă нормăсем хистенине кура хăйне хăй ăс-тăнпа ăнланса тыткалама пултарни.

*Этем* сăмах пĕр пĕлтерĕшлĕ. В.И.Сергеев ку сăмахăн тата "коллективлă нумайлăх" пĕлтерĕш те пуррине словарьсенче халиччен палăртманнине çитменлĕх тесе шутлать ("...слово *этем* контекстуально может выражать коллективную множественность людей: *Тĕрлĕрен этем пур вĕсен хушшинче.* "Разные есть люди среди них". Но словари почему-то не фиксируют синекдохичное значение этого слова"[12]). Анчах та кунта семантика шайĕнчи мар, грамматика шайĕнчи пулăм тесен тĕрĕсрех[13]. Чылай чухне япала ячĕ пĕрреллĕ хисеп форминчех нумайлăха палăртма пултарать. Асăннă тĕслĕхре вара япала ячĕ умĕнче япали нумайййине кăтартакан сăмах пур. Танл.: *Сак тулли ача пар. Тĕрлĕ йывăçăн ĕмĕрĕ тĕрлĕ. Çӳлĕ тусем çинче çырла пиçет тĕрлĕрен курăка явăнса* [Ашм. II, 158 с.; XV, 88 с., 89 с.].

2.2.4. *Çын* сăмахăн тĕп пĕлтерĕшĕн семисен шутне çаксене кĕртме май пур:

1) калаçма, шухăшлама пултаракан чĕрĕ чун;

2) обществăра пĕр-пĕр вырăн йышăнса тăрать;

3) *этемпе* танлаштарсан кăмăл-туйăм, ăс-тăн тĕлĕшĕнчен çӳлĕрех шайра.

Пĕтĕмĕшле çакăн пек семантика тата лексикографи характеристики пама пулать. Тĕп, чи анлă пĕлтерĕш – шухăшлама, калаçма пултаракан, хăйĕн йышшисен пĕрлĕхĕнче (обществăра) пĕр-пĕр вырăн йышăнса тăракан чĕрĕ чун.

*Этемпе* танлаштарсан шухăш-туйăм, ăс-тăн, кăмăл пуянлăхĕ тĕлĕшĕнчен çӳлĕрех тăнине тĕп пĕлтерĕшĕн сĕмĕ теме пулать; танл.: *Этем нумай та çын сахал. Этем пулма çăмăл та çын пулма йывăр* (Ват. сăм.).

Обществăри вырăнĕ çинчен калас пулсан, кашни çын хăй вырăнне "эпĕ ↔ эпĕ мар" танлаштарура, хирĕç тăрура курать. Ку хирĕç тăрăвăн икĕ енне палăртма пулать:

1) "Эпĕ ↔ эпĕ мар, тепĕр конкретлă чун, личность". *Çын япали. Çын аллипе кăвар ан турт* (Ват. сăм.). *Çынран ан кул* (Ват. сăм.). *Нихçан та çын чапĕпе пурăнман эпĕ* (Н.Терентьев).

2) "Эпĕ ↔ эпĕ мар, ыттисем пĕтĕмĕшле (общество)". *Çын кулли. Çын тем калĕ. Çын çине кĕр.*

1982 çулта тухнă чăвашла-вырăсла словарьте "*с определяющим именем означает принадлежность к какому-либо сообществу, коллективу*" тенине *çын* сăмахăн уйрăм – виççĕмĕш – пĕлтерĕшĕ (е пĕлтерĕш сĕмĕ) пулать тесе çирĕплетни иккĕленӳллĕ. Кунта пĕрремĕш пĕлтерĕшех теме май пур. Тĕслĕхсене пăхсан та çакăн йышши сăмах майлашăвĕсем çынна тĕрлĕ енчен хаклани курăнать. *Ту çынни, хир çынни, ял çынни, Мускав çынни* – çын ăçта пурăннине кура; *тĕнче çынни, пурнăç çынни, кил çынни, ĕç çынни* – пурнăç йĕркине кура (*образ жизни*); *вырăс çынни, яппун çынни* – мĕнле халăх представителĕ пулнине кура; *çар çынни, çĕр çынни, тинĕс çынни, ферма çынни, чиркӳ çынни, суд çынни* – профессине кура.

2.3.5. *Çын, этем* – классификацилекен сăмахсем, эпир тĕпчекен ушкăнри ытти сăмахсен пĕлтерĕшĕсене уçса пама пулăшаççĕ. Хăйсен пĕлтерĕшĕсене определени панă чухне вара *чĕрĕ чун, чун* сăмахсемпе усă курма тивет, вырăссен – *существо, земное создание*, тутарсен — *җан иясе* "чун хуçи", *шәхес* "личность", *зат* – "лицо"; *зат* сăмаха илес пулсан (вăл чăваш чĕлхинчи *сăпат* сăмахпа тӳр килет), унăн пĕлтерĕшĕсенче çынна палăртас функци пуррине кăтартман (*ирон.* тенисĕр пуçне) [ТЧĂС – I, 344 с.]. Анчах та *кеше, шәхес* сăмахсене ăнлантарнă чухне çак пĕлтерĕшпе усă курнă. Тĕсл.: КЕШЕ 1. Фикерләү, сөйләшү (...) сәләтәнә ия булган зат, җан иясе, шәхес (*Шухăшлама, калаçма (...) пултаракан сăпат, чун хуçи, личность*) [ТЧĂС – II, 89 с.].

3.0.0. Литература чĕлхин ăнлантару словарьне хатĕрленĕ чухне тухса тăракан ыйтусемпе йывăрлăхсене кура "*çын*" пĕлтерĕшлĕ сăмахсен çак ушкăнĕсене палăртма пулать:

1. Çынна ўсĕм (*возраст*) тата арлăх (*пол*) уйрăмлăхĕсене кăтартса ят панă сăмахсем. Ку сăмахсен пĕлтерĕшĕсем анлă, ытти ушкăнсенчи сăмахсене определени панă чухне вĕсемпе усă курма май пур.

2. Çынна тепĕр çынпа мĕнле хутшăнусенче пулнине кура ят панă сăмахсем.

3. "Çын тата ĕç" – специальноçа, профессие е пĕрпĕр ĕçе пурнăçлакана пĕлтерекен сăмахсем.

4. Çынна хак паракан ятсем. Ку сăмахсен пĕлтерĕшĕсемшĕн кăмăл-туйăм, ăс-хакăл, сывлăх, кĕлетке, сăн-пит, тыткаларăш уйрăмлăхĕ тĕп вырăнта тăрать.

3.1.0. Ўсĕм (*возраст*) тата арлăх (*пол*) уйрăмлăхĕсене палăртакан сăмахсен шучĕ чăваш чĕлхинче пысăках мар: *ача, хĕр, каччă, ар(çын), хĕрарăм, карчăк, старик* т.ыт.те*. Вĕсем пурте тенĕ пекех нумай пĕлтерĕшлĕ. Ку сăмахсене ăнлантарасси самаях пысăк йывăрлăх кăларса тăратать. Акă, С.И.Ожегов словарĕнчен илнĕ тĕслĕхсем:

РЕБЕНОК. Мальчик или девочка в раннем возрасте, до отрочества.

МАЛЬЧИК. Ребенок мужского пола.

ДЕВОЧКА. Ребенок женского пола [Ожегов – 1990, 670 с., 339 с., 159 с.].

Вырăс лексикографийĕ теори ĕçĕсемпе те, практика опычĕпе те пуян пулин те автор ку сăмахсене çакăн пек "ункăсăр" ăнлантарса парайман.

*Хĕрарăм* тата *арçын* сăмахсене ăнлантарнă чухне те хăйне евĕрлĕхсем пур[14]. Ку ушкăнри сăмахсем çынна биологи факторĕсене (урăхла каласан, çут çанталăкран килекен паллăсене) кура уйăраççĕ. Арлăх палли – икĕ хире-хирĕçле вариант: а) арçын – "мужской пол", ă) хĕрарăм – "женский пол". Ўсĕм палли – çын ĕмĕрĕнчи аталану тапхăрĕсем – чăвашăн тĕпрен илсен виçĕ вариантлă: а) çуралнинчен пуçласа

---

* *Вată, çамрăк, яш* йышши сăмахсене ку ушкăнра пăхас мар терĕмĕр, словарь тăвас ĕçри йывăрлăхсене кура вĕсене тăваттăмĕш ушкăнра пăхни вырăнлăрах.

арлăх çулне çитичченхи тапхăр; ă) вăйпитти вăхăт; б) ватлăх çулĕсем. Тата вакрах тапхăрсене *кăкăр ачи, пĕчĕк ача, яш ача, çамрăк хĕрарăм, çулланнă е ватта сулăннă арçын* т. ытти çакăн йышши çаврăмсемпе палăртаççĕ.

3.1.1. Иккĕмĕшле пĕлтерĕшсем тата мĕнле те пулин ансăрлатакан палăрăм хушăннипе е сăнарлăх мелĕпе пулнă (куçăмлă пĕлтерĕш). Тĕслĕхрен, *ача* сăмахăн çакăн пек пĕлтерĕшсем пуррине палăртма пулать. Чи анлă пĕлтерĕш – *çуралса ар çулне çитичченхи тапхăрти (вăхăтри, ўсĕмри) сын.* Кунта "çын" ăнлава ўсĕм чикки çеç ансăрлатать. Арлăх уйрăмлăхĕсене *хĕр + ача, арçын + ача* (*ывăл + ача*) конструкцисем палăртаççĕ, вĕсен пĕр элеменчĕ арлăх паллине, тепри ўсĕм чиккине кăтартать. Çак сăмах майлашăвĕсене пĕрремĕш пĕлтерĕш определенийĕ хыççăн ăнлантарни вырăнлă пулма кирлĕ. **(1)**

Хăш чухне çитĕнсе çитмен ара "ача" сăмахпа палăртаççĕ. Ку – *ача* сăмахăн тепĕр пĕлтерĕшĕ, вăл кăшт ансăртарах, *арçын ача* конструкцин пĕлтерĕшĕпе тан. **(2)**

Тата тепĕр пĕлтерĕшне тăванлăха пĕлтерекен сăмахсен шутĕнче – ашшĕ-амăшĕ хăйсем çуратнă çынна палăртакан сăмах пек – пăхма пулать. Ку пĕлтерĕш пĕрремĕш пĕлтерĕшрен аталаннă, ўсĕм палли вырăнне "пĕр *юнлă (тăван)* çын" паллă йышăнать. Истори шайĕнче пăхсан, пĕрремĕш пĕлтерĕш çак пĕлтерĕш анлăланнипе пулса кайма та пултарнă. **(3)**

Ытти пĕлтерĕшсем – куçăмлă. Камăн та пулин пурнăç опычĕ çителĕксĕр пулсан, вăл е çамрăкрах та айванрах, е тата ытла та тўрĕ, уçă кăмăллă пулсан, ăна *ача* теççĕ. Кунта пĕрремĕш пĕлтерĕшĕн потенциаллă палли – ачан пурнăç опычĕ çукки, пурнăçри пулăмсемпе япаласене çитĕнсе çитнĕ çын пек хаклама пултарайманни мала тухать. **(4)**

Мĕнле халăхран, ушкăнран е вырăнтан (хутлăхран) тухнине палăртса – çыннăн çулне пăхмасăрах – *çав-çав халăх (хула, ял т.ыт.те) ачи* теççĕ. Кун пек каланă чухне яланах арçын çинчен сăмах пырать. Хĕрарăм çинчен каланă чухне *...хĕрĕ* теççĕ. Чăваш чĕлхинчи *ывăл* сăмаха çакăн пек функци тивĕçлĕ мар, *халăхăн аслă ывăлĕ, Тăван çĕр-шывăн мухтавлă ывăлĕ* йышши конструкцисем вырăс чĕлхин витĕмĕпе пулса кайнă теме пулать. Танл.: "с ы н (...) 2. мужчина как носитель характерных черт своего народа, своей

среды (высок.) [Ожегов – 1990; 181 с., 783 с.]. *Шупашкар ачи* е *Муркаш хĕрĕ* тенĕ чухне *ача* тата *хĕр* сăмахсен пĕлтерĕшĕнчен ӳсĕм палăрăмĕ ҫухалать (70 ҫулхи карчăк та "*эпĕ – Муркаш хĕрĕ*" теме пултарать). Тăванлăх пĕлтерĕшĕ те сăнарлăх пек ҫеҫ юлать. Чылай чухне ку сăмахсен определенийĕ халăх, ҫĕр-шыв, район, ял т.ыт.те ячĕ е ашшĕ-амăшĕн ячĕ-хушамачĕ пулать (сайра-хутра пĕр-пĕр организаци – *шкул ачи, рабфак хĕрĕ*). Ҫак сăлтавсем *ача* тата *хĕр* сăмахсен кунашкал функцине уйрăм пĕлтерĕш (е пĕлтерĕш сĕмĕ) пек кăтартма май параҫҫĕ. **(5)**

*Ача* сăмахпа тата икĕ пĕлтерĕшпе усă курнине палăртса хăварар:

1) чĕнӳ (*обращени*) сăмахĕ пек: *"Эй, ачам, – хĕрхенет Марине ҫак инкене"* (Е.Лисина);

2) междомети функцийĕнче: *"Э-эй, ача-а! – патак пекех пулса кайрĕ Хура Муҫҫа. – Турру пи-итĕ хăватлă вара сан, кĕрӳ, чăнах"* (С.Аслан).

Кусене омонимсем пулса кайнă теме те пулать.

3.1.2. *Арҫын* сăмахăн чи анлă пĕлтерĕшĕ арлăх паллине ҫеҫ уйăрать, вăл тĕрлĕ ӳсĕмри этеме – ачана та, ҫитĕннĕ ҫамрăка та, ҫулланнă ҫынна та, ваттине те – палăртма пултарать. *Шкулта арҫынсен, хĕрачасен тата хутăш хорсем, духовой, хĕлĕхлĕ, симфониллĕ оркестрсем пулнă* (Чăваш календарĕ, 1970). Ӳсĕм палли (чикки) хушăнсан пĕлтерĕш ансăрланать, ҫитĕнсе ҫитнĕ ҫынсене ҫеҫ пĕлтерет. *Суха тытнă ача арҫын шутне кĕрет вара* (Ват. сăм.). Унсăр пуҫне "арҫын" тесе хĕрарăм упăшки ҫинчен калать. *Юлашки вăхăтра ман арҫынăм темшĕн питĕ шăртланса, хăйне хăех ҫилленсе ҫӳрекен пулчĕ-ҫке* (И.Григорьев). *Арҫынăм колхоз председателĕ пулса ĕҫлет* (М.Кипек).

*Ачаллă хĕрарăм, тăлăх хĕрарăм* тенĕ чухне ытларах ҫитĕнсе ҫитнĕ, ҫемьеллĕ е качча кайнă ҫын ҫинчен (арăм ҫинчен) сăмах пыни курăнать; *хĕрарăм тумтирĕ, хĕрарăм тарҫи (е кĕтӳҫи), хĕрарăмсене ирĕке кăларасси* тесен вара хĕрсене те, арăмсене те пĕлтерет пулас, пĕрлештерекен япала ячĕсене ҫывăх сăмах теме те май пур.

Арлăх-ӳсĕм ушкăнĕнчи сăмахсене пĕлтерĕшĕсем час-часах тăванлăх терминĕсен шутне куҫараҫҫĕ: *ача, хĕр, арҫын, старик, карчăк* т.ыт.те.

4.0.0. Çын коллектив, общество пĕр пайĕ пулнă май яланах йĕри-таврари çынсемпе мĕнле те пулин çыхăнусенче, хутшăнусенче тăрать. Пĕринпе тăванлă, тепринпе хăталăх, виççĕмĕшĕпе пĕрле ĕçлени е пĕр çĕрте пурăнни çыхăнтарса тăрать. Çак хутшăнусенчи çынна палăртма чĕлхере ятарлă сăмахсем çирĕпленнĕ. Пĕр юнлă, пĕр тăхăмлă пулнине палăртакан сăмахсене *тăванлăх (хурăнташлăх) терминĕсем* теме йышăннă. Çакăнтах тăван мар ашшĕ-амăшне, тăван мар ачи-пăчине палăртакан сăмахсене те кĕртетпĕр. Авланнă (тĕрĕсрех каласан мăшăрланнă) хыççăнхи хутшăнусене кура панă ятсене *хăталăх терминĕсем* (выр. "термины свойства") тейĕпĕр. *Йышăннă е калаçса татăлнă хурăнташлăх* ("условное родство") тесе хăйматлăх тата кумалăх çыхăнăвĕсенчи çынсен ячĕсене палăртар. Çак ушкăнсенчен кашнинех хăйне евĕр система пур ("образуют закрытую систему")[15].

4.1.0. Çынпа çын хушшинчи çыхăнусене, хутшăнусене кура панă ытти ятсене кунашкал ушкăнлама йывăртарах. Калăпăр, вĕсенчен тепĕр çынпа пĕрпеклĕхсем пуррине кура хунă ятсене (пĕр ĕç тăвать – *коллега*, *ĕçтеш*, *пайташ*; пĕр çĕрте çуралнă е пурăнать – *ентеш*, *янташ*; пĕр ўсĕмри çын – *тантăш*; пĕр йăхран – *юнташ* т.ыт.те) тата пĕр-пĕрин хушшинчи хутшăнусен мелне, çирĕплĕхне, хакне (симпати-антипати критерийĕсене) кура панă ятсене (*юлташ*, *тус*, *савни*, *пĕлĕш*, *тăшман* т.ыт.те) уйăрма пулать.

4.1.1. Ку сăмахсен определенийĕсене йĕркеленĕ май ăнлантармалли пĕлтерĕше палăртакан çын тепĕр çынпа мĕнле çыхăнура тăнине кăтартма тивет. Хăш чухне çак çыхăнăва тепĕр çынне асăнмасăрах палăртма май пур. Вырăс тата тутар чĕлхисен ăнлантару словарĕсене уçса пăхар-ха.

КОЛЛЕГА. Товарищ по учению или работе (о работниках умственного труда, о квалифицированных специалистах) [Ожегов – 1992, 284 с.].

ЮЛДАШ. 1. Юлда, сәфәрдә бергә баручы яки бергә йөрергә килешкән кеше (*Çул çинче, çул çўревре пĕрле пулакан е пĕрле çўреме килĕшнĕ çын*) [ТЧĂС – III; 609 с.].

Кун пек сăмахсене ăнлантарнă чух çапах та ятарлă конструкцисемпе усă кураççĕ. Вырăс лексикографийĕнче – *кто-нибудь* паллă мар местоимени тĕрлĕ падеж формисемпе, тутарсем – *кем дә булса* (*кем белән дә булса*) çаврăмпа, берәү пĕтĕмлетў хисеп ячĕн падеж формисемпе тата *-чы/*

*-че* аффикслă япала ячĕпе т.ыт.те. *-чы/-че* чăваш чĕлхинчи *-çă/-çĕ* аффикспа тӳр килет, анчах та унăн функцийĕсем ансăртарах; чăвашла ытларах *-акан/-екен* причасти формипе усă куратпăр.

5.0.0. Чăваш лексикинче çынна çемьери, тăван-ратнери хутшăнусене кура палăртакан сăмахсен йышĕ самаях пысăк.

Чăваш чĕлхин системи кашни тăвана уйрăм ят парас, ятарлă сăмахпа палăртас енне туртăнать. Калăпăр, пĕр юнлă тӳрĕ тăвансене (выр. "кровное прямое родство") пĕлтерекен сăмахсене çеç вун çиччĕ таран шутласа кăларма пулать. Кунсăр пуçне чăвашсен *пысăк пичче*, *кĕçĕн аппа* йышши анализ мелĕпе йĕркеленĕ терминсем пур.

Юлашки вăхăтра пуплевре час-часах *упăшкан шăллĕ*, *арăмăн аппăшĕ* е тата *аттен пиччĕшĕн арăмĕ* текелеме пуçларăмăр. Çамрăксенчен хăшĕ-пĕри *атте-анне*, *асатте-асанне*, *аппа-пичче* тенинчен ытла пĕлмест те, упăшка е арăм тăванĕсене палăртакан сăмахсемпе усă курманпа пĕрех. Калаçура вара пĕр-пĕрне ытларах ятран чĕнеççĕ. Тăван чĕлхемĕрĕн пуянлăхĕ куç умĕнчех чакса пырать. Пĕтĕмпех çухатса-манса пĕтерес марччĕ. Тăванлăх-хăталăх терминĕсене те литература чĕлхин ăнлантару словарьне май килнĕ таран туллинрех кĕртесчĕ, пĕлтерĕшĕсене тата усă курассин уйрăмлăхĕсене ăнлантарасчĕ.

Хурăнташсен, хăтасен, кумсен хутшăнăвĕсене кăтартакан ят системисенче пĕрпеклĕх нумай. Хăталăх, хăйматлăх, кумалăх терминĕсем – тăванлăх терминĕсенчен пулнă иккĕмĕшле сăмахсем. Çавăнпа та вĕсене пĕрле пăхсан вырăнлă пулассăн туйăнать.

5.1.0. Тăванлăх терминĕсен шутне çак ăнлавсене палăртакан сăмахсем кĕреççĕ:

1) пĕр юнлă "тӳрĕ" тăвансем ("кровное прямое родство"): *мăн (ват) асатте*, *мăн (ват) асанне*, *мăн (ват) кукаçи*, *мăн (ват) кукамай*, *асатте*, *асанне*, *кукаçи*, *кукамай*, *атте*, *анне*, *ывăл*, *хĕр*, *мăнук*, *аппа//акка*, *пичче//тете*, *шăллăм*, *йăмăк*;

2) пĕр юнлă "тӳрĕ мар" тăвансем ("кровное косвенное или побочное родство"):

а) ашшĕ енчи тăвансем – *мучи//пичче*, *пичче//тете*, *мăн акка*, *аппа//акка*;

ă) амăшĕ енчи тăвансем – *кукка*, *мăн акка*, *аппа//акка*.

5.1.1. Хăталăх терминĕсен шутĕнче:

1) мăшăр, мăшăрăн пĕр юнлă тӳрĕ тăванĕсем (ятарлă термин çук пулсан, мăшăр мĕнле чĕнет – çаплах чĕнеççĕ);

а) хĕрарăмшăн мăшăрĕ – *упăшка*, тăванĕсем – *хуняçа//пăятам//ати, хуняма//пăянам//ани, ывăлсем//ывăл пултăр//пултăр, пăяхам//ĕçкей, ап(п)ай//ак(к)ай, хĕрсем//хĕр пултăр*;

ă) арçыншăн мăшăрĕ – *арăм*, тăванĕсем – *хунь//хуняçа//хуньăм//пăятам, хуняма//апай//ани//пăянам, хунчăкам, пултăр//ывăл пултăр, хунякам, хĕр пултăр*;

2) пĕр юнлă (тӳрĕ е тӳрĕ мар тăванлă) çынсен мăшăрĕсем – *кин, кĕрӳ, инке, кинемей, йысна*;

3) мăшăрсен хурăнташĕсем пĕр-пĕриншĕн – *хăта, тăхлачă*; хурăнташсен мăшăрĕсем пĕр-пĕриншĕн – *пуçана, килĕнтеш*.

5.1.2. Н.И.Егоров урал-алтай чĕлхисенче тăванлăх-хăталăх терминĕсен пĕлтерĕшĕсен çак дифференциаци паллисене кăтартать:

1) тăванлăх тата хăталăх терминĕсем;

2) арлăха кура;

3) ашшĕ енчи е амăшĕ енчи тăван;

4) çулне кура (кĕçĕннисенчен аслисем патне е аслисенчен кĕçĕннисем патне);

5) функцине кура: номинаци (куç хыçĕнче каланă чухне) е вокатив (чĕннĕ чухне)[16].

5.2.0. Пирĕн шутпа та тăванлăх-хăталăх терминĕсем тĕпрен илсен çак паллăсемпе уйрăлса тăраççĕ. Çапах та "çулне кура" текен палла тĕплĕнрех пăхса тухмалла. Ӳсĕм паллинче икĕ принципа тĕпе хунă.

**Пĕрремĕш принцип** – икĕ енлĕ тӳрĕ çыхăну, калаканĕ тата унăн тăванĕ:

а) пĕр атте-аннерен çуралнисем; калаканран аслă пĕр тăвансем – *аппа (акка), пичче (тете)*; кĕçĕннисем – *йăмăк, шăллăм*;

ă) ăру ламĕсене палăртни – кĕçĕннисен аслисене ("восходящая линия родства") чĕнмелли сăмахсем – *атте, анне, хуньăм, ани, пăятам, пăянам, асатте* (аттен ашшĕ), *асанне* (аттен амăшĕ), *кукаçи* (аннен ашшĕ), *кукамай* (аннен амăшĕ), *мăн /ват асатте* (аттен аслашшĕ е асаттен ашшĕ), *мăн /ват асанне* (аттен асламăшĕ е асаттен амăшĕ), *мăн /ват кукаçи*

(аттен кукашшĕ е асаннен ашшĕ, аннен кукашшĕ е кукамайăн ашшĕ, аннен аслашшĕ е кукамайăн ашшĕ), *măн /ват кукамəй* (аттен кукамăшĕ е асаннен амăшĕ, аннен кукамăшĕ е кукамайăн амăшĕ, аннен асламăшĕ е кукаçин амăшĕ); аслисен кĕçĕннисене („нисходящая линия родства") палăртмалли сăмахсем – *ача, ывăл, хĕр, кĕрӳ, кин.* Иккĕмĕш ламри ача-пăчана палăртма чăваш чĕлхи вырăс чĕлхинчен *мăнук* сăмах йышăннă, анчах та пуплевре час-часах *ывăлăн хĕрĕ* йышши конструкцисем тĕл пулаççĕ;




3-мĕш ламри ачасене палăртма чăваш чĕлхинче уйрăм сăмах çук, вĕсене сăмах майлашăвĕпе палăртнă (2-мĕш ламри пек).

**Иккĕмĕш принцип** – виçĕ енлĕ тӳрĕ мар (тепĕр çын урлă тивекен) çыхăну: калаканĕ – I тăван (тӳрĕ тăван) – II тăван (тӳрĕ мар тăван, у.к. тăванăн тăванĕ). Кун пек чухне II тăван ячĕ калаканпа I тăван хушшинчи ӳсĕм уйрăмлăхĕнчен килет:

а) ашшĕнчен аслисем – *мучи* // диал. *пичче, мăн (пысăк) акка*, кĕçĕннисем – *пичче* // диал. *тете, акка // аппа*;

ă) амăшĕпе пĕр тăвансем – *кукка* (ӳсĕм палли çук), *мăн акка* (амăшĕнчен аслă), *акка // аппа* (амăшĕнчен кĕçĕн).

3-мĕш ламри тăвансен ячĕсем: аслашшĕпе пĕр тăвансен ячĕсем ашшĕнчен аслă пĕр тăванĕсенни пек; асламăшĕпе, кукамăшĕпе, кукашшĕпе пĕр тăвансен ячĕсем амăшĕнчен аслă пĕр тăвансенни пек. Хăталăх терминĕсем те çак принципах пăхăнаççĕ: аслă тăванăн мăшăрĕ – *йысна, инке, кинемей* (ашшĕнчен аслă тăванăн арăмĕ); упăшкан аслă пĕр тăванĕсем – *пăяхам // ĕçкей, ап(п)ай // ак(к)ай*, кĕçĕннисем – *ывăлсем* // диал. *ывăл пултăр, пултăр, хĕрсем* // диал. *хĕр пултăр*, арăмăн аслă пĕр тăванĕсем – *хунякам, хунчăкам*, кĕçĕннисем – *пултăр, хĕр пултăр, ывăл пултăр.*

5.2.1. Н.И.Егоров чăваш чĕлхинчи хăталăх терминĕсен этимологине тĕпченĕ май вĕсен ят парас (*номинаци*) тата

чӗнӳ (*вокатив*) функцийӗсене пурнӑҫлакан вариантсем пуррине, хальхи вӑхӑтри номинаци функциллӗ сӑмахсем чылайӑшӗ авал чӗнӳ форми пулнине палӑртать. Хальхи вӑхӑтра чӗнӳ тата ят варианчӗсем пек терминсем: *хунятма* – упӑшкан е арӑмӑн амӑшӗ, пӗтӗмӗшле ят паракан сӑмах, тӳрреммӗн чӗнсе калаҫнӑ чухне *ани, апай, пӑянам* сӑмахсемпе усӑ кураҫҫӗ; *хуняҫа* – упӑшкан (диал. арӑмӑн) ашшӗ, чӗнме – *ати, аттей, пӑятам.*

Н.И.Егоров шучӗпе, мӑшӑрӑн ашшӗ-амӑшне чӗннӗ чух ҫеҫ мар, вӗсем ҫинчен калаҫнӑ чухне те *хуняма, хуняҫа* сӑмахсемпе усӑ курни те евӗклех мар[17].

5.2.2. Тӑванлӑх-хӑталӑх терминӗсем чӗнӳ тата ят парас функцийӗсене пурнӑҫласси камӑнлӑх категорийӗн формисене йышӑнассипе ҫыхӑнса тӑрать. Вокативлӑ функцие ҫеҫ пурнӑҫлакан сӑмахсем камӑнлӑх категорийӗн аффиксӗсене йышӑнасшӑн мар. Тӗсл., *ати, ани, аттей, апай* сӑмахсем сӑпат формисенче пачах та тӗл пулмаҫҫӗ тесен те юрать. ЧПГӐИ словарь картотекинчи тӗслӗхсенче *пӑятам, пӑянам* сӑмахсен ҫак формисене тӗл пултӑмӑр: 1 сӑп. *пӑянам*; 2 сӑп. *пӑянаму*; 3 сӑп. *пӑянамӑш, пӑянамӗ*; 1 сӑп. *пӑятамҫӑм, пӑятам*; 2 сӑп. тӗслӗхсем ҫук; 3 сӑп. *пӑятамӑш.*

Камӑнлӑх категорийӗн формисене йышӑнассипе ҫыхӑннӑ уйрӑмлӑхсенчен тата ҫаксене палӑртма пулать:

а) хӑш-пӗр терминсем сӑпат формисӗр тӗл пулмаҫҫӗ: *шӑллӑм, шӑллу, шӑллӗ...; хунчӑкам, хунчӑку, хунчӑкӑш(ӗ), хунякам, хуняку, хунякӑш(ӗ);*

ӑ) сӑпат формисем тӗрлӗ тымарлӑ пулма пултараҫҫӗ: *анне – аннӳ, амӑшӗ,...; атте – аҫу, ашшӗ,...; асанне – асаннӳ, асламӑшӗ,...; асатте – аслаҫу, аслашшӗ,...*

Ӑнлантару словарӗнче ҫак уйрӑмлӑхсене палӑртни словарӗн пахалӑхне ҫӗклет ҫеҫ. Йывӑрлӑхӗ те пур: словника мӗнле формӑра кӗртмелле кун пек сӑмахсене? Пурне те пӗр формӑпа (калӑпӑр, 1-мӗш сӑпат формипе) парсан тӗрӗсрех пулмалла пек. Ҫапах та ытти сӑпат формисене кӑтартса хӑварни кирлех.

5.2.3. Тӑванлӑх-хӑталӑх терминӗсене ӑнлантарнӑ чухне тата тепӗр ыйту сиксе тухать. Сӑмах определенине кам ятӗнчен йӗркелемелле: 1 сӑпат (автор) ятӗнчен-и (*кукамай – аннен амӑшӗ, хунчӑкам – арӑмӑн пиччӗшӗ*) е 3-мӗш сӑпат ятӗнчен-и (*кукамай – калаканӑн амӑшӗн амӑшӗ, хунчӑкам –*

*арӑмӗн пиччӗшӗ*)? Тӗрӗк чӗлхисен ӑнлантару словарӗсенче ытларах чухне 1 сӑпат формисене тӗпе хунӑ.

5.3.0. Вырӑнти калаҫусенче тӑванлӑх-хӑталӑх терминӗсен фонетика, лексика тата семантика варианчӗсем тӗл пулаҫҫӗ. Словарьсенче вӗсенчен хӑш-пӗрне литература норми пек (варианчӗсене диалектизм пек) пӑхнӑ. Теприсене икӗ вариантне те (е пӗлтерӗшӗсен икӗ вариантне те) тан правасем панӑ, вара вӗсем синонимсем пек е нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмах пек пулса тухнӑ.

1982 ҫулхи чӑвашла-вырӑсла словарьте ҫак сӑмахсене словника кӗртнӗ:

1) фонетика диалектизмӗсене – *мучей, кукки* "диал." паллӑпа, *кинеми* тата *кинемей* иккӗшӗ те "диал." паллӑсӑр;

2) лексика диалектизмӗсене:

а) синонимсем пек ("диал." паллӑсӑр): *акка – аппа, ывӑлсем – пултӑр* (1-м. пӗлтерӗш), *хӗрсем – пултӑр* (2-м. пӗлтерӗш);

ӑ) пӗр сӑмахне "диал." тесе палӑртнӑ (диалектизм тесе пӑхнӑ сӑмахсене ҫеҫ асӑнатпӑр) – *ӗмпичче, апай, мамак, папаҫ, мӑнами, мӑнаҫи, акай, тете, апи I* т.ыт.те;

3) семантика диалектизмӗсене:

а) пӗр пӗлтерӗшне литература чӗлхин норми пек, тепӗрне диалект варианчӗ пек панӑ:

ПӐЯНАМ 1. свекровь; 2. *диал.* теща;

ПӐЯТАМ 1. свекор; 2. *диал.* тесть.

ӑ) икӗ (е пур) пӗлтерӗшне те тан пӑхнӑ:

ПУЛТӐР 1. шурин, деверь; 2. свояченица, золовка.

5.3.1. Диалектизмсен семантика варианчӗсене нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмах пек кӗртсе янине куртӑмӑр. Анчах та чӑвашла калаҫаканшӑн – пӗр-пӗр диалект (е вырӑнти калаҫу) представителӗшӗн – ку сӑмахсем чылай чухне пӗр пӗлтерӗшлӗ ҫеҫ. Ҫакна – сӑмах **тӗрлӗ** калаҫусенче ҫеҫ **тӗрлӗ** пӗлтерӗшлӗ пулнине – палӑртма кирлӗ мар-ши?

Литература чӗлхин нормӑлӑхне йӗркелес тӗллевпе лексика е семантика варианчӗсенчен пӗрне ҫеҫ норма темелле-ши е вӗсене синонимлӑ единицӑсем тата нумай пӗлтерӗшлӗ сӑмахсем пек пӑхмалла-ши?

Пирӗн шутпа, тӑванлӑх-хӑталӑх терминӗсен хӑш вариантне норма тесе пӑхмаллине палӑртма кирлех пек туйӑнать. Калӑпӑр, *пултӑр, ывӑл пултӑр* – арӑмӑн шӑллӗ;

упăшкан шăллĕ – *ывăлсем, диал. ывăл пултăр, хĕр пултăр* – арăмăн йăмăкĕ; упăшкан йăмăкĕ – *хĕрсем, диал. хĕр пултăр* (тĕплĕнрех – 5.6.1. пайра).

5.4.0. Çынна тăван-ратнелĕх хутшăнăвĕсене кура палăртакан терминсен йышĕнче пĕр сăмахран тăраканнисем те, сăмах майлашăвĕсем те пур. Чĕлхепе куллен усă куракан куçĕпе пăхсан, çакăн пек ушкăнсем палăртма пулать:

а) пĕр сăмахлă терминсем (*атте, анне, йăмăк, инке, мăнук, йысна* т.ыт.те);

ă) хальхи чĕлхере – пĕр сăмахлă термин. Этимологи шайĕнче пăхсан – сăмах майлашăвĕ (*асатте, кукамай, хунямa, хунчăкам* т.ыт.те);

б) тăван мар ашшĕ-амăшне палăртакан терминсене çĕнĕ орфографи правилисем икĕ сăмах пек пăхма хистеççĕ (çав вăхăтрах *хреснанне, хреснатте* сăмахсене пĕрле çырма сĕнеççĕ);

в) "пĕр пек" тăван темиçе пулсан уйăрма икĕ сăмахлă конструкцисем пур (*аслă аппа, вăталăх хĕр, сар ывăл* т.ыт.те);

г) хăйматлăх терминĕсемпе 2–3-мĕш сыпăкри тăвансене палăртмалли ятсем икĕ е ытларах сăмахран тăраççĕ.

Малтанхи (а, ă) ушкăнсенчи сăмахсене словника кĕртмелли паллă-ха. Ыттисене словаре мĕнле принциппа кĕртессине пăхса тухар.

5.4.1. Тăван мар ашшĕне, амăшне е ачисене палăртакан конструкцисен (Л.П.Сергеев вĕсене "лексикализациленнĕ сăмах майлашăвĕсем" тенĕ[18]) варианчĕсем нумай.

Иккĕмĕш (тăван мар) ашшĕне пĕлтерекеннисене илсе пăхар-ха. 1982 çулхи чăвашла-вырăсла словарьте – *аçа çури* (45 с.), *диал. атте çури* (47 с.), *диал. ашшĕ çури* (49 с.), *тăван мар ашшĕ* (450 с.); диалектологи словарĕнче – *çĕнĕ атте, ўкей ашшĕ* [Сергеев, ДС, 12 с., 76 с.]. Статьясенче кусемсĕр пуçне çак вариантсене асăннă – *аçа çури, ўкей атте*[19], *аçа çури (çўри) ашшĕ, ама çури ашшĕ, çĕнĕ ашшĕ, кайранхи (карянхи) ашшĕ*[20].

Тăван мар ачасене пĕлтерекеннисем чăвашла-вырăсла словарьте [ЧВС – 1982] – *амаçури ывăл* (33 с.), *тăван мар ывăл* (450 с.), *амаçури хĕр* (33 с.), *тăван мар хĕр* (450 с.); 1954 çулхи чăвашла-вырăсла словарьте – *ывăл çури* (288 с.), *хĕр çури* (250 с.); диалектологи словарĕнче – *ул çури* (74 с.), *аçа ывăлĕ* (82 с.).

Куратпăр ĕнтĕ, вариантсем нумай пулин те литература чĕлхинче ытларах *амаçури (ывăл, хĕр), тăван мар ашшĕ (ывăлĕ, хĕрĕ)* йышши конструкцисем çирĕпленнĕ. Орфографи комиссийĕ сĕннĕ *ама çурри, аçа çурри, хĕр çурри, ывăл çурри* конструкцисем [ЧЧОС – 1992, 6 с., 11 с., 12 с.] сарăлса пурте усă куракан терминсем пулма пултарасси иккĕлентерет.

Словарьсенче **амаçури** сăмаха çеç уйрăм статьяпа уйăрнă, унта *амаçури амăшĕ, амаçури ывăл, амаçури хĕр* сăмах майлашăвĕсене кĕртнĕ; ытти терминсене (терминсен варианчĕсене) – **аçа** (*çури, хĕрĕ, ывăлĕ*), **атте** (*çури*), **ашшĕ** (*çури*), **тăван** (*мар ашшĕ, мар амăшĕ, мар ывăл, мар хĕр*) сăмахсен статйисенче панă. Çĕнĕ орфографи правилисене тĕпе хурсан, ушкăнри терминсенчен пĕрне те словника кĕртмелле мар, пĕрремĕш сăмахăн статйинче ăнлантармалла пулать.

5.4.2. Иккĕмĕш сыпăкри тăван – амăшпе е ашшĕпе пĕр тăванĕн ачи, виççĕмĕш сыпăкри – аслашшĕ-асламăшпе, кукашшĕ-кукамăшпе пĕр тăванĕн ачи, ачин ачи (мăнукĕ). Вĕсене те *пичче*, *шăллăм*, *аппа*, *йăмăк* тесе чĕнеççĕ. Сыпăклăха палăртма *тăван мар пичче (аппа,...), аттепе пĕр тăванĕн ывăлĕ (хĕрĕ), 3-мĕш сыпăкри (сыпăкран, сыпăк урлă) тăван (хурăнташ)* теççĕ:

СЫПĂК (...) 10. ступень родства; *вĕсем виçĕ ~ран тăван* они связаны через три ступени родства [ЧВС – 1982, 390 с.];

ДВОЮРОДНЫЙ *прил.* иккĕмĕш сыпăкри тăван, хурăнташ, *~ый брат* пичче, шăллăм (ашшĕпе е амăшпе пĕр тăванĕн ывăлĕ) [ВЧС – 1971, 150 с.];

ТРОЮРОДНЫЙ *прил.* виççĕмĕш сыпăк урлă тивекен (хурăнташ); *~ые братья* виççĕмĕш сыпăкри арçын тăвансем [ВЧС – 1971, 797 с.].

Тӳрĕ мар тăвансенчен аслисене çеç уйрăм сăмахсемпе палăртатпăр, кĕçĕннисем пирки сăмах пынă чухне сăмах майлашăвĕпе усă куратпăр:

ПЛЕМЯННИК тăван аппа (е пичче, шăллăм, йăмăк) ывăлĕ;

ПЛЕМЯННИЦА тăван аппа (е пичче, шăллăм, йăмăк) хĕрĕ [ВЧС – 1971, 512 с.].

2–3-мĕш сыпăкри тăвансене, пĕртăвансен ачисене палăртма çирĕпленнĕ терминсем çук. Вĕсене палăртма ăнлантарса паракан конструкцисемпе усă куратпăр. Çавăнпа та вĕсене ăнлантару словарĕнче асăнмасан та юрать.

5.4.3. Хӑйматлӑх (аталӑх) йӑли-йӗрки чӑваш халӑхӗн тӗрлӗрен пулин те ун тӗп шухӑшӗ пӗрре – мӑшӑрланакан ҫамрӑксен ҫӗнӗ "ашшӗ-амӑшне" суйласси. Ҫак хитре йӑла-йӗркене сӑнлакан сӑмахсене чӑваш пӑрахӑҫа кӑларма васкамасть-ха. Вӗсене наци чӗлхин ӑнлантару словарьне кӗртни кирлех.

Туй умӗн (е хӗр ҫураҫас умӗн) пӗр мӑшӑра пулас ҫӗнӗ кин валли "ашшӗ-амӑшӗ" пулма палӑртаҫҫӗ. Ҫамрӑк арӑм вӗсене *хӑйматлӑх атте*, *хӑйматлӑх анне* тесе чӗнмелле. Авланакан вӗсене – хӑш чухне хӑйӗн ҫывӑх тӑванӗсемех пулин те – *хӑйматлӑх хуньӑм*, *хӑйматлӑх ани (апи, апай)* тет. Хӑйматлӑхсемшӗн вӗсем *хӑйматлӑх хӗрпе хӑйматлӑх кӗрӳ* пулаҫҫӗ. Мӑшӑрланаканӑн тӑванӗсемпе хӑйматлӑхӗсем пӗр-пӗриншӗн *вӑртахсем* пулаҫҫӗ. Хӑйматлӑх ашшӗ-амӑшӗн ачисем ҫӗн ҫынсене *хӑйматлӑх (е ҫӗнӗ) аппа (акка)*, *хӑйматлӑх (е ҫӗнӗ) йысна* теҫҫӗ. Ҫамрӑк мӑшӑрӑн хӑйӗн ачи-пӑчи ҫуралсан, хӑйматлӑхӗсене *хӑйматлӑх кукаҫи*, *хӑйматлӑх кукамай* теме хӑнӑхтараҫҫӗ. Вырӑнти калаҫусенче – хӑйматлӑх кукашшӗпе кукамӑшӗ чӑн кукашшӗпе кукамӑшӗнчен ҫамрӑк пулнине кура – *ҫамрӑк кукаҫи* е *хитре кукамай* тенисем тӗл пулаҫҫӗ.

Н.И.Ашмарин словарӗнче ҫакӑн пек сӑмахсене асӑннӑ: *вӑртах*, *вӑртах(л)ӑм*, *вӑртахлӑ*, *хӑйматлӑх*, *хӑйматлӑх анне*, *хӑйматлӑх апай*, *хӑйматлӑх аппа*, *хӑйматлӑх ати*, *хӑйматлӑх атте*, *хӑйматлӑх кин*, *хӑйматлӑх кукамай*, *хӑйматлӑх кукаҫи*, *хӑйматлӑх кӗрӳ*, *хӑйматлӑх хуньӑм*, *хӑйматлӑх хӗр*, *хӑйматлӑхлӑ (хӑйматлӑхлӑ ывӑлсем)*. Вӗсенчен ҫуррине яхӑн пӗлтерӗшӗсене паман [Ашм. – V, 326 с.; XVI, 305 с.].

Ӑнлантару словарӗнче *хӑйматлӑх* сӑмаха словника кӗртсен, унран пулнӑ терминсене вара ҫав статьяра ӑнлантарса хӑварсан вырӑнлӑ пулма кирлӗ.

Кунсӑр пуҫне *хӑйматлӑх* сӑмахӑн "тус", "юлташ" куҫӑмлӑ пӗлтерӗшне те палӑртма пулать:

*Ҫитменнине, ҫамрӑксем пурӑнма пӗлеҫҫӗ, Зайцев председателе хӑйматлӑх-тус тунӑ* (Д.Гордеев).

*Тус, хӑйматлӑх нумай пултӑр, тӑшман сахал пултӑр* (Ват. сӑм.).

5.4.4. Чӑвашсем христианство тӗнне йышӑннӑ хыҫҫӑн тӑванлӑха (тӗрӗсрех каласан, йышӑннӑ е калаҫса татӑлнипе пулнӑ "тӑванлӑха") палӑртакан сӑмахсен тепӗр ушкӑнӗ

аталаннă. Ку ятсен вырăнти калаçусенче çирĕпленнĕ вариантсем нумай[21]:

а) - *хреснатте, хресна атте, хреснай атте, хĕресатте, хĕреснатте,*

- *куматте, куматти, кумати, коматти,*

- *пускатти, пыскатти, пускати, пускатти, поскатте, пысăк ати, пысăк атте,*

- *вырслати, вырсла ати, вырăсла атте,*

- *куми,*

ă) - *хреснанне, хреснапай, хресна анне, хĕрес анне, хĕреснанне,*

- *куманне, кумапай, кумапи, коммапи,*

- *пысăк анне, пысканне, пусканне, пускапи, поскапи, пускапай,*

- *вырăсла апи, вырслапай, вырăсла апай,*

- *кумашки, кумми, куми*[22].

Кумалăх хутшăнăвĕсенче кĕçĕннисене (ачисене) чылай çĕрте пĕр майлă – *хĕресна//хреснай//хресной ывăл (хĕр)* теççĕ.

1982 çулта тухнă чăвашла-вырăсла словаре çак сăмахсем кĕнĕ:

КУМ I кум;

КУМА кума;

КУММА то же, что кума;

КУМАННЕ то же, что кума;

КУМАТТЕ то же, что кум [ЧВС – 1982, 192 с.].

*Куманне* тата *куматте* сăмахсемпе *кума* тата *кум* сăмахсен пĕлтерĕшĕсем пĕр марри паллă. Чиркӳре ача тытнă çынсене *куманне, куматте* тесе çав ача чĕнет, *кум, кума* тесе унăн ашшĕ-амăшĕ е хăйсем пĕр-пĕрне чĕнеççĕ.

Кунсăр пуçне словарьте *хĕреснанне, хĕреснатте* (уйрăм статьясенче) тата **хĕресне** статьяра *~хĕр, ~ывăл,* **пысăк** сăмахăн статйинче *~анне, ~атте* терминсем пур [ЧВС – 1982, 554 с., 324 с.].

5.5.0. Чăваш халăхĕн пуплев этикечĕн нормисем тăрăх тăвана, арăма (упăшкана), унăн тăванĕсене ятран чĕнме юраман, çавăнпа-тăр кашни тăваншăн уйрăм ят çирĕпленнĕ. Темиçе пĕр пек (çулпа çеç уйрăм) тăван пулсан уйăрса палăртма ятарлă конструкцисемпе усă кураççĕ (вĕсене В.И.Сергеев "составные термины", Л.П.Сергеев "лекси-

ализованные словосочетания" тенĕ[23]). Калăпăр, упăшкан шăллĕ – *ывăлсем*, йăмăкĕ – *хĕрсем*, енчен те шăллĕсемпе йăмăкĕсем темиçен пулсан аслисене çеç *ывăлсем* е *хĕрсем* тесе чĕнеççĕ, ыттисене *мăн хĕр (ывăл), вăталăх хĕр (ывăл), чипер хĕр (ывăл), сарă хĕр (ывăл), шурă хĕр (ывăл), пĕчĕк(çĕ) хĕр (ывăл), çамрăк хĕр (ывăл)* теççĕ.

1982 çулхи чăвашла-вырăсла словарьте *ывăл* сăмахлă терминсене *упăшкан иккĕмĕш, виççĕмĕш т.ыт. шăллĕсем* тесе уйăрса палăртнипе килĕшме çук. Хăшне мĕнле ят парасси ирĕклĕ (уйрăмах ку вырăнти калаçусенче сисĕнет).

*Кĕçнивăл (< кĕçĕн ывăл), чипер хĕр* йышши терминсене *ывăлсем, хĕрсем* сăмахсен статйисенче ăнлантарса парсан словарьпе усă кураканшăн меллĕрех пулас пек туйăнать; "*аслине ывăлсем, ыттисене сар ывăл,... теççĕ*" йышши ăнлантару пама сĕнес килет, танл.: **хĕр** [ЧВС – 1982, 553 с.].

Ытти тăвансене палăртнă чухне ытларах ӳсĕме кăтартакан *аслă, пысăк, мăн, вăталăх, кĕçĕн, пĕчĕк* элементсемпе усă кураççĕ. Танл.: тутарсен *чибəр апа (чипер аппа), алма апа (улма аппа), шикəр апа (сахăр аппа)*[24].

Словарьте вĕсене кашнине уйрăмшарăн ăнлантарма кирлех те мар, *аслă, пысăк* т.ыт. çакнашкал сăмахсен статйисенче пĕтĕмĕшле ăнлантарсан та çителĕклĕ:

АСЛĂ (...) Çулне кура пысăкрах, маларах çуралнă тăвана уйăрать: *аслă аппа, аслă пичче* т.ыт.те.

ПĔЧĔК (...) Çулне кура çамрăкрах, кĕçĕнрех, каярах çуралнă тăвана уйăрать: *пĕчĕк инке, пĕчĕк акка* т.ыт.те.

5.6.0. Нумай пĕлтерĕшлĕ тăванлăх-хăталăх терминĕсен темиçе тĕсне палăртма тивет (1982 çулхи чăвашла-вырăсла словаре тĕпе хурсан).

5.6.1. Сăмахăн пур пĕлтерĕшĕ те тăванлăх-хăталăха палăртни тĕл пулать.

ХУНЯМА 1. теща; 2. свекровь.

Диалектсенче те вăл пуринче тенĕ пекех икĕ пĕлтерĕшлĕ сăмах: 1) упăшкан амăшĕ, 2) арăмăн амăшĕ. Тĕрĕсрех каласан – арлă-арăмлă çынсемшĕн пĕр-пĕрин амăшне пĕтĕмĕшле ят парас функцие пурнăçлакан сăмах теме пулать.

*Аппа (акка)* сăмах пĕр диалектра калаканпа пĕр тăвана та, ашшĕпе е амăшпе пĕр тăвана та, упăшкан аппăшне те палăртма пултарать. Чăн та, чылай вырăнти калаçура *аппа*

е *акка* тесе хӑйпе пӗр тӑван хӗрарӑма тата ашшӗ-амӑшӗн йӑмӑкӗсене ҫеҫ калаҫҫӗ, ашшӗ-амӑшпе пӗр тӑван аслӑ хӗрарӑмсене *мӑн (пысӑк, аслӑ) акка е аппа*, упӑшкан аппӑшне *ап(п)ай* е *ак(к)ай* теме йышӑннӑ.

*Пултӑр* сӑмах чӑваш чӗлхинче хӗрарӑма та, арҫынна та пӗлтерме пултарать, конкретлӑ пӗлтерӗшӗ сӑмах майлашӑвӗсенче ҫеҫ палӑрать[25].

ЫВӐЛ ПУЛТӐР 1. арӑмӑн шӑллӗ; 2. упӑшкан шӑллӗ.

ХӖР ПУЛТӐР 1. арӑмӑн йӑмӑкӗ; 2. упӑшкан йӑмӑкӗ.

2-мӗш пӗлтерӗшӗсемпе литература чӗлхинче *ывӑлсем* тата *хӗрсем* сӑмахсем ҫӳреҫҫӗ. Ҫавӑнпа та кунта "диал." паллӑпа парсан тӗрӗсрех пулма кирлӗ. Танлаштарӑр:

ПӐЯТАМ 1. упӑшкан ашшӗ; 2. *диал.* арӑмӑн ашшӗ;

ПӐЯНАМ 1. упӑшкан амӑшӗ; 2. *диал.* арӑмӑн амӑшӗ.

*Пичче (*диал. *тете), мучи (*диал. *ӗмпичче)* терминсен системӑлӑхӗ литература чӗлхинче палӑрсах каймасть, вырӑнти калаҫусенче вара калаканпа пӗр тӑван аслӑ арҫынна тата ашшӗпе пӗр тӑван кӗҫӗн арҫына палӑртма пӗр термин – *пичче (*диал. *тете)*, ашшӗнчен аслӑ арҫына палӑртма вара тепре – *мучи (*диал. *пичче, ӗмпичче)* термин.

Этикет ыйтнине кура арӑмӗпе упӑшки пӗр-пӗрне ятран чӗнмен, чылай чухне *ашшӗ*, *амӑшӗ* тенӗ, *старик*, *юлташ*, *карчӑк* сӑмахсемпе те ҫак пӗлтерӗшпе усӑ кураҫҫӗ.

5.6.2. Пӗлтерӗшӗсем анлӑланнипе тӑванлӑх-хӑталӑх терминӗсен шайӗнчен тухакан сӑмахсем те чылай.

1. Ют ҫынсене хисеплесе чӗнме ҫак терминсемпе усӑ кураҫҫӗ:

*хӑта*, *тӑхлачӑ*, *вӑртах* тесе ҫитӗннӗ (ытларах чухне ватӑ) ҫынсем пӗр-пӗрне калаҫҫӗ;

*аппа (акка)* тата *йӑмӑк* – пӗр ялта ҫуралса ӳснӗ аслӑ тата кӗҫӗн хӗрарӑм; *инке* тата *кин* — ют ялтан качча килнӗ аслӑ тата кӗҫӗн хӗрарӑм[26];

*кинемей*, *асанне*, *кукамай* – калаҫаканран чылай аслӑ, ватӑ хӗрарӑм;

*хӗрсем* – ют ялтан качча килнӗ хӗрарӑмшӑн упӑшкин ялӗнчи упӑшкинчен кӗҫӗн хӗрарӑм;

*пичче (*диал. *тете)* тата *шӑллӑм* – калаканран аслӑ тата кӗҫӗн арҫын;

*ӗмпичче*, *мучи*, *асатте*, *кукаҫи* – калаканран чылай аслӑ, ватӑ арҫын;

*пăяхам* – упăшки ялĕнчи упăшкинчен аслă арçын.

Тĕсл.: *Мăшăр шыраса çӳреместĕн-ши эсĕ, тăхлачă?* (В.Алентей).

*Ача пăхакан кинемей тупма ĕмĕтленекенсем те пур* (В.Енĕш).

Чылай чухне ку сăмахсене антропоним çумне хушса калаççĕ.

Тĕсл.: *Ăçта пулнă эс, Якрав вăртах?* (И.Тукташ). *Анчах Митрухха мучие кӳренес килмест* (В.Паймен).

2. Хăш-пĕр тăванлăх-хăталăх терминĕсемпе арлăх-ӳсĕм уйрăмлăхĕсене палăртакан сăмахсем пек (3.1.0) усă кураççĕ: *арăм* – "хĕрарăм" пĕлтерĕшпе; *аппа*, *хĕрсем* – "хĕр" пĕлтерĕшпе; *ывăл (ача)* – "арçын ача" пĕлтерĕшпе.

Тĕсл.: *Ак сĕнет пĕр арăмĕ сар çу,*
*Хăй каларăш, çăвĕ шутсăр тутлă* (А.Воробьев).

3. *Ача*, *атте*, *анне* сăмахсен междомети функцийĕ те пулать:

*Алтиç Андреевна чĕлхине çавăрса çыртнă та никама та палламасăр çĕтнĕ сасăпа хăйăлтатса калаçать: – Ай!.. Часрах çитесчĕ!.. Ай, анне!* (Г.Краснов). *Ах, ача, сиксе тухас пек лакăртатать апат* ("Капкăн").

6.0.0. Çынна кăтартакан сăмахсен тепĕр ушкăнĕ – "ĕç тăвакан" пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсем. Ку ушкăн профессие, специальноçа, должноçа, чина – кĕскенрех каласан, пĕр-пĕр ĕçе пурнăçлакана – палăртакан сăмахсене пĕрлештерсе тăрать. Вĕсенчен чылайăшĕ иккĕмĕшле сăмахсем. Сăмахсен тĕп пĕлтерĕшĕ вара сăмах пулăвĕн тĕсĕнчен (мелĕнчен) те килет.

Ăнлантару словарĕнчи иккĕмĕшле сăмахсем пирки çырнă специалистсем, тĕпрен илсен, словарьсенче сăмах пулăвĕн çыхăнăвĕсене май килнĕ таран туллинрех кăтартма, пĕр мелпе пулнă иккĕмĕшле сăмахсен пĕлтерĕшĕсене пĕр пек схемăпа ăнлантарма е тата иккĕмĕшле сăмахăн аффикс пĕлтерĕшне ăнлантарса сăмах тĕпĕ патне отсылка пама та сĕнеççĕ[27].

Ку ушкăнри сăмахсенчен чылайăшĕн пĕлтерĕшне те схемăпа ăнлантарма пулать: пултаракан тĕп + хальхи вăхăт причастийĕ + *çын* (*работник*, *рабочи*, *специалист*, *ăста*).

6.1.0. Ĕç тăвакана палăртакан япала ячĕсен хушшинче йышăннă сăмахсем нумай. Пĕлтерĕшĕсене ăнлантарассин уйрăмлăхĕсене кура вĕсене ушкăнсене пĕрлештерме пулать.

6.1.1. Вырăс чĕлхи урлă кĕнĕ ытти чĕлхе сăмахĕсен (вĕсем – вырăс чĕлхинче те пĕрремĕшле сăмахсем) пĕлтерĕшĕсем вырăс сăмахĕсен пĕлтерĕшĕсемпе пĕр пекех, тĕсл.:

КАРДИНАЛ. Католиксен папа хыççăнхи чинĕ.

КОВБОЙ. Çурçĕр Америка çеçен хирĕнчи утлă кĕтӳçĕ.

6.1.2. Вырăс чĕлхишĕн иккĕмĕшле сăмахсем чăваш чĕлхине кĕрсен пĕрремĕшле сăмахсем пулаççĕ. Вĕсем икĕ тĕрлĕ.

1. Пултаракан тĕпĕ те вырăс чĕлхинчен кĕнĕ, ытти сăмахсем пекех литература норми пулса тăнă. Кун пек сăмахсен пĕлтерĕшĕ тымарĕнчех палăрса тăрать:

КОСМОС. Тĕнче уçлăхĕ.

КОСМОНАВТ. Космосра пулса курнă (е вĕçекен) специалист.

КАРИКАТУРА. Кама та пулин йĕплесе тунă кулăшла, камитле ӳкерчĕк.

КАРИКАТУРИСТ. Карикатура ӳкерекен.

Кун йышши сăмахсен пĕлтерĕшĕсен определенийĕсене тепĕр майлă та – кашни сăмахăн пĕлтерĕшне тĕплĕн ăнлантарса – пама пулать. Калăпăр:

КАРИКАТУРА. Кама та пулин йĕплесе тунă кулăшла, камитле ӳкерчĕк.

КАРИКАТУРИСТ. Кама та пулин йĕплесе кулăшла ӳкерчĕксем тăвакан художник.

Куратпăр ĕнтĕ, малтанхи меслетпе усă курни меллĕрех, пĕр тымарлă сăмахсен хушшинчи çыхăну лайăх палăрать, пĕлтерĕше ăнлантарса пани кĕске те уçăмлă, ытлашши вăрăм çырса кайни те, вырăнсăрах икĕ хут калани те çук.

Çапах та тепĕр чухне иккĕмĕш меслетпе усă курни ăнăçлăрах пулма пултарать. Тĕсл.:

КОНТРОЛЬ. 1. Тĕрĕслев, тĕрĕслесе, асăрхаса, сăнаса тăни. 2. Контролерсен ушкăнĕ.

КОНТРОЛЕР. Кама е мĕне те пулин тĕрĕслесе тăракан работник; тĕрĕслевçĕ.

2. Вырăс чĕлхинчи иккĕмĕшле сăмахăн пултаракан тĕпĕ чăваш чĕлхине хăйне ятăн кĕмен пулсан, сăмах пĕлтерĕшне сăнласа парса ("описани" мелĕпе) ăнлантарма тивет. Тĕсл.:

КАМЕНЩИК. Чул саракан, чул е кирпĕч çурт купалакан рабочи.

Кун пек сăмахсен чылай чухне пит анлах усă курман синоним (чăваш сăмахĕ) пур, ăнлантарура вĕсемпе те усă курмалла:

ГРУЗЧИК. Мĕн те пулин тиекен, пушатакан рабочи; тиевçĕ.

КРОВЕЛЬЩИК. Çурт çийĕ витекен; тăрăçă.

6.2.0. Ĕç пурнăçлакана кăтартакан тĕп чăваш сăмахĕсен шутне, тĕпрен илсен, иккĕмĕшле сăмахсем кĕреççĕ. Вĕсем *-çă/-çĕ/-ç* аффикс хушăннипе *-а/-е, -акан/-екен/-кан/-кен* аффикслă причасти формисем тата *-кăн/-кĕн, -чăк/-чĕк* аффикслă паллă ячĕсем япала ятне куçнипе пулнă.

6.2.1. Асăннă аффикссенчен чи тухăçли хальхи вăхăтра – *-çă/-çĕ/-ç*. Вăл япала ячĕ çумне хушăнса ĕç тăвакана палăртма пулăшать. Сăмах пулăвĕн ку тĕсĕ çинчен Н.П.Петров туллин çырса кăтартнă[28]. Вăл *-çă/-çĕ/-ç* аффикс хушăнса пулнă иккĕмĕшле сăмахсене тĕпĕсен пĕлтерĕшне (ĕç объекчĕ, ĕç результачĕ, ĕç хатĕрĕ, ĕç вырăнĕ т.ыт.те) кура классификациленĕ. Пире вара ытларах ку сăмахсен пулăвĕн тишкерĕвĕ интереслентерет. Тĕпчевçĕ вĕсен тымарĕ ытларах чухне глагол пулнине палăртнă (чылай чухне вара сăмах тĕпĕнчи *-у/-ӳ, -ав/-ев/-в* аффикспа пулнă япала ячĕсем хăйсем тĕллĕн çӳремессе те пултараççĕ-мĕн)[29].

1. Ку сăмахсен пĕлтерĕшĕсене определени пама глагол формипе çеç усă курни те çителĕклĕ пулма пултарать:

КĔРЕШӲÇĔ. Кĕрешекен.

СУЕÇĔ. Суякан, улталакан.

2. Хăш чухне ку кăна çителĕксĕр, дефиниције анлăрах тума тивет:

КУÇАРУÇĂ. Пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçаракан специалист.

ЕРТӲÇĔ. Мĕне те пулин е кама та пулин ертсе пыракан.

3. Тепĕр чухне тата сăмах тымарĕпе (глаголпа) мар, сăмах тĕпĕпе (япала ячĕпе) усă курса ăнлантарни вырăнлăрах:

ТĔПЧЕВÇĔ. Наука тĕпчевĕсем тăвакан (е ирттерекен) специалист.

ÇĔНТЕРӲÇĔ. Çĕнтерӳ тунă çын.

Пĕрремĕшле япала ячĕсем çумне те хушăнать ку аффикс (*сулăçă, тимĕрçĕ, кĕтӳçĕ* т.ыт.те). Вĕсенчен те хăшнепĕрне глаголăн хальхи вăхăт причастийĕпе ăнлантарма пулать:

ТĔРĔÇĔ. Тĕрлекен.

ТАШĂÇĂ. Ташлакан; ташă ăсти.

Чылай чухне вара "пултаракан тĕп + хальхи вăхăт причастийĕ" схемăпа ăнлантарма тивет:

КĂМПАÇĂ. Кăмпа пуçтаракан.

СУЛĂÇĂ. Сулă юхтаракан.

ПУЛĂÇĂ. Пулă тытакан.

Çак схемăнах анлăлатса йĕркеленĕ определенисем те пулма пултараççĕ:

ТИМĔРÇĔ. Тимĕре туптаса хатĕрсем тăвакан.

*-çă/-çĕ/-ç* аффикслă сăмахсен тепĕр ушкăнĕ (*миллион + -çă, кролик + -çă* т.ыт.те), вырăс чĕлхинчи ĕç тăвакана пĕлтерекен иккĕмĕшле япала ячĕсене калькăласа куçарнипе пулса кайнă. Ку терминсене Н.П.Петров "*-çă/-çĕ/-ç* аффикслă çурма калькăсем" тесе палăртать[30]. 1992 çулхи чăвашла-вырăсла словарьте *караванçă, кроликçă* (вĕсен вырăсла варианчĕсем словникра çук), *миллионçă* (*миллионер* сăмах патне отсылка панă), *музыкçă* (*музыкант* сăмаха та словника кĕртнĕ, пĕр-пĕрин патне отсылка тумасăрах вырăсла куçару панă) т.ыт. сăмахсем те пур. Чăваш гуманитари институчĕн тĕп картотекине пăхсан та çакнах калама пулать: Тĕслĕхрен, *караванçă* сăмах тĕслĕхсенче пур, *караванщик* çук, *миллионер* тата *миллионçă*, *музыкант* тата *музыкçă* сăмахсен икĕ варианчĕ те тĕл пулать. Паллах, картотекăри сăмахсене пурне те ăнлантару словарьне кĕртме тата пĕлтерĕшĕсене уçăмлăн, май килнĕ таран кĕскен ăнлантарса пама тăрăшмалла. Тăтăшрах усă куракан вариантне ăнлантарса, тепĕрне отсылка парсан çителĕклĕ пулма кирлĕ. Тĕсл.:

МУЗЫКАНТ. Музыкçă тениех.

МУЗЫКÇĂ. Музыка инструменчĕ калакан (е юрлакан) артист.

6.2.2. М.И.Скворцов редакциленĕ чăвашла-вырăсла словарьте панă чăваш чĕлхин сăмах тăвакан аффиксĕсен списокĕнче *-а/-е* тата *-акан/-екен/-кан/-кен* аффиксене те асăннă, вĕсем глагол çумне хушăнса япала ячĕсем тăваççĕ-мĕн [ЧВС – 1982, 661 с.]. Çав вăхăтрах И.П.Павлов та, И.А.Андреев та *-а/-е* аффикслă сăмахсем хальхи вăхăт причастийĕсем япала ятне куçнипе пулнă тесе çирĕплетеççĕ[31]. Кун пек сăмахсем нумай мар, "хальхи вăхăтра глаголсем çумне *-а/-е* аффикс хушăнса çĕнĕ япала ячĕсем пулмаççĕ"[32]. Вĕсенчен чылайăшĕ ĕç тăвакан çынна мар, ĕç хатĕрне е ĕç результатне пĕлтереççĕ (*турта, пăра, виçĕ, ана* т.ыт.те), "ĕç тăвакан çын" пĕлтерĕшпе – *пăха* "смотритель", *йĕре* "плакса" тĕл пулать.

*-акан/-екен* – хальхи вăхăт причастийĕн аффиксĕ. Глаголăн ку формипе час-часах япала ячĕн функцийĕнче усă курасçĕ (анчах та чылай чухне вăл глаголăн грамматика паллисене çухатмасть, И.А.Андреев тĕп паллă шутне ят сăмахсене управлени йĕркипе тытса тăрасси сыхланса юлнине палăртать[33]).

Вăл е ку причасти япала ятне пĕтĕмпех куçнине кăтартакан критери – глаголăн грамматика паллисене пĕтĕмпех çухатни. Ăнлантару словарĕн словникне йĕркеленĕ чухне те çак принципах пăхăнмалла пулать. Енчен те вăл е ку сăмах хальхи вăхăтра япала ячĕн шайĕнче пулни, унăн лексика тата грамматика паллисем те çакна кăтартни иккĕлентермест пулсан, ăна словаре кĕртмелле. Ытти тĕрĕк чĕлхисемпе танлаштарсан, чăваш чĕлхинчи пĕр-пĕр хальхи вăхăт причастийĕ япала ятне куçни е куçманни пирки ыйту тухса тăмасть. Халиччен тухнă чăвашла-вырăсла словарьсене, тĕпрен илсен, лексика единицисене çеç кĕртнĕ[34].

Маларах каланăччĕ ĕнтĕ: ĕç тăвакан çынна пĕлтерекен япала ячĕсене определени панă чухне ытларах хальхи вăхăт причастийĕ урлă ăнлантарма тивет. Хальхи вăхăт причастийĕсенчен пулса кайнă япала ячĕсене ăнлантарма вара урăх мел шырамалла. Тĕслĕхрен, *вĕренекен*, *вулакан* йышши сăмахсен пĕлтерĕшĕсене мĕнле дефиници памалла-ха? Кунта темиçе çул пулма пултарать:

1) грамматика е сăмах пулăвĕ урлă ăнлантарни;
2) синонимсем урлă ăнлантарни;
3) сăнласа парса ăнлантарни ("описание").

*Вĕрентекен* сăмаха грамматика тата сăмах пулăвĕ тĕлĕшĕнчен çакăн пек характеристика пама пулать: "*вĕрент* глаголăн хальхи вăхăт причасти форминчен куçнă çак глагол пĕлтерĕшне кура ĕç тăвакана пĕлтерекен япала ячĕ". Ку сăмах пĕлтерĕшне сăнласа парса та ăнлантарма пулать. Калăпăр: "ВĔРЕНТЕКЕН. 1. Ачасене е çамрăксене ăс-тăн тата воспитани паракан специалист". Иккĕмĕш пĕлтерĕш уйăрсан та йăнăш пулмĕ: "2. Пĕр-пĕр вĕрентӳ, теори, наука шкулне йĕркелесе яракан, ертсе пыракан".

Синоним мелне илес пулсан, çакна палăртса хăвармалла: *вĕрентекен* тата *учитель* сăмахсем – тулли синонимсем, çавăнпа та *учитель* сăмаха (вăл алфавит йĕркипе каярах пулнă пирки) "вĕрентекен тениех" теме юрать. *Вĕрентӳçĕ*

сăмахăн пĕлтерĕшĕ ытларах *вĕрентекен* сăмахăн иккĕмĕш пĕлтерĕшне çывăх, "ВĔРЕНТӲÇĔ. Вĕрентекен 2 тениех" вариант сĕнме пулать. *Преподаватель* сăмах пĕлтерĕшĕ вара кăшт ансăртарах, ăна çакăн пек определени парсан вырăнлă:

ПРЕПОДАВАТЕЛЬ. Вăтам, ятарлă е аслă шкулта пĕр-пĕр предмет вĕрентекен специалист.

*-ан (-ен)* аффикслă хальхи вăхăт причастийĕсем те япала ятне куçаççĕ: *автан* < *авăт*, *çыран* < *çыр*, *суран* < *сур* т.ыт.те. Мăшăрлă причастисенчен пулнă япала ячĕсен хушшинче çынна пĕлтерекеннисем те пур: *иртен-çӳрен*, *килен-каян*, *кĕрен-тухан*. Ку сăмахсем пĕтĕмлетӳ пĕлтерĕшлĕ.

7.0.0. Çынна характеристика паракан сăмахсен шутне эпир кăмăл-туйăмпа (эмоципе) хаклакан сăмахсене (В.И.Сергеев вĕсене "номинативно-экспрессивные антропосемизмы" теме сĕнет[35]) çеç мар, çыннăн пĕр-пĕр пахалăхне кăтартакан нейтраллă сăмахсене те кĕртесшĕн. Пĕтĕмĕшле ку сăмахсем – çынна кĕлетке, сăн-пит, сывлăх, ăс-хакăл тата ăсталăх, кăмăл-туйăм, тыткаларăш уйрăмлăхĕсене тĕпе хуракан ятсем.

Эмоци туллилĕхне кура çыннăн пахалăхне кăтартакан сăмахсен пĕр пайне нейтраллă стильлĕ теме пулать: "туйăмсăр" сăмахсем (*вată*, *çамрăк*, *суккăр* т.ыт.те), ырлакан туйăмлă сăмахсем (*ĕçчен*, *ăста* т.ыт.те). Ытларахăшĕн пĕлтерĕшĕ вара сивлекен, тиркекен сĕмлĕ (*çапкаланчăк*, *чупкăн*, *усал* т.ыт.те). Словарьсенче кун йышши сăмахсем çумне çакăн пек паллăсем хушаççĕ: ансат пуплев (*просторечие*), тӳрккес сăмах (*грубое слово*), ятлаçу сăмахĕ (*бранное слово*), иронийллĕ сăмах (*ироническое*), ырлавсăр сăмах (*неодобрительное слово*), йĕрĕнчĕклĕ сăмах (*презрительное слово*), мăн кăмăллă сăмах (*пренебрежительное слово*)*.

7.1.0. Çын пахалăхне кăтартакан пĕрремĕшле паллă ячĕсем пурте тенĕ пекех япала ячĕн функцине йышăнаççĕ. Иккĕмĕшле паллă ячĕсенчен вĕсене ку тĕлĕшпе ытларах **-кăн/-кĕн, -чăк/-чĕк, -тай/-тей/-ттай/-ттей** аффикслă сăмахсем çывăх. Ку аффикссем хушăннипе пулнă паллă ячĕсем – тымарăн (глаголăн е паллă ячĕн) пĕлтерĕшне кура – пурте тенĕ пекех çыннăн ырă мар енĕсене палăртаççĕ. Пĕлтерĕшĕсенче ырламаннине, тиркенине, сивленине

---

* Терминсене 1982 çулхи чăвашла-вырăсла словарьтен илнĕ (16–17 с.).

кăтартакан сĕм пур. Çын пахалăхне кăтартакан паллă ячĕсем ирĕккĕнех япала ятне куçма пултараççĕ. Тĕслĕхрен:

*Вăрмансенче таркăн нацистсем ашкăнатчĕç* (А.Емельянов). – *Аха, çĕрлехи таркăн таврăнать-ха пулас пирĕн,* – *хаваслăн йăшăлтатса илчĕ Капитонов* (Н.Мартынов).

*Çак каппайчăк ачана пĕри çакăнтах вĕрентсе илесшĕнччĕ* (Е.Лисина). *Каппайчăкăн калпакĕ те калай, тет* (Ват. сăм.).

*Мана, авă, çак мăнттай пичисем ятласшăн курăнать* (А. Ĕçхĕл). *Санашкал мăнттая халиччен курманччĕ* (Н.Теветкел).

Евĕрлев сăмахĕ çумне **-ти** аффикс хушăннипе пулнă паллă ячĕсем те япала ятне куçаççĕ:

*Вăхăт мĕшĕлти çынсене кĕтес çук* (Ват. кал.). *Пасар урамĕнче пăртак çӳресенех пĕчĕк мĕшĕлти ывăнса ӳкме пуçларĕ* (Х.Уяр).

– *Мĕн, эс мана пакăлти çын вырăнне хуратăн-им?* (В.Чебоксаров). *Анчах вĕсем те ăнланчĕç пакăлтие, буфет çывăхне ями пулчĕç* (В.Кузьмин).

7.2.0. Ку сăмахсене ăнлантару словарьне кĕртнĕ чухне мĕн шута илмелле-ха? Чăн малтан, пĕр сăмахпах пуплевре паллă ячĕ пек те, япала ячĕ пек те усă кураççĕ пулсан (чăваш чĕлхинче конверси пулăмĕ пур тесен те, ун пек пулăм пирĕн чĕлхешĕн характерлă мар тесен те), вĕсене омонимсем теме тивет[36]. Чăвашла-вырăсла словарьсенче вара ку енĕпе çирĕп система тытса пыман. Юлашки чăвашла-вырăсла словарьте те çаплах, тĕслĕхрен:

МУХТАНЧĂК 1. Хвастун; бахвал, самохвал, пустозвон // хвастливый; ~ *çын* хвастливый человек; ~*ăн пуш енчĕк* посл. у пустозвона и кошелек пустой; 2. хвастовство, бахвальство, самохвальство; *унăн ~не пĕтермелле-ха* его нужно отучить от хвастовства [ЧВС – 1982, 250 с.].

Чăваш чĕлхе пĕлĕвĕн теори шайĕнче нумай пĕлтерĕшлĕхпе омоними ыйтăвне татса паманни лексикографсен умне йывăрлăхсем кăларса тăратать. И.П.Павлов сĕнĕвне тĕпе хурсан, кунта икĕ омоним пулмалла[37]: **мухтанчăк I** яп. я., **мухтанчăк II** п. я. Вĕсене пĕлтерĕш (лексика семантики) тĕлĕшĕнчен çеç пăхсан, уйрăмлăхне палăртма йывăр (пĕр пеклĕх ытла та пысăк вырăн йышăнса тăрать), анчах та грамматика паллисем уйрăм сăмахсем (омонимсем) теме май параççĕ[38].

## Асӑрхаттарусемпе литература

[1] *Карпович А.Е.* О лексикографической терминологии //Современная русская лексикография. Л.: Наука, 1977. С. 208.

[2] *Гузеев Ж.М.* Семантическая разработка слова в толковых словарях тюркских языков. Нальчик, 1985. С. 131–135; *Евгеньева А.П.* Определения в толковых словарях //Проблема толкования слов в филологических словарях. Рига, 1963. С. 20; *Земская Е.А.* Производные слова в толковых словарях русского языка //Современная русская лексикография. Л.: Наука, 1977. С. 115.

[3] Кун пирки Ю.Д.Апресян ҫапла ҫырать: "...Поместить слово в соответствующий словообразовательный ряд или, в более общем виде, обнаружить для него место в системе (если, конечно, оно есть) значит наполовину обеспечить его правильный семантический анализ. К тому же результату приводит и помещение толкуемого слова в группу тематически связанных друг с другом слов. ...Решение, полученное для большой группы слов, будет обладать достоинством общности и последовательности перед любыми частными решениями, принимавшимися без учета однородных фактов, которые принадлежат к той же микросистеме, что и данный факт" [*Апресян Ю.Д.* Лексическая семантика: Синонимические средства языка. М.: Наука, 1974. С. 102–104].

[4] Лингвистический энциклопедический словарь. М., 1990. С. 437.

[5] *Уфимцева А.А.* Лексическое значение. Принцип семиологического описания лексики. М.: Наука, 1986. С. 114–122; *Белоусова А.С.* Имена лиц и их синтаксические свойства //Слово и грамматические законы языка: Имя. М.: Наука, 1989. С. 131–205; *она же.* Русские имена существительные и со значением лица (Лексический класс и вопросы его словарного описания) //ВЯ, 1981. № 3. С. 71–84.

[6] *Кузнецов А.М.* Сопоставительно-типологический анализ терминов кровного родства в английском, датском, французском и испанском языках //ФН, 1970. № 6. С. 49–59; *Ломтев Т.П.* Конструктивное построение смыслов имен с помощью комбинаторной методики (Термины родства в русском языке) //ФН, 1964. № 2. С. 108–120; *Моисеев А.И.* Типы толкования терминов родства в словарях современного русского языка //Лексикографический сборник. Вып. 5. М., 1962.

[7] *Моисеев А.И.* Наименование лиц по профессии и толковые словари современного русского литературного языка //Современность и словари. Л., 1978. С. 149–158; *Шкатова Л.А.* Толкование лексических значений названий разных лиц по профессии //Проблематика определения терминов в словарях разных типов. Л.: Наука, 1976.

[8] *Золотницкий Н.И.* Корневой чувашско-русский словарь. Казань, 1875. С. 119–141; *Сергеев Л.П.* К вопросу лингвистической географии терминов родства и свойства в чувашском языке //Уч. записки ЧНИИЯЛИЭ. Вып. 34. Чебоксары, 1967. С. 44–66; *Егоров Н.И.* Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства: I. Мать (Родительница) //Труды ЧНИИЯЛИЭ: Вопросы лексикологии и фразеологии чувашского языка. Вып. 84. Чебоксары, 1979. С. 4–68; *он же.* Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства: II. Отец (Родитель) //Исследования по этимологии чувашского языка. Чебоксары, 1981. С. 3–46; *продолжение.* Исследования по лексикологии

и фразеологии чувашского языка. Чебоксары, 1983. С. 3–26; *он же.* Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства: III. Старший брат //Этимологические исследования по чувашскому языку. Чебоксары, 1984. С. 3–32; *он же.* Опыт этимологизации чувашских терминов родства и свойства: IV. Старшая сестра //Чувашский язык: Проблемы исторической лексикологии. Чебоксары, 1986. С. 3–26.

[9] *Петров Н.П* Развитие словообразовательных типов с аффиксом -çă/-çĕ/-ç и пополнение лексики чувашского литературного языка в советский период //Труды ЧНИИЯЛИЭ: Чувашский язык и литература. Вып. 67. Чебоксары, 1976. С. 3–42.

[10] *Сергеев В.И.* Развитие лексической семантики чувашского языка (Основные тенденции). Чебоксары, 1991; *он же.* Семантическая структура существительных – названий лиц – в современном чувашском языке //Тюркология, 1992. № 1. С. 53–55.

[11] *Павлов И.П.* Çын е этем? //Ялав, 1987. № 9. 16 с.

[12] *Сергеев В.И.* 1992. С. 54.

[13] *Андреев И.А.* О категории дефинитивности в чувашском языке //Ученые записки ЧНИИЯЛИЭ. Вып. 28. Чебоксары, 1965. С. 83–84.

[14] Акă, тĕслĕхрен, Ю.Д.Апресян асăрхаттарăвĕ: "Долгое время было принято (...) трактовать женский пол как "не мужской". Но отрицание признака "мужской" (...) не равно утверждению признака "женский", и не потому даже, что кроме мужчин и женщин существуют андрогины, но потому, что каждый из полов имеет собственные физиологические и анатомические признаки. Описать эти признаки значит истолковать значения соответствующих слов" [*Апресян Ю.Д.* 1974. С. 299].

[15] *Долгих Н.Г.* Теория семантического поля на современном этапе развития семасиологии //ФН, 1973. № 1. С. 195.

[16] *Егоров Н.И.* 1979. С. 42.

[17] *Çавăнтах.* С. 14–15, 49–50, 64–66; 1981. С. 15, 17; 1982. С. 5, 7, 15.

[18] *Сергеев Л.П.* 1967. С. 60.

[19] *Егоров Н.И.* 1982. С. 13.

[20] *Сергеев Л.П.* 1967. С. 60.

[21] *Çавăнтах.* С. 58.

[22] Диалект варианчĕсене çак ĕççенчен илнĕ: *Сергеев Л.П.* 1967. С. 59; *Егоров Н.И.* 1982. С. 13.

[23] *Сергеев В.И.* 1991. С. 23; *Сергеев Л.П.* 1967. С. 58.

[24] *Сафиуллина Ф.С., Галиуллин Н.Р.* Татарский речевой этикет //Русско-татарский разговорник. Казань, 1986. С. 272.

[25] *Сергеев Л.П.* 1967. С. 58.

[26] *Егоров Н.И.* 1979. С. 46.

[27] *Гузеев Ж.М.* 1985. С. 148–157; *Земская Е.А.* 1977. С. 111.

[28] *Петров Н.П.* 1976. С. 3–42.

[29] *Çавăнтах.* 1976. С. 40–41.

[30] *Çавăнтах.* 1976. С. 37–38.

[31] *Павлов И.П.* Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Шупашкар. 1965. 291 с.; *Андреев И.А.* Морфологические и синтаксические особенности причастий настоящего времени в чувашском языке //Уч. записки НИИЯЛИЭ при Совете Министров ЧАССР. Вып. 16. Чебоксары, 1958. С. 78.

[32] *Павлов И.П.* 1965. 291 с.

[33] Акă унăн ĕçĕнчен илнĕ йĕркесем: “В качестве управляемых слов при этих причастных формах выступают имена существительные и их эквиваленты, местоимения. (...) В качестве примыкающих слов при причастии на -акан/-екен возможны наречия, деепричастия, подражательные слова, инфинитивы, реже числительные” [*Андреев И.А.* 1958. С. 85–86].

[34] Тĕрĕк чĕлхисемшĕн ку ыйту çивĕч пулнине Ж.М.Гузеев çапла ăнлантарать: “Дело в том, что этот вопрос во многих случаях осуществляется произвольно, без учета лексикализации данной формы причастия”; “В результате недостаточного учета лексикализации словник некоторых тюркских толковых словарей (...) перегружен причастиями на -ыучу...” [*Гузеев Ж.М.* Проблематика словника толковых словарей тюркских языков. Нальчик, 1984. С. 74].

[35] *Сергеев В.И.* 1991. С. 33.

[36] *Павлов И.П.* Образование слов по конверсии в чувашском языке //Вопросы фонетики, грамматики и лексикологии чувашского языка. Чебоксары, 1988. С. 27–28.

[37] *Çавăнтах.* С. 28.

[38] “После анализа подобных словарных статей невольно приходишь к следующему выводу. Если в словарях в число лексических значений слова автор включает и категориальные значения, то, следовательно, не учитываются им ни парадигмы форм и ни валентностные свойства их”. *Çавăнтах.* С. 27.

## Словарьсем


1. Ашм., I–XVII: *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки: Хусан; Шупашкар, 1928–1950.
2. ВЧС – 1971: Вырăсла-чăвашла словарь. М., 1971.
3. Ожегов – 1990: *Ожегов С.И.* Словарь русского языка. М., 1990.
4. Сергеев Д.С.: *Сергеев Л.П.* Диалектологический словарь чувашского языка. Чебоксары, 1968.
5. ССРЛЯ – V: Словарь современного русского литературного языка. Москва–Ленинград, 1956. Т. V.
6. ТЧС – 1962: Словарь туркменского языка. Ашхабад, 1962.
7. ТЧĂС – I–III: Толковый словарь татарского языка. В 3 т. Казань, 1977–1981.
8. ЧВС – 1982: Чăвашла-вырăсла словарь. М., 1982.
9. ЧЧОС – 1993: Чăваш чĕлхин орфографи словарĕ: “Хыпар” кĕнеки. 7 №. Шупашкар, 1993, çу, 6.

# ЧĔЛХЕ ИСТОРИЙĔ

*О.Р.Студенцов*

## 1873–1917 ÇУЛСЕНЧЕ КУÇАРНĂ ТĔН ЛИТЕРАТУРИНЧИ ÇĔНĔ СĂМАХСЕМ

Нумай тĕпчевçĕ чăваш çырулăх чĕлхи тĕн литературин куçарăвĕсенчен пуçланнине палăртать. Анчах çак шухăша курăмлăн çирĕплетсе паракан тĕпчевсем сахал (Н.П.Петров, С.П.Горский, В.Г.Егоров ĕçĕсенче кăна вăл тема кăштах сăнланнă). Пирĕн шутпа, ку çитменлĕхе совет тапхăрĕнчи идеологипе, çав вăхăтра хуçаланнă тапăнуллă атеизм политикипе сăлтавлама пулать.

ЧР Кĕнеке палатин каталогне пăхсан, революциччен (1873–1917 ç.) чăвашла пĕтĕмпе 750 кĕнекене яхăн пичетленни паллă. Ку кăларăмсен ытларахăш пайĕ – 500 яхăн – тĕн содержаниллĕ кĕнекесем. Асăннă литературăна тишкернĕ хыççăн эпир çакăн пек пĕтĕмлетӳ патне пырса тухатпăр: тĕн-чиркӳ кĕнекисен чăвашла куçарăвĕсем темиçе диалектпа вырăнти калаçуран наци чĕлхи – пĕтĕм чăваш халăхне ăнланмалла чĕлхе – туса хума май панă. Пĕр кĕнекен темиçе хутчен пичетленнĕ (2–10 хут) кăларăмĕсене тимлĕрех сăнасан, çакна асăрхама пулать: кăларăмран кăларăма чиркӳ-тĕн кĕнекисен чĕлхи (сăмах пулăвĕ, синтаксисĕ, сăнарлăхĕ, юлашкинчен, стилĕ те) пуянланса, йĕркеленсе пырать. Унтан та ытларах: пирĕн илемлĕ литература, наука, публицистика, ĕç стилĕсем шăпах Библипе ытти тĕн куçарăвĕсенче якатса нормăлама пуçланă чĕлхе никĕсĕ çинче аталаннă та ĕнтĕ.

Истори тата чĕлхе пĕлĕвĕнчи хăш-пĕр ĕçсенче "тĕн литературине И.Я.Яковлев куçарнă (редакциленĕ)" тенине асăрхама пулать. Çак шухăшпа вĕçне çитиччен килĕшме çук. Мĕншĕн тесен Иван Яковлевич хăй ытларах канонлă кĕнекесене (урăхла каласан, 77 кĕнекерен тăракан Библие) куçарма тăрăшни, ытти тĕн литературине вара (ӳкĕтсене, вĕрентӳсене, кĕлĕсене, юрăсене) шкул тата чиркӳ ĕçĕпе çыхăннă çынсем куçарни паллă. Вĕсен йышĕнче нумай наука ĕçченĕ пĕлекен çынсемпе пĕрлех халиччен никамах та паллă пулманнисем те пур: Иванов Д.И. (1 куçару, 207 стр.),

Филимонов Д.Ф. (8 куçару, 180 стр.), Кириллов Т.К. (3 куçару, 129 стр.), Константинов Н. (3 куçару, 112 стр.), Дмитриев В. (4 куçару, 84 стр.), Васильев П. (2 куçару, 70 стр.), Ефремов Н. (1 куçару, 42 стр.), Трофимов А. (3 куçару, 39 стр.), Григорьев Г. (2 куçару, 31 стр.), Егоров П.П. (4 куçару, 27 стр.) т.ыт.те.

Асăннă çынсен куçарăвĕсене тата вырăсла тĕн литературипе усă курса çырнă ĕçсене, тĕпрен илсен, И.Я.Яковлев редакциленĕ. Кĕнеке палатинчи тĕн кĕнекисене пăхса тухнă хыççăн çак виçĕ пысăк кăларăм куçарăвне Н.В.Никольский редакцилени паллă пулчĕ:

1. Сборник молитв, песнопений и чтений из служб Триоди постной. Вып. I. Симбирск, 1907 (куçаруçисем паллă мар).

2. Сборник проповедей на воскресные дни. Вып. II. Казань, 1910 (куçаруçăсен йышĕнче Н.К.Кузьмин, П.Е.Егоров, Н.Е.Ефремов, В.Н.Никифоров, С.М.Михайлов, Д.Ф.Филимонов пулни паллă, ыттисен хушамачĕсене кĕнекере асăнман).

3. Сборник проповедей на двунадесятые праздники и дни великих святых. Вып. III. Казань, 1913 (куçараканĕсем: П.Егоров, Н.Кузьмин, М.Данилов, К.Макаров, Г.Эльдебенев, Я.Обухов, А.Меценатов, С.Сергеев, А.Липатов, В.Разумов, В.Михайлов, Я.Стеклов, К.Сидоров, Н.Талавринов).

1873–1917 çулсенче тĕн литературине куçаракансем, кирлĕ ăнлавсене палăртма, çĕнĕ сăмахсем те ăсталанă. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри литература чĕлхине яланлăхах кĕрсе вырнаçнă, теприсене словарьсенче палăрса юлма шăпа пӳрмен.

**-лăх (-лĕх) аффикслă çĕнĕ сăмахсем**

Абстрактлă пĕлтерĕшлĕ çĕнĕ сăмах тăвас ĕçре куçаруçăсем *-лăх/-лĕх* аффикспа уйрăмах тухăçлă усă курнă. Пирĕн картотекăра кун йышши сăмахсем çĕре яхăн. Акă вĕсенчен хăшĕ-пĕри:

**Асăмлăх** (ас "память" япала ячĕ çумне камăнлăх категорийĕн пĕрреллĕ хисепри пĕрремĕш сăпат аффиксĕ *-ăм* хушăннă, унтан сăмах тăвакан *-лăх* аффикс хушнă) çĕнĕ сăмаха эпир пĕр кăларăмра çеç асăрхарăмăр [КВЗ, 1888]. Ку неологизм асăннă кĕнекере пĕтĕмпе 8 хут тĕл пулать. Пĕрре "воспоминание" пĕлтерĕшпе: *ман асăмлăх пылран тутлă, мана тытса тăни шерпетрен симлĕ.* Тепĕр хут "увековечивание" пĕлтерĕшпе: *ача-пăча урлă ĕмĕрлĕхе ят юлать, хула туса лартни ĕмĕрлĕхе асăмлăх.* Ытти ултă тĕслĕхĕнче вара *асăмлăх* кашнинчех "память" пĕлтерĕшлĕ:

*...вӗсем ҫине асӑмлӑха Израил йӑхӗсене касса ӳкернӗ* ("на память");

*...ҫавӑн пекех Неемиянӑн та асӑмлӑхӗ чаплӑ.*

Халӗ ӗнтӗ ку ҫӗнӗ сӑмаха словарьте шыраса пӑхӑпӑр: РЧСНик (1909) "память" – тӑн, "воспоминание" – астуни, "Чӑваш сӑмахӗсен кӗнекинче" [ЧСКАш II] *асӑмлӑх* – "воспоминание" тата "память" пӗлтерӗшлӗ.

Иккӗмӗш тата виҫҫӗмӗш хут *асӑмлӑх* словарь статйи пулса 1961 тата 1982 ҫулхи чӑвашла-вырӑсла словарьсене кӗрет, анчах вӗсенче "воспоминание" пӗлтерӗш кӑна сыхланса юлнӑ.

"Воспоминание" пӗлтерӗше *асӑну* ӗҫ ячӗ ҫывӑхрах пулас, "память" пӗлтерӗше вара *асӑмлӑх* тивӗҫ пулмалла пек туйӑнать (асӑрхӑр, тӗн кӗнекинче 8 хут усӑ курнӑ *асӑмлӑхӑн* пӗр пӗлтерӗшӗ ҫеҫ "воспоминание").

Ҫак кӗнекерех эпир тепӗр интереслӗ тӗслӗх куратпӑр – **асӑнмалӑх**: *Вӗсенӗн йӑхӗнче ырӑ тивлет пырать, вӗсен ӑрӑвӗ асӑнмалӑхра тӑрӗ* "...Потомки их в заветах". Кунта *асӑнмалӑх* япала ячӗ пулни пирки, пирӗн шутпа, пӗрре те иккӗленмелле мар. Ҫакна вырӑсла текст та, асӑннӑ сӑмах вырӑн падеж аффиксне йышӑнни те кӑтартса парать. Ҫирӗплетсех калама пулать: *асӑнмалӑх* тухӑҫҫӑр мелпе тунӑ, словаре кӗмен, хальхи чӗлхере усӑ курман япала ячӗ.

**Ватӑмлӑх** ҫӗнӗ сӑмаха эпир пуҫласа ПВБУ (1906) куҫарӑвӗнче асӑрхарӑмӑр (4 хут тӗл пулать). Унтан ССНЧ (1913) кӑларӑмра ҫак сӑмахпа 3 хут усӑ курнӑ. Икӗ кӗнекери текстсем пӗр евӗрлех (1913 ҫулхи кӑларӑмра 1906 ҫулта тухнӑ кӑларӑмри 4-мӗш тӗслӗх ҫук – уйрӑмлӑхӗ ҫак кӑна): *Мӗншӗн тесен, ватӑмлӑх вӑрӑм ӗмӗрте мар, ӑна ҫулсен хисепӗпе хисеплемеҫҫӗ. Ватӑмлӑх – ҫынсен ӑсӗнче, айӑпсӑр пурӑнӑҫ ватӑмлӑхӑн ӗмӗрӗ пулать... Ватӑмлӑхунта санӑн ӑсу ҫуталнӑ...* Халӗ ҫакнах САН (1914) куҫарури текстпа танлаштарса пӑхар: *Таса ватӑлӑх вӑрӑм ӗмӗрте мар, ӑна ҫулсен хисепӗпе хисеплемеҫҫӗ. Ватӑлӑх – ҫынсен ӑсӗнче, айӑпсӑр пурӑнӑҫ ватӑлӑхӑн ӗмӗрӗ пулать.*

Куҫаруҫӑсем сӑмах тӑвакан *-ӑм* аффикса *ват* сӑмах тӗпӗпе япала ячӗ тӑвакан *-лӑх* аффикс хушшине кӗртсе лартнине тӗн стильне (текстне) ҫӗкленӳллӗрех, чаплӑрах тӑвас тенипе ҫеҫ ӑнлантармалла-тӑр. Апла пулсан, *ватӑмлӑх* сӑмаха пӗр вӑхӑтрах окказионализмсен шутне те, стиль неологизмӗсен шутне те кӗртме пулать.

Ку сăмахпа унăн контексчĕ Н.И.Ашмарин словарĕнче [ЧСКАш V] пур: “**ватăмлăх** – старость. *Сборн. мол. Çынсен ăсĕнче айăпсăр пурăнăç ватăмлăхăн ĕмĕрĕ пулать... Сăваплă çын вăхăтсăр вилсен те, вăл канăçлăха кĕрет. Мĕншĕн тесен ватăмлăх вăрăм ĕмĕрте мар, ăна çулсен хисепĕпе хисеплемеççĕ*”. Ку текст ăçтан пулни каламасăрах курăнать, асăрхăр: тĕслĕх умĕн тăракан кĕскетӳ, вăрăмлатсан, “сборник молитв” тесе вуланма тивĕç.

В.Г.Егоров словарĕнчи [ЧВСЕг, 1936] статьяна шута илмесен те юрать, кунта *-ăм* аффикс камăнлăх категорийĕн пĕрреллĕ хисепри пĕрремĕш сăпат аффиксĕ: *ватăмлăх* “моя старость”. Хальхи словарьсенче *ватăмлăх* курăнмасть (М.Р.Федотов та [ЭСЧЯФед I] *ватăмлăх* сăмаха Ашмарин словарĕнчен илнине палăртнă).

**Виçелĕх** неологизм пĕтĕмпе те пĕр хут НВБ (1912) кĕнекере тĕл пулать: *Çавăнпа ĕнтĕ арлă-арăмлă çынсен пĕр-пĕринпе хутăшма чаруллă, виçеллĕ пулас пулать, вĕсен хушшинче виçелĕх пултăр*. Н.В.Никольский словарĕнче [РЧСНик, 1909] *виçе* кăна пур, Ашмаринăн [ЧСКАш V] та *виçел(л)ĕ* çеç. Пĕрремĕш хут ку сăмаха ЧВС (1961) шута илет. Пирĕн тĕслĕхри *виçелĕх* хальхи словарьте кăтартнă [ЧВС, 1982] “наличие меры”, “соразмерность” тата “чувство меры” синонимлă пĕлтерĕшсенчен виççĕмĕшне çывăхрах пулас. Çапла вара *-лĕх* аффикс кунта каллех тĕн литератури стилĕн палли пулса юлать (м.т. “виçе” сăмахăн хăйĕнех “чувство меры” пĕлтерĕш пур).

**Евĕрлĕх** çĕнĕ сăмахăн шăпи те асăннă *виçелĕх* сăмахăн-ни пекрех килсе тухать. Тĕн литературинче унпа икĕ хут усă курнă: *Эй Çăлакан, эпĕ ӳт тумтирĕме ирсĕре кăлартăм, хам ăшăмри Санăн сăнна, Сан евĕрлĕхне варларăм* [ВКАК, 1902]. *Эй Çăлакан, эпĕ ӳтĕмĕн тумтирне ирсĕре кăлартăм, хам ăшăмра Сан сăнна, Сан евĕрлĕхне вараларăм* [ВССЧ, 1913].

Ку таранччен тухнă пĕр словаре те “образ, подобие” пĕлтерĕшлĕ *евĕрлĕх* сăмаха кĕртмен, ăнлавĕ вара тĕн литературинче çеç мар, хальхи хутшăнура та пур, ăна палăртмалли термин питĕ кирлĕ.

**Ешерлĕх**: *Килĕшӳпе илем куç-пуçа кăмăллă, калча ешерлĕхĕ вĕсенчен ирттерет* “Приятность и красота вожделенны для очей твоих, но более той или другой – зелень посева” [КВЗ, 1888]. Ку сăмахпа усă курнă тĕслĕхсем тĕн

кĕнекисенче урăх курăнмаççĕ пулин те, хальхи словарьсенче ăна 1954 çултанпа [ЧВСЕг, 1954] шута илме тытăннă, анчах унта "ешĕрлĕх" тенĕ. ЧВС (1961): ешерлĕх – зелень, калча ешерлĕхĕ – зелень всходов т.ыт.те. Ахăртнех, асăннă словарьсене *ешерлĕх* "Чăваш сăмахĕсен кĕнеки" витĕмĕпе кĕнĕ. Ашмарин вара словарь статйине çӳлерех асăннă тĕн кĕнекинчен илнĕ тĕслĕхпе усă курса йĕркеленĕ.

Хальхи чĕлхере *ешерлĕхсĕр* пуçне *ешĕллĕх* сăмах сарăлчĕ. Пĕлтерĕшĕ тĕлĕшĕнчен вĕсем питĕ çывăх сăмахсем. Пĕри *ешер* глаголтан, тепри *ешĕл* паллă ятĕнчен пулнă. Ку чухнехи чĕлхере *-лăх* (*-лĕх*) аффикс глагол çумне хушăнас тухăçлăхне сӳнтернĕ, анчах кивĕ чĕлхере *-лăх* (*-лĕх*) глагол çумне те хушăнма пултарнă: *пус-пуслăх*, *пут-путлăх*, *килĕш-килĕшлĕх*, *йӳç-йӳçлĕх* т.ыт.те.

Пĕр статьярах *-лăх* (*-лĕх*) аффикслă çĕнĕ сăмахсене пурне те пăхса тухма йывăр. Çавăнпа та эпир вĕсене асăнса çеç тухăпăр:

| | | | |
|---|---|---|---|
| айăпсăрлăх | аскăнлăх | виççĕлĕх | ĕмĕтсĕрлĕх |
| ĕçлĕх | ĕçсĕрлĕх | канашлăх | килĕшӳлĕх |
| лăпкăлăх | мухтавлăх | намăслăх | начарлăх |
| пĕлĕмлĕх | пĕлменлĕх | савăнăçлăх | сăваплăх |
| сăмсалăх | сывмарлăх | çимĕç-çуратанлăх | |
| телейлĕх | тĕреклĕх | тутăлăх | тутлăлăх |
| тутлăх | ӳсĕмлĕх | хăватлăх | хĕнлĕх |
| хитрелĕх | хытăлăх | хытлăх | чарулăх |
| чарусăрлăх | ыйтамлăх | ылханлăх | т.ыт.те |

**-çă (-çĕ) аффикс хушăнса пулнă çĕнĕ сăмахсем**

Авалхи тĕрĕк чĕлхинчи *-чы* (*-чи*) аффикспа тӳр килекен *-çă* (*-çĕ*) чăваш аффиксĕ пĕр-пĕр япалапа çыхăннă ĕç тăвакан çыннăн ятне палăртать. Куçару ĕçĕ аталаннă май *-çă* (*-çĕ*) аффикслă çĕнĕ сăмахсем те текстсенче нумайрах курăнма пуçлаççĕ. Çапах та вĕсен шучĕ, *-лăх* (*-лĕх*) аффикс хушăнса пулнă неологизмсемпе танлаштарсан, чылай сахалрах. Халĕ вара И.Я.Яковлевпа унăн вĕренекенĕсем тĕн содержаниллĕ куçарусенче усă курнă *-çă* (*-çĕ*) аффикслă çĕнĕ сăмахсемпе тĕплĕнрех паллашăпăр.

**Кĕмĕлçĕ** (серебряник): *Эфес хулинче пĕр Димитрий ятлă кĕмĕлçĕ пулнă, вăл Артемида ячĕпе кĕмĕл чиркӳ кĕлеткисем туса пуранна* [РЦИ, 1894]. Пĕтĕмпе ку сăмах 5

хут тĕл пулать: 1900 ç. – 2 хут, 1904 ç., 1911 ç. – пĕрер хутчен. Ашмарин, Егоров, Сироткин словарĕсенче *кĕмĕлçĕ* çук. Н.В.Никольский те [РЧСНик, 1909] “серебряник, серебряк” вырăс сăмахĕсене *кĕмĕлçĕ* терминпа мар, “кĕмĕл япаласем тăвакан маçтăр”, “кĕмĕл шывне чикекен” сăмах майлашăвĕсемпе çеç куçарнă. Пĕрремĕш хут ку неологизма И.А.Андреевпа Н.П.Петров редакциленĕ вырăсла-чăвашла словарьте (1971) асăрхама пулать, ЧВС (1982) те *кĕмĕлçĕ* сăмаха уйрăм статьяпа панă: “серебряник, мастер по серебрению”.

**Кĕнекеçĕ** (книжник) пĕрремĕш хут “Евангелие от Матфея” (1873) куçарура тĕл пулать: *Вăл вара пуп пуçлăхĕсене, халăх хушшинчи кĕнекеçĕсене пурне те пуçтарса Христос ăçта çуралмалла тесе ыйтнă.* И.Я.Яковлевăн Евангели куçарăвĕсенче “книжник” вырăнне *кĕнекеçĕ* çĕнĕ сăмахпа усă курасси çирĕп принцип пулнă: ăна 40 хут ытла асăрхама пулать. Çав вăхăтрах ытти хăш-пĕр куçарусенче [РЦИ, 1894; УПЦН–2, 1893] “кĕнеке çынĕ”, “кĕнекеç çын” майлашусемпе усă курни те сисĕнет. 1820 çулхи “Святой Евангтель” кĕнекере “книжник” сăмаха чăвашла “хот билеггень” майлашупа куçарни, пирĕн шутпа, тӳремменĕх мар пулин те, Яковлев куçарăвĕнчи *кĕнекеçĕ* çĕнĕ сăмах пулнине çирĕплетет.

1910–1982 çулсенче пичетленнĕ ик чĕлхеллĕ словарьсенче (В.Г.Егоров словарĕсемсĕр пуçне) *кĕнекеçĕ* неологизм çирĕп тымар янă темелле. Анчах та кунта çакна асăрхаттарни вырăнлă: *кĕнекеçĕ* сăмахăн тĕн литературинчи тата хальхи словарьсенчи пĕлтерĕшĕсем тӳрĕ килмеççĕ. Танлаштарăр: тĕн кĕнекисенче вăл “знаток Библейских писаний, законов, заповедей Божьих”, ЧВС (1982) вара “библиофил, любитель книг” пĕлтерĕшлĕ.

**Пахчаçă** (садовник) сăмахпа пĕрремĕш хут “Первоначальный учебник русского языка для чуваш” (Вып. I. Казань, 1893) кĕнекере усă курнă. Н.И.Ашмарин та хăйĕн словарĕнчи *пахчаçă, пахчаçĕ* сăмахсене (“огородник, садовник” пĕлтерĕшсемпе) çӳлерех асăннă кăларăмран илнине палăртать. Иккĕмĕш хут “пахчаçă” сăмаха “Евангелие от Иоанна” (1904), виççĕмĕш хут 1911 çулхи кăларăмра асăрхама пулать: *Мария ăна, ку пахчаçă пулĕ тесе каланă.* Маларахри кăларăмсенче ку ăнлава урăхларах куçарнă: *Мария ку йывăç пахчине пăхакан пулĕ тесе каланă ăна* (1880). *Мария вăл пахчана пăхакан пулĕ тесе каланă* (1890). *Пахча пăхакан усал çын* [СИВНЗ, 1876].

Çӳлерех асăннисемсĕр пуçне "пахчаçă" çĕнĕ сăмахпа 2 хутчен "Учите детей жить по-Божьему" (Казань, 1905) кĕнекере усă курнă: *Чечеке юратакан пахчаçă чечекĕ шăтсанах ăна темĕн тĕрлĕ пăхать... Пахчаçă чунсăр чечеке çав тĕрлĕ пăхать пулсан, амăшин чунлă, ылтăнран та хаклă чечекне епле пăхас пулать.* Ку тĕслĕхре "пахчаçă" сăмаха "цветовод" пĕлтерĕш туянтарни, урăхла каласан, сăмахăн пĕлтерĕшĕ сарăлни куç кĕрет. Хальхи словарьсене [ЧВС, 1961, 1982] "цветовод" пĕлтерĕше тивĕç "чечекçĕ" сăмах уйрăм статьяпа кĕнĕ. Сăмах май каласан, "Святой Еванггельте" (1820) "садовник" сăмаха "сад хози" тесе куçарнă, Д.Дамаскин редакциленĕ "Словарь языков разных народов..." (1785) кĕнекере "бахча быхаган" тенĕ. Апла пулсан, *пахчаçă* сăмахăн авторĕ И.Я.Яковлев пулни пирки, пирĕн шутпа, иккĕленме кирлех мар.

**Пулăшуçă** (споручник): *Эй мĕскĕнсем, асап куракансем! Эсир те çак пĕлĕт çинчи пулăшуçăсем çине витĕнсе тăрăр* [НСБС, 1905]. Урăх кăларăмсенче эпир ку сăмаха асăрхамарăмăр. РЧСНик (1909) "помощник" лексемăна "пулăшакан" тесе куçарнă, чăвашла-вырăсла словарьсене те *пулăшуçă* неологизм словарь статйи пулса кĕреймен. Хальхи вăхăтри пресса чĕлхинче вара ку сăмах çĕнĕрен чĕрĕлчĕ тесен те йăнăшмăпăр, журналистсем унпа ("Хыпар" хаçатра, тĕслĕхрен) çине-çинех усă курма пуçларĕç. Словарьçăсен хăйсен сумлă ĕçĕсенче ку сăмаха тивĕçлĕ вырăн тупса парасси çеç юлчĕ темелле.

**Соломонçă** (гадальщик по книге Соломона) сăмах Н.И.Ашмарин словарĕнче çеç регистрациленнĕ: "Соломонçă: гадальщик болезни. *Манăн япаласене çав çын вăрламан-ши тесе, соломонçă патне пухăнса лараççĕ*". Ахăртнех, çак сăмахпа унăн контекстне автор "Болезни за грехи" (Казань, 1905) кĕнекерен илнĕ, танлаштарсан ку уççăнах курăнать: *...тата хĕлле улахра соломон тийекен хутпа, е оракул кĕнекипе юмăç пăхаççĕ... Манăн япаласене çав вăрламан-ши тесе соломонçă патне пухăнса лараççĕ.* Хальхи вăхăтра ку пĕлтерĕше палăртма ытларах "юмăç" сăмахпа усă кураççĕ. Çапла вара, соломонçă пĕр вăхăтрах çĕнĕ сăмах та, окказионализм та пулса тăрать.

**Çăлтăрçă** (волхв, звездочет) тĕн литературинче 1873 çултанпах курăнма пуçлать (Евангелие от Матфея): *Ирод патшара пурăннă вăхăтра, Иудейри Вифлеемре Иисус çуралсан, хĕвелтухăçĕ енчен çăлтăрçăсем Иерусалиме пынă*

*та каланӑ...* Революциччен 10 хут пичетленнӗ ҫак Евангелире "ҫӑлтӑрҫӑ" сӑмах пӗтӗмпе 40 хут ытла тӗл пулать. Унсӑр пуҫне ку неологизмпа тата 8 тӗрлӗ кӗнекере кашнинче пӗрер-виҫшер хут усӑ курнӑ. Пӗрин пуҫламӑшӗнче ҫеҫ [ГЦП, 1882] "ҫӑлтӑр паллакан" сӑмах майлашӑвӗ тӑрать, малалла вара ӑна пур ҫӗрте те *ҫӑлтӑрҫӑ* сӑмахпа ылмаштарнӑ. Куратпӑр ӗнтӗ, тӗн кӗнекисенче "волхв, звездочет" пӗлтерӗшлӗ *ҫӑлтӑрҫӑ* сӑмах термин шайӗнчех ҫирӗпленнӗ.

**Чиркӳҫӗ** (церковник, священнослужитель) И.Я.Яковлевӑн темиҫе куҫарӑвӗнче те тӗл пулать. *Ҫавӑнпа пирӗн хальхи чиркӳҫӗсене, авалхи пророксене, апостолсене, святой аттесене итленӗ пекех итлес пулать* [БОЧР, 1891]. Пӗтӗмпе ку кӗнекере "чиркӳҫӗ" сӑмахпа 5 хут усӑ курнӑ. *Иисус Христос панӑ заповедь тӑрӑх, Святой Апостолсем, чиркӳҫсем вӗрентнӗ тӑрӑх пирӗн ҫынна пӗтӗм кӑмӑлпа хӗрхенес пулать* [ОХЛ, 1894, 1898 — икшер хут усӑ курнӑ]. Н.В.Никольский словарӗ (1909) чиркӳ-тӗн пурнӑҫӗпе ҫыхӑннӑ сӑмахсенчен пуян пулин те, асӑннӑ неологизм кунта курӑнмасть. Юлашки вӑхӑтра ҫеҫ тӗрлӗ жанрлӑ литературӑра *чиркӳҫӗ* сӑмах час-часах тӗл пулма пуҫларӗ. Халлӗхе вӑл словарьсене кӗреймен-ха. М.И.Скворцов редакциленӗ чӑвашла-вырӑсла словарьте (1982) ку пӗлтерӗше "чиркӳ" статьяра уҫса панӑ: "чиркӳ ҫыннисем – духовенство, церковники".

**Чӳлмекҫӗ** (горшечник) сӑмах вырӑнӗнче 1820 ҫулхи СЕ куҫарура икӗ хутӗнче те "коршак усты" сӑмах майлашӑвӗ тӑрать: *Канашлаза вара вулзам сине коршак усты сирь содын ильчесь... Вулзам вара бачесь вулзане коршак усты сирьжень.* И.Я.Яковлевӑн ЕМ (1873) пӗрремӗш куҫарӑвӗнчех вара "горшечник" ӑнлава *чӳлмекҫӗ* сӑмахпа палӑртнӑ (ытти кӑларӑмсенче те ку йӑлана ҫирӗп тытса пыни курӑнать). Ҫак пулӑма шута илсе *чӳлмекҫӗ* сӑмаха, пирӗн шутпа, ҫав тапхӑрти неологизм тесех хакламалла.

**Эмелҫӗ** (врач, лекарь, врачеватель). Пӗтӗмӗшле илсен, ку сӑмах 1910–1982 ҫулсенче тухнӑ куҫару словарӗсенче нумайӑшӗнче пур. И.Я.Яковлев чи малтанхи Евангелире [ЕМ, 1873] чӑвашлатнӑ "лекӗр" вырӑс сӑмахӗпех усӑ курнӑ, малаллахи Евангелисенче пуринче те ҫак вырӑс сӑмахне *эмелҫӗ* ҫӗнӗ сӑмахпа ылмаштарнӑ. "Лекӗр" сӑмах пӗтӗмпе 7 тӗрлӗ кӗнекере 13 хутчен тӗл пулать пулсан, *эмелҫӗ* вара 20 ытла кӗнекере – пилӗк теҫеткене яхӑн. Куратпӑр ӗнтӗ,

*эмелçĕ* революцичченхи тĕн литературинче пĕтĕмĕшпех пуç пулса тăрайман, урăхла каласан, унта вариантлăх хуçаланнă темелле. Ку пулăм РЧСНик-ре (1909) те сăнланнă: "врач – лекĕр, емелçĕ", "лекарь – лекĕр, тухтăр, емелçĕ".

СЕ (1820) "врач" сăмаха "амаль усты, амаль асти", е "амальзях", е тата "чирьзане тюрледеггень уста" тесе куçарни, пирĕн шутпа, И.Я.Яковлев куçарăвĕсемччен чăваш чĕлхинче (тĕрĕсрех – тури диалектра) *эмелçĕ* сăмах пулманнине çирĕплетет.

### -у (-ÿ) аффикс хушăнса пулнă çĕнĕ сăмахсем

Çĕнĕ сăмахсен шутĕнче глагол тĕпĕ çумне *-у* (*-ÿ*) аффикс хушăнса пулнисем пĕр 25. И.П.Павлов чĕлхеçĕ кун йышши япала ячĕсене ĕç ячĕсем тесе уйăрать, Пушкăртпа Тутар республикисенчи чăвашсен чĕлхинче ку аффикс хушăннипе пулакан формăсем глаголтан уйрăлсах çитейменнине палăртать (*вĕçсе пыру*, *килсе çÿрÿ*), литература чĕлхинче *-у* (*-ÿ*) аффикс глагол формине мар, иккĕмĕшле япала ячĕсем тăвать тет [Павлов, 285 с.]. В.И.Сергеев тĕпчевçĕ "ĕç ячĕ япала ячĕн категори формисене йышăнайманни ăна иккĕмĕшле япала ячĕ теме май памасть", "ĕç ячĕсене морфологире уйрăм ушкăн (класс) туса пăхмалла" тесе шутлать [ХЧЧСер, 139 с.]. Тавлашăва кĕмесĕрех эпир çак çĕнĕ сăмахсем ĕç ячĕсен ушкăнне кĕнине палăртатпăр:

**Ӳсĕрĕлÿ** (пьянство): *Эрехе ÿсĕрличчен ан ĕç, ÿсĕрĕлÿ нихăçан та санпа ан çÿретĕр* "Вина до опьянения не пей, и пьянство да не ходит с тобою в пути твоем" [КВЗ, 1898]. Никольскин вырăсла-чăвашла словарĕнче [РЧСНик, 1909] "пьянство" – *ĕçсе ÿсĕрĕлни.* РЧС (1971) та "опьянение" сăмаха (тÿрĕ пĕлтерĕшĕпе каланине) чăвашла уçăмлăн куçарайман. Чăвашла-вырăсла словарьсенче те *ÿсĕрĕлÿ* çук. 1982 çулхинче çеç *ÿсĕр* сăмахăн 2-мĕш пĕлтерĕшĕ – "опьянение". Вăл та пулин унта Ашмарин словарĕн витĕмĕпе кĕнĕ пулас.

Çапла вара, *ÿсĕрĕлÿ* сăмаха эпир пĕр словарьте те тупаймарăмăр, куçаруçă ăна "пьянство" пĕлтерĕш туянтарнине, ахăртнех, çĕнĕлĕх тесе шутламалла. *Ӳсĕрĕлÿ* сăмаха вырăсла "опьянение" тесе куçарсан тĕрĕсрех пулмалла пек, "пьянство" сăмах валли вара чăвашла урăх термин (е сăмах майлашăвĕ) шырама тивет пулас. Анчах, мĕнле пулсан та, пирĕн шутпа, *ÿсĕрĕлÿ* сăмах пулас словаре уйрăм статьяпа кĕме тивĕç.

[**Ытлашши**] **çийӳ** (многоядение): *Ытлашши çийӳ чире ларать, иртĕхсе çие-çие тăм-хаяр чир те тупăнать...* "От многоядения бывает болезнь" [КВЗ, 1888].

ВЧС-сенче пĕринче те "многоядение" статья çук. Ашмарин словарĕнче çеç *çийӳ* "еда, ядение". Шел пулин те, ăçтан илнине асăнман, пĕрремĕш тĕслĕхĕ Ашмарин асăннинчен 49 çул ватăрах (вĕсем пĕр çăлкуçран та пулма пултараççĕ). Ашмарин словарĕсĕр пуçне ку сăмах урăх ниçта та тĕл пулмасть. Çапла вара *çийӳ* сăмах Библи текстĕнчи пĕртен-пĕр тĕслĕх, чиркӳ стилĕн палли пулса юлать. (Хальхи чĕлхере *ытлашши çини* сăмах майлашăвĕпе усă курни куç кĕрет.)

**Çуну**: *Çамрăк çын, хитре сăн-сăпачĕпе сывă ӳчĕ çунса тăнă вăхăтра, шăрпăк тивретнипе пысăк çуну пулмалли вăхăтра, – ӳт астарнă хыççăн каймасан,... çĕнтерекен паттăр евĕрлĕ* [НВБ, 1912].

Ашмарин словарĕнче те, ЧВС-сенче те "çуну" статья çук. ВЧС-сенче (1909, 1940, 1972) "горение" сăмаха яланхи мелпе иртнĕ причастин палăрту формипе куçарнă: *çунни*. Пирĕн тĕслĕхре *çуну* неологизма сăнарлă, куçăмлă пĕлтерĕшпе калани сисĕнет. Çапла вара, *çуну* сăмах нихăш словаре те кĕреймен ("горение" ăнлава палăртакан ĕç ячĕ чăваш чĕлхинче ку таранччен те çук).

**Вăрçу**: *...ун чухне мĕн чухлĕ çĕмĕрĕлӳ, вăрçу, çапăçу, пĕр-пĕрне аманту, вĕлерӳ...* [ПМУ, 1910]. Çак тĕслĕхри *вăрçу* сăмах Ашмарин словарĕнче пур: "брань. *О пьяницах*" тесе ăнлантарнă. 1919, 1936, 1954 çулхи ЧВС-сенче ку сăмах çук, 1961-мĕш çулхинче *вăрçу-тĕркĕшӳ*, 1961-мĕшпе 1982-мĕшсенче *вăрçу-харкашу* мăшăр сăмахсен малтанхи компоненчĕ пулса юлнă. Хальхи вăхăтра ытларах усă куракан *вăрçă* сăмахăн пĕлтерĕшĕ *вăрçу* сăмахăннинчен анлăрах.

Мĕншĕн-ха куçаруçă "вăрçă" сăмахпа мар, *вăрçупа* усă курать? Пирĕн шутпа, сăлтавĕсем çаксем пулма пултараççĕ:

1. "Вăрçă" сăмахăн пĕлтерĕшĕ ытла анлă, çав тĕслĕхре *вăрçупа* усă курни шухăша конкретлăрах, уçăмлăрах тăвать.

2. Юнашар тăракан сăмахсем пурте *-у* (*-ӳ*) аффикс хушăнса пулнă ĕç процесĕсен ячĕсем, вĕсем пĕр евĕрлĕрех пулни предложение илемлĕх, çыпăçулăх тата янăравлăх кĕртет.

3. "Вăрçă" нейтраллă стиль сăмахĕсен шутне кĕрет тесен пысăк йăнăшах пулмасть пулĕ, мĕншĕн тесен унпа калаçу чĕлхинче те, кĕнеке-çыру чĕлхинче те пĕр пекех

усӑ курӑҫҫӗ. *Вӑрҫу* вара ытларах кӗнеке стилӗ еннелле туртӑнать, тӗн кӗнекисен ҫӗкленӳллӗ стильне палӑрма пулӑшать.

Шел, *-у* (*-ӳ*) аффикс хушӑнса пулнӑ, ӗҫ ятне пӗлтерекен, тӗн кӗнекисенче час-часах тӗл пулакан чылай сӑмах революци хыҫҫӑн тухнӑ ЧВС-сенче хӑйсене тивӗҫлӗ вырӑн тупайман. Вӗсен шутне тата ҫак сӑмахсене кӗртме пулать: **лӑплану** (успокоение), **хуҫӑлу-аману** (сокрушение), **ӳпкелӳ** (упрек, недовольство, огорчение), **тиркӳ** (различие, различение), **лӑплантару** (успокоение, утешение), **хӑру** (усыхание), **аскӑнлану** (распутство), **ясарлану** (блуд), **каҫарттару** (прощение) т.ыт.те.

## Литература

### I. Тӗн кӗнекисем


БОЧР, 1891 – О Боге и отношении Его к человеческому роду по учению православной христианской церкви. Казань, 1891. – 136 с.

ВКАК, 1902 – Великий канон святого Андрея Критскаго. Симбирск, 1902. – 40 с.

ВССЧ, 1913 – Внутреннее состояние сердца человеческого. Казань, 1913. – 34 с.

ГЦП, 1892 – Главные церковные праздники Господни и Богородичны. Казань, 1892. – 95 с.

ЕМ, 1873 – Евангелие от Матфея на чувашском языке. Казань, 1873. – 118 с.

КВЗ, 1888 – Книги Ветхаго Завета (Книги Иисуса сына Сирахова, Иова, Иисуса Навина, Товита, Руфи и первая Маккавейская) на чувашском языке. Симбирск, 1888. – 344 с.

НБЛ, 1911 – Не будьте любостяжательными. Казань, 1911. – 8 с.

НВБ, 1912 – Наставление о воздержании в браке. По учению святого Максима Омологета. Казань, 1912. – 15 с.

НСБС, 1905 – Небесные споручники брачного союза. Казань, 1905. – 8 с.

ОХЛ, 1894, 1898 – О христианской любви по учению православной церкви. Казань, 1894, 1898. – 46 с.

ПВБУ, 1906 – Парастас и Всенощное бдение, бываемое о усопшем. Симбирск, 1906. – 344 с.

ПМУ, 1910 – Против масляничных увеселений. Казань, 1910. – 15 с.

РЦИ, 1894 – Рассказы из церковной истории по книге Деяний святых Апостолов. Казань, 1894. – 23 с.

САН, 1914 – Служба святому благоверному князю Александру Невскому во иноцех Алексию. Казань, 1914. – 4 с.

СЕ, 1820 – Святой Еванггель. Казань, 1820.

СИВНЗ, 1876 – Священная история Ветхаго и Новаго Завета. На чувашском языке. Симбирск, 1876.

ССНЧ, 1913 – Служба святителю Николаю Чудотворцу. Казань, 1913. – 20 с.

УПЦН 1–5 (1893–1894) – Указание пути в царствие небесное. Казань, 1893–1894.

ЧПДЖ, 1905 – Четыре путеводителя доброй жизни: страх Божий, мудрость, трезвость, труд. Казань, 1905. – 108 с.

**II. Ăслăлăх ĕçĕсем**

Павлов (1965) – *Павлов И.П.* Хальхи чăваш литература чĕлхи: Морфологи. Ш., 1965.

РЧСНик (1909) – *Никольский Н.В.* Русско-чувашский словарь. Казань, 1909.

РЧС (1931) – Русско-чувашский словарь. Чебоксары, 1931.

РЧС (1940) – Русско-чувашский словарь: Для начальных школ /Под ред. М.Я.Сироткина. Чебоксары, 1940.

РЧС (1951) – Русско-чувашский словарь /Под ред. Н.К.Дмитриева. М., 1951.

РЧС (1971) – Русско-чувашский словарь /Под ред. И.А.Андреева и Н.П.Петрова. М., 1971.

РЧСЕг (1972) – *Егоров В.Г.* Русско-чувашский словарь /Под ред. А.Е.Горшкова. Чебоксары, 1972.

ХЧЧСер – *Сергеев В.И.* Хальхи чăваш чĕлхи: Морфологи. Ш., 1992.

ЧВСЕг (1936) – *Егоров В.Г.* Чăвашла-вырăсла словарь. Ш., 1936.

ЧВСЕг (1954) – *Егоров В.Г.* Чăвашла-вырăсла словарь. 2-мĕш кăларăм. Ш., 1954.

ЧВС (1961) – Чăвашла-вырăсла словарь /М.Я.Сироткин редакциленĕ. М., 1961.

ЧВС (1982) – Чăвашла-вырăсла словарь /М.И.Скворцов редакциленĕ. М., 1982.

ЧСКАш I–XVII – *Ашмарин Н.И.* Чăваш сăмахĕсен кĕнеки: 17 томпа. Хусан; Шупашкар, 1928–1950.

ЭСЧЯФед – *Федотов М.Р.* Этимологический словарь чувашского языка: В 2 томах. Чебоксары, 1996.

# И.Я.ЯКОВЛЕВ ЛИТЕРАТУРА ЧӖЛХИН ЛЕКСИКИНЕ НОРМĂЛАНИ

Литература чӗлхи чăннипех те халăх (наци) литератури чӗлхи пултăр тесен, ăна халăх чӗлхине никӗсе хурса аталантармалла. Анчах халăх чӗлхи – пӗр пӗтӗм чӗлхе мар, вăл тӗрлӗ калаçусенчен тăрать. Чăваш чӗлхинче ӗлӗкех тури тата анатри диалектсем палăрнă. Кивӗ çырулăх тури диалект çинче никӗсленнӗ. Анчах тури чăвашсен чӗлхи те пур çӗрте те пӗр пек мар. Н.И.Золотницкичченхи çырулăхра кашни автор е куçаруçă хăй кăмăллакан калаçу чӗлхипе усă курнă. Çавна пула пӗр сăмахах е пӗр формăнах тӗрлӗ кӗнекере тӗрлӗ çырнă. Н.И.Золотницкий Шупашкарпа Çӗрпӳ уесӗнчи чăваш чӗлхипе усă курнă. Вăта тăрăхри чӗлхе анатри чăвашсемшӗн те, турисемшӗн те ăнланмалла пулӗ тесе шутланă вăл. И.Я.Яковлев хăй анатри чăваш пулнă май анатри диалекта, Кăнна Кушки калаçăвне килӗштернӗ. Анатри диалектри калаçусем пӗр евӗрлӗрех, пӗр-пӗринчен уйрăлсах кайман. Çавăнпа Яковлевăн вӗрентекенӗ Н.И.Ильминский те анатри диалект литература чӗлхин никӗсӗ пулма юрăхлăрах тесе шутланă. Пӗрремӗш букваре вара анатри диалектпа кăларнă. Хуплашки çине те “на наречии низовых чуваш, или чуваш анатри” тесе çырнă. Анчах кивӗ çырулăх тапхăрӗнче чăваш кӗнекисене (вӗсем йышлах мар пулин те) тури диалектпа пичетленине те асран яман. Çӗр çула тăсăлнă традицие пат татма çăмăлах пулман-тăр. Çавăнпа малтанлăха чăваш кӗнекисене икӗ диалектпа кăларма шутланă. 1872 çулта пичетлесе кăларнă пӗрремӗш букварь ум сăмахӗнче çапла каланă: “Анатри тата вирьял чӗлхисем хушшинче уйрăмлăх сахал пулин те, пирӗн шутпа, пуçламăш шкулта вӗренме учебниксене икӗ чӗлхепе те хатӗрлемелле”, – тенӗ.

Анатри чăвашсем валли хатӗрленӗ букваре кăларнă хыççăн Яковлев анатри диалекта та, тури диалекта та кӗнеке-çыру чӗлхи вырăнне йышăнни пӗр халăхăн икӗ литература чӗлхи пуласси патне, вӗсем кашни хăйне уйрăм çулпа аталанасси патне илсе пыма пултарнине ăнланса илнӗ. Икӗ диалектпа та кӗнекесем кăларни чăваш халăхне пӗр нацие чăмăртанма чылаях чăрмантарнă пулӗччӗ, мӗншӗн тесен

халăха наци шайне çити çĕкленсе аталанма чĕлхе пĕрлĕхĕ, пĕр пĕтĕм литература чĕлхи кирлĕ. Çакна шута илсе, И.Я.Яковлев шкул учебникĕсене харăсах икĕ диалектпа пичетлесе кăларас шухăша пăрахăçлать те чăваш литература чĕлхине анатри диалекта тĕпе хурса аталантарма тытăнать.

Литература чĕлхине никĕсленĕ чух И.Я.Яковлева Н.И.Ильминский вĕрентсе-хавхалантарса, тăшмансенчен хӳтĕлесе тăнă. Ильминский литература чĕлхи мĕнле пулса кайни е каймалли çинчен çапла вĕрентнĕ: “Пур чĕрĕ чĕлхе те вакрах калаçусем çине пайланма пултарать, анчах вĕсем пурте кĕнеке чĕлхи пулма пултараймаççĕ, вĕсенчен пĕрне пĕр-пĕр сăлтава пула куçару е кĕнеке чĕлхи вырăнне илеççĕ те, вăл майĕпенех литературăра усă куракан тĕп чĕлхе пулса çирĕпленет. Акă Лютер куçарнă Библи Саксони наречине пĕтĕм Германи литература чĕлхи туса хучĕ”[1].

Н.И.Ильминский чăваш литература чĕлхине мĕнле диалект е калаçу никĕсĕ çинче йĕркелес ыйтăва татса пама хутшăнни пирки И.Я.Яковлев хăйĕн “Манăн пурнăç” аса илĕвĕнче çапла калать: “Çак Кăнна Кушки ялĕн чĕлхипе паллашнă хыççăн Ильминские ку калаçу килĕшрĕ. Вăл вара тĕрлĕ вырăнта тĕрлĕ уйрăмлăхсемпе калаçакан мĕн пур чăваш валли пĕр-пĕр калаçăва тĕпе хурса пĕр пĕтĕм чĕлхе тумаллине, çавăн пек чĕлхе тума Кăнна Кушки хресченĕсен калаçăвĕ юрăхлăрах пулнине палăртрĕ”[2]. Каярах вара Ильминский тĕттĕм чăваш ялне грексен культура центрĕпе танлаштарнă: “Ну! Едете в чувашские Афины?”; “Что нового в ваших чувашских Афинах?” – шӳтленĕ вăл Яковлевпа калаçнă чух. Кăнна Кушкинчен тухнă Яковлев тăван ял калаçăвне никĕсе хывса йĕркеленĕ чĕлхе чăвашсене цивилизаци çулĕпе ертсе каясса шаннă ĕнтĕ Ильминский.

Çĕнĕ литература чĕлхин лексикине И.Я.Яковлев анатри диалектăн Пăва тăрăхĕнчи сăмах пуянлăхĕнчен йĕркелеме пуçланă. Анчах Пăва калаçăвĕнче пĕтĕм чăваш чĕлхинче сарăлнă сăмахсемсĕр пуçне çак вырăнта кăна усă куракканнисем те пур. Вырăнти сăмахсенчен чылайăшĕ – тутар, араб сăмахĕсем. Анатри чăвашсем тутарсемпе кӳршĕллĕ пурăнса, вĕсемпе тӳремменех хутшăнса тутар сăмахĕсене чылай йышăннă. 1872 çулта пичетленсе тухнă пĕрремĕш букварьте тата “Чăн тĕн кĕнекинче” уйрăмах анатри диалект е Пăва калаçăвĕн лексика уйрăмлăхĕсем куçа

тирĕнеççĕ. "Чăваш ачисене çырăва вĕренмелли кĕнекери" хăш-пĕр тĕслĕхсем: *вăркалан* (каллĕ-маллĕ кускала), *ешĕл* (симĕс), *илен* (кĕске халат), *йўнлĕ* (майлă, лайăх), *карăнтăк* (кантăк), *кўршĕ* (пускил), *маймăл* (упăте), *мимĕр* (нимĕр), *мимĕ* (миме), *минтер* (çытар), *нухăт* (курăк ячĕ), *пыла* (пăчкă), *пысăклăх* (пиçихxи), *сентре* (лапка), *уйла* (шухăшла), *чавка* (чана), *явлăк* (тутăр).

И.Я.Яковлев хăйĕн малтанхи шухăшне – чăваш кĕнекисене икĕ диалектпа кăларассине – пăрахăçласа пĕтĕм чăваш халăхĕ валли пĕр литература чĕлхи тăвас тĕллев тытнă хыççăн тури диалекта тимлĕрех тĕпчеме пуçланă. Çĕнĕ литература чĕлхине тури диалект сăмахĕсемпе пуянлатса аталантарма, чăваш чĕлхинче анлă сарăлман тутар сăмахĕсенчен ютăхма тытăннă. Тĕрлĕ диалектра (е калаçура) тĕрлĕ илтĕнекен, анчах пĕр ăнлава пĕлтерекен сăмахсене литература чĕлхине синоним пĕлтерĕшпе кĕртме пуçланă.

Халăх чĕлхинче анлă сарăлман сăмаха литература текстне кĕртнĕ чух унăн пĕлтерĕшне тепĕр диалектри çав пĕлтерĕшлĕ сăмахпа е пĕтĕм халăх усă куракан паллă сăмахпа уçса панă, ăнлантаракан сăмахне ялан тенĕ пекех скобкăна хупнă. Çакăн пек туни пуриншĕн те паллах мар сăмахсен пĕлтерĕшне пĕр пĕтĕм литература чĕлхин шайĕнче нормăлама май панă. Тĕслĕхсем: *Пуçлăх пупсем Иисуса вĕлерме пар тесе халăхсене* [Пилатран. – *Н.П.*] *ыйтма хĕтĕртнĕ (хĕтĕхленĕ).* [Чăн тĕн кĕнеки, 1873, 32 с.].

*Вăл хуçи хушнине нимĕн пĕлмесĕр ичеле (вилĕме) кайнă* [Букварь, 1880, 36 с.].

*Тепĕр çул çак мулкача кайăкçă (сунарçă) тытать тет* [Букварь, 1900, 36 с.].

*Тимахви ют çын сурăхĕсене кĕтсе (пăхса) пурăннă* [Букварь, 1900, 41 с.].

*Пĕр арăм хире (уя) тыр вырнă çĕре кăкшăмпа сĕт илсе пынă* [Букварь, 1900, 43 с.].

Анлă сарăлман сăмахăн пĕлтерĕшне уçса пама тăван чĕлхере синоним çук пулсан, Яковлев тепĕр мелпе усă курнă: диалект сăмахĕн пĕлтерĕшне ку е вăл вырăнта палăрнă вырăс сăмахĕпе уçса панă:

*Ĕлĕкрех, тĕнче пуçланиччченех Турă пирĕшти (ангел) ўтсĕр сывлăшне пултарнă* ["Чăн тĕн кĕнеки", 1873, 5 с.].

*Пăсара пăхăрçă пӳртне кĕнĕ тет те йĕкеве (потпилка) çула пуçларĕ тет* [Букварь, 1880, 16 с.].

*Вырăссем нумайăшĕ çак Купала тенĕ празднике халĕ те тăваççĕ. Вĕсем вăл кун вире-ял-сар-хури курăкĕ (папоротник) чечеке ларать теççĕ* ["Рассказы из русской истории на чувашском языке". Вып. I. Казань, 1882. 6 с.].

*Тимĕр шапана алăра тытса тăнă чух унăн хуппи ăшне пăхсан шалта вăйхăтри (подвалти) пек temĕскер хуп-хура чĕрĕ япала курăнать* ["Третья и четвертая книги для чтения Л.Н.Толстого на чувашском языке". Симбирск, 1911. 46 с.].

Çак мелсемпе усă курни, паллах, малтанлăха питĕ кирлĕ пулнă: диалект сăмахĕсене литература чĕлхине кĕртсе çирĕплетме пулăшнă, анчах литература чĕлхи йĕркеленсе çирĕпленнĕ май пĕр сăмах пĕлтерĕшне скобкăра тепĕр сăмахпа уçса парасси литература чĕлхине çырлахтарма пăрахнă. Ку мелпе яланах усă курни килĕшӳллĕ мар. Аталанса, нормăланса çитнĕ чĕлхере сăмахсен пĕлтерĕшĕсем пуриншĕн те паллă пулмалла, ку е вăл сăмах пĕлтерĕшĕ вулакансемшĕн уçăмлах мар-тăк словаре пăхса илме пулать.

Паллах, чĕлхене çĕнĕ сăмахсем кĕресси нихăçан та чарăнмасть. Автор çĕнĕ сăмахпа усă курать пулсан, вăл унăн пĕлтерĕшне ăнлантарса пама тивĕç. Чылай чух ăна сноскăра ăнлантарса параççĕ. Яковлев та каярахри çулсенче кăларнă кĕнекисенче çак мелпе усă курма пуçланă. 1900 çулти Букварьте *урçа*, Л.Н.Толстойăн "Шкулта вуламалли пĕрремĕшпе иккĕмĕш кĕнекин" 1912 çулти (виççĕмĕш) кăларăмĕнче "Пăсара" юптарури (6 с.) *йĕкев*, "Ăшă" статьяри (76 с.) *тимĕрташ*, "Слонпа шаккалсем" юптарури (77 с.) *шакал* сăмахсен пĕлтерĕшне сноскăра ăнлантарнă.

Тĕрлĕ диалектра е калаçура тĕрлĕ пĕлтерĕшпе çӳрекен сăмахсене литература чĕлхине кĕртсе нормăламалли тепĕр (е виççĕмĕш) мел – çыхăнуллă текст. Литература чĕлхине нормăлама Яковлев час-часах çав мелпе те усă курнă. Çыхăнуллă текст сăмахăн пĕлтерĕшне тĕрĕс уйăрса илме пулăшать. Тĕслĕх илĕпĕр. Анатри диалектра çунтармалли йывăçа *вутă*, улăхра ӳсекен курăка *утă* теççĕ. Тури диалектăн хăш-пĕр калаçăвĕсенче çунтармалли йывăçа *вотă*, çулмалли курăка *вытă*, *вутă* теççĕ. Спиридон Михайлов çырса кăтартнă тури чăвашпа анатри чăваш калаçăвĕнче çулмалли курăка пĕри *ывда*, тепри *вуда*, тет, çунтармалли йывăçа *водă*,

армутине *арым вуди* тет [Чувашские разговоры и сказки. Казань. 1853, 5–6 с.]. Н.И.Ашмарин словарĕнче *ывтă* "сено" [III кăларăм, 50 с.], *вытă* "сено" [V кăларăм, 219 с.], *вут, вот* "огонь" [çавăнтах, 282 с.], *вутă* "сено" (çавăнтах), *вутă, вут, вотă, вот* "дрова" [çавăнтах, 283 с.], *вутă çи* "время сенокоса" [çавăнтах, 285 с.].

Литература чĕлхине анатри диалект никĕсĕ çинче йĕркеленĕ май *ывтă, вытă, вот* формăсем норма тулашне тăрса юлнă. Анатри диалектри *утă* сăмаха литература чĕлхине "улăх курăкĕ" пĕлтерĕшпе кĕртни *вутă, вут* сăмахсене те пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен нормăлама хистенĕ. 1873 çулта тухнă букварьте *утă* сăмаха "улăх-çаран курăкĕ" пĕлтерĕшпе панă, çак пĕлтерĕше норма вырăнне çирĕплетме *утă* сăмаха предложенире илнĕ: *Вăрманта çапă пухрăмăр, çаранта утă çултăмăр* (10–11 с.). Анчах кун пек кăна калани *вутă* сăмаха нормăлама пулăшаймасть, çавăнпа та çĕнĕ кăларăмра *çапă* сăмаха *вутă* сăмахпа ылмаштарнă: *вăрмантан вутă пухрăмăр, çарантан утă çултăмăр* [Букварь, 1880, 14–15 с.]. Кун пек тӳрлетни те çителĕксĕр пулнă, мĕншĕн тесен пухрăмăр глагола *утă* сăмахпа та, *вутă* сăмахпа та калама пулать. Пĕр вырăнти чăваш ачи *утă пухрăмăр* тесе, тепĕр вырăнти чăваш ачи *вутă пухрăмăр* тесе ăнланма пултарать. Паллах, çитĕннĕ çын кунта *вутă* тата *утă* сăмахсене хирĕçлетсе каланинчен вĕсем мĕне пĕлтернине çăмăллăнах тавçăрса илме пултарĕ, анчах алла пуçласа кĕнеке тытакан ача *вутă* сăмахăн пĕлтерĕшне тӳрех ăнкарса илеймесен те пултарать. Çакă илсе кăтартнă текста татах тӳрлетме хистенĕ. Çĕнĕ кăларăмра *пухаççĕ* глагола *татаççĕ* глаголпа ылмаштарнă та предложени тытăмне кĕскетсе афоризм шайне çитернĕ: *Утта çулаççĕ, вутта татаççĕ* [Букварь, 1886, 12 с.]. Ăнланма та, асра тытма та çăмăл.

Литература чĕлхине диалектизмсем кĕртни синонимсен ретне ӳстерме кăна мар, чĕлхене çĕнĕ ăнлавсемпе пуянлатма та пулăшнă. Сăмахран, анатри чăвашсем хăйĕнчен аслă тăванне, вăл арçын пулсан, *пичче* тенĕ, çав вăхăтрах ашшĕн шăллĕне те *пичче* теççĕ, хăш-пĕр вырăнта вăл *тете* ятлă. Тури чăвашсем аслă тăванне тата ашшĕн пиччĕшне *мучи* теççĕ. XIX ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче литература чĕлхине *мучи* кĕнĕ. Çавна май *тете, пичче* сăмахсем хăйсен пĕлтерĕш чиккине ансăрлатнă.

Ҫӗнӗ литература чӗлхи диалект сӑмахӗсене кӑна мар, вырӑс сӑмахӗсене те сахал мар йышӑннӑ. Чӗрӗ калаҫу чӗлхи урлӑ кӗнӗ сӑмахсем чӑваш чӗлхин фонетикӑпа морфологи саккунӗсене пӑхӑнса чӑвашланнӑ. Анчах И.Я.Яковлев вырӑс сӑмахӗсемпе вырӑнсӑр усӑ курассине хирӗҫ пулнӑ, литература чӗлхи тасалӑхӗшӗн тӑрӑшмаллине асӑрхаттарсах тӑнӑ. Сӑмахран, 1874 ҫулти февралӗн 1-мӗшӗнче Хусантан А.В.Рекеев патне Тимӗрҫене ҫырнӑ ҫырӑвӗнче И.Я.Яковлев чӑвашла куҫарнӑ чух вырӑс сӑмахӗсемпе вырӑнсӑр усӑ курнине сивлесе ҫапла хытарса каланӑ: “Переведи чистым, правильным чувашским языком, куҫарнӑ чух пӗр вырӑс сӑмахне те ан кӳрт. Эс, темскерле, ҫырнӑ чух та чӑвашла аван пӗлсех, вырӑс сӑмахӗсене хушатӑн”[3].

И.Я.Яковлев тата унӑн вӗренекенӗсем хатӗрлесе кӑларнӑ кӗнекесенче вырӑс сӑмахӗсемпе мӗнле усӑ курни, ҫав усӑ курнӑ сӑмахсен йышӗ пӗчӗк е пысӑк пулни тӳремменех литература жанрӗн стилӗпе ҫыхӑннӑ. Илемлӗ литература тексчӗсенче вӗсемпе (йышӑннӑ сӑмахсемпе) сахал усӑ курнӑ, чӑвашлах калама тӑрӑшнӑ. Акӑ Л.Толстойӑн “Первая и вторая книги чтения на чувашском языке” (1912) куҫарӑвӗнчен илнӗ пӗр тӗслӗх:

| Оригиналта | Чӑвашла |
| --- | --- |
| *Наехал царь Петр на мужика в лесу. Мужик дрова рубит. Царь говорит:*<br>*– Божья помощь, мужик!*<br>*– И то мне нужна божья помощь* (Царь Петр и мужик). | *Пӗрре Петр патша вӑрманта пӗр ҫынна тӗл пулнӑ. Вӑл ҫын вутӑ каснӑ.*<br>*– Вӑй патӑр! – тенӗ патша.*<br>*– Эсӗ каларӑш пек пултӑр, – тенӗ ҫынни* (Петр патшапа пӗр ҫын. 62 с.). |

Халӑхра *мужик* сӑмахпа усӑ курнӑ пулин те куҫаруҫӑ ӑна чӑвашла *пӗр ҫын* тесе куҫарнӑ.

Наука тата тӗн кӗнекисене куҫарнӑ чух вара вырӑс тата славян сӑмахӗсенчен ытла ютшӑнсах кайман, куҫарма май килтереймен сӑмахсене куҫармасӑрах йышӑннӑ. Вӗсене мӗнле йышӑнмалли ҫинчен Букварь “Предуведомленийӗн” 12-мӗш параграфӗнче каланӑ. Унта “чиркӳ-славян тата вырӑс чӗлхинчен кӗрекен сӑмахсем, сӑмах вӗҫлӗхӗсемсӗр пуҫне хӑйсен орфографине сыхласа хӑвараҫҫӗ” тенӗ. Кӗнеке чӗлхи урлӑ кӗрекен ют сӑмахсене вырӑс чӗлхинчи ят падеж формипе тата несӗл паллисемпех йышӑнни вӗсемпе пуплевре

усă курассине йывăрлатнă. Акă 1882 çулта чăвашла кăларнă "Рассказы из русской истории" кĕнекерен илнĕ хăш-пĕр тĕслĕхсем:

*Славянсем Азияран килсен малтан Дунай шыв хĕрне пырса вырнаçнă, унтан вара тĕрлĕ çĕре саланса кайнă* (3 с.).

*Варягсем Балтийский тинĕсĕн леш енче Скандинавский полуостров çинче пурăннă* (8 с.).

*...Вăл вăхăчĕ-вăхăчĕпе Евангелие кĕнекине вулаттарса итлесе ларнă* (31 с.).

*Чингизхан Азияри халăхсене тытса илсен пĕр ушкăнне Вырăс çĕрне тытса илме янă, тепĕрне Малоазияри халăхсене тытса илме янă* (115 с.).

Вырăс чĕлхинчи паллă ячĕсене, уйрăмах çыхăну паллă ячĕсене куçарасси вăл вăхăтра татса паман ыйтусенчен пĕри пулнă. Час-часах вĕсене чăваш чĕлхин морфологи саккунĕсене пăхăнтармасăрах, вырăс чĕлхинчи грамматика формисемпех йышăннă. Акă П.А.Костычев профессорăн чăвашла кăларнă "О земледелии" кĕнекинчен илнĕ пĕр тĕслĕх:

| Чăвашла | Оригиналта |
|---|---|
| *Хăярсенчен пирĕн енче чи аванни муромские тени. Кунтан пуçне тата вязниковскийпе аксельский тенĕ хăяр сурчĕсем аван. Вĕсем муромскинчен шултрарах. Анчах муромский пекех йышлă пулаймаççĕ, ĕлкĕрме те унтан каярах ĕлкĕреççĕ.* | *Из огурцов самыми лучшими считаются муромские. Кроме муромских, лучшими сортами считаются вязниковские и аксельские. Они крупнее муромских. Но по плодовитости и скороспелости уступают муромским.* |
| *Купăстасенчен ладожская, коломенка, брауншвейгская, голландская аван.* | *Из капуст лучшими считаются ладожская, коломенка, брауншвейгская, голландская.* |
| *Ир ĕлкĕрекен çĕр улмисенчен мартолен, вермонтский, король, королева, первенец, хĕрлĕ çĕр улми аван.* | *Из ранних сортов картофеля хороши мартолен, вермонтский, король, королева, первенец, красный картофель.* |

Пĕтĕмĕшле çапла калăпăр: XIX ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсемччен Яковлев кĕнекисен чĕлхинче анатри диалект уйрăмлăхĕсем, анатри калаçусенче çеç усă куракан сăмахсемпе

грамматика формисем ытларах тĕл пулаççĕ пулсан, 80-мĕш çулсенче Яковлев литература чĕлхине, пĕтĕм халăхшăн ăнланмалла тăвас тесе, пур калаçăва та шута илсе нормăлама тытăннă. Ку ĕçе вăл хăйĕн вĕренекенĕсене, ялти интеллигенцие, тĕрлĕ вырăнта пурăнакан чăвашсене хутшăнтарнă. Кашни ал çырăвнех пичете париччен йышпа сӳтсе явнă, хăш формăна норма вырăнне йышăнассине пĕрле канашласа татса панă. Пичетленсе тухнă хыççăн та Яковлевпа унăн ĕçтешĕсем кĕнекесене çĕнĕрен тӳрлетӳсем кĕртнĕ. Çапла майпа чăваш литература чĕлхи таса анатри чĕлхе те мар, таса тури чĕлхе те мар, пĕтĕм чăваш литература чĕлхи пулса тăнă, анчах унăн никĕсĕнче анатри диалектах упранса юлнă.

Вырăс чĕлхинчен хăйсен сăн-сăпатне улăштармасăр кĕрекен сăмахсене илес пулсан, революциччен вĕсене чăваш чĕлхин фонетикăпа морфологи саккунĕсемпе килĕшӳллĕн нормăласа çитереймӗн. Калаçу-çыру, кĕнеке-пичет чĕлхинче йышланса пыракан вырăс сăмахĕсемпе сăмах майлашăвĕсене нормăлас ыйтăва революци хыççăн кăна татса панă, анчах та ку чăваш литература чĕлхи революциччен нормăланса çитеймен тенине пĕлтермест.

## Литература


[1] [*Ильминский Н.И.*] Переписка о чувашских изданиях Переводческой комиссии. Казань, 1890. С. 20–21.

[2] *Яковлев И.Я.* Моя жизнь: Воспоминания. М.: Республика, 1997. 215 с.

[3] Çак кĕнекерен илнĕ: Уч. записки НИИ при Сов. Мин. Чуваш. АССР. Чебоксары, 1964. Вып. 27. С. 208.

# АРХИВ ÇӐ̈УЛĔКĔНЧЕН

*И.Н.Юркин*

## ЮТ ЧĔЛХЕСЕНЧЕ ÇӲРЕКЕН ЧĂВАШ СĂМАХĔСЕМ

Вырăссем хăйсен хутлăхĕнче пĕр-пĕринпе калаçнă чухне ăнсăртран чăваш сăмахĕсене асăнса калаçаççĕ. Тĕлĕнмелле: нумайăшĕ (чăвашсем çинчен çыракан çынсем) ăна-кăна пĕлмесĕр, чăвашсем халĕ начар пурăннине кура, вĕсем ĕлĕкрен çапла начар çынсем пулнă тесе çыраççĕ. Чăнласах чăвашсем ĕлĕкрен çапла начар çынсем пулнă пулсан, пирĕн чăваш сăмахĕсем епле ют çынсенĕн чĕлхине çакланнă-ши? Манăн ăсăмпа пулсан, начар çынсенĕн сăмахĕсем чаплă çынсенĕн чĕлхине кĕме пултараймаççĕ. Чаплă çынсенĕн сăмахĕсем начар çынсенĕн чĕлхине çакланни пире паллă. Мĕншĕн тесен чаплă çынсем хăйсем патшалăхĕнче е ют патшалăхра мĕн те пулин пĕр-пĕр ырă япала шухăшласа туса кăларнине курсан, çав япала çынна кирлĕрен, сутăн илме, ăна курмах хăйсен патшалăхĕнче те çавăн пек япаласем тăва пуçлаççĕ. Ун пек япаласене, паллă, хăйсен чĕлхипе ят параççĕ. Асту, тĕслĕхрен, самоварпа лампа тата ытти япаласене те. Самовара малтан китайсем шухăшласа тунă, шыва вĕретсе чей ярса ĕçмешкĕн. Вырăссем, вăл япала пит аваннине курса, килне таврăнсан, çавăн пек япалана хăйсен çĕрĕнче те тăва пуçлаççĕ. Ятне, китайсен чĕлхипе калама йывăртан, хăйсем чĕлхипе "самовар" тесе ят параççĕ. Ют çĕрте тунă япаласенĕн ячĕсем калама çăмăл пулсан, вĕсене ют чĕлхепех калаççĕ; тĕслĕхрен асту лампа ятне[1]. Лампа ют çĕрте те "лампах" теççĕ. Вырăссем хăйсем тунă япаласене кайран хăйсен аллинче парăмра пурăнакан ытти начар тĕттĕм çынсене те сута пуçлаççĕ. Кăсем, мĕскĕнсем, япалипе пĕрле унăн ятне те (урăхла ниепле калама пĕлмесĕр) ирĕксĕр, вырăссем каланă пек каласа, йышăнаççĕ.

Авал та çапла хальхи пекех пулнă ĕнтĕ. Епле çынсем суту-илӳ е пĕр-пĕр япала-мĕн туса кăларсан, мĕнпе чаплă пулнă, çавсем хăйсенĕн чаплă ĕçĕсене, япалисене, сăмахĕсене ытти çынсене йышăнтарнă.

Чăваш сăмахĕсем чаплă çынсенĕн чĕлхине хутшăннă пулсан, чăвашсем ĕлĕк начар çынсем пулнине кăтартмасть, чаплă çынсем пулнине анчах пĕлтерет; пирĕншĕн авă çавă хаклă.

Пирĕн чăваш сăмахĕсем еплисем ют чĕлхене çакланнине пĕлессĕрсем килсен, эпĕ сире хам мĕн пĕлнине, мĕн илтнине питрех кирлĕ сăмахсене çырса пĕлтерем.

Чĕмпĕр кĕпĕрнинче пурăнакан вырăссем, чăвашсенчен таçта аякра пурăнаканнисем, хăйсем хушшинче калаçнă чухне пĕр-пĕр япала тăвас умĕн е хакне килĕшсен, атьăр мăкарич ĕçер? тиессе, атьăр "товассы" ĕçер? теççĕ. Тăвасси тенĕ сăмаха вырăслана куçарсан "сделка" тенĕ сăмаха тӳрре килет. Тĕлĕнмелле, мĕншĕн вырăссем ку сăмаха хăйсенĕн чĕлхипе каламасăр чăваш сăмахĕпе калаççĕ-ши? Ку сăмаха чăвашсем вырăссене хăçан вĕрентнĕ-ши? Хăçан чăвашсем вырăссен хутлăхĕнче япаласем туса "тăвассисем" ĕçнĕ-ши?..[2] Халĕ чăвашсем вырăссен хутлăхĕнче ĕçлесе çӳремеççĕ, м.т. чăвашсем – вырăссене пăхнă çĕрте тĕттĕм, начар çынсем, ремесласем-мĕнсем пĕлмеççĕ. Чăвашсен хутлăхĕнче фабриксем, савăтсем пĕртте çук. Чăвашсенĕн мĕн пур пĕлнĕ ĕçĕ çĕр ĕçĕ анчах: урăх нимĕн те вĕсем пĕлмеççĕ.

Çичĕ ют çыннисем чăвашсем çинчен çапла "начар çынсем" тесе çырнăран, вĕсем ĕмĕрне çапла начар çынсем пулса, пĕр пĕлмесĕр пурăннă тесе шухăшлатăр пулĕ? Çук, тăвансем, кăлăхах апла ан шухăшлăр, çичĕ ют сăмахне ан шанăр – пирĕн чăвашсем ĕлĕк пит чаплă çынсем пулнă. Вĕсем ун чухне хальхи пек чăваш ячĕпе çӳремен, "пулхарсем" ячĕпе çӳренĕ. Пулхарсем хăйсем вăхăтĕнче вырăссенчен те темиçе тапхăр чаплă çынсем пулнă. Пин çул ĕлĕк пулхăр-чăвашсем урисене сăран атăсем тăхăнса çӳренĕ. Вырăссем ун чухне пурте çăпатапа пулнă. Пулхарсем тирсем, сăрансем, юхтăсем, чĕнсем тата ытти тĕрлĕ таварсем тума пур çынсенчен те ăста пулнă. Вĕсенĕн таварĕсем ытти çынсенĕн таварĕсенчен те "пит аван" пулнă, çавăнпа вĕсенĕн таварĕсенĕн хакĕ те пит хаклă пулнă. Çипирте-мĕнте пулхăрсенĕн таварне пит авантан мухтаса "пулхăрсен" таварĕ тесе уйрăм ятпа çӳретнĕ. Пулхăр ячĕпе çӳренĕ пит лайăх тирсем[3].

Пулхăр-чăвашсем тахçан авалтан чаплă çынсем пулса, вырăссемпе темиçе пин ĕмĕр çул юнашар пурăнса, паллă, вĕсем çĕрĕнче суту-илӳ туса тĕрлĕ ĕçсем ĕçлесе çӳренĕ.

Ку таврара пулхăр-чăвашсем пур çынсенчен те малтан чултан çуртсем, мичетсем, тĕрлĕ хуралтăсем тăва пуçланă. Вĕсем çапла пит ăстине курсан, вырăссем те хăйсем çĕрне чĕнтерсе кусене чултан чул çуртсем, чул чиркÿсем тутарттарнă. Пулхăрсенĕн çĕрĕнчен вырăссен çĕрне тĕрлĕ хуралтăсем тума чулсем турттарнă. Ав çавăн чухне ĕнтĕ пулхăр-чăвашсем вырăссенчен "тăвассисем" ĕçнĕ... Вырăссем пĕр çак сăмаха кăна асăнса калаçмаççĕ, вĕсем тата пĕтес çук ытти сăмахсене те калаççĕ. Çавăн пек сăмахсене малашне çырса пуçтарас пулать. Астăвăр тата, тĕслĕхрен, вырăс чĕлхинчи намăссăр сăмахсене "пиздана та капся" (çав сăмахсене кунта лайăх мартан урăх чĕлхепе çырас пулать) тенĕ сăмахсене. Ку сăмахсем пулхар-чăваш сăмахĕсем пулмасăр камсенĕн сăмахĕсем тесе пĕлетĕр?! Пирĕн чăвашсем хĕрсенĕнне йăшкаманнине пĕтĕмпе "пĕсте" теççĕ, йăшканине "капçа" теççĕ... Çав сăмахсене вырăссем ĕлĕк пулхар-чăвашсемпе пĕрле суту-илÿ туса, тĕрлĕ ĕçсем ĕçлесе пурăннă чухне йышăнса пĕтнĕ[4]... Çав сăмахсене эсир вырăссем чăвашсенчен халĕ йышăннă пулĕ тесе пĕлетĕр пулĕ?.. Çук, вырăссем ĕлĕк те чăваш сăмахĕсене асăнса калаçни паллă, астăвăр вырăссенĕн Новгородской летопиçре 1375-мĕш çулта çырнине (Шпилевский кĕнекинче "Древние города и другие Булгарско-татарские памятники в Казанской губ." 1877 г., стр. 174–175) "Походы Новгородских ушкуйников". Çак летопиçре вырăссем пĕр-ик чăваш сăмахĕсене асăнаççĕ. Пĕри – Астрахань хулине чăвашсем Аçтăрхан хули теççĕ. Вырăссем те çав хулана авал "хас торакан" тесе çырнă. Унтан тата икмĕш сăмахĕ "поход ушкуйников" тенĕ сăмах чăвашсенĕн сăмахне "ускăн" – "ушкăн" тенĕ сăмахсене тÿрре килет. Чăвашсем ĕççĕр усăнса çÿрекен çынсене "ускăн" теççĕ. Çав ускăнсем ĕлĕк "ушкăнпа" Атăл тăрăх хуласене, ялсене сăтăр туса çунтарса, çаратса çÿренĕ[5]. Аскăн ушкăнсем хăш чухне Атăл тăрăх аялалла анса пулхăр-чăвашсенĕн çĕрĕнчен иртсе Асăтаракан хула[6] патне те çитнĕ. Вăл хула Атăл шывĕ тинĕсе пырса хутшăннă çĕрте пулнă.

Çав ускăн çынсем вăрăсенчен пулнă. Вĕсене малтан пулхăр-чăвашсем каламан-ши — усăнса çÿренĕрен "ускăн" тесе? Ушкăнпа çÿренĕрен "ушкуйниксем" тесе? М.т. вĕсем пуринчен ытла Пулхăр чăвашĕсене пит сăтăр тунă.

Чăваш сăмахĕсем пĕр вырăссенĕн чĕлхинче кăна мар, тата ытти чĕлхесенче те тĕл пулаççĕ. Астăвăр халĕ Аçтăрхан

хулинче суту-илӳ тунӑ вӑхӑтра пур ҫӗртен пуҫтаранна ҫынсем: кӑркӑссем, калмӑксем, чӑн тутарсем, пушкӑртсем, армянсем, персиансем, арапсем тата пӗтес ҫук ытти ҫынсем те калаҫнине. Пурте вӗсем сутмалли таварсене мухтанӑ чухне "пит аван"* тесе мухтаса сутаҫҫӗ. Ку мӗн тамаша?! Ҫак чӑваш сӑмахӗсене вӗсем камсенчен илтсе калаҫҫӗ тетӗр?! Аҫтӑрхан кӗпӗрнинчи Чернояровский уесра пурӑнакан чӑвашсенчен илтсе калаҫҫӗ тетӗр пулӗ?! Ҫук, ку сӑмахсем хальхи сӑмахсем мар, кӑсене темиҫе ӗмӗр ҫапла "пит аван" тесе калаҫаҫҫӗ. Ку сӑмахсене ҫав Ҫипирти ҫынсем авалхи пулхӑрсемпе суту-илӳ тунӑ чухне вӗсенчен илтсе вӗренсе юлнӑ, халӗ те пулин мухтаса сутаҫҫӗ. "Пит аван" тенӗ сӑмахсене халӗ тӗнчере пурӑнакан ҫынсенчен пӗр чӑвашсем анчах калаҫҫӗ[7]. Ытти ҫынсем хӑйсен хутлӑхӗнче калаҫнӑ чухне ҫав сӑмахсене пӗртте асӑнмаҫҫӗ. Авалхи пулхӑрсем камсем пулнине ҫак сӑмахсенчен те пӗлме пулмасть-и? Ҫакӑн пек мӗн тарӑн ырӑ чӑваш сӑмахӗсене Ҫипирти хуласенче-мӗнте, е тата Чул хулари, е Хусанти ярмунккасенче ҫапла ют ҫынсем каламаҫҫӗ-ши? Пирӗн чӑваш ҫыннисенӗн ҫитнӗ ҫӗрте пӗр ют ҫынсем мӗн калаҫнине хытӑрах итлес пулать: пирӗн чӑваш сӑмахӗсене ытти ҫӗрте ытти ҫынсем... асӑнса калаҫмаҫҫӗ-ши? Халӗ пирӗн чӑвашсем Аҫтӑрхан хушшинчен таҫта аякра пурӑнсан та, пирӗн мӗн тарӑн ырӑ чӑваш сӑмахӗсене унта сут тума пухӑннӑ ют ҫынсем, тахҫан йышӑннӑ пулсан та, халӗ те пулин асӑнса калаҫаҫҫӗ. Ку "пит аван" тенӗ сӑмахсем чӑвашсене пӗтӗмпе ҫӗклентерсе яраҫҫӗ. Пирӗн чӑвашсем ӗлӗк чаплӑ ҫынсем пулман пулсан, ҫав мӗн тарӑн ырӑ сӑмахсене вырӑссемпе ытти суту-илӳ тӑвакан Ҫипирти тата Кавказри тӗрлӗ ҫынсем кӑлӑхах чӑваш сӑмахӗсене хутӑштарса калаҫмӗччӗҫ те... Арапсемпе перссем пиртен таҫта аякра пурӑнсан та вӗсенӗн чӗлхисенче пирӗн сӑмахсем тӗл пулаҫҫӗ. Вӗсенӗн сӑмахӗсем те пирӗн чӗлхере ҫапла сайра пӗрре тӗл пулаҫҫӗ. Эпир вӗсемпе хурӑнташ мар, хӑҫан пирӗн вӗсемпе сӑмахсем хутшӑннӑ-ши?

Хӑҫан та хӑҫан чӑвашсем ӗлӗк Пулхар ячӗпе пурӑннӑ чухне вӗсемпе пӗр чарӑнмасӑр лӑпкӑ кӑна суту-илӳ тунӑ. Пӗр-пӗрийӗн ҫӗрӗсене пӗр чарӑнмасӑр ҫӳренӗ. Вӗсемпе пит

---

* Ку сӑмаха эпӗ Аҫтӑрхан хулинче ҫуллен сут тӑвакан ҫынтан илтрӗм.

килĕшсе пурăннă чухне пулхар-чăвашсем арапсенчен Магомет тĕнне илнĕ. Тĕне пула вĕсемпе тата пушшĕ çывхарнă. Ав çавăн чухне ĕнтĕ мĕн тарăн ырă чăваш сăмахĕсем вĕсенĕн чĕлхисене, ытти çынсенĕн чĕлхисене лекнĕ пек, лекнĕ. Вĕсен ырă сăмахĕсем те нумайăшĕ çапла пирĕн чĕлхене ĕмĕрлĕхе çакланса юлнă. Арапсен хыпарĕсем пирĕн чăвашсене пуринчен ытла хаклă, мĕншĕн тесен вĕсенчен нумайăшĕ Пулхар çĕрне килсе вĕсем çинчен çырнă. Çавăн пек çыракансенчен пĕри, Ибн-Фадлан ятли, пулхăрсенĕн аслă хули Атăл* шывĕ хĕрринче тесе çырнă. Атăл шывĕ ятне кам чĕлхипе çырнă тесе пĕлетĕр? Пулхăр-чăвашсенĕн чĕлхипе, урăх никам чĕлхипе те мар! Атăла пĕр чăвашсем анчах "Атăл" теççĕ. Ак çак сăмахран каллех паллă ĕнтĕ чăвашсем ĕлĕк Пулхар ячĕпе çӳрени. Атăл ячĕ пирĕн чăвашсенĕн историне хĕвел пек çутатса тăрать[8].

Пирĕн чăваш сăмахĕсем хамăр çумра пурăнакан çынсен: мăкшăсен, çармăссен, мишерсен тата ытти çынсен – чĕлхинче те пĕтес çук тĕл пулаççĕ. Малашне çав сăмахсене пурне те çырса пуçтарас пулать. Епле сăмахсем ют çынсенĕн чĕлхине çакланнине хытăрах пĕлсе тăрас пулать. Мăкшăсем авă чăваш чĕлхипе çыру çырас тенĕ сăмаха "çыру çőрме дума" теççĕ. Çук-ши çавăн пек ырă сăмахсем тата ытти çынсен чĕлхинче те?.. Ку сăмахсенчен паллă пирĕн чăвашсенĕн авал çыру пулни. Чăвашсем мăкшăсене çыру çырма-тума кăтартнă, вĕрентнĕ, "çőрма дума" тенĕ сăмахсем çавăнтан вара ĕмĕрне мăкшă чĕлхине пӳлĕнсе юлнă[9]. Авалхи чăвашсем хăйсенĕн кĕнекисем, çырăвĕсем мĕнтен пĕтнине çамрăксене пит аван хайлаласа каласа хăварнă: "чăваш кĕнекине ĕне çисе янă" тесе. Ку хайлана мĕншĕн каланине халĕ шухăшласа пĕлес пулать. "Ĕне" тесе чăвашсем вăрçнă чухне кама калаççĕ? – чи начар çынна, наяна, кĕсмене. Çавăн пек начар çын пуçлăх пулса тăнă чухне Чăвашсем-Пулхăрсем ют çынсен аллине парăма çакланса, хăйсенĕн кĕнекине, çырăвĕсене пĕтерттернĕ. Вăл ĕçре кам айăплине пĕлсе, çав начар ĕне çине йăвантарнă[10].

Халĕ пирĕн чăвашсенĕн хамăр хутлăхра хамăр алăсенче вăрттăн упранса пурăнакан авалхи кĕнекесене, çырусене пурне те пуçтарас пулать. Çав хутсем хутлăхĕнче

* Атăл ятне тĕрлĕрен çыраççĕ: "Иттиль", "Адель" теççĕ. Хăшĕ тата чăвашсенчен пулнă тутарсем пек "Идель" теççĕ. Кирек мĕнле пулсан та пулхар-чăвашсен сăмахне "Атăла" асăнаççĕ.

çук-ши хамăрăн чăн авалхи хутсем, кĕнекесем? Ăнсăртран епле те пулсан хĕсĕнсе юлман-ши?..[11] Çук-ши тата чăвашсем аллинче авалхи çыруллă кĕмĕл укçасем*, хĕçсем, сăнăсем, хăртсем тата ытти тĕрлĕ япаласем? Вĕсенĕн çине тутарла çырнă тесе тиркесе пăрахас пулмасть. Пирĕн чăвашсем пулхарсем ячĕпе çӳренĕ чухне ĕлĕк çав хурмă, арапсем пек çырнă. Пĕлме çук, çав çырăвĕсене чăвашла çырнă пулĕ. Вĕсене тĕк-тăмал пăрахиччен çырăва вĕреннĕ çынсене кăтартас пулать. Ун пек çырусене вулама пултарать Хусанти савнă çыннăмăр Николай Иванович Ашмарин.

“Тăвасси”, “Аçтăрхан”, “ушкуйниксем”, намăссăр сăмахсене “пĕсте”, “капçа” тата “çырма дума”, “пит аван”, “Атăл” тенисене пулхăр-чăвашсенĕн историне çыракан çынсенĕн пĕртте манма юрамасть. Ку сăмахсем истори çыракансемшĕн ылттăнпа çырнă пит хаклă сăмахсем... Европăпа Азири çынсем, сивĕпе ăшă енчи çынсем пĕрпĕринпе суту-илӳ тунă чухне ĕлĕк Атăл çинче пулхăр-чăвашсенĕн чĕлхипе калаçнă...

### Асăрхаттарусем

[1] **Лампа** (< франц. *lampe* < грек.) сăмах вырăс чĕлхине француз чĕлхинчен кĕнĕ, вăл Петĕр патша саманинче кăна халăх хушшинче сарăлма пуçланă, словаре 1834 çулта кĕнĕ [Фасмер, II, 455; Черных, I, 465].

[2] **Товассы**, ахăртнех, *тăвасси* сăмахран мар-тăр, вырăссем ăна чăвашсем *тавсси* (< *тав сăя*) тенинчен илнĕ.

[3] Тухăç халăхĕсем Вăтаçĕр тинĕсĕ хĕрринчен тытăнса Монголи çеçен хирĕсем таранах качака тирĕнчен тунă симĕс юфте *булгари* “пăлхар тирĕ” теççĕ.

[4] **Пĕсте** (< выр. *пизда*) сăмаха чăвашсем хăйсем вырăс чĕлхинчен илнĕ. **Капçа** – авалхи иран чĕлхинчен кĕрсе юлнă сăмах, вăл чăнах та вырăс чĕлхин вырăнти калаçăвĕсенче тĕл пулать: *капся* “бессодержательные разговоры; болтовня”. *Знает он капсю, да ту не всю* (поговорка, Вятск.); “о говорливом человеке, болтуне”. *Ой капся! Туда же лезет* (Вятск.); *капся* “рыбка, похожая на кильку” (Прикамье, Черное море) [СРНГ, XIII, 58]; вырăс чĕлхинче тата *пизда рыба* тени те тĕл пулать, чăвашсем ăна “намăс пулă” теççĕ. Чăваш чĕлхинчи ятлаçмалли намăссăр сăмахсенчен пайтахăшĕ вырăс чĕлхинчен кĕнĕ. Намăс сăмах персе ярсан чăвашсем: “*Ха, вырăсла та пĕлет ку!*” е “*Вырăсла ан калаç!*” теççĕ.

[5] **Ушкуйник** “вольный человек, член вооруженной дружины, которая снаряжалась новгородскими боярами и купцами в 14–15 вв. для набегов и

---

* Авалхи укçасем пуçтарнă чухне Чĕмпĕр у. Вăта çырми Тимĕрселте Чундеров ятлă çыннăн килийĕн хутлăхĕнче пулхăрсенĕн кĕмĕл укçине куртăм. Çук-ши çавăн пек кĕмĕлсем тата ытти чăваш арăмĕсенче?

торгового промысла на Волге и Каме" – вырӑс сӑмахӗ, вӑл *ушкуй* "старинная плоскодонная ладья с парусами и веслами" сӑмахран пулса кайнӑ. Ушкуйниксем Атӑлпа Шурӑ Атӑл тӑрӑхӗнчи пӑлхар-чӑваш ялӗхулисене пайтах ҫаратса ҫӳренӗ. Ушкуйниксем 14 ӗмӗрте Нухрат Атӑл (Вятка) шывӗ ҫинче Хлынов (каярахпа Вятка, унтан Киров) хули туса лартнӑ. Новгород ушкуйникӗсен ячӗпе Вятка шывне чӑвашсем Нухрат Атӑл, тутарсем Наукрат Иделе ("новгородсен Атӑлӗ") тенӗ. Чӑвашсем ушкуйниксене "шу ҫи хурахсем" тенӗ. Вырӑс чӗлхинчи *ушкуй, ушкуйник* сӑмахсем чӑвашла *ускӑн* тата *ушкӑн* сӑмахсемпе ниепле те ҫыхӑнман.

[6] **Аҫтӑрхан** хулине чӑвашсем нихӑҫан та *Асӑтаракан* темен. Вӑтам ӗмӗрсенчи ҫырулӑх палӑкӗсенче Аҫтӑрхан хули ятне тӗрлӗрен ҫырса хӑварнисем тӗл пулаҫҫӗ: Астаракань, Адъяж-Тархань, Хаджи-Тархань, Хазитархань, Хазир, Зитырхань, Цитрыкань т.ыт.те. Тӗпчевҫӗсем *Аҫтӑрхан* топонимӑн пулӑвне тӗрлӗрен ӑнлантараҫҫӗ. Пӗрисем ӑна *ас таркан* – "ассен (авалхи иран йӑхӗсен) турханӗларнӑ хула" тенинчен пулса кайнӑ теҫҫӗ, теприсем тӗрӗкле *хаджи тархан* "Меккӑна кайса килнӗ, хадж тунӑ турхан" тенинчен аталанса кайнӑ тесе шутлаҫҫӗ. Хальхи Аҫтӑрхан вырӑнӗнче сӗм авалах хула пулни паллӑ, кунта хазарсем, половецсем, тутар-монголсем тӗпленсе пурӑннӑ. Хулан хальхи ячӗ XIII ӗмӗрте кӑна ҫирӗпленсе ҫитнӗ, ҫавӑнпа ӑна пӑлхар-чӑваш чӗлхипе ҫыхӑнтарма кирлӗ мар. Чӑваш чӗлхинчи *Аҫтӑрхан* сӑмах ытла ватах мар, вӑл чӗлхемӗре XV ӗмӗр вӗҫнелле е тата каярах кӑна тутар чӗлхи урлӑ килсе кӗнӗ.

[7] **Пит аван** (< тутар. *бик аван*) – кӑк чӗлхерен килекен чӑваш сӑмахӗ мар, ку сӑмах майлашӑвӗ пирӗн чӗлхемӗре тутар чӗлхинчен XV ӗмӗртен вара кӑна кӗнӗ. Кыпчак ушкӑнне кӗрекен тӗрӗк чӗлхисенче ҫак сӑмах майлашӑвӗ туринче те пур. Аҫтӑрхан пасарӗсене ӑна чӑвашсем мар, вырӑнти тӗрӗк халӑхӗсем – аҫтӑрхан тутарӗсем, нухайсем, казахсем илсе тухнӑ.

[8] **Атӑл** юхан шыв ячӗ тӗрӗк чӗлхисенчи *Этил*, тутарла *Идел* сӑмахсемпе пӗр кӑкран аталанса кайнӑ, вӑл кӑк чӗлхеренех упранса юлнӑ пулмалла. Византи хронисчӗсем VI ӗмӗртех Атӑл ятне чӑваш сӑмахне ҫывӑх *Атл* формӑпа ҫырса хӑварнӑ. Венгр тӗпчевҫи Л.Лашони *Атиль* юхан шыв ячӗ пирӗн эрӑчченех пулнине палӑртать. Тӗрлӗ ҫырулӑхпа усӑ курнӑ авторсем авалхи тӗрӗк халӑхӗсен чӗлхинчи ӑ сасӑна тӗрлӗ майпа палӑртма пултарнине те асра тытмалла, мӗншӗн тесен иккӗмӗш сыпӑкра тӑтӑшах малти ретри уҫӑ сасӑсем тӑраҫҫӗ. Кирек епле пулсан та, *Атӑл* гидронима Тухӑҫ Европӑна авалхи пӑлхарсем илсе килни тавлашуллӑ мар.

[9] Ҫырулӑхпа ҫыхӑннӑ сӑмахсем авалхи пӑлхар-чӑваш чӗлхинчен кӳршӗ халӑхсен чӗлхисене ӗлӗкрен-авалтанах кӗре-кӗре юлнӑ. Чӑваш чӗлхинчи *ҫыр-* сӑмах тӗрӗк чӗлхисенче *йаз-* формӑллӑ. Хальхи чӗлхесенче ҫак тымартан аталанса кайнӑ фонетика варианчӗсем ҫӳреҫҫӗ, анчах вӗсем пурте сӑмах вӗҫӗнчи "з" сасӑллӑ, пӗр чӑваш чӗлхи кӑна "р" сасӑпа палӑрса тӑрать. Ҫакна кура, тӗрлӗ чӗлхесенче тӗл пулакан "р" сасӑллӑ формӑсене авалхи пӑлхар-чӑваш йышӑнӑвӗсем теҫҫӗ. Пирӗн эрӑччен пӗр пилӗк ӗмӗр авал пирӗн кӑк-несӗлсем *ҫыр-* сӑмаха монголсене парса хӑварнӑ (монгол. *ǯиру-* "чертить", "рисовать", "писать"), монгол чӗлхинчен ҫак сӑмах авалах тунгус-маньчжур чӗлхисене куҫнӑ (эвенк. *зуру-* т.ыт.те). Пирӗн эра пуҫламӑшӗнче авалхи пӑлхарсем ҫак сӑмаха (ун чухне вӑл *йир-* формӑллӑ пулнӑ) венгрсен мӑн аслашшӗсене панӑ (хальхи венгр. *иир-*). Вӑтам Атӑл тӑрӑхне килсе тӗпленсен, пӑлхарсене кура, кӳршӗри финн-угр халӑхӗсем

– марисем (туҫи мари *сир-*, тухӑҫ мари *сер-*), мордвасем (ирҫе *сӗрьма* "письмо", мӑкшӑ *сӧрма* "письмо"; "вышивка"; "узор"), комисем (*сер* "узор", "орнамент") вулама-ҫырма вӗренсе пынӑ. Пирӗн мӑн асаттемӗрсем ҫавӑн пек Китай ӑсчахӗсенчен вӗренсе килсе, кӗнеке ӑсталӑхне те Тухӑҫ Европӑри халӑхсене парнелесе тухнӑ (Кун пирки: *Егоров Н. Кашни сӑмах – хӑех юмах //Ялав, 1986. 6 №. 26–28 стр.* вуласа пӗлме пултаратӑр). Ют чӗлхесене кӗрсе юлнӑ пӑлхар-чӑваш сӑмахӗсене нумай тӗпченӗ. Унашкал сӑмахсем монгол чӗлхисенче 500-е яхӑн, венгр чӗлхинче 300-е яхӑн, коми чӗлхинче 200-е яхӑн, удмурт чӗлхинче 300 ытла, ирҫе-мӑкшӑ чӗлхисенче 200–300 патнелле, вырӑс чӗлхинче 400 ытла, тутар чӗлхинче 500 патнелле, ытти чӗлхесенче те чылай.

[10] Выльӑх-чӗрлӗх ҫисе янӑ ҫырулӑх (кӗнеке) ҫинчен калакан халапсем тӗнчӗри халӑхсен хушшинче ҫав тери анлӑ сарӑлнӑ (Кун пирки: *Чеснов Я.В. Проглоченное знание и этнический облик //Фольклор и этнография: Проблемы реконструкции фактов традиционной культуры. Л.: Наука, 1990. С. 169–180* вуласа пӗлме пулать). Юлашки ҫулсенче чӑваш кӗнекине ҫисе янӑ ӗне пирки хамӑр тӗпчевҫӗсем те чылай ҫырчӗҫ. Анчах та кунашкал халапсене (мифсене) истори шайӗнче мар, мифологи шайӗнче тӗпчесе ӑнлантарни тӗрӗсрех пек туйӑнать.

[11] Чӑвашсен авалхи ҫырулӑхӗн палӑкӗсем ҫинчен калакан халапсем нумай тӗл пулаҫҫӗ. Шупашкар районӗнчи Чумкасси (Юраково) ялӗнчен Н.В.Никольский профессор патне пӗр паллӑ мар ҫын (ятне кӑтартман) ҫырса янӑ халапра Юрак ампарӗнче "пир тӑрӑхӗ пек вӑрӑм темиҫе теҫетке ҫырулла хут тӗрки" пулни ҫинчен каланӑ, хучӗсене те тутарла, те урӑхла ҫырса пӗтернӗ пулнӑ. Ҫав хут тӗркемӗсене Иустиния Петрова арчи-мӗнӗпех Атрахман ятлӑ пулӑ тутарне парса янӑ пулнӑ. Ҫыру авторӗ Атрахманран ҫав хутсем ҫине мӗн ҫырнине ыйтса та пӑхнӑ иккен, анчах лешӗ шарламан. Ҫакӑ 1914 ҫул тӗлнелле кӑна пулнӑ. Апла пулсан, ӑнсӑртран хӗсӗнсе юлма пултарнӑ ҫырулӑх палӑкӗсене шырама халь те каях юлман-тӑр-ха.

*Асӑрхаттарусене Н.И.Егоров ҫырнӑ.*

# ĂСЛĂЛĂХ ИСТОРИЙĔ

*Ю.В.Яковлев*

## ЧĂВАШ ЧĔЛХЕ ВĔРЕНТĔВĔНЧИ ЭТНОЦЕНТРИЗМ ПАЛĂРĂМĔ: ИВАН ЮРКИН

"Эпĕ çырнă ятсенчен хăш та хăшĕ йăнăшши те пуртăр, вĕсемшĕн мана вулакансем айăп ан туччăр! Манăн мĕн пур сăлтавăм: хамăр чăвашсене ĕлĕк епле вăйлă, пит пысăк патшалăхпа пурăннине пĕлтерессĕм килет", – çырнă Иван Юркин (Юркка Иванĕ) "Чăваш сăмахĕсенчен тухнă ятсем. Ĕлĕкхи пулхăр çĕрĕнче" статйинче[1]. "Чăвашсем-пулхăрсем пит чаплă çынсем пулнă. Вĕсене ют патша çыннисем те "мухтавлă çынсем" тесе хисепленĕ..." – вулатпăр "Аваллăх çĕрĕпе" хайлавра[2]. Чăвашсем "пит вăйлă, пит чаплă, пит мухтавлă çынсем пулни" пирки калакан йĕркесем çаксем кăна мар. Çыравçăн пĕтĕм пултарулăхĕ, пĕтĕм чун хавалĕ çак шухăш-кăмăл çинче никĕсленнĕ.

Г.И.Комиссаров Юркин пирки: "Пирĕн писательсен ашшĕ", – тет[3]. Кун пек калани, тен, тĕрĕсех те мар. Юркинтан маларах Спиридон Михайлов тата Игнатий Иванов çырнă-çке. Юркин пирки пĕр иккĕленмесĕрех урăххине çирĕплетме пулать: вăл – чăваш литературинче, культуринче этноцентризм юхăмне пуçараканĕ. С.Н.Артановский этноцентризм тупсăмне çавăн пек палăртать: "Этноцентризм – это чувство принадлежности к определенной группе и гордости, происходящей от этой принадлежности"[4]. Ку термин пирки хальтерех çырнисенчен: "Этноцентризм – это свойство групповой психики, древнейший в истории механизм групповой самозащиты. Его содержание: "мы" лучше, чем "они"; наша группа, наш этнос во всех отношениях благороднее, мужественнее, добрее, чем другая группа, другой народ"[5].

Юркин этноцентризмне тĕрĕс ăнлантаракансен шутне эпĕ М.П.Петров-Тинехпие кĕртнĕ пулăттăм: "Те взгляды, которые имеются у И.Н.Юркина по вопросам чувашской истории, окрашены густой краской национального чувства, – çырнă вăл. – Это чувство приводит его к тому, что он договорился даже до утверждения, что вся территория Восточ-

ной Европы некогда принадлежала чувашам, и все чувашское он противопоставляет всему великорусскому. Подобные взгляды могли возникнуть лишь в дореволюционную эпоху, когда все чувашское всячески игнорировалось и принижалось и когда не только наметилась, но и началась жестокая борьба угнетенных с угнетателями. Чувашская либеральная мелкая буржуазия и мелкобуржуазная интеллигенция выдвинули в этой борьбе лозунги национального освобождения и возрождения национальной культуры. На почве именно этой борьбы родились и выросли взгляды И.Н.Юркина"[6].

Чăваш пулса çуралнипе мухтанакансем паян пайтах, анчах иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче (çавăн чухне çырнă И.Н.Юркин "Ют чĕлхесенче çӳрекен чăваш сăмахĕсем" статйине) чăвашлăх нумай çыншăн тамăк сăнлăн курăннă: "Урамра пире пăрахăç ача-пăча та чăваш тесе мăшкăлламасăр иртмест, кĕнекесенче, хаçатсенче, пур тĕлте чăваш халăхне мăшкăлласа çыраççĕ, пирĕн чăвашлăх пĕтĕм тĕнчене тăвăрланă, кансĕрленĕ пек туйăнать", – çапла асăннă иртнине Мĕтри Юман[7]. Усал пулнă чăвашсемшĕн ун чухнехи самана йăли, йĕрки. Халăх хăй пуласлăхне шанми пулнă. "Эпĕ çамрăк чухне чăвашла çырса асапланаттăм, – чунне уçать И.Н.Юркин. – Пĕлекен çынсем, ялйышсем, юлташсем эпĕ çапла çырнине пĕлсе манран кулатчĕç. Чăваш чĕлхипе çырни мĕне кирлĕ?.. Чăваш чĕлхи нихăçан та кирлĕ пулас çук. Чăвашсем сахалтан, вырăсла çырăва вĕрентнĕ пирки, малашне пурте вырăса тухса кайĕç. Çырăва вĕренменнисем, тутарсем хушшинчисем, тутара тухĕçĕ. Чăваш чĕлхи пит начар чĕлхе... нимĕн те çырма хал çук, тетчĕçĕ. Çапла калаçакансемпе эпĕ кирек хăçан та темĕн тĕрлĕ тавлашаттăм. Пирĕн чăваш халăхĕ часах ирĕлсе кайса çухалас çук. Чăвашсем ĕмĕр-ĕмĕрнех чăвашсем пулса тăрăçĕ. Пирĕн чĕлхе пуян чĕлхе. Пирĕн сăмахсене ют çынсем те темĕн чухлĕ йышăннă: астăвăр вырăссене, арабсене, перссене тата ыттисене те"[8].

Юркин вырăс тĕнчине (уйрăмах чăваша вырăслатакан вăйсене) хирĕç тăнă, чăвашлăха хӳтĕленĕ: "Вырăссем кунта, Европăра, пурăнма пуçлани 862 çулсенче тин палăра пуçланă. Унччен ĕлĕк вĕсем таркăнсем... пулса пурăннă. Çитнĕ çĕрте пĕр вĕсем пирĕн чăваш çыннисене, ĕлĕк урăх ятсемпе çӳренĕ вăхăтсенче, сăтăр туса пурăннă: çынсене пере-пере вĕлернĕ, выльăх-чĕрлĕхĕсене туртса илнĕ,.. килĕ-çурчĕсене вут тĕртсе

çунтарса янă. Хуçисем хăйсем, тарса хăтăлма ĕлкĕрнисем, тарса хăтăлнă, тарса ĕлкĕрейменнисем, мĕскĕнсем, çавăнтах пĕтнĕ... Вырăссем... вĕсенчен хăраса писсе кайнă çынсем вырăнне хăйсем вырнаçса пурăна пуçланă... Ак çак тăшмансем темиçе ĕмĕр чăвашсем хӳттинче пурăнса, пирĕн çынсем вăйсăрланса пынине кура тăруçăн, ялан пирĕн çĕр-шывсене çитнĕ çĕрте пĕр ирĕксĕр туртса илсе хăйсем ирĕкленсе пурăннă, темĕн тĕрлĕ ĕрченĕ, вăйланса пынă. Пирĕн çынсем, саманине хирĕç, темиçе тапхăр уйрăла-уйрăла тухса, тĕрлĕ çĕре саланса, вакланса, пĕтсе пынă, чисти вăйсăрланса халтан кайнă, вырăссене хирĕç çĕнтерейми те пулнă". Ку сыпăк "Вырăс чĕлхинчи чăваш сăмахĕсем" статьяран[9]. Çыравçă унта 400 яхăн сăмах илсе парать. 34 страницăллă хăй ĕçне вăл çапла вĕçлет: "Айван çынсем ĕлĕк хамăр чăвашран: "Çапла та капла, пирĕн чăваш чĕлхи начар чĕлхе, сăмахсем сахал", – тесе кăлăхах кулатчĕç. Акă начар чĕлхерен аван чĕлхе мĕн чухлĕ сăмахсем йышăннине куртăра?". Вĕреннĕ чăвашсенчен пĕр Юркин кăна иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче тăван халăха пысăка хурса хакланă. Ыттисем "çутталла" – вырăсалла – туртăннă. "Беднейшая и наиболее невежественная часть инородческого населения Казанского края, – тет чăвашсем пирки И.Я.Яковлев Л.А.Кассо министр патне çырнă çырура (1912). – ...Наши инородцы так отстали от окружающего их русского народа, настолько бедны духовно и материально, что ни о каких мечтаниях, существующих у инородцев западной России, с их стороны не может быть и речи, так как будущность восточных инородцев только в мирном слиянии с окружающим их со всех сторон русским населением. В этом и только в этом их счастье и венец мечтаний деятелей из их собственной среды"[10].

Даниил Филимонов пачăшкă çырни те "çутлăх" юхăмĕ пирки пирĕн куçа уçать пек: "Чувашскому народу нужно давать теперь такое только образование, какое русский народ получал в первые века христианства в России, потому что чуваши по своему умственному и нравственному развитию моложе русских по крайней мере на 500 лет... Чуваши еще не подготовлены для восприятия многосторонней, общеевропейской образованности, чуваши не в состоянии пока переварить ее в своем уме и воплотить в своей жизни"[11]. Революци хыççăн "националист" ятне илнисемшĕн те чăваш тĕнчи

тăвăр, хĕсĕк, пăнтăх пулнă. Юркиншăн вара чăваша çитекен халăх тĕнчипе те çук: "Пирĕн чăвашсене лайăхах пĕлмен çынсем, вĕсем çинчен калаçнă чухне, çапла та капла начар, суккăр çынсем, тесе хурлама тытăнаççĕ. Эпĕ акă тĕрлĕ тĕлте, тĕрлĕ çынсем хушшинче çӳрекен çын, ниçта та хамăр чăваш çынни пеккисене, малтисене, ни вырăс хушшинче, ни мăкшă хушшинче, ни тутар хушшинче курмастăп"[12].

## Литература


[1] Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн наука архивĕ, I уйр., 20 упр. ед., 169 с.

[2] *Юркин И.* Повеçсем. Прозăлла сăвăсем. Тĕрленчĕксем. Асаилӳсем. Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1986. 238 с.

[3] ЧПГĂИ НА, I уйр., 497 упр. ед., 4874 инв. №, 40 с.

[4] *Артановский С.Н.* Проблемы этноцентризма, этнического своеобразия культур и межэтнических отношений в современной зарубежной этнографии и социологии //Актуальные проблемы этнографии и современная зарубежная наука. Л.: Наука, 1979. С. 12.

[5] Этнографическое обозрение, 1995. № 2. С. 18.

[6] НА ЧГИГН, отд. II, ед. хр. 2, инв. № 3.

[7] *Юман М.* (*Д.П.Петров*). 1905-мĕш çул. Шупашкар, 1925. 55 с.

[8] *Юркин И.* Асăннă кĕнеке. 221 с.

[9] ЧПГĂИ НА, I уйр., 20 упр. ед., 989 упр. ед.

[10] *Яковлев И.Я.* Из переписки. Чебоксары: Чувашское книжное изд-во, 1989. С. 217, 218–219.

[11] ЦГА ЧР, ф. 350, оп. 1, д. 3, л. 190.

[12] Хыпар, 1995, çурла, 1.

# АЛЕКСЕЙ ИВАНОВИЧ ИВАНОВ
## (Çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май)

А.И.Иванов – чăваш чĕлхе ăслăлăхĕнче пурнăç тăршшĕпех вăй хунă çынсенчен пĕри. Хулăн монографисем те пичетлесе кăларман вăл, степень е тĕрлĕрен хисеплĕ ят илме те ăнтăлман, çапах та туса хăварнă ĕçĕсене кура чăваш ăслăлăх историне кĕрсе юлма тивĕçлĕ пулнă. Документсене çеç ĕненес пулсан, Алексей Иванович чĕлхе пĕлĕвĕнче виçĕ çул кăна ĕçленĕ пек курăнать, чăннипе вара ун пурнăçĕнче тăван чĕлхене тишкересси-тĕпчесси яланах пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Алексей Иванович Иванов пĕр ĕмĕр каялла, 1898 çулхи пуш уйăхĕн 26-мĕшĕнче халĕ Чăваш Республикин Елчĕк районне кĕрекен Ĕнел ялĕнче çуралнă. 1913-мĕш çулта Кĕçĕн Елчĕкри икĕ класлă шкула пĕтерсен вăл учитель пулас ĕмĕтпе Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕрет. 1917 çулхи кĕркунне самана пăлханса кайсан, тĕрлĕ йывăрлăхсене пула шкула вăхăтлăха хупса хураççĕ. А.И.Иванов вара пилĕк уйăха яхăн Пăва уесĕнчи пĕр ялта пуçламăш шкул учителĕ пулса ĕçлет. Тепĕр çулталăкран ăна революци пăлхавăрĕ хăй авăрне çавăрса кĕрсе каять. 1919 çулхи çуркунне, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухас умĕн, вăл çак шкулти ытти чăваш çамрăкĕсемпе пĕрле хăй ирĕкĕпе Хĕрлĕ Çар ретне тăрать, Хĕвел тухăç фронтĕнчи çапăçусене хутшăнать. 21 çулхи çамрăк ку вăрçăран аманса таврăнать. Çурăм шăммине кĕрсе ларнă пуля вара ăна ĕмĕрĕпех çав кунсене ас илтерсе тăрать.

Фронта тухса кайиччченех А.И.Иванов хаçат-журнал ĕçне килĕштерни паллă: 1918 çулхи ака уйăхĕнче Чĕмпĕр шкулне таврăнсан вăл çак хулара тухакан "Çĕнĕ пурнăç" хаçата çырса тăрать. 1919 çулхи кĕркуннерен вара "Çутталла" хаçатпа "Атăл юрри" журнал редакцийĕсенче яваплă çыруçă ĕçĕсене туса пыма пуçлать.

1921 çул çуркунне ăна Мускаври Халăх вĕрентĕвне йĕркелекенсен тĕп институтне пĕлӳ пухма яраççĕ. 1924 çулта, институт курсне пĕтерсен, вăл Мускаври Тĕп издательствăн чăваш секцине куçать, 1928 çулчченех унта редакторта ĕçлет. Çав хушăрах (1924–1926 çулсенче) "Ĕçлекенсен сасси" журнала та редакцилесе тăрать. 1928 çулта Алексей Ивановича тăван республикăна чĕнсе илеççĕ. Кунта вăл малтан Чăваш АССР

Çутĕç комиссарĕн çумĕ, ялсенче колхозсем йĕркелеме пуçласан – Елчĕк районĕнчи ĕçтăвком ертÿçи, кайран Канашри педагогика техникумĕн директорĕ пулса ĕçлет.

1934 çулта А. И. Иванова каллех вĕренме яраççĕ. Хальхинче – Ленинграда, куçаруçă-редакторсен икĕ çуллăх курсне. Унтан таврăнсан вăл кĕнеке издательствинче куçаруçă тата вĕрентÿпе методика литературин редакторĕ пулса ĕçлет, арифметикăпа алгебра тата географи учебникĕсене вырăсларан чăвашла куçарать, чăваш чĕлхи синтаксисĕн учебникне хатĕрленĕ çĕре хутшăнать. 1939 çулта тăван чĕлхене тарăнрах тĕпчес шут тытса ЧАССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи Наука тĕпчев институтĕнче ĕçлеме пуçлать. Анчах та хăрушă вăрçă тапранни тĕпчевçĕн ĕмĕчĕсене татать. Унăн çапăçу хирне тухса кайнă юлташĕсен вырăнне йышăнса хаçат ĕçне кÿлĕнме тивет. Вара А.И.Иванов вунă çул хушши “Коммунизм ялавĕ” хаçат редакцийĕнче секретариат ĕçне йĕркелесе тăрать. 1951–1958 çулсенче, мĕн пенсие кайиччченех, Алексей Иванович Чăваш кĕнеке издательствинче вĕрентÿпе методика литературине редакцилекĕ çĕрте ĕçлет. Вăл пенсие тухсан та, унччен те чылай вăхăт Наука тĕпчев институтĕнчи чĕлхе пайĕн ĕçĕ-хĕлне штатра тăман наука сотрудникĕ пулса хастар хутшăннă. Паллă чĕлхеçĕн, куçаруçăн, журналистăн канăççăр чĕри 1983 çулхи ака уйăхĕн 20-мĕшĕнче тапма чарăннă.

Чĕлхе ыйтăвĕсем пирки А.И.Иванов çирĕммĕш çулсенчех çырма пуçланă. Хăй аса илнĕ тăрăх, чăваш чĕлхине тĕпчеме пуçлама ăна Н.И.Ашмаринпа тĕл пулса калаçнисем хавхалантарнă. Алексей Иванович паллă ăсчаха чи малтан 1920 çулта Хусана çутĕç ĕçченĕсен съездне кайсан курать. Ашмарин съезд делегачĕсене чăваш чĕлхи çинчен лекцисем вуласа панă иккен. Çавăн чухнех вĕсен паллашма та май килсе тухать. А.И.Ивановăн аслă профессора Хусантан Чĕмпĕре куçнă чухне пулăшма тивет. 1920–1921 çулсенче вĕсем пĕр-пĕринпе час-часах тĕл пулаççĕ, калаçаççĕ. Çак калаçусенче вăраннă та ĕнтĕ çамрăк çынра чĕлхе тĕпчевçи... Н.И.Ашмарин чăваш чĕлхин ку е вăл уйрăмлăхĕ çинчен ăнлантарни, Ивановран вĕсен тăрăхĕнче епле калаçнине ыйтса пĕлни, ытти çĕртипе танлаштарса кăтартни Алексей Ивановича та чĕлхе факчĕсене курма-туйма вĕрентет, вĕсен тĕшшине шырама, шалти тытăмне тишкерме хистет. Çак туртăм ăна пурнăç тăршшĕпех канăç паман: журналист, куçаруçă е

редактор тивӗҫӗсене пурнӑҫланипе пӗрлех вӑл чӑваш чӗлхине тӗпчесе ҫырнӑ ӗҫсем те чылай пичетлесе кӑларать.

Тӑван чӗлхе ҫинчен ҫырнӑ чи пирвайхи ӗҫсен шутне "Ҫутталла" хаҫатра пичетленнӗ "Литература чӗлхине ҫирӗплетес умӗн" [1], "Тапхӑрлӑ ҫырусемпе чӑваш литература чӗлхи" [2] статьясене кӗртмелле. Вӗсенче хӗрӳллӗ ҫамрӑк вӑл вӑхӑтри чӑваш чӗлхишӗн ҫеҫ мар, ун малашлӑхӗшӗн те ҫунни курӑнать: чӗлхе аталантӑр, пурнӑҫ шайне тивӗҫтерсе пытӑр тесен ун лексикине пуянлатма кирлине палӑртать вӑл. Литература чӗлхине диалект сӑмахӗсене кӗртни те, вырӑс чӗлхинчен тӗрлӗ ҫӗнӗ ӑнлава палӑртакан терминсемпе сӑмахсене йышӑнни те чӗлхене сиен кӳменнине, аталанма пулӑшнине кӑтартса парать. Ҫак шухӑшсене А.И.Иванов 1953 ҫулхи "Ялавра" тухнӑ "Вырӑс чӗлхипе чӑвашсен литература чӗлхи" статйинче [4] малалла тӑсать. Мӗне пӗлтерет-ха чӑваш литература чӗлхине аталантармалла тени? Ҫапла ыйту лартать те автор хӑех хуравлать: чӑн малтан чӑваш чӗлхин хӑйӗн саккунӗсене шута илсе сӑмахсен йышне ӳстермелле тата грамматикин тытӑмне йӗркелемелле. Анчах та чӗлхере ҫирӗпленнӗ фактсене тишкернӗ хыҫҫӑн чӑваш чӗлхин лексикинче те, грамматикинче те вырӑс чӗлхи витӗмӗпе ҫуралнӑ, халӗ норма пекех ҫирӗпленнӗ пулӑмсем пуррине кура тӗпчевҫӗ ҫапла пӗтӗмлетӳ тӑвать: "Ҫак влияни (вырӑс чӗлхи чӑваш чӗлхин сӑмах йышӗпе грамматика тытӑмне витӗм кӳни. – *А.Д.*) малашне тата та пысӑкланӗ. Вырӑс сӑмахӗсемпе предложени нормисем чӑваш чӗлхине кирлӗ пирки (...) кӗрсе пырсан, ҫакна прогрессивнӑй явлени тесе шутлас пулать...". Чӑваш чӗлхине ҫителӗклӗ пӗлменнипе е кирлӗ сӑмахсемпе грамматика формисене тӑван чӗлхере шырама ӳркеннипе ҫеҫ вырӑс чӗлхи нормисемпе усӑ курнине Алексей Иванович сивлет.

Ҫитмӗлмӗш ҫулсенче тухнӑ "Чӗлхе культурин ыйтӑвӗсем» сборниксенчи статйисенче те вӑл «чӑвашла ҫырнӑ чух вырӑс чӗлхипе усӑ курса шухӑшланине» тиркет, «шухӑша вырӑсла мар, чӑваш синтаксисӗн законӗсене пӑхӑнса йӗркелемелле» тет [17, 13 с.]. Шел пулин те, Алексей Иванович тиркенӗ пулӑмсем чӑвашсен пуплевӗнче (ахаль калаҫура та, хаҫат-журнал чӗлхинче те) йышлансах пыраҫҫӗ. Вӑл калани паян та вырнаҫуллӑ: "пӗр-пӗр япалана "начар ҫырнӑ" тес вырӑнне "э! ӑна хаҫат чӗлхипе ҫырнӑ" темелле

ан пултăр”. Чĕлхен, уйрăмах хаçат чĕлхин, грамматика тытăмĕ халĕ те вырăсланса пырас çул çинче тăрать.

1956–1966 çулсенче А.И.Ивановăн “Чăваш орфографийĕпе пунктуацийĕн хăш-пĕр ыйтăвĕсем”, “Пĕрле е уйрăм çырасси çинчен шухăшлани” статйисем кун кураççĕ [6; 12]. Пĕрремĕш статьяра чăваш графикипе орфографине системăласа йĕркелемеллине палăртать автор. Çавна май вырăс чĕлхинчен тĕрлĕ тапхăрта йышăннă сăмахсене çырасси, хутлă сăмахсене сăмах майлашăвĕсенчен уйăрасси, падеж аффиксĕсемпе усă курасси тата ытти хăш-пĕр ыйтусем çинче чарăнса тăрать; сăмахсене пĕрле, уйрăм е дефиспа çырмалли çинчен калакан правилăсен проектне сĕнсе пăхать. Çакăнтах чарăну паллисене (уйрăмах запятоя) лартассинчи йывăрлăхсемпе çитменлĕхсене те асăнать вăл; анлă е ансăр обстоятельствăллă хутсăр предложенисенче тата пăхăнуллă хутлă предложенисенче тепĕр чухне чарăну палли ытлашши пулни çинчен калать. Иккĕмĕш статьяра А.И.Иванов орфографи проблемисенчен пĕрне пайăррăн илсе тишкерет. Сăмахсене пĕрле е уйрăм çырасси “хутлă сăмах” термина мĕнле ăнланнинчен те килет. Мĕн вăл хутлă сăмах? Мĕнле паллăсем чĕлхе единицине хутлă сăмах тесе хаклама май параççĕ? Тĕпрен илсен, çак ыйтусене пăхса тухать тĕпчевçĕ. “...Чĕлхе – система, чĕлхери кашни сăмах, кашни сăмах майлашăвĕ пĕр-пĕр паллă тăрăх ытти темиçе сăмахпа е сăмах майлашăвĕпе пĕр ретре тăрать. Орфографи правилисене тунă чух çавна шута илес пулать: пĕр йышши сăмахсене е сăмах майлашăвĕсене пĕр пек çырмалла”, – асăрхаттарать вăл. Орфографипе пунктуаци проблемисем çинчен хаçат-журналта та статьясем пичетлет А.И.Иванов. Ку ĕçсенче хускатнă ыйтусене паян кунччен те татса панă теме çук-ха. Эппин, вĕсенчи шухăшсем те пахалăхне çухатман...

. Алексей Иванович орфографие теори шайĕнче тĕпченипе кăна çырлахман. Чылай вăхăт орфографи комиссийĕнче ĕçленĕ, 1951 тата 1963 çулсенче вăл хатĕрленĕ орфографи словарĕсем пичетленсе тухнă. Термин пĕлĕвĕнче те ун пайти пур: 1940 çулта вăл Н.Ф.Даниловпа пĕрле терминологи словарĕ кăларнă. Икĕ чĕлхеллĕ словарьсем хатĕрлессине те яланах хастаррăн хутшăннă тĕпчевçĕ: 1948 çулта тухнă чăвашла-вырăсла словарĕн авторĕсенчен пĕри пулнă вăл, 1961 çулхи чăвашла-вырăсла словаре хатĕрлекенсен йышне кĕнĕ.

А.И.Иванова стилистика ыйтӑвӗсем те интереслентерни. "Чӑваш чӗлхин стилистики ҫук-ха, ӑна никам та тӗпчесе ҫырман. Илемлӗ литература чӗлхин стилистикине ҫеҫ литература теорийӗнче пӑхса тухаҫҫӗ", – тесе ҫырать вӑл хӑйӗн пӗр статйинче [3, 113 с.]. Малалла вара чӑваш чӗлхи стилӗсенчен пӗрне – публицистика стильне тишкерме тӗллев лартни ҫинчен пӗлтерет. Хаҫат-журнал чӗлхине сӑнаса тишкернӗ май чӗлхе аталанӑвӗн шалти саккунӗсене шута илессипе буквализм ҫинчен, кирлӗ сӑмахсемпе предложенисен формисене суйласа илесси ҫинчен, предложенири сӑмахсен йӗркипе ҫыхӑнӑвӗ ҫинчен, пӗр йышши членсене йӗркелесе ҫырасси ҫинчен ӑнлантарать ку статьяра тӗпчевҫӗ.

Чӗлхе ӑслӑлӑхӗнче тунӑ чи пысӑк пӗлтерӗшлӗ ӗҫӗсем Алексей Ивановичӑн грамматика ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑннӑ.1953 ҫулта "Коммунизм ялавӗ" хаҫатра унӑн "Чӑваш чӗлхине тӗпчесе вӗренес ӗҫри хӑш-пӗр ҫитменлӗхсем ҫинчен" [5], тӗпчев институтӗнче "Чӑваш чӗлхинчи падеж ыйтӑвӗ ҫинчен" [6] статйисем пичетленеҫҫӗ.Вӗсенче чӗлхене тишкернӗ чухне унӑн хӑйӗн уйрӑмлӑхӗсене тӗпе хумалли ҫинчен, пӗр чӗлхе грамматикин йӗркине пач урӑх тытӑмлӑ чӗлхен йӗркипе (тӗслӗхрен, вырӑс чӗлхипе чӑваш чӗлхине) танлаштарса тӗрӗслӗх тупма май ҫукки пирки калать. Морфологи ыйтӑвӗсемпе синтаксис ыйтӑвӗсене пӑтраштарма юраманни ҫинчен, сӑмах пулӑвӗпе сӑмах улшӑнӑвӗн чиккине уҫӑмлӑрах палӑртма кирли ҫинчен (тӗслӗхрен, ку е вӑл падеж формисене вырӑсла епле куҫнине кура ҫех ҫӗнӗ сӑмах теме юраманни пирки) ҫырнӑ тата ытти нумай ҫивӗч ыйтӑва хускатнӑ тӗпчевҫӗ. Ку статьясем пысӑк тавлашу пуҫарса яраҫҫӗ. 1953–1954 ҫулсенче хаҫатра ҫав темӑсем тавра 14 статья пичетленсе тухать. Учительсем, пичетпе ӑслӑлӑх ӗҫченӗсем чӑваш грамматикин теорийӗнче те, вӗрентӳ методикинче те хирӗҫӳллӗ, татса паман ыйтусем татах та пуррине кӑтартаҫҫӗ. Тӗпчев институтӗнче, дискуссие пӗтӗмлетнӗ май, ҫакна палӑртнӑ: тавлашу пӗр шухӑшлӑх патне илсе ҫитереймерӗ пулин те, чӑваш чӗлхи грамматикин вӑраха ямасӑр хускатмалли ыйтӑвӗсене сӳтсе явма, чылайӑшне татса пама пулӑшрӗ (О дискуссии по некоторым вопросам чувашской грамматики //Ученые записки ЧНИИ. Вып. XII. Чебоксары, 1955. С. 3–27). Дискусси чӗлхе ӑслӑлӑхӗн аталанӑвӗшӗн пысӑк

пĕлтерĕшлĕ пулнине Н.К.Дмитриев, Б.А.Серебренников, Е.И.Убрятова паллă тюркологсем те калană.

Каярах çырнă "Чăваш чĕлхинчи тӳрĕ объектпа ăна палăртмалли формăсем" [11], "Чăваш вĕçленĕвĕн чĕлхери вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ" [13] ĕçĕсенче тĕпчевçĕ чăваш чĕлхинчи ят сăмахсен улшăнăвне тĕплĕн тишкерсе тухать, вĕçленӳ категорине кĕрекен формăсене палăртать. Чăваш чĕлхинчи падежсен пулăвне, морфологи тытăмне, синтаксис паллисене, пĕлтерĕшĕсене кăтартать. А.И.Ивановăн ку ыйтусемпе туса хăварнă ĕçĕсем пысăк хаклава тивĕç. Хальхи вăхăтри чĕлхе ăслăлăхĕнче те, вăтам тата аслă шкул программисенче те падежсем çинчен калакан пайсене вăл сĕннĕ шухăшсене тĕпе хурса йĕркелеççĕ.

Алексей Иванович чăваш чĕлхин историллĕ грамматикине тĕпчесе çырнă ĕçсем те пичетлесе кăларнă: "Об относительной хронологии некоторых аффиксов и грамматических форм чувашского языка" [14], "Чувашский язык в урало-алтайской семье языков" [18]. Чăваш чĕлхипе Урал-Алтай пĕрлĕхне кĕрекен чĕлхесен çыхăнăвĕсене тишкерет, чăваш чĕлхинчи категорисен (сăпат местоименийĕсен, камăнлăх аффиксĕсен, ят сăмахсен падеж тата хисеп формисен) уйрăмлăхĕсене тĕрĕк, монгол, финн-угр чĕлхисен факчĕсемпе танлаштарать автор. Çак чĕлхесенчи пĕрпеклĕхсем халăхсем юнашар пурăнса пĕр-пĕрне витĕм кӳнипе çеç мар, хурăнташлă пулнипе те палăраççĕ тесе пĕтĕмлетӳ тăвать.

Алексей Иванович Ивановăн чĕлхе çинчен çырнă ĕçĕсем ытла нумаях та мар. Çапах та чĕлхе пĕлĕвĕнче самай палăракан йĕр хăварма пултарнă тăрăшуллă тĕпчевçĕ. Ун шухăшĕсенчен чылайăшĕ чĕлхе теорийĕнче хăйсен вырăнне тупнă, вăл хускатнă ыйтусенчен хăшĕ-пĕри паян та çивĕч тăрать. Тепĕр чухне Алексей Иванович каланисем патне таврăнса унпа "канашласа илсен" ытлашши пулмĕ...

**А.И.Ивановăн чăваш чĕлхи çинчен пичетленнĕ статйисем**

1. Литература чĕлхине çирĕплетес умĕн //Çутталла, 1920. 12 №.

2. Тапхăрлă çырусемпе чăваш литература чĕлхи //Çутталла, 1920. 27 №, 29 №.

3. Чăваш чĕлхи стилистикин хăш-пĕр ыйтăвĕсем //Тăван Атăл, 1952. 4 №. 113–142 с.

4. Вырӑс чӗлхипе чӑвашсен литература чӗлхи //Ялав, 1953. 5 №. 26–28 с.

5. Чӑваш чӗлхине тӗпчесе вӗренес ӗҫри хӑш-пӗр ҫитменлӗхсем ҫинчен //Коммунизм ялавӗ, 1951. 125 №.

6. К вопросу о падежах в чувашском языке в связи с изучением специфики его //Записки ЧНИИЯЛИЭ. Вып. VIII. Чебоксары, 1953. С. 167–192.

7. Некоторые вопросы чувашской орфографии и пунктуации //Ученые записки ЧНИИЯЛИЭ. Вып. XIV. Чебоксары, 1956. С. 86–116.

8. Сӑмахсене пӗрле е уйрӑм ҫырасси ҫинчен //Коммунизм ялавӗ, 1957. 36 №.

9. Чарӑну паллисем лартасси ҫинчен //Коммунизм ялавӗ, 1957. 86 №.

10. Несколько слов об образовании форм спряжения в чувашском языке //Ученые записки ЧНИИЯЛИЭ. Вып. XVI. Чебоксары, 1958. С. 158–176.

11. Прямой объект и формы его выражения в чувашском языке //Ученые записки ЧНИИЯЛИЭ. Вып. XXVIII. Чебоксары, 1965. С. 88–96.

12. Пӗрле е уйрӑм ҫырасси ҫинчен шухӑшлани //Ученые записки ЧНИИЯЛИЭ. Вып. XXXII. Чебоксары, 1966. С. 170–176.

13. Склонение и его роль в чувашском языке //Ученые записки ЧНИИЯЛИЭ. Вып. XXXIV. Чебоксары, 1967. С. 67–99; Вып. XXXIX. Чебоксары, 1969. С. 106–126.

14. Об относительной хронологии некоторых аффиксов и грамматических форм чувашского языка //Ученые записки ЧНИИЯЛИЭ. Вып. 49. Чебоксары, 1970. С. 61–90.

15. Деятельность Н.И.Ашмарина – пример для подражания //Н.И.Ашмарин – основоположник чувашского языкознания. Чебоксары, 1971. С. 256–258.

16. Хаҫат-журнал чӗлхи тӗрӗс те илемлӗ пултӑр //Чӗлхе культурин ыйтӑвӗсем. 1-мӗш кӗнеке. Шупашкар, 1971. 140–143 с.

17. Хаҫат тата чӗлхе культури //Чӗлхе культурин ыйтӑвӗсем. 2-мӗш кӗнеке. Шупашкар, 1972. 6–13 с.

18. Чувашский язык в урало-алтайской семье языков //Чувашский язык, литература и фольклор. Вып. 1. Чебоксары, 1972. С. 3–53.

*А.П.Долгова.*

## Н.Н.ПОППЕ — NICOLAUS POPPE
## (100 çулĕ çитнĕ тĕле)

Чăваш чĕлхине тимлесе тĕпченĕ пултаруллă ăсчахсем хушшинче Николай Николаевич Поппе (1897–1991) ячĕ сумлă вырăн йышăнать. Шел, хăй пирки те, ĕçĕсене те пĕлсех каймаççĕ пирĕн тăрăхра. Яланхи сăлтавсемсĕр пуçне тĕпчевçĕ биографийĕн уйрăмлăхĕсем те “айăплă” куншăн. Поппе кунçулĕ пĕр-пĕрне чылай хирĕçлекен икĕ пысăк тапхăртан тăрать. Унăн пурнăç сукмакне вăтаран çурса каяканĕ – Тăван çĕршывăн аслă вăрçи.

Хăйĕн кун-çулĕн малтанхи тапхăрĕнче Николай Поппе СССР Ăслăлăх академийĕн член-корреспонденчĕ, Ленинград университечĕн профессорĕ пулнă, Хĕвел тухăç пĕлĕвĕн институтĕнче тăрăшнă. Монгол, финн-угр тата тĕрĕк чĕлхисене тĕпчесе вăтăра яхăн кĕнеке кăларнă, вĕсенчен иккĕшне чăваш чĕлхине халалланă. 30-мĕш çулсенче – çав вăхăтри йăлапа – “буржуалла идейăсемпе теорисене” саракансене питленĕ. Халхин-Гол патĕнчи çапăçусем вăхăтĕнче совет Генштабне канашсемпе пулăшнă...

Хальхи Карачаевск хулине тăшман тытса илсен, унта эвакуацире пурăннă Поппе нимĕçсен енне куçнă – оккупаци влаçĕн канашçи пулса тăнă. 1943 çулта вăл нацистсен СС разведкипе тӳреммĕнех çыхăннă Ваннзее институтĕнче ĕçлеме пуçланă. Вăрçă хыççăн унăн, паллах, совет органĕсен аллине лекесрен сыхланма тивнĕ. Тăватă çул Германире нушаланкаласа пурăннă хыççăн 1949-мĕшĕнче Николай Поппе Америкăра хӳтлĕх тупнă.

Малашне вара ăна ăслăлăх тĕнчи Nicolaus Poppe ятпа пĕлнĕ. Вăл Берлин тата Финн наука академийĕсен член-корреспонденчĕ, Британи академийĕн пайташĕ, Америкăри Вашингтон штатĕнчи Сиэтл университечĕн профессорĕ пулнă. Алтай йышне кĕрекен чĕлхесене тĕпчесе çуллен тенĕ пекех монографи тата нумай-нумай статья пичетлесе кăларнă. Вĕсенче чăваш чĕлхин историне те сахал мар çутатнă.

Пирĕн çĕршывра Н.Поппе ятне тепĕр хут 60-мĕш çулсенче – сыхланарах – асăнкалама пуçланă, анчах ăна пуçĕпех тӳрре кăларман. М.Р.Федотовăн 1987 çулта тухнă “Исследователи чувашского языка” брошюринче те, çавăнпах пуль, çак тĕпчевçĕ валли вырăн тупăнман. Çитмĕлмĕш-

сакăрвуннăмĕш çулсен чиккинче университетри ăсчахăмăрсем – М.Р.Федотов, Н.И.Егоров, А.Н.Кононов – Поппе тĕпчевĕсене, сăмах май, ырласа хакланине астăватăп. Вăл вăхăтра авторĕ пирки темех пĕлме май çукчĕ: “Америкăра пурăнать”, “политикăна хутшăнмасть”. Совет çĕршывĕнче пурăннă чухне кăларнă кĕнеки-статйисемпе библиотекăра ирĕклĕнех паллашма пулатчĕ, анчах хăшĕ-пĕринче хушаматне палăрмиех сăрласа хунăччĕ.

Николай Николаевич Поппе çуралнăранпа 1997 çулхи çурла уйăхĕнче çĕр çул çитрĕ. Хăй çук ĕнтĕ, совет саманинчи идеологи чарăвĕсем те пăрахăçа тухрĕç. Мĕн юлнă-ха? Тĕпчевçĕн тĕплĕ тунă ĕçĕсем тата пирĕн парăм – вăхăтра калайман ыр сăмах. Пурнăçĕн кукри-макрине хак парасси ĕнтĕ пирĕн тивĕç мар пулĕ...

Н.Поппе 1897 çулта Китайри Шаньдун провинцийĕнче Раççей дипломачĕн кил-йышĕнче çуралнă, хĕрĕх çула яхăн Питĕр хулинче пурăннă. Вăл хăй те, ашшĕ те, каярах кĕçĕн ывăлĕ те университетра Хĕвел тухăç факультетĕнче пĕлӳ пухнă. Паспорт илнĕ чухне Поппе хăйне “вырăс” тесе çыртарнă, анчах унăн çывăх тăванĕсем пурте Раççей нимĕçĕсем пулнă. Вăл вырăсла, нимĕçле кăна мар, финла тата монголла лайăх пĕлнĕ, ытти чĕлхесене вĕреннĕ. Финн-угр тата монгол йышĕнчи чĕлхесемпе кăсăкланнă май, Поппе, паллах, вĕсене сыпăнтаракан чăваш чĕлхинчен те пăрăнса иртеймен.

1924 çулта вăл пирĕн чĕлхене халалланă малтанхи тĕпчевĕсене пичете панă [1; 2], Хусанта пурăнакан чăваш ăслăлăхçипе Н.В.Никольскипе çыхăну йĕркеленĕ (темиçе çырăвĕ ЧПГĂИ наука архивĕн Никольский фондĕнче упранаççĕ). Икĕ тĕпчевçĕ пĕр-пĕрне канаш-сĕнӳпе, кирлĕ кĕнекесемпе пулăшнă, ăслăлăх шыравĕсемпе паллаштарнă. Сăмахран, раштавăн 17-мĕшĕнче янă çырăвĕнче [328 т., 122 с.] Н.Поппе çакна палăртать: авалхи чăваш чĕлхин (праязык) сăмах йышне тупса палăртасси ытлашши йывăр ĕçех мар, вăл çавăн пек пĕчĕк словарь хатĕрлеме пуçланă та ĕнтĕ. Унăн шучĕпе, **а > у* куçăм пирĕн чĕлхере XIV ĕмĕр хыççăн вĕçленнĕ, çавăнпа *хурăнташ* сăмаха чăвашсем маларах йышăннă пулать, *карăнтăк* (*кантăк*) вара, паллах, каярах кĕнĕ. Çак çырурах вăл – Н.В.Никольский ыйтнине шута хурса – Н.Ф.Катанов профессор (1862–1922) çемйине пулăшмалли майсене шыранине пĕлтерет.

Н.Н.Поппен Никольский патне янӑ ҫырӑвӗсене халиччен пичетре тишкермен – вӗсемпе тӗплӗрех паллашни усӑллӑ пулассӑн туйӑнать. "Юлашки вӑхӑтра чӑваш чӗлхипе ытларах та ытларах кӑсӑклана пуҫларӑм", – ҫырнӑ вӑл 1925 ҫулхи пуш уйӑхӗн иккӗмӗшӗнче [328 т., 107 с.]. Ҫав ҫырурах Николай Николаевич монгол тата чӑваш чӗлхисем тӗрӗк чӗлхинчен ватӑрах пулнине палӑртнӑ, *эпӗ, эсӗ* сӑпат ылмашӗсен пулӑвне ӑнлантарнӑ, виҫҫӗмӗш сӑпатӑн камӑнлӑх аффиксне (*-и, -ӗ*) тата курса иртнӗ вӑхӑтӑн 3-мӗш сӑпат формантне (*-ӗ*) маньчжур чӗлхинчи *i* "вӑл" ылмашпа ҫыхӑнтарнӑ. Ҫӗртмен малтанхи кунӗнче янӑ ҫырӑвӗнче [328 т., 112 с.] Поппе хӑй вотяк тата зырян чӗлхисенчи чӑваш йышӑнӑвӗсен несӗлне тишкерме пуҫӑннине пӗлтерет, пирӗн чӗлхене тӗпчесе ҫырнӑ ӗҫӗсемпе ытларах хамӑр ҫӗршывра мар, чикӗ леш енче интересленнине палӑртать, унта пичетлеме ҫӗнӗ статья – чӑваш чӗлхинчи сӑпат ылмашӗсемпе вӗҫленӳ пирки ҫырнӑскере – ярса панине хыпарлать. Н.В.Никольский, Поппе ыйтнипе, ӑна хӑй хатӗрленӗ словаре тата ытти ӗҫӗсене парнеленӗ, унӑн кӗнеки ҫинчен хаклав ҫырма шантарнӑ. 1925 ҫулхи утӑ уйӑхӗн иккӗмӗшӗнче янӑ ҫырура [328 т., 114–115 с.] Николай Николаевич ҫавӑншӑн ӑна чӗререн тав тӑвать, хӑйӗн вырӑсла ҫырнӑ тӗпчевӗсен усси пирки пӑшӑрханать: Раҫҫейре вӗсемпе интересленсех каймаҫҫӗ, ют ҫӗршыв тӗпчевҫисем вара вулаймаҫҫӗ. Германире тухакан статйисене Никольские ярса пама сӑмах панӑ май, тӗрӗк чӗлхисене тӗпчесе ҫырнӑ ӗҫсене унта ытларах хакланине палӑртать. Ҫак ҫырурах Поппе Н.В.Никольские Х.Паасоненӑн Будапештра пичетленнӗ чӑвашла-мадьярла-нимӗҫле словарьне (1908) малалла тӑсма, унта кӗмесӗр юлнӑ сӑмахсен пуххине виҫӗ чӗлхепе ҫав хуларах кӑларма сӗнет тата ӑна пичетлес тӗлӗшпе пулӑшма шантарать (вӑл Будапештра тухакан тӗрӗк ӑслӑлӑх журналӗн редакци йышӗнче пулнӑ).

1925 ҫулта Николай Поппе Н.Я.Марр академикпа пӗрле Чӑваш республикине тӗпчев тӗллевӗсемпе килсе каять. Ҫав ҫулах пирӗн чӗлхе пирки вырӑсла, нимӗҫле статьясем пичетлет [2; 3]. Шупашкарта пысӑках мар кӗнеке кӑларать [4] – чӑваш чӗлхинчи *р, л* сасӑсем тӗрӗк чӗлхисенчи *з, ш* сасӑсенчен ватӑрах пулнине палӑртать. Унӑн шучӗпе, чӑваш чӗлхин вырӑнӗ – тӗрӗк-тутар тата монгол чӗлхисен хушшинче. "...Чӑваш чӗлхине эпир пӑлхар чӗлхин тӑхӑмӗ, чӑваш

халăхне вара – Пăлхар патшалăхĕнчи... ял халăхĕн тăхăмĕ теме пултаратпăр”, – пĕтĕмлетнĕ тĕпчевçĕ [4, 10 с.]. Унтах çакна та палăртнă: “Пăлхарсем – чăвашсен мăн аслашшĕсем – культурăллă та цивилизациллĕ халăх пулнă... Çавăнпа та пăлхарсем хăйсен кӳршисене культура тĕлĕшĕнчен вăйлă витĕм кӳнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар”. Ку шухăша Николай Николаевич 1927 çулта кăларнă брошюринче те пайăрласа каланă: “Сĕм авалтан пуçласа юлашки тапхăрччен тенĕ пекех Атăлçи тăрăхĕнче тата... кăнтăрти вырăс çеçенхирĕсенче выльăх ĕрчетес тата çĕр ĕçлес культурăна сараканнисем уйрăмах чăвашсем тата вĕсен мухтавлă мăнаслашшĕсем – пăлхарсем – пулнă [6, 30 с.]. Поппе хăйĕн тĕпчевĕнче венгр, мари, пермь чĕлхисенчи пăлхар-чăваш йышăнăвĕсене палăртать, “монгол-тутарсем тапăнса кĕни тата каярах вырăссем çĕнсе илни” чăваш халăхĕшĕн синкерлĕ килсе тухнишĕн пăшăрханса çырать.

Вăтăрмĕш çулсенче СССР Ăслăлăх академийĕн член-корреспонденчĕ Н.Н.Поппе Ленинградри Хĕвел тухăç пĕлĕвĕн институтĕнче монгол уйрăмне ертсе пынă – çавна май, тĕпрен илсен, монгол чĕлхисене тата халăх сăмахлăхне тĕпченĕ. Дипломат çемйинче ӳссе çитĕннĕскер, репрессирен хăтăлса юлма пултарнă, 1941 çул тĕлне пурĕ çĕр утмăла яхăн тĕпчев ĕçĕ пичетлесе кăларнă. Якутсене тата тувасене алфавит хатĕрлесе панă, халха-монгол эпосне тĕплĕн тишкернĕ, монголсен тăваткăл çырулăхне сăнласа кăтартнă...

Вăрçă хыççăн Н.Поппене Германире пурăнма тата тивĕçлĕ ĕç тупма майлă пулман. Ывăлĕсем Англие куçса кайнă, хăйне валли преподаватель вырăнĕ инçетри Америкăра, Сиэтл хулин аслă шкулĕнче тупăннă. Чунĕпе Европăнах туртăннă пулин те (Америка системи уншăн нумай енĕпе ют пулнă) тĕпчевçĕ Вашингтон штатĕнчех ĕмĕрне ĕмĕрленĕ. 1968 çулта канăва тухиччен Сиэтл университечĕн профессорĕ шутланнă. СССР тата Берлин академийĕсен член-корреспонденчĕ ятне тивĕçнĕ тата тĕнчери монголистсем хушшинче ят-сум илнĕ ăсчаха аслă шкулта тивĕçлипе хакласах кайман теççĕ: эмигрант профессорăн шалăвĕ те, ыттисемпе танлаштарсан, пĕчĕкрех пулнă. Николас Поппене Европăра ытларах хисепленĕ: 1977 çулта Финн ăслăлăх академийĕн член-корреспондентне суйланă, çулталăкран вăл Британи академийĕн

пайташӗ пулса тӑнӑ. Пысӑкрах пӗлтерӗшлӗ ӗҫӗсене те ученӑй ФРГра пичетленӗ.

Поппе тӑрӑшнипе утмӑлмӗш-ҫитмӗлмӗш ҫулсенче монгол чӗлхисене тӗпчесси уйрӑмах Америкӑра вӑй илнӗ: умлӑн-хыҫлӑн ҫырулӑх палӑкӗсем, ӑслӑлӑх тата вӗренӳ грамматикисем, статья пуххисем кун ҫути курнӑ. Тӗпчевҫӗ тӗрӗк чӗлхисемпе те интересленме пӑрахман. Тӗслӗхрен, Китайри саларсен чӗлхине сӑнласа кӑтартнӑ, якут сӑмахӗсен этимологине тишкернӗ, тӗрӗк чӗлхисенчи монгол йышӑнӑвӗсене тата чӑваш-монгол ҫыхӑнӑвӗсене ширанӑ. Вӑл вӑхӑтра Америкӑра Совет Союзӗнчи тӗрӗк чӗлхисене пачах пӗлмен темелле, университетсенче турккӑ чӗлхипе кӑна паллаштарнӑ – кун пек лару-тӑру Николас Поппене ҫырлахтарма пултарайман. 60-мӗш ҫулсенче вӑл тутар чӗлхин грамматикине (икӗ кӑларӑмпа) тата пушкӑрт грамматикине акӑлчанла пичетлесе кӑларать. Р.Дж.Хеберта кӑркӑс чӗлхин вӗренӳ кӗнекине хатӗрлеме чылай пулӑшать. Н.Поппе сӗннипе Джон Крюгер "Чӑваш чӗлхин кӳртӗмне" ӑсталать. Ҫапла вара АПШра тӗрӗк чӗлхисене вӗренме тата вӗрентме майсем тупӑнаҫҫӗ.

Н.Поппе ӗмӗр тӑршшӗпех "алтай гипотезине" – тӗрӗк, тунгус-маньчжур, монгол тата корей чӗлхисем пӗр йыша кӗреҫҫӗ текен теорие – хӳтӗленӗ. Ҫак шухӑш унӑн ҫамрӑклах, "чӑваш чӗлхипе ытларах та ытларах кӑсӑкланнӑ" вӑхӑтрах, ҫирӗпленнӗ. Пирӗн чӗлхери сасӑсен аталанӑвне тишкерни Поппене алтай чӗлхисен вӑрттӑнлӑхӗсене уҫма пулӑшнӑ. Асӑннӑ чӗлхесен хурӑнташлӑхне вӑл 60-мӗш ҫулсенче Висбаден хулинче тухнӑ "Алтай чӗлхисен танлаштаруллӑ грамматики", "Алтай чӗлхе пӗлӗвӗн кӳртӗмӗ" кӗнекесенче ҫутатса панӑ. Тӗпчевҫӗ шучӗпе, чӑваш чӗлхи тӗрӗк ушкӑнӗнче хӑйне уйрӑм вырӑн йышӑнать, ыттисенчен чылай уйрӑлса тӑрать – ҫавӑнпа ку ушкӑн ятне *тӗрӗк-чӑваш чӗлхисем* тесе каламалла. Ҫак ыйтӑва Николас Поппе 1974 ҫулта "Чӑваш чӗлхин вырӑнӗ пирки" статйинче [12] тӗплӗрех сӑнласа кӑтартнӑ, пирӗн чӗлхе ытти тӗрӗк чӗлхисенчен чылай ватӑрах пулнине тӗслӗхсемпе ҫирӗплетсе панӑ (ҫапла май, чӑваш чӗлхине халалланӑ пирвайхи статйи пичетрен тухнӑранпа ҫур ӗмӗр ҫитнине вӑл хӑйне евӗр палӑртнӑ). Аякри Сиэтл хулинче пурӑнса, Поппе Шупашкарта кун ҫути куракан тӗпчевсемпе те паллашма май тупнӑ, вӗсене тишкерсе хаклав-рецензи ҫырма та ӳркенмен [9; 11].

Ĕçтешĕсем тăрăшнипе ăсчахăн сакăрвунă çулне Америкăра та, Европăра та чыслăн паллă тунă, Сиэтл тата Висбаден хулисенче унăн ĕçĕсен библиографийĕсем тухнă. Анчах çыннăн хуйхи-суйхи те савăнăçĕпе юнашарах çӳрет çав. Поппене кĕçех йывăр инкек умлăн-хыçлăн килсе çапнă: аслă ывăлĕ сасартăк вилсе кайнă, арăмĕпе аппăшĕ çĕре кĕнĕ. Ватă ăсчахăн вăйсăрланнă куçĕ курмиех пула пуçланă – 80-мĕш çулсенче тухнă кĕнекисемпе статйисене вăл хăй аллипе мар, ытти çынсене каласа çыртарнипе хатĕрленĕ. Н.Поппе, çапах та, Бонн университетне лекцисем вулама кайса килме пултарнă, аса илӳсен кĕнекине вулакан патне çитернипе ăша вырттарнă (вăл Америкăра тата Японире тухнă). Ватлăх пуснă пулин те, ăсĕ-тăнĕ улшăнман тĕпчевçĕ – тăхăрвунă çула çитсен те, наука статйисем ăсталанă. Хăй ĕçне малалла тăсакансем пурришĕн хĕпĕртенĕ, вĕсене пулăшма тăрăшнă.

1991 çулхи çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче монгол тата тĕрĕк сăмах ăслăлăхĕ – çав шутра чăваш чĕлхе пĕлĕвĕ те – хăйĕн шанчăклă ĕçченне ĕмĕрлĕхех çухатрĕ. Поппе кунçулĕпе паллашсан, çакă курăнать: унăн пурнăçĕнче тĕп вырăнта яланах наука пулнă. Ăслăлăх ĕçне пӳлесле хăрушлăх сиксе тухсан, вăл ытти япаласемпе чӳк юсманĕ пек усă курнă. Пĕрисем çакăнтан иртсе каяймĕç, теприсем – ăсчахăн ĕçченлĕхĕпе пултарулăхне хакласа – пуç тайĕç, ятне сума сăвĕç.

**Н.Поппен чăваш чĕлхине халалланă ĕçĕсем**

1. Die Tschuwassischen Lautgesetze //Asia Major. Leipzig, 1924. Bd. 1. S. 775–782.

2. Чувашский язык и его отношение к монгольскому и тюркским языкам //Известия Академии наук. Серия 6. Л., 1924. Вып. 18. С. 289–314; Л., 1925. Вып. 19. С. 23–42, 405–426.

3. Türkisch-tschuwassische vergleichende Studien //Islamica. Lipsiae, 1925. Vol. 1. Fasc. 4. S. 409–427.

4. О родственных отношениях чувашского и тюркско-татарских языков. Чебоксары, 1925. 32 с. (Рец.: Никольский Н.В. //ИОАИЭ. Казань, 1927. Т. 33. Вып. 2–3. С. 188; Петров М.П. //Канаш, 1925, июнь, 3).

5. Die tschuwassische Sprache in ihrem Verhältnis zu den Türksprachen //Körösi Csoma-Archivum. Budapest, 1926. Bd. 2. Heft 1–2. S. 65–83.

6. Чуваши и их соседи. Чебоксары, 1927. 31 с. (Рец.: Селищев А.М. //Сунтал, 1927. 6 №. 23–24 с.; Петров-Туринге П. //Краеведческий сборник. Уфа, 1930. № 3–4. С. 127–128).

7. Die türkischen Lehnwörter im Tschuwassischen //Ungarische Jahrbücher. Berlin, 1927. Bd. 7. Heft 2. S. 151–167. (Çавах: Festgabe Josef Szinnyei zum 70. Geburtstag. Berlin, 1927. S. 119–135).

8. Указательные и вопросительные местоимения в чувашском языке //Вестник научного общества татароведения. Казань, 1927. № 7. С. 61–64.

9. Рец.: В.Г.Егоров. Этимологический словарь чувашского языка. Чебоксары, 1964 //Zeitschrift der Deutschen Morgenländischen Gesellschaft. Wiesbaden, 1970. Bd. 119. Heft 1. S. 206–208.

10. Рец.: John R. Krueger. Cheremis-Chuvash Lexical Relations: An Index to Räsänen's 'Chuvash Loanwords in Cheremis' //Central Asiatic Journal. Wiesbaden, 1971. Vol. 15. No. 2, S. 160.

11. Рец.: А.С.Канюкова. Чувашская диалектология: Краткие очерки. Чебоксары, 1965 //Ural-Altaische Jahrbücher. Wiesbaden, 1971. Bd. 43. S. 227.

12. Zur Stellung des Tschuwaschischen //Central Asiatic Journal. Wiesbaden, 1974. Vol. 18. No. 2, S. 135–147. (Рец.: Федотов М.Р. //Чувашский язык: история, этимология, фонетика /НИИ ЯЛИЭ. Чебоксары, 1991. С. 3–13).

13. On Chuvash-Mongolian Linguistic Contacts //Journal of the American Oriental Society. Baltimore, 1977. Vol. 97. No. 2, p. 111–114.

*Г.А.Дегтярев.*

## Хурлăх сăмахĕ

### ЮРИЙ ФИЛИППОВИЧ ЕФИМОВ
### (Ĕçтешĕмĕре асăнса)

Ю.Ф.Ефимов 1941 çулта юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи Çĕньял (Çĕньял Покровски) ялĕнче çуралнă. 1959 çулта Ишлей вăтам шкулĕнчен вĕренсе тухнă. 1965 çулта Чăваш патшалăх педагогика институчĕн историпе филологи факультетне "вырăс чĕлхипе литератури тата чăваш чĕлхипе литератури" специальноçпа пĕтернĕ. Учитель, "Пионер сасси" хаçат редакцийĕн пай пуçлăхĕ тата литература ĕçченĕ (1967–1970 çç.) пулса вăй хунă. Чăваш телевидени студийĕн литературăпа драма, ача-пăча, яш-кĕрĕм редакцийĕсенче (1970–1972 çç.) ĕçленĕ.

1972–1975 çулсенче СССР Ăслăлăх академийĕн Чĕлхе пĕлĕвĕн институтĕнче аспирантурăра вĕреннĕ. Çак тапхăрта Ю.Ф.Ефимов ытларах чăваш халăх сăмахлăхĕн ылтăн тĕслĕхĕсене (ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене) сăнарлăх, грамматика тата лексика уйрăмлăхĕ енчен пикенсе тишкернĕ тата хăйĕн малашнехи тĕпчев темисен йĕрĕ çине ӳкнĕ. Ăслăлăх ĕçĕнче çамрăк аспиранта тăван чĕлхен паллă тĕпчевçи, унăн педагогика институтĕнчи вĕрентекенĕ И.П.Павлов тата аспирантурăри наука ертӳçи, пĕтĕм тĕрĕк тĕнчи пĕлекен ăсчах Э.В.Севортян пулăшса пынă. Кандидат ĕçĕн темипе 1974–1978 çулсенче Ю.Ф.Ефимов темиçе тишкерӳллĕ статья пичетлесе кăларать. 1978 çулта вăл Алма-Ата хулинче "Лексико-грамматические особенности чувашских пословиц и поговорок" ятлă кандидат диссертацине ăнăçлă хӳтĕлет, филологи кандидачĕн ятне илет.

Аспирантура хыççăн Ю.Ф.Ефимов Чăваш АССР Министрсен Канашĕ çумĕнчи Ăслăлăх тĕпчев институчĕн (ЧПĂТИ) чĕлхе пайĕн аслă наука сотрудникĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Кунта вăл ытларах илемлĕ чăваш литературин стильне, сцена пуплевĕн уйрăмлăхне, хăш-пĕр лексикологи ыйтăвĕсене тĕпчет. "Библиографический указатель трудов ЧНИИ (1930–1979)" (1980 ç.) валли чăваш чĕлхи пĕлĕвĕн библиографине хатĕрлесе çитерет. Ятарлă кăларăмсемсĕр пуçне унăн статйисем "Ялавпа" "Тăван Атăл" журналсенче, "Коммунизм ялавĕ" хаçатра пичетленеççĕ.

1979–1991 çулсенче Ю.Ф.Ефимов Чӑваш патшалӑх педагогика институчӗн методика кафедринче аслӑ преподаватель, ятарлӑ пӗлӳ паракан училищӗре тата вӑтам шкулта вӗрентекен пулса ӗçленӗ, анчах ӑслӑлӑх тӗпчевне те пӑрахман. Унӑн статйисемпе рецензийӗсем тӑтӑшах ЧПӐТИн ятарлӑ кӑларӑмӗсенче, республикӑри литература журналӗсенче кун çути курнӑ. Хӑйӗн вӗрентекенӗсене тата ӗçтешӗсене халалласа вӑл библиографи очеркӗсем пичетлесе кӑларать.

Ю.Ф.Ефимов – вӑтӑр ытла ӑслӑлӑх ӗçӗн авторӗ. 1991 çултанпа вӑл Чӑваш патшалӑх гуманитари ӑслӑлӑхӗсен институчӗн чӗлхе пӗлӗвӗн пайӗнче вӑй хунӑ, кунта унӑн тӗп ӗçӗ “Хальхи чӑваш чӗлхин ӑнлантару словарьне” хатӗрлесси пулнӑ. Ю.Ф.Ефимов Ӑнлантару словарьне йӗркелеме ятарлӑ инструкци хатӗрленӗ, 1992–1996 çулсенче сӑмах кӗнеки авторӗсен ӗç ушкӑнне ертсе пынӑ, лексикографи ыйтӑвӗсене тӗпченӗ, уйрӑм саспаллисемпе словарь статйисем çырнӑ. Çав вӑхӑтрах Чӑваш патшалӑх университечӗн журналистика факультетӗнче хальхи чӑваш чӗлхипе лекцисемпе практика занятийӗсем ирттернӗ. Хӑйӗн тӗпчев ӗçӗн результачӗсене вӑл яланах тӗрлӗ шайри ӑслӑлӑх конференцийӗсенче, сессисенче пӗлтерме тӑрӑшнӑ.

1998 çулта кӑрлачӑн 7-мӗшӗнче Юрий Филиппович вӑхӑтсӑр вилсе кайрӗ.

Ю.Ф.Ефимовӑн ӗçне ӗçтешӗсем малалла тӑсасшӑн. Унӑн сӑнарӗ, хастарлӑхӗ, тараватлӑхӗ пирӗн асра юлӗ.

*А.П.Хусанкай.*

**Ю.Ф.Ефимовӑн пичетленнӗ тӗпчев ӗçӗсем**

1. Субстантивированные причастия в языке чувашских пословиц и поговорок //Аспекты лингвистического анализа (На материале языков разных систем). – М., 1974. С. 471–480.

2. Некоторые наблюдения над лексической синонимией чувашских пословиц и поговорок //Чувашский язык, литература и фольклор: Сборник статей ЧНИИ. Вып. 4. – Чебоксары, 1974. С. 109–118.

3. О двух типах простых предложений в языке чувашских пословиц //Уровни языка и их анализ. – М., 1976. С. 78–88.

4. Халӑх сӑмахлӑхӗн ылтӑн тӗслӗхӗсем //Тӑван Атӑл, 1977, 3 №. 71–75 с.

5. Ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшсем – илемлӗ литература чӗлхине сӑнарлӑх кӳрекен мелсем //О чувашской литературе. Труды ЧНИИ. Вып. 77. – Чебоксары, 1977. С. 51–65.

6. Из наблюдений над вариантностью пословично-поговорочных выражений в чувашском языке //Вопросы истории и грамматики чувашского языка. Труды ЧНИИ. Вып. 74. – Чебоксары, 1977. С. 69–83.

7. Чăваш чĕлхин тĕпчевçи (С.П.Горский 80 çул тултарнă май) //Ком. ялавĕ, 1977, февралĕн 13-мĕшĕ.

8. Лексико-грамматические особенности чувашских пословиц и поговорок: Автореф. дис... канд. филол. наук. – Алма-Ата, 1978. – 19 с.

9. Синонимсен илемлĕ литература чĕлхинчи вырăнĕ (А.Артемьев повеçĕсем тăрăх) //Чăваш илемлĕ литература чĕлхи: Статьясен пуххи. – Шупашкар, 1978. 151–170 с.

10. Паллă тĕпчевçĕ, ăста педагог (И.П.Павлов çуралнăранпа 50 çул тултарнă май) //Ком. ялавĕ, 1978, августăн 19-мĕшĕ.

11. Из истории становления сценической речи в чувашском театре //Актуальные вопросы истории и теории чувашского искусства. Труды ЧНИИ. Вып. 90. – Чебоксары, 1979. С. 94–103.

12. (В.И.Сергеевпа пĕрле). Иккĕмĕш хастарлăх (Л.П.Сергеев диалектолог çинчен) //Ком. ялавĕ, 1979, июнĕн 3-мĕшĕ.

13. Чăваш чĕлхин фонетики //Ком. ялавĕ, 1979, июлĕн 1-мĕшĕ.

14. Чувашское языкознание //Библиографический указатель трудов ЧНИИ (1930–1979). – Чебоксары, 1980. С. 115–141.

15. О татаризмах в чувашском языке //Актуальные вопросы чувашского языкознания (Тезисы докладов и сообщений на научной сессии, посвященной 100-летию В.Г.Егорова). – Чебоксары, 1980. С. 17–18.

16. Сăмах çумне сăмах шăрçаласан //Ялав, 1980, 8 №.

17. (В соавт. с В.И.Котлеевым, Л.П.Сергеевым). Контрольные работы и методические указания по современному чувашскому языку для студентов-заочников педфака. – Чебоксары, 1980. – 13 с.

18. Из наблюдений над разговорно-просторечной лексикой современной чувашской прозы //Исследования по лексикологии и фразеологии чувашского языка. – Чебоксары, 1982. С. 92–108.

19. Хаçатри заголовоксен синтаксис тытăмĕ ("Коммунизм ялавĕ" хаçатăн 1982-мĕш çулта тухнă номерĕсем тăрăх) //Хаçат-журнал чĕлхи: Уçăмлăх, сăнарлăх, витĕмлĕх. – Шупашкар, 1983. 120–138 с.

20. Тăван чĕлхемĕр кун-çулĕ //Ялав, 1985, 1 №. 28–29 с.

21. Проза чĕлхи типтерлĕ пултăр //Чĕлхене нормăлас ыйтусем. – Шупашкар, 1985. 45–62 с.

22. Пурнăçран илнĕ сăнарсем //Ком. ялавĕ, 1985, октябрĕн 17-мĕшĕ.

23. (В соавт. с Н.И.Егоровым). Материалы к вопросу о татарских лексических заимствованиях в чувашском языке //Чувашский язык: проблемы исторической лексикографии. – Чебоксары, 1986. С. 65–71.

24. Произведенисенче – ял пурнăçĕ //Ком. ялавĕ, 1986, октябрĕн 26-мĕшĕ.

25. Вырăнлă сăмах витĕмлĕхĕ: хальхи прозăри пуплев тата калаçу сăмахĕсем пирки //Тăван Атăл, 1986, 12 №. 66–69 с.

26. Шухăш кӳлли тарăн пултăр //Ялав, 1986, 10 №. 28–29 с.

27. "Тĕшши" тутă пултăрччĕ //Ком. ялавĕ, 1987, июнĕн 20-мĕшĕ.

28. Паллă чĕлхеçĕ, ăста педагог (И.П.Павлов çуралнăранпа 60 çул çитнĕ май) //Ком. ялавĕ, 1988, августăн 23-мĕшĕ.

29. Тăван чĕлхе тĕпчевçи (И.П.Павлов 60 çул тултарчĕ) //Пионер сасси, 1988, августăн 23-мĕшĕ.

30. Чун пархатарĕ (М.Ф.Чернов профессор 60 çул тултарнă май) //Пионер сасси, 1990, апрелĕн 28-мĕшĕ.

31. Видный ученый-тюрколог (К 90-летию Э.В.Севортяна) //Сов. Чувашия, 1991, 22 октября.

32. Чун-чĕре туртăмĕ (В.И.Сергеев профессор 50 çул тултарнă май) //Хыпар, 1992, январĕн 18-мĕшĕ.

33. На подступах к толковому словарю: Насущные задачи чувашской лексикографии //Сов. Чувашия, 1993, 23 августа.

34. Проблемы лексикографии //Вестник Чувашской национальной академии. 1994. № 2. С. 191–195.

35. Ăнлантару словарĕнчи терминсем //Чăваш терминологи аталанăвĕн хальхи ыйтăвĕсем: Наука конференцийĕн доклачĕсемпе хыпарĕсен тезисĕсем. – Шупашкар, 1995. 17–19 с.

*Е.И.Батченко хатĕрленĕ.*

# ЧЫСЛАВ

## ИВАН АНДРЕЕВИЧ АНДРЕЕВ
## (70 çул тултарнине халалласа)

Чăваш чĕлхин чи сумлă тĕпчевçисенчен пĕри – И.А.Андреев профессор – кăçал 70 çул тултарать. Филологи ăслăлăхĕсен докторĕ, Чăваш патшалăх университетĕнчи чăваш чĕлхе пĕлĕвĕ кафедрин пуçлăхĕ, Чăваш Республикин наукăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш Республикин Ăслăлăхпа ӳнерсен наци академийĕн членĕ, икçĕр ытла тĕпчев ĕçĕн, вĕрентӳ программипе кĕнекесен авторĕ... Вăл тунă е хутшăннă ĕçсене асăнса çеç тухма та нумай вăхăт кирлĕ.

Иван Андреевич Андреев Элĕк районĕнчи Хитекушкăнь ялĕнче 1928 çулхи çу уйăхĕн 15-мĕшĕнче çуралнă. 1936–1943 çулсенче Тавăт шкулĕнче вĕреннĕ хыççăн вăл Калининăри педагогика училищине вĕренме кĕрет, çакăнта ăс пухнă чухне чĕлхе пулăмĕсемпе интересленме пуçлать. Кайран вара пурнăçĕ тăршшĕпех тăван чĕлхе ăна хăйĕн шалти вăрттăнлăхĕсен тупсăмне шырама хистет... Училище хыççăн И.А.Андреев Шупашкарти Чăваш патшалăх педагогика институтĕнчи филологи факультечĕн чăваш уйрăмĕнче вĕренет. 1950 çулта институт пĕтерсен пултаруллă çамрăка, вăл питĕ лайăх вĕреннине кура, пĕлĕвне малалла ӳстерме çĕршывăн тĕп хулине кайма сĕнеççĕ. Анчах та Мускавран килнĕ чĕнӳ хутне ун патне вăхăтра çитерейменеççĕ. Вара И.А.Андреев аспирантурăна вĕренме мар, Çĕрпӳри педагогика училищине ĕçлеме каять, каярахпа Етĕрнери педучилищĕне куçать. Пĕр çул хушши Канашри учительсен институтĕнче студентсене чăваш чĕлхи вĕрентет.

1953 çулта малалла вĕренес шухăш-ĕмĕтлĕ çын Чăваш пединститучĕн аспирантурине кĕрет. Тĕнчипе паллă тюркологăн – В.Г.Егоровăн пĕрремĕш аспиранчĕ пулса тăрать. Çав хушăрах кĕретсĕр йĕркепе вĕренсе вырăс чĕлхипе литератури учителĕн дипломне те алла илет. Аспирантура пĕтерсен вăл педагогика институтĕнчех чăваш чĕлхипе литературин кафедринче ĕçлет.

1957 çултан вара Иван Андреевич Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи Наука тĕпчев институчĕн чĕлхе пайне ертсе пырать. Аспирантурăра чухне тишкерме

пуçланӑ темӑпа “Чӑваш чӗлхинчи причастисем” ятлӑ кӗнеке пичетлесе кӑларать. 1962 çулта çак ӗçе ӑнӑçлӑн хӳтӗлесе филологи ӑслӑлӑхӗсен кандидачӗн ятне илет. 60-мӗш çулсенче И.А.Андреев ытларах чӑваш чӗлхи синтаксисӗн проблемисене тӗпчет, хутсӑр предложени çинчен пысӑк ӗç çырса хатӗрлет. СССР Ӑслӑлӑх академийӗ çумӗнчи Чӗлхе пӗлӗвӗн институтӗнчи Ӑслӑлӑх совечӗ çак ӗçшӗн ӑна 1970 çулхи çӗртме уйӑхӗнче филологи докторӗн степеньне тивӗçлӗ тесе йышӑнать. Ку вӑхӑтра Иван Андреевич Чӑваш патшалӑх университетӗнче ӗçлет ӗнтӗ. 1970 çултанпа паян кунчченех хӑй пурнӑçӗпе ӗçне-хӗлне çак вӗренӳ заведенийӗпе çыхӑнтарса тӑрать. Малтан вырӑс чӗлхи кафедрин доцентӗ пулать, кайран чӑваш чӗлхипе литературин кафедринче чӗлхеçӗсен секцине ертсе пырать. 1972 çулта профессор ятне илет. 1975 çулта вӑл тӑрӑшнипе университетра чӑваш чӗлхе пӗлӗвӗн кафедрине уçаççӗ. Унтанпа çак кафедрӑна пӗр ылмашмасӑр И.А.Андреев профессор ертсе пырать. 1983–1990 çулсенче историпе филологи факультечӗн деканӗ пулса ӗçлет.

И.А.Андреевӑн чӗлхе ӑслӑлӑхӗнче тунӑ пӗрремӗш пысӑк ӗçнех (Причастия в чувашском языке. Чебоксары, 1961) çӗр-шыври тюркологсем лайӑх хак параççӗ. Ку монографире вӑл чӑваш чӗлхинчи причастисен пӗтӗмӗшле системипе пулӑвӗ тата морфологипе синтаксис паллисем çинчен тӗплӗн çырса кӑтартать. Причасти пӗрлешӗвӗсене тишкернӗ май чӑваш синтаксисӗн хӑш-пӗр тавлашуллӑ ыйтӑвӗсене те хускатать, причастие мӗнле ӑнланнинчен сказуемӑя тата хутлӑ предложение епле хакласси килнине аса илтерет. *Анлӑ член, предложенилле член, хутлӑ сказуемӑй* текен ӑнлавсене пӑрахӑçлама сӗнет. Çак ӗçӗн пӗлтерӗшӗ паянхи кунчченех чакман, халӗ те вӑл тӗрӗк чӗлхисенчи причасти формисене тӗпчесе çырнӑ чи ӑнӑçлӑ ӗçсенчен пӗри шутланать.

Грамматика ыйтӑвӗсене малалла та чылай тӗпчет Иван Андреевич. Тӗрлӗ çӗрте ирттернӗ ӑслӑлӑх конференцийӗсенче тухса калаçать, статьясемпе рецензисем пичетлесе кӑларать. Доктор диссертацинче чӑваш чӗлхинчи хутсӑр предложенисен грамматика тата шухӑш тытӑмӗсене, вӗсен тӗп паллисемпе уйрӑмлӑхӗсене çутатса парать, чӑваш синтаксисӗнчи нумай пулӑма çӗнӗлле пӑхса ӑнлантарать. Сӑмах майлашӑвӗн тӗсӗсем, тӗп тата кӗçӗн членсене уйӑрмалли критерисем,

кӳртӗм сӑмахсемпе уйрӑм тӑран член ҫинчен каланисем унӑн ӑнӑҫлӑ та ӗненмелле пулнине палӑртса хӑвармалла.

Каярахпа И.А.Андреев профессор ҫак шухӑшсене "Чӑваш синтаксисӗн ыйтӑвӗсем" ӗҫӗн хутсӑр предложени ҫинчен калакан пайне ҫырнӑ чухне тӗпе хурать. Кӗнеке 1973 ҫулта тухать. Тепӗр икӗ ҫултан иккӗмӗш пайӗ те кун курать. Унта хутлӑ предложенисен уйрӑмлӑхӗсем ҫинчен ҫырса кӑтартнӑ. Ҫак икӗ кӗнеке студентсемпе учительсем усӑ куракан пособи ҫеҫ мар, чӑваш синтаксисне тӗпчесе ҫырнӑ хальхи шая тивӗҫтерекен монографи пулать.

Иван Андреевич чӗлхе пӗлӗвӗнче ӗҫлемен каҫалӑк хӑварман та пулас: грамматика проблемисемсӗр пуҫне вӑл диалектологипе социолингвистика, ономастикӑпа терминологи, лексикографипе фонетика, графикӑпа орфографи, чӗлхе методикипе ик чӗлхелӗх ыйтӑвӗсене тишкерсе ҫӗнӗ шухӑшсем каласа хӑварма пултарнӑ. Вӑл тунӑ ӗҫсен пурин те пӗр пӗтӗмӗшле паллӑ пур – автор проблемӑна ҫӗнӗ, унччен никам та пӑхман енчен тинкерсе ҫутатса пама тӑрӑшни...

И.А.Андреев ертсе пынӑ вӑхӑтра Наука тӗпчев институчӗн чӗлхе пайӗ пирвайхи хут социолингвистика ыйтӑвӗсене хускатать. Ял ҫыннисем чӑваш тата вырӑс чӗлхисемпе мӗнлерех усӑ курнине тӗпчес тесе Иван Андреевич анкета хатӗрлет, сӑнав кӑтартӑвӗсене пӗтӗмлетсе статья пичетлесе кӑларать (О размерах распространения двуязычия среди сельского населения Чувашской АССР: Опыт изучения языковой ситуации современной чувашской деревни //УЗ ЧНИИЯЛИЭ. Вып. 46. Филология. Чебоксары, 1970. С. 3–19). 80–90-мӗш ҫулсенче те ик чӗлхелӗх проблемисем ҫинчен хаҫат-журналта чылай статья пичетлет вӑл. Чӑваш чӗлхи графикипе орфографийӗн тата пунктуацийӗн ыйтӑвӗсем ҫинчен ҫырнӑ ӗҫсем те нумай И.А.Андреевӑн. Вӗсенче орфографипе пунктуацири хирӗҫӳлӗхсене пӑхса тухать, правилӑсене чӑваш чӗлхин саккунӗсене тӗпе хурса пӗр евӗр йӗркелеме кирлине палӑртать, ансатлатнӑ ҫӗнӗ правилӑсен проектне те сӗнет. Вырӑс чӗлхинчен кӗнӗ сӑмахсене, ят сӑмахсен хӑш-пӗр формисене ҫырура палӑртассине тата сӑмахсене пӗрле, уйрӑм е дефиспа ҫырассине йӗркелекен правилӑсен ҫитменлӗхӗсене кӑтартать, вӗсенчен хӑтӑлас тесен пӗр евӗр сӑмахсене пӗр принциппа ҫырмаллине калать. Чарӑну паллине сӑмахсемпе предложенисем шухӑш енчен

мĕнле çыхăннине шута илсе лартма сĕнет. Пунктуаци ыйтăвĕсемпе 1990 çулта унăн “Чăваш пунктуацийĕ: иртни, хальхи, пуласси” ятлă кĕнеке тухать.

Иван Андреевич – чăваш антропонимикине чи малтан тĕпчекенсенчен пĕри. Вăл “Çын ячĕсем” ятлă кĕнеке пичетлесе кăларать (Шупашкар, 1983); çын ячĕсен РСФСР тата СССР шайĕнче кăларнă пуххисем валли чăвашсен Христос тĕнне йышăничченхи ячĕсен списокĕсене хатĕрлесе парать, вĕсем çинчен кĕскен ăнлантаракан статьясем çырать.

Словарьсем тăвас ĕçе те хутшăнать тĕпчевçĕ: 1961 тата 1982 çулсенче тухнă чăвашла-вырăсла словарьсен, 1971 çулхи вырăсла-чăвашла словарĕн авторĕсенчен пĕри вăл, В.Г.Егоровăн вырăсла-чăвашла словарьне (1960) тата чĕлхеçĕсен ушкăнĕ хатĕрленĕ вырăсла-чăвашла словаре (1971) редакциленĕ (юлашкине Н.П.Петровпа пĕрле).

Вăтам тата аслă шкул программисене хатĕрлессине те хастаррăн хутшăнать пирĕн профессор. 70-мĕш çулсенче чăваш чĕлхи синтаксисĕн вăтам шкул программине тата учебникне çырать. Малтан эксперимент шучĕпе темиçе шкулта çеç усă кураççĕ вĕсемпе, 80-мĕш çултанпа пур чăваш ачи те синтаксиса çак программăпа вĕренет. Çĕнĕ программăпа вĕрентме пулăшакан методика пособине те вăл ертсе пынипе çырнă (Андреев И.А., Митта З.П. Синтаксиса çĕнĕ программăпа вĕрентесси. Шупашкар, 1981). Хулари ачасене чăвашла калаçма вĕрентмелли программăсемпе учебниксене тунă çĕре те хутшăнать И.А.Андреев. Чăвашла пĕлмен студентсене вĕрентмелли программа тата çитĕнсе çитнисем валли чăваш чĕлхи учебникĕ çырать. Ку кĕнеке юлашки çулсенче икĕ кăларăмпа та тухма ĕлкĕрчĕ.

Иван Андреевич нумай çынна ăслăлăх çулĕ çине тăма пулăшнă – темиçе çул ĕнтĕ аспирантсене вĕрентсе, вĕсене тĕпчев ĕçĕнче ертсе пырать. Çамрăксене тишкерӳ меслечĕсене алла илме, ăслăлăхри çивĕч ыйтусене асăрхама хăнăхтарать. Вăл ăс панă чĕлхеçĕсем университетра та, педагогика институтĕнче те, гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче те ĕçлеççĕ.

Республика тулашĕнчи чăвашсем те И.А.Андреев профессора лайăх пĕлеççĕ. Темиçе çул хушши вăл Ульяновскри педагогика университетне тата унти учительсен пĕлĕвне ӳстерекен института пулăшса тăрать: вĕсене тĕрлĕрен

программăсем хатĕрлесе парать, Чĕмпĕр тăрăхĕнче чăваш чĕлхи вĕрентекенсем валли лекцисем вулать.

Хальхи вăхăтра Иван Андреевич Андреев чăваш чĕлхин синтаксис ыйтăвĕсене малалла тĕпчет, чăваш орфографийĕпе пунктуацине йĕркелес тесе тăрăшать, шкул валли çĕнĕ программăсемпе учебниксем хатĕрлет, нумаях пулмасть “Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулти чăваш чĕлхи” ятлă документăн проектне туса çитерчĕ (Халăх шкулĕ, 1996. 1, 2 №№).

Паллă тĕпчевçе, хисеплĕ педагога юбилей ячĕпе саламласа малашне те пысăк та сумлă ĕçсем тума çирĕп сывлăх сунатпăр.

*А.П.Долгова.*

# ИВАН ПАВЛОВИЧ ПАВЛОВ
## (Çитмĕле çитнĕ ятпа)

Вăтăрмĕш çулсенчи йывăр çухатусем чăваш чĕлхе ăслăлăхне тепĕр хут хавшатса, амантса хăварнă. 1933 çулта чĕлхе наукин классикĕ Николай Иванович Ашмарин вилсе кайнă. Ун хыççăн чи пултаруллă чĕлхеçĕсене Тимофей Матвеевич Матвеевпа Федор Тимофеевич Тимофеева (Тимухха Хĕветĕрне) тăван халăхран, юратнă ĕçĕнчен яланлăхах уйăрнă. Культ сĕрĕмĕпе минренĕ "критиксем" Ашмарин ĕçне малалла тăсакан Василий Георгиевич Егорова тухăçлă ĕçлеме чăрмантарнă...

Аллăмĕш çулсем. Чĕрĕлӳ. Совет чĕлхе вĕрентĕвĕ те ĕнтĕрĕкрен тухма, "марровщина" текен пулăмпа çыхăннă йăнăшсемпе тĕрĕсмарлăхсенчен хăтăлма пуçлать. Наукăна пултаруллă çамрăк вăй хушăнать. Тăван чĕлхе ăслăлăхне çĕнĕрен çĕклеме лару-тăру лайăхланать.

1953 çулта Мускаври Чĕлхе институтĕнче аспирантурăн юлашки курсĕнче вĕренекен Иван Павлов çамрăк ученăя, хăй ыйтнине шута илсе, СССР Ăслăлăх академийĕн президиумĕ Шупашкара ĕçлеме ярать. Кунта ăна Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наука тĕпчев институчĕн чĕлхе уйрăмне ертсе пыма хушаççĕ. Çав вăхăтра республикăра тăван чĕлхе ыйтăвĕсемпе ăслăлăх тавлашăвĕсем пуçланнă. Паллă ĕнтĕ, тавлашусем чăнлăх тупма пулăшсан кăна усăллă. Иван Павлович дискуссисемпе тĕпчевсене тивĕçлĕ шая çĕклессишĕн тăрăшать. Хаçат-журналта ĕçлекенсемпе, шкулта вĕрентекенсемпе тĕл пулса чĕлхе ыйтăвĕсемпе калаçать: канашлать, ăнлантарать. Çав çулах И.П.Павлов филологи наукисен кандидачĕ ятне илме "Чăваш чĕлхинчи деепричастисем тата вĕсен синтаксис функцийĕсем" темăпа диссертаци ăнăçлă хӳтĕлет.

Аспирантурăра вĕреннĕ чухне чăваш чĕлхин çамрăк тĕпчевçине тĕрĕк чĕлхе пĕлĕвĕн чи авторитетлă ăстаçисенчен пĕри – СССР Ăслăлăх академийĕн член-корреспонденчĕ Н.К.Дмитриев профессор – пулăшса пынă. Пултаруллă ăсчах хăй вĕренекенне "Вырăсла-чăвашла словаре" (1951 ç) редакцилеме те хутшăнтарнă. Николай Константиновичпа пĕрле ĕçлени И.П.Павлова чĕлхе наукин кăткăс проблемисене тĕрĕс ăнланма чылай пулăшнă.

Шупашкара таврӑнсан, Иван Павлович чӑваш чӗлхе вӗрентӗвӗнчи чи тавлашуллӑ ыйтусене ҫӗнӗлле татса пама хӑюллӑн хутшӑнать. Вӑл шутра: падежсен йышӗ, вид категорийӗ, пӑхӑнуллӑ хутлӑ предложенисем т.ыт.те. Чӗлхеҫӗ ҫавӑн пекех деепричастисене, хыҫҫӑмахсене тарӑнрах тишкерет. И.П.Павлов ертсе пынипе аллӑмӗш ҫулсен варринче чӑваш чӗлхин вырӑнти уйрӑмлӑхӗсене пухмалли программа, "Хальхи чӑваш чӗлхи грамматикин материалӗсем" (вырӑсла) тата ытти ӗҫсем кун ҫути кураҫҫӗ.

1957 ҫулта, М.Я.Сироткин чӗннипе, Иван Павлович пединститута куҫать – чӑваш чӗлхипе литература кафедрин доценчӗ пулса, студентсене тӑван чӗлхе морфологине вӗрентме пуҫлать. Ҫакӑн хыҫҫӑн вӑл чӗрӗк ӗмӗр хушши тӗпчев ӗҫне вӗрентӳ ӗҫӗпе ҫыхӑнтарса туса пынӑ.

Пурне те паллӑ: вырӑс чӗлхине тата ытти "анлӑ сарӑлнӑ" чӗлхесене ҫӗр-ҫӗр ученӑй тӗпчет. Чӑваш чӗлхине ятарласа тӗпчекенсен йышӗ вара икӗ теҫеткерен те иртмест. Аслӑрах ӑрури ученӑйсен кашнинех, чӗлхе наукин пӗр-пӗр пысӑк пайне илсе, ӑна пӗччен тенӗ пек тишкерме тивнӗ. Тӗпрен илсен, чӑваш чӗлхин синтаксисӗ И.А.Андреев, чӗлхе историйӗ М.Р.Федотов, литература чӗлхин историйӗ Н.П.Петров, диалектологийӗ Л.П.Сергеев, фонетики В.И.Котлеев, фразеологийӗ М.Ф.Чернов ҫине тиеннӗ. Морфологин йывӑр лавне вара чылай ҫул хушши Иван Павлович Павлов туртса пынӑ.

Морфологи вӑл – сӑмахӑн тытӑмӗ, унӑн улшӑнӑвӗ, грамматика пӗлтерӗшне палӑртмалли мелсем, пуплев пайӗсем. Ун пирки сӑнарлӑн "чӗлхене ӗҫлеттерекен шалти вӑй" теме пулать пулӗ. Чӑваш чӗлхин морфологине И.П.Павлов 1965 ҫулта тухнӑ "Хальхи чӑваш литература чӗлхи" ятлӑ монографире тата нумай-нумай статьяра ҫутатса панӑ. Вӑл сӑпат тата вӑхӑт категорийӗсене, палӑрту формисене, ылмашсен пулӑвне, хирӗҫлев союзӗсене тӗплӗн тишкерчӗ.

Ҫитмӗлмӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче тӗрӗк чӗлхисен морфонологине (морфологипе фонетика ҫыхӑнӑвне) тӗпчесси ума тӑнӑ. Ку ӗҫе пуҫарса яракансенчен пӗри Иван Павлович пулнӑ: 1974–1975 ҫулсенче унӑн "Хальхи чӑваш чӗлхи морфонологийӗн кӗске очеркӗ" пичетленсе тухнӑ.

Чӑваш патшалӑх университечӗ уҫӑлсан, чӑваш чӗлхипе литература кафедри пединститутран унта куҫрӗ. Ҫав вӑхӑт-

ран пуҫласа 1981 ҫул вӗҫӗччен И.П.Павлов республикӑн тӗп вузӗнче ӗҫлерӗ. Пултаруллӑ, опытлӑ тӗпчевҫӗсем содержанийӗнчен пуян, тарӑн шухӑшлӑ лекцисем вулани каламасӑрах паллӑ. Иван Павловичӑн кунсӑр пуҫне преподаватель, лектор ӑсталӑхӗ пурччӗ. Вӑл аудиторие интереслентерме, ун тимлӗхне ӳстерме пӗлетчӗ. Ҫакӑ чылай вӑхӑт студентсемпе ӗҫленипе, вӗсен кӑмӑлне-шухӑшлавне лайӑх пӗлнипе ҫыхӑннӑ пулӗ ӗнтӗ.

Астӑватӑп-ха. Университет. Иккӗмӗш курс. Кафедра умӗнче И.П.Павлов доцент. Пурте ывӑннӑ. Юлашки лекци. Унччен: вырӑс чӗлхин морфологийӗ, тӗнче литератури, нимӗҫ чӗлхи... Халь ак тата – чӑваш чӗлхинчи сӑмах тӑвакан аффикссем: *-ҫӑ/-ҫӗ*, *-лӑх/-лӗх*, *-мӑш/-мӗш*...

– Тепӗр формант, – тет ҫав вӑхӑтра преподаватель, – *-изаци*. Ку аффикс пулӑшнипе пирӗн чӗлхере пӗр сӑмах кӑна ҫуралнӑ. Пӗлетӗр-и мӗн сӑмах вӑл? *Мӑшкӑлизаци*!

Шӳт. Пурте кулса яраҫҫӗ. Чӑнах ҫав, нумай та кирлӗ мар ҫынна. Ывӑнни те ак урӑх сисӗнмест пек. Интереслӗ япала вӑл, ҫапах та, сӑмах тӑвакан аффикс!

Вӑхӑт-вӑхӑт, аудитори тимлӗхӗ чакма пуҫласан, Иван Павлович каллех хӑйне май чӗлпӗре вылятса илет:

– Пӗлетӗр-и, "черновик" чӑвашла мӗнле пулать? Астумастӑр-им Стихван Шавлие? *Хуравик*!..

Чӗлхеҫӗсемпе ҫыравҫӑсем кӑна мар, физик е биолог, бизнесмен е механизатор пулса ӗҫлекен чӑваш ҫынни те Иван Павлович пулӑшнипе ача чух сахал мар ӑс пухнӑ. Кунта тӗлӗнмелли ҫук – вӑтӑр пилӗк ҫул ӗнтӗ шкулсенче вӑл хатӗрленӗ кӗнекесемпе, вӗрентӳ хатӗрӗсемпе, методика кӑтартӑвӗсемпе усӑ кураҫҫӗ. И.П.Павлов V–VI класс валли Л.Н.Яковлева учительницӑпа пӗрле ҫырнӑ чӑваш чӗлхин грамматики (фонетикӑпа морфологи) 8 кӑларӑмпа, IV класс валли хатӗрленӗ вӗренӳ кӗнеки 14 кӑларӑмпа, VI–VII класс валли Э.Е.Игнатьевӑпа ҫырнӑ чӑваш чӗлхин морфологийӗ 7 кӑларӑмпа тухрӗ. Тӑван чӗлхен кӑткӑс тӗнчипе, унӑн шалти тытӑмӗпе паллаштараҫҫӗ ҫак кӗнекесем, ачасен чӗлхе туйӑмне аталанма пулӑшаҫҫӗ.

Ача ӑша мӗн хывасси, мӗнле ҫул-йӗр суйласси шкул ӗҫченӗнчен, ун ӑсталӑхӗнчен чылай килет. В.А.Сухомлинский калашле, вӗрентекен ача чунӗнчен чӗрӗ чечек те, типнӗ хуйӑр та тума пултарать. Иван Павлович хӑйне 5–6 класра тӑван

чĕлхепе литературăна вĕрентнĕ Мария Алексеевна Максимовăна тата шкулти литература кружокне ертсе пынă Александр Дмитриевич Кăлкана чĕререн тав туса аса илет. Вĕсем тăрăшнипе ачасем Элкерпе, Шелепипе, Тукташпа, Ваçанккапа тата ытти паллă çыравçăсемпе тĕлпулусем ирттернĕ, ашшĕ-амăшĕн чĕлхине хисеплеме, тăван сăмахлăха хаклама хăнăхнă.

Чĕлхе туйăмне, сăмах ăсталăхне пулас чĕлхеçĕ шкул хыççăн Калинино педучилищинче тата Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче туптанă. Малтанах вăл ытларах литературăпа интересленнĕ, нумай-нумай çамрăк пекех сăвăсем хайланă, студентсем çырса кăларакан “Пирĕн вăй” (педучилищĕре), “Пирĕн ялав” (techinstitutra) журналсемпе туслă пулнă. Çав вăхăтрах тăван чĕлхе тытăмĕ те хытах кăсăклантарнă ăна. Пултарулăхне аталантарма студента маларах А.С.Канюкова, Н.Л.Кузьмина, В.Т.Харитонов, унтан – М.Я.Сироткин, В.Г.Егоров, С.П.Горский преподавательсем чылай пулăшнă. Пединститутра вĕреннĕ чух ăслăлăх ĕçĕ, чĕлхе тĕпчевĕ ытларах та ытларах илĕртме пуçланă ăна, кĕçех çакă пĕтĕм шухăш-кăмăла çавăрса илнĕ.

Ӳсĕмсем вăрах кĕттермен. Çамрăк тĕпчевçĕн падеж ыйтăвĕпе çырнă курс ĕçне институт премийĕпе палăртнă. Тепĕр çултан Иван Павлов Раççей студенчĕсен Пĕрремĕш наука конференцине хутшăнма тивĕç пулнă, унта чăваш чĕлхинчи хыççăмахсем çинчен доклад туса панă. Институт пĕтернĕ çулах, 1949-мĕшĕнче, ăна Мускава СССР Ăслăлăх академийĕн Чĕлхепе шухăшлав институтне (каярахпа – Чĕлхе институчĕ), наци кадрĕсем хатĕрлекен педагогика аспирантурине вĕренме янă...

Унтанпа вăхăт сахал мар иртрĕ. Элĕк районĕнчи Чулкаç ялĕнче çуралса ӳснĕ чăваш чĕлхеçин ĕçĕсене халь Раççейри тюркологсем те, чикĕ леш енчисем те пĕлеççĕ. Тĕрлĕ енлĕн палăрчĕ И.П.Павловăн ăслăлăхри пултарулăхĕ. Чăваш чĕлхин морфологине, морфонологине тата сăмах пулăвне тĕпченипе пĕрлех, вăл синтаксисра та вăй хучĕ: *мĕншĕн тесен*, *хуть* (*хăть*), *пулсан та*, *пулин те* союзлă, *-тăк/-тĕк*, *-и*, *-ши* татăклă тата ытти йышши пăхăнуллă хутлă предложенисене тишкерчĕ.

Пуплев культурине аталантарассишĕн те чылай тăрăшрĕ тĕпчевçĕ. Ку ыйтупа çырнă статьясен шутĕнче:

“Хаçат-журнал чĕлхинчи морфологи шăйрăкĕсем” (1971), “Хисеп ячĕсен хăшпĕр формисемпе усă курасси çинчен” (1972), “Поэзи куçарăвĕпе литература чĕлхин нормисем” (1974), “Чăваш чĕлхинче грамматика пĕлтерĕшне фонемăсен ылмашăвĕпе палăртни” (1983), “Çын е этем” (1987).

Лексикографире те И.П.Павлов тӳпи пĕчĕк мар. Чĕлхеçĕ чăвашла-вырăсла словарьсене (1961; 1982), вырăсла-чăвашла словаре (1971) хатĕрлекенсенчен пĕри пулнă. 1993 çулта Ю.М.Виноградовпа пĕрле орфографи словарьне, Н.Г.Игнатьевпа чĕрчун ячĕсен чăвашла-вырăсла-латинла словарьне кăларчĕ.

Ученăй пултарулăхĕн тепĕр енĕ – чăваш чĕлхе ăслăлăхĕн историне тĕпчени. Н.И.Золотницкие халалланă брошюрăра (1958) И.П.Павлов XIX ĕмĕрти тĕпчевçĕн наукăри вырăнне пуçласа уçăмлă палăртнă, унăн хисепе тивĕçлĕ ĕçĕ-хĕлĕн пĕлтерĕшне уçса панă. Кунсăр пуçне, Иван Павловичăн Н.И.Ашмарин, Т.М.Матвеев, Ф.Т.Тимофеев, А.И.Васильев тата ытти чĕлхеçĕсен пултарулăхне хакласа çырнă статьясем пур.

1981 çултанпа Иван Павлович Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наука тĕпчев институтĕнче (халĕ – Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ) ĕçлет. Вăл ертсе пынипе кунта хальхи чăваш литература чĕлхин наука грамматикине (I том), тăван чĕлхене тĕрлĕ енчен тишкерекен статьясен пуххисене чылай кăларнă.

Августăн 23-мĕшĕнче Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ вĕрентекенĕ Иван Павлович Павлов 70 çул тултарчĕ. Апла пулин те кану пирки мар ун шухăшĕ, чĕлхемĕр çинчен, малашнехи ĕçсем çинчен. Тăван чĕлхене тĕпчессипе, вĕрентессипе тата унпа кулленхи хутшăнура усă курассипе çыхăннă нумай-нумай ыйту канăçсăрлантарать ăна. Вăл “Хальхи чăваш литература чĕлхин” II томне пичете пачĕ, халĕ виççĕмĕш томне халăх патне çитересшĕн тăрăшать.

Иван Павловича вĕренекенĕсен тата ĕçтешĕсен ячĕпе саламласа, ăслăлăхпа культура ӳсĕмĕшĕн, тăван халăхшăн тата нумай-нумай çул ĕçлеме çирĕп сывлăх сунас килет.

*Г.А.Дегтярев.*

## АТНЕР ПЕТРОВИЧ ХУСАНКАЙ
## (50 çулне халалласа)

Атнер Петрович Хусанкай 1948 çулхи юпа уйăхĕн 8-мĕшĕнче Шупашкар хулинче Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай тата СССР халăх артистки Вера Кузьмина çемйинче çуралнă.

1966 çулта вăл, Шупашкарти 4-мĕш вăтам шкул хыççăн, Ленинград патшалăх университечĕн хĕвел тухăç факультетне вĕренме кĕрет, 1972-мĕшĕнче "араб филологийĕ" специальноçпа востоковед-филолог дипломне алла илет. 1973–1976 çулсенче СССР Наукăсен академийĕн Тухăç пĕлĕвĕн институтĕнчи аспирантурăра кĕретлĕ йĕркепе (очно) вĕренсе ăс пухать. Г.Ш.Шарбатов профессор ертсе пынипе 1977 çулта "Араб чĕлхин диалекчĕсенчи хутсăр предложенисен тĕсĕсем" темăпа диссертаци ăнăçлă хӳтĕлет, филологи кандидачĕ степенне тивĕçлĕ пулать. Çав çулах Шупашкара таврăнать.

1978 çултан пуçласа 1990 çулччен И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх унвиерситечĕн чăваш чĕлхи кафедринче ассистент, аслă преподаватель, доцент пулса ĕçлет. Студентсене "Араб чĕлхи", "Тюркологи пуçламăшĕ", "Тĕрĕк чĕлхисен танлаштаруллă грамматики", "Чăваш диалектологийĕ", "Чĕлхе пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ", "Поэзи тексчĕн чĕлхе тишкерĕвĕ" предметсене вĕрентет, асăннă курссемпе вĕренӳ пособийĕсем, методика кăтартăвĕсем пичетлесе кăларать.

1990 çулхи ака уйăхĕнчен пуçласа паянхи кунччченех вăл – Чăваш Республикин Министрсен Канашĕ çумĕнчи Чĕлхе, литература, истори тата экономика ăслăлăх тĕпчев институчĕн (халĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ) чĕлхе пĕлĕвĕн пай пуçлăхĕ.

А.П.Хусанкай чĕлхеçĕ чылай наука статйисем калăплать, араб чĕлхин диалекчĕсенчи пĕр тата икĕ составлă предложенисене, вĕсен тĕп членĕсене, чăваш чĕлхинчи араб-перс элеменчĕсене тишкернĕ, тĕрлĕ ăслăлăхпа практика конференцийĕсенче, симпозиумсенче, конгрессенче тухса калаçнă. Ĕçĕсем Мускавра, Шупашкарта тухса тăракан наука сборникĕсенче, "Советская тюркология", "Вопросы языкознания" журналсенче кун çути курнă.

А.П.Хусанкай пултарулăхĕ кăсăк, анлă та нумай енлĕ. Чăваш тата вырăс чĕлхисемсĕр пуçне акăлчан, араб, фран-

цуз, нимĕç, турккӑ чĕлхисене пĕлет. Атнер Петрович чĕлхеçĕ кӑна мар, литература тишкерӳçи те. 1987 çултанпа СССР Писательсен союзĕн членĕ (халĕ Чӑваш çыравçисен союзĕ). Литература, чĕлхе, политика тата культура ыйтӑвĕсемпе 300 яхӑн ĕç çырса савӑнтарчĕ пултаруллӑ тĕпчевçĕ. Атнер Хусанкай – Латви журналисчĕсен союзĕн (1987), Чӑваш çамрӑкĕсен Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ (1989), Митта Ваçлей ячĕллĕ (1998) премисен лауреачĕ, "Дружба народов" (Мускав), "Лик Чувашии" (Шупашкар) журналсен редакци канашĕн членĕ. Вӑл литература критикинче 1976 çултанпа ĕçлет. Унӑн Уралпа Атӑл тӑрӑхĕнчи тата ытти çĕрти поэтсен сӑввипоэмине, чĕлхине тĕпченĕ ӑслӑлӑх ĕçĕсем, рецензисем "Литературная газета", "Литературная Россия", "Дружба народов", "Литературное обозрение", "Вопросы литературы", "Волга", "Урал", "Новый мир", "Тӑван Атӑл", "Ялав", "Лик Чувашии", "Молодой коммунист", "Марийская правда", "Республика", "Хыпар", "Чӑваш ен", "Авотс" ("Родник"), "Казан Утлары" ("Огни Казани"), "В мире книг", "Огонек", "Театральная жизнь", "Советская музыка" тата нумай-нумай хаçат-журналта пичетленнĕ. Литература критикĕ А.Хусанкай уйрӑмах чӑваш, удмурт, латыш, узбек, çармӑс поэчĕсемпе писателĕсен пултарулӑхне тĕпчет, статйисенчен хӑшне-пĕрне тутарла, çармӑсла тата латышла куçарчĕç. Çавӑн пекех вӑл Уралпа Атӑл тӑрӑхĕнчи писательсемпе поэтсен кĕнекисене, критика статйисен пуххисене рецензилесе тĕнче умне кӑларчĕ.

А.П.Хусанкай чӑваш поэзипе литературине лайӑх пĕлекен тĕпчевçĕсенчен пĕри. Вӑл хальхи чӑваш поэзийĕнчи çамрӑк ӑрӑвӑн пултарулӑх шыравĕсем пирки çырнӑ тарӑн шухӑшлӑ, витĕмлĕ те тĕплĕ критика статйисенчен 1987 çулта "Поиск слова" ятлӑ кĕнеке калӑпласа кӑларчĕ. Çак ĕç тахçанах ĕнтĕ – сайра тĕл пулакан кĕнекесен шутĕнче. Автор унта хальхи чӑваш поэчĕсем хӑйсен пултарулӑхĕнче халӑх сӑмахлӑхĕн тĕслĕхĕсемпе епле усӑ курни çинчен сӑмах хускатать, поэзие хакласси питĕ çивĕч те кӑткӑс ыйту пулнине пĕлтерет. Кĕнекери "Сто тысяч слов..." ("Simttukstoš vardu...") статьяра тĕпчевçĕ-критик Раççейри наци литературисен аталанӑвне танлаштарса тишкерсе тухать.

Атнер Петрович П.П.Хусанкай эткерне пухса, редакцилесе пичете хатĕрлерĕ, чӑваш ӳкерӳ ӑстаçисен ĕçĕсене тĕпчесе хак пачĕ, кашнин хӑйне евĕрлĕхне палӑртрĕ. Атӑл-

па Урал тăрăхĕнчи композиторсен пултарулăхĕпе "Творчества вечно живая основа" ĕçĕнче паллаштарчĕ. Вăл çивĕч те пултаруллă критик кăна мар, ăста публицист та: кунта хальтерех пичетленнĕ "Обрусение чуваш или "чувашское народное дело"? (Опыт деконструкции яковлевского дискурса)" ĕçне уйрăмах асăнса хăварас килет.

Атнер Хусанкай республикăра тĕрлĕ общество организацийĕсене йĕркелесе яма хутшăннă. Вĕсен шутĕнче: И.Я.Яковлев ячĕллĕ общество, "Демократиллĕ альтернатива", Чăваш наци аталанăвĕн партийĕ (ЧАП), "Халăхсем пурнăçшăн килĕштерсе ĕçлесшĕн (Сенеж форумĕ)" юхăмăн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ, Чăваш наци конгресĕ, Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен ассамблейи. 1992 çултан пуçласа Чăваш наци конгресĕн президенчĕ пулнă май, вăл чăваш халăхне тĕнчери право субъекчĕ тăвас тесе тăрăшрĕ. Кунта Тĕнчене тухайман халăхсемпе нацисен организацине (Гаага) кĕнине (ăна 1997 çулта çак организацин Тĕп Ассамблейин пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ пулма суйларĕç), тĕнчери ытти организацисемпе çыхăну тытма пуçăннине палăртмалла.

А.П.Хусанкай 1990 çулта Чăваш Республикин Аслă Канашĕн халăх депутатне суйланчĕ, унта Культура, чĕлхе тата нацисем хушшинчи хутшăнусен аталанăвĕ енĕпе ĕçлекен яланхи комиссин председателĕ пулчĕ. Чăваш Республикин Аслă Канашĕнче Атнер Петрович Чăваш Республикин суверенитетне çирĕплетме тата аталантарма май паракан чылай саккун проектне туса хатĕрлерĕ (сăмахран, "Чăваш чĕлхине чĕртес тата аталантарас ыйтусем"), чăваш патшалăх тытăмĕн статусне ÿстерессишĕн нумай вăй хучĕ.

Юлашки вăхăтра Атнер Хусанкай "Поэт Айги и художники (Опыт философской интерпретации поэтического и художественного сознания)" кĕнеке пичете хатĕрлесе çитерчĕ. Çавăн пекех вăл чĕлхе политикипе ĕçлет, социолингвистикăпа икчĕлхелĕх, куçару проблемисене тĕпчет, университетăн тĕрĕк пĕлĕвĕн кафедрипе тачă çыхăну тытать.

А.П.Хусанкай – Атăл-Урал регионĕнчи республикăсен тата облаçсен официаллă ушкăнĕсенче тата обществăн витĕмлĕ пĕрлешĕвĕсенче ятлă-сумлă çын.

Аллă çулĕ ячĕпе саламланă май, вĕренекенĕсем, ĕçтешĕсем ăна çирĕп сывлăх тата иксĕлми пултарулăх сунаççĕ.

*А.А.Сосаева.*

## А.П.Хусанкайăн пичетленнĕ ĕçĕсем

1. К определению позиций главных членов предложения в современных арабских диалектах //Конференция молодых научных сотрудников и аспирантов ИВАН СССР. М., 1974.

2. Односоставные предложения в современных арабских диалектах //Исследования по структуре языков Азии и Африки. М., 1975.

3. Выражение синтаксических связей в современных арабских диалектах //Тезисы конференции аспирантов и молодых сотрудников ИВАН СССР. М., 1975.

4. Синтаксические группы в арабской диалектной системе //Чувашский язык и литература. Труды ЧНИИ. Вып.59. Чебоксары, 1975.

5. Предикация и структурные схемы простого двусоставного предложения в арабском диалектном синтаксисе //Тезисы конференции аспирантов и молодых сотрудников ИВАН СССР. М., 1976.

6. Типология простого предложения в арабском диалектном языке: Автореф. дисс. ...канд. филол. наук. М., 1977. – 22 с.

7. Предикация в арабском диалектном синтаксисе //Тезисы конференции аспирантов и молодых сотрудников ИВАН СССР. Т.3. Ч.1: Языкознание. М., 1978.

8. О квазиглаголах в современных арабских диалектах //Тезисы докладов и сообщений аспирантов и молодых сотрудников ИВАН СССР. М., 1979.

9. Поэзи сипечĕ //Ялав, 1980, 3 №.

10. К изучению арабско-персидских элементов в чувашском языке //Актуальные вопросы чувашского языкознания: Тезисы докладов и сообщений на научной сессии, посвященной 100-летию со дня рождения В.Г.Егорова (12–13 февраля 1980 г.). Чебоксары, 1980.

11. В.Г.Егоров: К 100-летию со дня рождения //Сов. тюркология, 1980, № 1.

12. Языков связующие нити: К 50-летию А.Рона-Таша //Сов. Чувашия, 1981, 30 декабря.

13. Поэма тĕшши // Ялав, 1982, 2 №; *çавах* //Çамрăклăхпа ăсталăх: çамрăк критиксем çырнă статьясен пуххи. Шупашкар, 1982.

14. Совещание этимологов – в столице Чувашии //Сов. Чувашия, 1982, 9 июня.

15. Ытарайми самантсем (М.Сениэль пирки) //Ком. ялавĕ, 1982, февралĕн 7-мĕшĕ.

16. (В.Г.Родионовпа пĕрле). Çĕнĕлĕх-и е традицие аталантарниех? (Çамрăк поэтсен сăввисене вуланă май) //Тăван Атăл, 1982, 2 №.

17. Simttukstoš vārdu... // Literatūra un Māksla, 1982, 19, 26 февраля.

18. *Рец.*: Чувашско-русский словарь /Под ред. М.И.Скворцова. М., 1982. – 712 с. //В мире книг, 1982, № 12.

19. Второе рабочее совещание этимологов (Чебоксары 7–8 июня 1983 г.) //Сов. тюркология, 1983, № 5.

20. Пĕтĕм тĕнчипе паллă тĕпчевçĕ: Г.И.Рамстедт 110 çул тултарнă май //Ком. ялавĕ, 1983, октябрĕн 23-мĕшĕ.

21. (Ытти авторсемпе пĕрле хатĕрленĕ). Чăваш чĕлхин историйĕ. Чăваш диалектологийĕ. Тĕрĕк чĕлхисен танлаштарулла грамматики. Чăваш

чĕлхин методики: Заочник-студентсем валли тĕрĕслев ĕçĕсем /Чăваш патшалăх университечĕ. Шупашкар, 1983.

22. Горизонты чувашской филологии (*рец.*: Chuvash Studies. Edited by Andras Rona-Tas. Asiatische Forschungen. Band 79. Otto Harrasowitz - Wiesbaden, 1982. – 360 р.) //Сов. Чувашия, 1983, 30 января.

23. Совершенствование преподавания общетюркологических дисциплин в вузе (О конференции, состоявшейся 11–12 октября 1984 г. в Чебоксарах) //Сов. тюркология, 1984. № 4.

24. Арабский язык (программа) //Программы по лингвистическим курсам /Чув. гос. ун-т. Чебоксары, 1984.

25. "Сто тысяч слов..." или диалектика обновления //Дружба народов, 1984, № 11.

26. Йоз мен суз... ("Сто тысяч слов...") //Казан утлары (Огни Казани), 1984, № 12.

27. (Ытти авторсемпе пĕрле хатĕрленĕ). Чăваш литература чĕлхин терминĕсем: методика кăтартăвĕсем /ЧПУ. Шупашкар, 1985.

28. Чĕлхеçĕ, çулçÿревçĕ: Хейки Паасонен çуралнăранпа 120 çул çитнĕ май //Ком. ялавĕ, 1985, февралĕн 1-мĕшĕ.

29. (Ытти авторсемпе пĕрле хатĕрленĕ). Чăваш чĕлхи историйĕн терминĕсем: методика кăтартăвĕсем /ЧПУ. Шупашкар, 1985.

30. Содержание и структура курса "Введение в тюркское языкознание" для заочного отделения //Тезисы научно-методической конференции "Оптимизация учебного процесса на вечерних и заочных отделениях". Чебоксары, 1985.

31. Виçĕ янăрав (Н.Исмуков, В.Юмарт, П.Яковлев пирки) //Ялав, 1985, 3 №.

32. Глагол времени (*рец.*: Революцичченхи чăваш литератури: Текстсем. 1 т. Шупашкар, 1984. – 464 с.) //Вопросы литературы, 1985, № 3.

33. Биография духа: выступление в дискуссии о творчестве молодых "Право на имя" //Молодой коммунист, 1985, 8 июня.

34. "Не обольщайся этой тишиной..." (Молодая чувашская поэзия: позиция и стиль) //Литературное обозрение, 1985, № 8.

35. Взгляд на целое (*рец.*: Ю.М.Артемьев. Пурнăç чăнлăхĕпе сăнарсен илемĕшĕн. Шупашкар, 1984. – 128 с.) //Вопросы литературы, 1985, № 9.

36. Значение культурно-исторического контекста при этимологизации чувашских теонимов (Киреметь) //Проблемы составления этимологического словаря отдельного языка. Чебоксары, 1986.

37. В поисках собеседника (Монолог литературного критика с 10-летним стажем) //Молодой коммунист, 1986, 21 августа.

38. Содержание университетского курса "Введение в тюркологию" и проблемы чувашского глотто- и топогенеза //Совершенствование преподавания общетюркологических дисциплин в вузе. Чебоксары, 1986.

39. Выступление в "круглом столе": Литературы социалистических стран: итоги, тенденции развития, задачи изучения //Вопросы литературы, 1986, № 1.

40. Классики и современники (*рец.*: Г.Я.Хлебников. Меслетпе ăсталăх. Шупашкар, 1984. – 256 с. //Вопросы литературы, 1986, № 7.

41. Слагаемые диалога (Ответ на анкету “ДН” по художественному переводу) //Дружба народов, 1986, № 7.

42. Кто живет в теремке поэзии? (Обзор чувашской детской поэзии) //Детская литература, 1986, № 10.

43. (М.Р.Федотовпа пĕрле хатĕрленĕ). Программа курса “Введение в тюркологию” //Программы по лингвистическим курсам. Сравнительно-исторический цикл /ЧГУ. – Чебоксары, 1986.

44. На языке Данте и Петрарки (*рец.*: I CANTI dei Popoli del Volga. I. Gennadij Ajgi. Antologia Ciuvascia. Edizione italiana a cura di Gianroberto Scarcia e Alessandra Trevisan //“Quaderni di Iranistica, Uralo-Altaistica e Caucasologia dell' Univesita degli Studi di Venezia”, 23. Arti Grafiche Scalia Editrice, Roma, 1986. – 288 p.) //Вопросы литературы, 1986, № 11.

45. Программа курса “Введение в тюркологию” //Программы по общетюркологическим курсам: Введение в тюркологию. Сравнительная грамматика тюркских языков / ЧГУ. Чебоксары, 1987.

46.Ответ на анкету “ДН”: Литературная критика: проблемы жанра, проблемы жизни //Дружба народов, 1987, № 2.

47. Поиск слова: Литературно-критические статьи. Чебоксары, 1987. – 191 с.

48. *Рец.*: В.Г.Родионов. Чувашское и тюркское стихосложение. Чебоксары, 1986 //Сов. тюркология, 1987, № 1.

49. “Es jutu, jutu, jutu šo zemi...” [Имант Зиедонис пултарулăхĕ пирки] //Literatura un Máksla, 1987, 27 марта (на латыш. яз.); *çавах* //Kritikas gada – grámata. 16. Riga, Liesma, 1988. С.145–159.

50. Поверх барьеров (Диалог с чувашским прозаиком Б.Чиндыковым) //Литературная Россия, 1987, 29 мая; *çавах* //Молодой коммунист, 1987, 30 июня; *çавах* //Осмысление: Сборник литературно-критических статей. Вып. 3. М., 1990.

51. Кто хозяин дома? (О творчестве Иманта Зиедониса размышляют латышский поэт Улдис Берзиньш и чувашский критик Атнер Хузангай) //Дружба народов, 1987, № 7.

52. Поэт беспокойного сердца (Предисловие) //Педер Хузангай. Вечерняя тень. М.: Современник, 1987. С.5–12.

53. *Рец.*: Г.Е.Корнилов. Имитативы в чувашском языке. Чебоксары, 1984. – 184 с. //Вопросы языкознания, 1987, № 6.

54. (Г.Н.Волковпа пĕрле) “Любовь к родине может быть и трудной...” //Молодой коммунист, 1988, 18 февраля.

55. Как важно помнить о корнях //Молодой коммунист, 1988, 27 сентября.

56. Выступление в “круглом столе”: Готовы ли к свободной речи? //Литературная Россия, 1988, 13 мая.

57. Право на наследство (Молодая финно-угорская поэзия Поволжья и Приуралья) //Дружба народов, 1988, № 9.

58. К определению этапов развития хунно-булгаро-чувашского ономастикона //Межъязыковые взаимодействия в Волго-Камье. Чебоксары, 1988.

59. Судьба поэта (О Васьлее Митта) //Взгляд за горизонт. Чебоксары, 1989. С. 158–210.

60. (Н.И.Егоровпа пĕрле хатĕрленĕ). Диалектологическая практика: Методические указания по сбору лексического материала. Чебоксары, 1989.

61. Учиться смелости у классиков //Марийская правда, 1989, 18 января.

62. Выступление в беседе "На каком языке вы говорите?" //Литературная газета, 1989, 29 марта.

63. Выступление в "круглом столе": Нация – это мы //Театральная жизнь, 1989, № 8.

64. "Вещали Бога посещаемое..." (О творческом пути Г.Айги) // Родник, № 4; *çавах* //Avots, 1989, № 4.

65. Полупессимистический прогноз //Дружба народов, 1989, № 6.

66. Выступление в "круглом столе": Национальные культуры и межнациональные отношения //Вопросы литературы, 1989, № 10.

67. Книга Пигамбара. Составление и предисловие Атнера Хузангая /Издание КЦТМ. Чебоксары, 1989, ноябрь.

68. Чĕрĕлтĕр чăваш ячĕ! //Паянтан, 1989, чӳк уйăхĕ.

69. (Г.С.Самсоновăпа пĕрле хатĕрленĕ) Константин Иванов. Фотоальбом. Чебоксары, 1990. – 136 с.

70. И.Я.Яковлев и мы: Готовы ли мы понять его заветы? //Сов. Чувашия, 1991, 15 июня.

71. Тяжба о России //Сов. Чувашия, 1991, 13, 14 ноября, 26 декабря; *çавах* (Россий да Калык-влак) // Кугарня, 1992 ий, 22 май (на марий. яз.).

72. Сеспель и коммунистическая идея: "Путь сумеречных скитаний..." //Сов. Чувашия, 1991, 16 ноября; *çавах* (Çеçпĕл тата коммунизм идейи) //Ялав, 1994, 11 №.

73. На контроле – Закон о языках //Халăх шкулĕ, 1992, 2 №.

74. Шăв-шав сахалрах, ĕç нумайрах пултăр (Чăваш Республикин Аслă Совечĕн Культура, чĕлхене тата нацисем хушшинчи хутшăнусене аталантарас енĕпе ĕçлекен яланхи комиссийĕн председателĕпе калаçни /И.Иванов çырса илнĕ) //Хыпар, 1992, апрелĕн 25-мĕшĕ.

75. Чувашская поэзия не собирается умирать (*рец.*: An Anthology of Chuvash Poetry. Translated by Peter France, introduced by Gennady Aygi. UNESCO /Forest Books, 1991. – 220 р.) //Сов. Чувашия, 1992, 4 апреля.

76. Евразиец Сахаров и нынешние демократы //Сов. Чувашия, 1992, 16 июня; *çавах* (Евразиец Сахаров да кызытсе демократ-шамыч) //Кугарня, 1992 ий, 4 сентябрь (на марий. яз.).

77. Имянаречение в булгаро-чувашской традиции (Функция имени и культурно-исторический контекст) //Вестник Чувашской национальной академии. Чебоксары, 1993, № 1.

78. *Ред.*: Чăваш чĕлхине чĕртес тата аталантарас ыйтусем (Проблемы возрождения и развития чувашского языка): Чăваш Республикин Аслă Совечĕпе Президиумĕ йышăннă законсемпе постановленисем. Шупашкар, 1993. – 73 с.

79. "Халăха наци гвардийĕ çеç çăлаймасть..." //Хыпар, 1993, февралĕн 5-мĕшĕ.

80. Третье возрождение чувашского народа //Чăваш ен, 1993, № 19.

81. О единстве и разнообразии тюркского мира //Чӑваш ен, 1993, № 45.

82. Чӑваш халӑхӗн историне ҫырас ӗҫ пирки // История Чувашии: проблемы и задачи изучения. Тезисы докладов и сообщений к научной конференции (Чебоксары, 30 сент. – 1 окт. 1993 г.). Чебоксары, 1993.

83. Урало-Поволжье – наша общая родина //Сов. Чувашия, 1993, 11 ноября.

84. Не теряя своего лица – к европейским ценностям //Сов. Чувашия, 1994, 23 февраля.

85. Опыт семантической интерпретации характеристик частотного словаря поэтических текстов М.Сеспеля //Чувашский язык: история и современность. Чебоксары, 1994.

86. Языковое и культурное измерения в концепции государственной программы "Возрождение и развитие чувашского языка" //Вестник Чувашской национальной академии, 1994, № 2.

87. Букет колючих фраз (В.И.Ленину – 124) //Сов. Чувашия, 1994, 22 апреля.

88. Европа + Айги: Чӑваш ен, Бретань... (*рец.*: HORS – COMMERCE AIGUI. Textes reunis et traduit par Andre Markowicz. Le Nouveau Commerce. Paris, 1993) //Чӑваш ен, 1994, № 9.

89. Имя – Россия //Дружба народов, 1994, № 6.

90. Регион как феномен экономики, политики и культуры //Чӑваш ен, 1994, № 39.

91. Посвящается а //Лик Чувашии. 1994, № 4.

92. "А чистым бого-голосом..." (К 60-летию Геннадия Айги) //Халӑх шкулӗ, 1994, № 4.

93. Чунлӑх ӑшши (Геннадий Айхи 60 ҫул тултарнӑ май) //Тӑван Атӑл, 1994, 8 №.

94. (Г.И.Тафаевпа пӗрле хатӗрленӗ) Ассамблея тюркских народов: программы, резолюции, документы. Чебоксары: Изд-во Чув. гос. ун-та, 1994.

95. (И.В.Миттапа пӗрле хатӗрленӗ) Чӑваш наци конгресӗ: документсемпе материалсен пуххи. Шупашкар, 1994.

96. Об арабо-мусульманских терминах в чувашской сакральной лексике //Чӑваш терминологи аталанӑвӗн хальхи ыйтӑвӗсем: Наука конференцийӗн доклачӗсемпе хыпарӗсен тезисӗсем /ЧПГӐИ. Шупашкар, 1995.

97. Польский Айги (*рец.*: Gennadiy Aigi POLA – SOBOWTORY: Стихи 1954–1994. Познань, 1995) //Сов. Чувашия, 1995, 1 июня.

98. "Пӑлхар: Пӗр юнлӑ ырӑ халӑх..." – "Пин ҫул ытла пӑлхарччӗ эп, унтан мана чӑваш ят панӑ" – (Атӑлҫи Пӑлхар – Чӑваш патшалӑхӗ 1100 ҫул тултарнӑ май) //"Хыпар" кӗнеки, 14 №, Шупашкар, 1995.

99. Народы и власть (Конспект новой политической философии) //Сов. Чувашия, 1995, 15 сентября.

100. "Чӑваш халӑхӗ хӑйне телейлӗ тесе шутлама пултарать..." (Чаплӑ чӑваш тӗпчевҫи Н.И.Ашмарин ҫуралнӑранпа 125 ҫул ҫитнӗ май) //"Хыпар" кӗнеки, 17 №, Шупашкар, 1995.

101. "Язык – это великое целое..." (Н.И.Ашмарину – 125 лет) //Сов. Чувашия, 1995, 27 октября.

102. От идей к действиям (*рец.*: Ургалкин Ю.А. Регионализация межнациональных отношений в Российской Федерации: философско-ме-

тодический аспект. Самара: ИЭКА "Поволжье", 1995. – 164 с.) //Правительственный вестник, 1995, 8 ноября.

103. "Империи, как и динозавры, рано или поздно вымирают..." (*рец.*: Рафаэль Хаким. Сумерки империи: К вопросу о нации и государстве. Казань, 1993. – 88 с.) //Лик Чувашии, 1995, № 4.

104. 31 тюрок минус чуваши (Заметки с российско-тюркского курултая) //Вечерняя газета, 1995, № 37.

105. Прокуратор языка (*рец.*: Gennadij Aigi. Mit Gesang: Zur Vollendung. Gedichte. Ausgewahlte Werke. Band I. Übersetzt und herausgegeben von Felix Philipp Ingold edition per procura. Wien-Lana, 1995) //Чӑваш ен, 1995, № 44.

106. Еще раз о национально-государственном суверенитете (*рец.*: Д.Ж.Валеев. Национальный суверенитет и национальное возрождение (Из истории борьбы башкирского народа за самоопределение). Уфа: Китап, 1994. – 160 с.) //Сов. Чувашия, 1996, 16 января.

107. В поисках национальной идеи (*рец.*: Вдовин А.И. "Российская нация": национально-политические проблемы XX века и общенациональная российская идея. М.: Либрис, 1995. – 248 с.) //Правительственный вестник, 1996, 10 апреля.

108. Три этапа возрождения чувашского народа //Межэтнические отношения и национальные проблемы и движения в Среднем Поволжье и Приуралье в XVIII–XX веках: Тезисы докладов /ЧГУ. Чебоксары, 1996.

109. Pri la čuvaša sperto de spirita elvidado //"Scienco Kaj Kulturo" Dumonata Esperantlingva Revuo, 1996, № 6.

110. Чӑваш кун-ҫул пуласлӑхне тимленӗ ӑсчах (А.Э.Альквист 170 тултарнӑ май) //Хыпар, 1997, январӗн 5-мӗшӗ.

111. Национальная идея и культура в свете постсоветского развития //Халӑх шкулӗ, 1997, № 1.

112. "Я вижу праздник своего народа..." (*рец.*: L'oeil des champs. Antologie de la poesie tchouvache. Etablie et presentee par Guennadi Aigui. CIRCE /Editions UNESCO, 1996. – 302 p.) //Сов. Чувашия, 1997, 22 мая.

113. Чувашское национальное движение в контексте Урало-Поволжского региона //Ученые записки Университета Поволжья. Т. 1: 1994–1996 гг. М., 1997.

114. "Обрусение чуваш", или "чувашское – народное дело"? (Опыт деконструкции яковлевского дискурса) //Республика, 1998, № 15, 17.

115. Поэт Айги и художники (Опыт философской интерпретации поэтического и художественного сознания) /Библиотечка международного журнала чувашской культуры "Лик Чувашии". Чебоксары, 1998.

*Е.И.Батченко хатӗрленӗ.*

ТУПМАЛЛИ

УМ САМАХ (*Г.А.Дегтярев*) . . . . . . . . . . . . . . . . . 3

ГРАММАТИКА ЫЙТӐВӖСЕМ

*И.П.Павлов.* Чӑваш чӗлхинчи пӗр туртӑм пирки . . . . . . 6

*П.Я.Яковлев.* Шут хисепӗсен тулли форми ҫинчен . . . . . . 8

*А.П.Долгова.* Ыйту татӑкӗсемпе усӑ курассин уйрӑмлӑхӗсем 21

САМАХ КУН-ҪУЛНЕ ТӖПЧЕНИ

*Г.А.Дегтярев.* Сӑмахсен шӑпи: ҫӗнетӳ, хӑвӑртлату, уҫҫӑнлӑх... ("Чӗлхе тата идеологи" ярӑмран) . . . . . . . . . . . . . . . . 34

*Ю.Дмитриева.* Названия грибов в чувашском языке [Чӑваш чӗлхинчи кӑмпа ячӗсем] . . . . . . . . . . . . . . . . . . 41

ПОЭТИКА ОНОМАСТИКИ

*Е.Ф.Васильева, А.А.Сосаева.* П.П.Хусанкай поэзийӗнчи пайӑр ятсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 55

ЛЕКСИКОГРАФИ ЫЙТӐВӖСЕМ

*Ю.Ф.Ефимов.* Ӑнлантару словарӗнчи терминсем . . . . . . 70

*Ю.Ф.Ефимов.* Ӑнлантару словарӗнчи пулӑшу сӑмахӗсем . . . 85

*А.П.Долгова.* Ҫынна палӑртакан япала ячӗсене словарьте ӑнлантарасси . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 94

ЧӖЛХЕ ИСТОРИЙӖ

*О.Р.Студенцов.* 1873–1917 ҫулсенче куҫарнӑ тӗн литературинчи ҫӗнӗ сӑмахсем . . . . . . . . . . . . . . . . . . 124

*Н.П.Петров.* И.Я.Яковлев литература чӗлхин лексикине нормӑлани . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 136

АРХИВ ҪӲЛӖКӖНЧЕН

*И.Н.Юркин.* Ют чӗлхесенче ҫӳрекен чӑваш сӑмахӗсем . . . . 144

ӐСЛӐЛӐХ ИСТОРИЙӖ

*Ю.В.Яковлев.* Чӑваш чӗлхе вӗрентӗвӗнчи этноцентризм палӑрӑмӗ: Иван Юркин . . . . . . . . . . . . . . . . . 152

*А.П.Долгова.* Алексей Иванович Иванов (Ҫуралнӑранпа 100 ҫул ҫитнӗ май) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 156

*Г.А.Дегтярев.* Н.Н.Поппе – Nicolaus Poppe (100 ҫулӗ ҫитнӗ тӗле) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 163

ХУРЛӐХ САМАХӖ

*А.П.Хусанкай.* Юрий Филиппович Ефимов (Ӗҫтешӗмӗре асӑнса) 170

ЧЫСЛАВ

*А.П.Долгова.* Иван Андреевич Андреев (70 ҫул тултарнине халалласа) 174

*Г.А.Дегтярев.* Иван Павлович Павлов (Ҫитмӗле ҫитнӗ ятпа) 179

*А.А.Сосаева.* Атнер Петрович Хусанкай (50 ҫулне халалласа) 184

СОДЕРЖАНИЕ


**ПРЕДИСЛОВИЕ** (*Г.А.Дегтярев*) . . . . . . . . . . . . . . . . 3

**ВОПРОСЫ ГРАММАТИКИ**

*И.П.Павлов.* Об одной тенденции в чувашском языке . . . . 6

*П.Я.Яковлев.* О полных формах количественных числительных 8

*А.П.Долгова.* Вопросительные частицы в чувашском языке: особенности употребления . . . . . . . . . . . . . . . . 21

**ИЗУЧЕНИЕ ЛЕКСИКИ**

*Г.А.Дегтярев.* Судьбы слов: перестройка, ускорение, гласность... (Из серии "Язык и идеология") . . . . . . . . 34

*Юдит Дмитриева.* Названия грибов в чувашском языке . . . 41

**ПОЭТИЧЕСКАЯ ОНОМАСТИКА**

*Е.Ф.Васильева, А.А.Сосаева.* Собственные имена в поэзии П.П.Хузангая . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 55

**ВОПРОСЫ ЛЕКСИКОГРАФИИ**

*Ю.Ф.Ефимов.* Термины в толковом словаре . . . . . . . 70

*Ю.Ф.Ефимов.* Служебные слова в толковом словаре . . . . 85

*А.П.Долгова.* Толкование имен существительных со значением лица . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 94

**ИСТОРИЯ ЯЗЫКА**

*О.Р.Студенцов.* Неологизмы в переводах религиозной литературы (1873–1917 гг.) . . . . . . . . . . . . . . . . 124

*Н.П.Петров.* О роли И.Я.Яковлева в нормализации лексики литературного языка . . . . . . . . . . . . . . . . . . 136

**ИЗ АРХИВА**

*И.Н.Юркин.* Чувашские слова в других языках . . . . . . 144

**ИСТОРИЯ НАУКИ**

*Ю.В.Яковлев.* Проявление этноцентризма в исследовании языка: Иван Юркин . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 152

*А.П.Долгова.* Алексей Иванович Иванов (В связи со столетием) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 156

*Г.А.Дегтярев.* Н.Н.Поппе – Nicolaus Poppe (К столетию со дня рождения) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 163

**НЕКРОЛОГ**

*А.П.Хузангай.* Памяти Юрия Филипповича Ефимова . . . . 170

**PERSONALIA**

*А.П.Долгова.* Иван Андреевич Андреев (К 70-летию со дня рождения) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 174

*Г.А.Дегтярев.* Иван Павлович Павлов (В связи с 70-летием) 179

*А.А.Сосаева.* Атнер Петрович Хузангай (К 50-летию со дня рождения) . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 184

**Чувашский государственный институт гуманитарных наук**

# ВОПРОСЫ ЧУВАШСКОГО ЯЗЫКОЗНАНИЯ

Сборник статей

Редактор *В.А.Прохорова*
Художественный редактор *А.А.Трофимов*
Технический редактор *В.А.Немцова*
Корректор *Г.И.Алимасова*
Оригинал-макет *Э.В.Кирилловой*

Подписано в печать 30.03.99 г. Формат 60x90[1]/[16]
Бумага офсетная. Гарнитура Journal Chv.
Печать офсетная. Физ. печ. л. 12,25
Учетно-изд. л. 9,25 Тираж 150 экз.
Заказ № 4.

Чувашский государственный институт гуманитарных наук

428015, Чебоксары, Московский пр., 29, корп. 1.